А17
Н-39750

Александра Лазарева

САНĂН ÇИТМĔЛ ÇИЧĔ ТУС

Национальная библиотека ЧР
4-039750

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

Хисеплĕ

Илья Павлович Прокопьева —

автортан.

7/X-75 ç. А. Лазарев

Александра Лазарева

САНĂН ÇИТМĔЛ ÇИЧĔ ТУС

Калавсем

Чăваш кĕнеке издательстви
Шупашкар — 1975

С(Чув)2
Л 17

ДАРСТВЕННЫЙ ЭКЗ.

ПРОВЕРЕНО
20 10 29 СЕН 2017

4-39750
НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

Л $\frac{0763-0105}{М136(03)-75}$ 91—75

© Чувашское книжное издательство, 1975 г.

САНĂН ÇИТМĚЛ ÇИЧĚ ТУС

Йăлăм!.. Вăл яланах — çуллахи шăрăхра та, хĕллехи шартлама сивĕ кунсенче те чуна илĕртет. Ытармалла мар илемлĕх унта, шăплăх, канлĕх...

Хĕлле, Атăл ларсанах, канмалли кунсенче хулари йĕлтĕрçĕсем пурте, ватти-вĕттипех, Йăлăмалла ыткăнаççĕ. Çав тери ирĕклĕ унта. Хуть те ăçталла чуп, хуть те хăш тĕлте ярăн. Сывлăшĕ кăкăра уçса ярать, кăмăла çĕклет...

Хулари пĕр мăн çуртра, пĕр подъездрах пурăнакан

вуникĕ çулхи Андрюшпа вунпĕр çулхи Костя та пĕрмаях Атăл çине йĕлтĕрпе ярăнма çӳреççĕ.

Пĕрре, шăматкун ирхине, вĕсен çуртĕнчен чылайăшĕ йĕлтĕрсемпе кайрĕç. Андрюш ашшĕ ирхи апат хыççăнах килтен тухрĕ. Андрюш та унпа пĕрлех каясшăнччĕ, вăл ĕнтĕ хăйĕн йĕлтĕрĕсене тахçанах якатса хатĕрлесе хунăччĕ. Анчах ашшĕ ăна хăйпе илсе каясшăн пулмарĕ.

— Эпир паян юлташсемпе пĕрле питĕ инçе каятпăр, ывăлăм,— терĕ вăл.— Амăрту пулать йĕлтĕрçĕсен. Ырансăр та таврăнмастпăр. Санпа эпир тепĕр чух ярăнăпăр.

Ашшĕпе пĕрле кайма май килменнипе, Андрюш хăйĕн юлташне, кӳршĕре пурăнакан Костьăна, чĕнчĕ.

Амăшĕ хирĕç пулмарĕ, анчах асăрхаттарчĕ:

— Эсир инçе ан кайăр, тата ытлашши нумай та ан çӳрĕр...

Кунтан тĕлĕнмелли çук-ха, вăл кашнинчех çавăн пек каласа ярать. Костя амăшĕпе ашшĕ те, вăл ăçта та пулин каяс пулсан, яланах çавăн пек асăрхаттараççĕ. Унăн ашшĕ, Андрюш ашшĕ пек, йĕлтĕрпе çӳреймест, вăл инвалид, уксахласа утать.

Ачасем килтен çав тери хаваслăн тухрĕç, кĕçех Атăл çине çитрĕç, ярăнма тытăнчĕç. Çанталăкĕ паян питĕ лăпкă, ним чухлĕ те сивĕ мар. Çынсем пурте Атăл урлă каçса Йăлăм еннелле ярăнса каяççĕ.

— Атя, Костя, эпир те малалла каяр! — кăшкăрчĕ Андрюш.

— Атя ара! Анчах нумай çӳремĕпĕр, килте пăшăрханĕç,— терĕ ăна хирĕç юлташĕ.

Ачасем Атăлăн леш енчи çыранĕ еннелле вĕçтерсе пычĕç. Кунта йĕлтĕр йĕрĕсем питĕ нумай-мĕн, малтан тунă йĕр тăрăх ыткăнса пыма та çăмăл.

Вĕсем умĕнче чуна илĕртекен вырăнсем. Акă, пĕр вăрманран тухсанах, çӳллĕ, чалăш-тĕлĕш тăвайкки тĕл пулчĕ. Мĕн тери аван ярăнса анма! Акă, çĕнĕ йĕрсем

пур. Тин çеç иккĕн ярăнса иртнĕ курăнать. Андрюшпа Костьăн та çав йĕрсем тăрăх ма ярăнмалла мар-ха? Ним шухăшласа тăмасăрах, туссем тăвайккинчен умлăн-хыçлăн вĕçтерчĕç. Кайран вара пĕри пуçхĕрлĕн, тепри хăяккăн йăванса кайса çырма тĕпĕнче тĕл пулчĕç. Инкек-синкек çук, хăйсем ахăлтатса кулаççĕ çеç...

Малта йĕрсем татах нумай, урлă та пирлĕ каяççĕ. Вĕсем тăрăх кайса та çитерес çук. Çавăнтах тата те йытă, те мулкач кĕрпе пек кăпăшка юра сирпĕнтерсех сике-сике кайнă. Ку та çĕнĕ йĕр, нумай пулмасть таçталла тарнă пулмалла.

— Атя, çак йĕрпе каятпăр: ăçта пытанса пурăнать ку чĕрчун? — Андрюш, малта пырса, темле кайăк йĕрĕпе вăрманалла кĕчĕ. Костя та юлмарĕ унран.

Кукăр-макăр сиккелесе çӳренĕ эсрел мулкачи. Ачасем ун хыççăн пычĕç-пычĕç те унтан йĕрне те çухатрĕç. Таçта, пĕр-пĕр йывăç тăрне улăхса ларнă, тейĕн. Ăçтан тупатăн ăна? Вĕсем пĕр хушă унталла-кунталла пăхкаласа тăчĕç, çапах та урăх нимĕн те курăнмарĕ. Çав самантра хăйсем питĕ ывăнса çитнине туйрĕç.

— Атя каялла...— терĕ Андрюш, ассăн сывласа.

...Ак ĕнтĕ вĕсем, пĕр шарламасăр, каялла таврăнаççĕ. Кĕтмен çĕртен çил вĕре пуçларĕ, пит-куçа кастарса чалăшшăн тăман çавăрттарма тытăнчĕ.

Хĕллехи кĕске кун иртсе те кайнă иккен, тавралăха тĕксĕм сăн çапрĕ. Утса пынă çĕртех, ачасем хăйсен йĕрĕсене те çухатрĕç. Те тăман шăлса лартрĕ, те куç курми пулчĕ? Вĕсем каялла кайма тухнăран вара самай вăхăт иртрĕ пулин те, хуралсах пыракан вăрман вĕçĕ те курăнмасть.

Ачасем унталла-кунталла пăхкаласа чарăнса тăчĕç. Ăçталла çул тытмаллине халь вĕсем пĕри те пĕлмерĕ. Андрюша сылтăм еннелле каймалла пек, Костьăна пачах урăх еннелле пек туйăнчĕ. Юрать-ха, çил-тăман ытлашши вăйлах пулмарĕ, вăл пĕр кассăн çавăрттарса çеç иртсе кайрĕ. Унтан çанталăк лăпланса

та çитрĕ. Нимрен ытла туссене хăйсем ыванни, хырăмĕсем выçни аптрата пуçларĕ.

Кăшт тăхтасан таçта, чылай аякра, йытă вĕрни илтĕнчĕ те, ачасем çав тери савăнса кайрĕç.

— Ав, çав еннелле каймалла-иç!

Вĕсем тӳрех вырăнтан хускалчĕç. Шăп çав вăхăтра вĕсен тĕлĕпе, пĕр вăтăр-хĕрĕх метрта, йывăçсем хушшипе иккĕн йĕлтĕрсемпе çăмăллăн чашлаттарса пыни курăнчĕ. Каччăпа хĕр пыраççĕ иккен. Вĕсем ачасене асăрхарĕç, анчах чарăнса тăмарĕç.

— Ырă çынсем! Калăр-ха, тархасшăн, хулана хăш еннелле каймалла? — кăшкăрса ыйтрĕ Андрюш.

— Мĕн эсир вăрманта çак таранччен çӳретĕр? Сирĕн тахçанах вырăн çинче бай-бай тумалла! — терĕ арçынĕ.

Ку сасă Андрюша темшĕн хăй ашшĕ сасси пекех туйăнчĕ. Çавăн пирки ун чĕринче самантлăха савăнăç çиçсе илчĕ.

— Эй-эй! Атте-е! — кăшкăрчĕ Андрюш.

— Мĕн эсĕ, сивĕпе аташма пуçларăн-им? Ăçтан аçу пултăр кунта? — терĕ Костя.

— Атьăр, вĕçтерĕр пирĕн хыççăн, çухалса каймастăр вара! — илтĕнчĕ çав вăхăтрах хĕр сасси.

Умри çынсем часах куçран çухалчĕç. Вĕсене хăваласа çитес тесе ачасем мĕн вăй çитнĕ таран чупрĕç,— усси пулмарĕ, ываннăскерсем часах пӳлĕнсе ларчĕç.

— Тек каймастпăр, ют çынсем вĕсем. Таçталла-ха вĕсен çулĕ, кам пĕлет...— терĕ Андрюш, хашш! хуйхăрса ярса.

— Паллах, ют çынсем! Ют мар пулсан — чарăнса тăратчĕçех вĕсем, ăçталла каймаллине ăнлантарса паратчĕç!

— Эх, эпир те çав! Вĕсен пире çĕклесе каймаллаччĕ-им тата? Хамăр утса çитейместпĕр вĕт-ха?..

Сисмесĕрех çĕрле пулса ларчĕ. Тӳпере сиввĕн çутатакан çăлтăрсем те нумайланчĕç.

— Ҫӑлтӑрсен ҫутипех ҫитетпӗр,— терӗ Андрюш, хӑйне-хӑй лӑплантарса.

— Ҫитме те пултаратпӑр пуль! Ҫынсем ҫӗрле сахал ҫӳреҫҫӗ-и? Эпир те ҫынсемех, хӑрамалли нимӗн те ҫук,— ун майлӑ пулчӗ Костя.

Анчах вӗсен йӗлтӗрӗсем халь ӗнтӗ аран-аран шурӗҫ. Пӗчӗк туссем ҫав тери ывӑнса ҫитрӗҫ.

— Андрюш, кӑштах канса илес пулать пуль пирӗн, вӑй кӗтӗр,— терӗ Костя.

— Канатпӑр та — каллех утатпӑр, пурпӗрех кӗҫӗр киле ҫитетпӗр...

Вӗсем, йӗлтӗрӗсене ҫавӑнтах пӗр лутрарах лӑпсӑркка йывӑҫ айне юнашар пӑрахса, ҫурӑмӗсемпе пӗр-пӗрин ҫумне тайӑнса, юр ҫине ларчӗҫ те часах тӗлӗрсе кайнӑ пек пулчӗҫ.

Сӗм вӑрманта сивӗ шӑплӑх тӑрать. Ывӑннӑ ачасем хуллен хӑрлаттарса ҫывӑрни ҫеҫ кӑшт хускатать ҫав шӑплӑха.

...Каҫ та пулчӗ, ҫӗр те иртрӗ, ачасем киле таврӑнмарӗҫ. Андрюш амӑшӗ те, Костя ашшӗпе амӑшӗ те, калама ҫук пӑшӑрханса, пӑлханса, ҫӗрӗпех ҫывӑраймарӗҫ. Ӗнтӗ хӑйсен ҫуртӗнче кӗрсе тухман хваттер те юлмарӗ. Паян йӗлтӗрпе ярӑнма кайнисенчен кам та пулин вӗсен ачисене курман-ши, тесе шырарӗҫ вӗсем. Анчах кӑлӑхах пулчӗ—никам та курман, тӗл пулман...

Андрюш амӑшӗ Агния Ивановна пӗтӗм чунран кулянса ҫӗр каҫрӗ, ӑна никам та лӑплантаракан пулмарӗ. Ашшӗ хыпнипе, чунӗ ыратнипе ниҫта кайса кӗреймерӗ вӑл. Ҫапах та макӑрса ларнипе ҫухалнӑ ача тупӑнмасть вӗт-ха, ӑна ҫине тӑрсах шырас пулать! Кама шанатӑн? Ашшӗ те килте ҫук халь. Халех, хӑвӑртрах мӗн те пулин тумалла!..

Вӗсен мӑн ҫуртӗнчех Агния Ивановнӑн куккӑшӗ пурӑнать. Иртнӗ вӑрҫӑра нумай ҫапӑҫнӑ, партизансен

командире те пулнӑ ҫын. Отставкӑри полковник. Самаях ватӑлнӑ ёнтӗ, анчах ҫамрӑк чухнехи пекех физкультурӑна юратать, хӗл кунӗсенче час-часах йӗлтӗрпе те кайса ҫӳрет.

Агния Ивановна тумланмасӑрах виҫҫӗмӗш хута чупрӗ, ҫине-ҫинех хыттӑн шӑнкӑравларӗ. Хуҫисем алӑк уҫсан, вӑл ним каличчен малтан сасӑпах макӑрса ячӗ. Куккӑшӗ ӑна хулӗнчен тытса диван ҫине лартрӗ, кӑмӑллӑн ыйтрӗ:

— Мӗн пулнӑ капла, ма макӑратӑн?

— Пирӗн Андрюш ёнертенпех ҫук, ирхине Софроновсен ачипе пӗрле йӗлтӗрпе ярӑнма кайрӗҫ те... Иккӗшӗ те ҫук! Те шӑнсах вилчӗҫ ёнтӗ...

Иван Павловичпа унӑн мӑшӑрӗ Гликерия Андреевна— питӗ кӑмӑллӑ хӗрарӑм — ӑна лӑплантарма тӑрӑшрӗҫ.

— Ашшӗ ӑҫта? Килтех-и?

— Вӑл та ҫук ҫав. Йӗлтӗрҫӗсен ӑмӑртӑвне ик кунлӑха тухса кайнӑ вӑл.

Егоров полковник ҫын хуйхи-суйхи ҫине лӑпкӑн пӑхма пултарайман. Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче те ҫынсен хурлӑхне, асапне тем териех курнӑскер, ҫынсене нумай пулӑшнӑ, вилӗмрен те сахал мар хӑтарнӑскер, вӑл халь те ҫынсемшӗн тӑрӑшма пӑрахман.

— Пӗр тӑхтамасӑрах шырама тытӑнас пулать, пӗр минут та сая яма юрамасть. Пурне те ура ҫине тӑрататпӑр, хам та каятӑп,— терӗ вӑл ҫирӗппӗн.

— Тӗрӗс, Ваня, шырас пулать, кай,— пуҫӗпе сулчӗ арӑмӗ.

Гликерия Андреевна хӑйӗн упӑшки мӗн шутланипе яланах килӗшнӗ, мӗншӗн тесен вӑл нихҫан та кирлӗ мар ӗҫ тумасть. Халӗ те тӳрех килӗшрӗ, упӑшкин сывлӑхӗ пирки ҫеҫ пӑшӑрханса илчӗ: сивӗ ҫанталӑкра унӑн сывлӑшӗ пӳлӗне-пӳлӗне ларать. Ҫавӑнпа та васкасах тепӗр пӳлӗмрен ӑшӑ тир-кӗрӗк илсе тухрӗ.

— Мĕн тума май пулĕ-ши ĕнтĕ, Ваня? — пăлханарах ыйтрĕ вăл.

— Май пур, карчăк, май пур... Юрать-ха, паян канмалли кун. Отряд таранах пухаймăпăр, анчах пĕр отделени пулатех. Халех Генăпа Гаврик патне шăнкăравлатăп, йĕлтĕрсем илсе часрах кунта килччĕр. Эсĕ Павлика вăрат, ăна та кун чухлĕ çывăрнипе çитет,— терĕ вăл арăмне.

Гена, Гаврик, Павлик — виççĕшĕ те Иван Павлович ывăлĕсем.

— Акă, çур отделени пулчĕ те пирĕн! Кўршĕсене чĕнес тата...

Çавăнтах полковник хулари милици начальникне шăнкăравларĕ, мĕнле инкек пулнине ăнлантарчĕ. Лешĕ мĕн тума кирлине халех тăвасси çинчен пĕлтерчĕ:

— Вунă çын йĕлтĕрсемпе кăларса яратăп...

Иван Павлович ывăлĕсене пушар чухнехи пекех васкатрĕ. Çарта пулса килнĕ маттур çамрăксем часах хатĕр пулчĕç. Хайсемсĕр пуçне, вĕсем йĕлтĕрпе лайăх çўрекен юлташĕсемпе çыхăнчĕç, халех Атăл хĕррине тухма хушрĕç. Çур сехетрен Иван Павлович çынсене икшерĕн-виçшерĕн, уйрăм-уйрăм маршрутсемпе, пур еннелле те сапаласа ячĕ. Кашни тĕме, кашни лупашкана тĕплĕн ухтарса тухма хушрĕ. Хăй, вăрман хĕрринче юлса, хăрăк туратсенчен кăвайт хучĕ.

Часах милици грузовикĕ çитсе чарăнчĕ. Ун çинчен вунă çын сиксе анчĕç, кашниннех йĕлтĕр. Иван Павлович вĕсене те ăçталла каймаллине кăтартса ячĕ.

Пĕр вунă сехетре хулари пур репродукторсем те кĕрлеме тытăнчĕç: радио хула çыннисене пурне те ĕнер Йăлăмра икĕ ача çухални çинчен пĕлтерчĕ. Ачисем миçе çултине, мĕн тăхăннине ăнлантарсах пачĕ. Кам та пулин, ăçта та пулин вĕсене курнă е вĕсем çинчен илтнĕ пулсан — халех милицие пĕлтермелле! Пĕр-ик сехет иртсен кун çинчен тепĕр хут каларĕç...

Пир-авăр фабрикинче ĕçлекен Нелли ятлă çамрăк хĕр, тин çеç ыйхăран вăраннăскер, радиопа çак хăрушă хыпара илтсен, тӳрех ĕнер вăрманта йĕлтĕрпе çӳренĕ чух 72-мĕш кварталта курнă ачасене аса илчĕ. Вăл васкасах тумланса телефон-автомат патне тухса чупрĕ.

— Малтан Анатолие пĕлтерес-ха кун çинчен... Вăл мĕн калĕ...— шухăшларĕ хăй.

Анатолий Ухтинов — Неллипе пĕр çĕртех ĕçлекен каччă, фабрикăри чи лайăх физкультурник. Ĕнер Атăл леш енче вĕсем пĕрле çӳренĕ, тĕттĕм пулсан тин таврăннă. Леш ачасене Анатолий те курнă-çке, вĕсене вăл часрах киле таврăнма та хушрĕ: «Сирĕн бай-бай тумалла»,— терĕ.

Каччă фабрикăн общежитинче пурăнать. Тултан кĕмелли алăк патĕнче ларакан вахтер умĕнче телефон пур. Хытăрах ыйтсан, чĕнекенччĕ-ха Анатолие...

Малтанах ответ пулмарĕ. Нелли автомата виççĕмĕш хут укçа ярса общежитири телефон номерне тытсан тин трубкăра çилĕллĕ сас илтĕнчĕ:

— Мĕн кирлĕ?

— Ухтинова чĕнĕр-ха, инçетре мар вăл, аялтах, улттăмĕш пӳлĕмре...— васкаса каларĕ Нелли.

— Чĕнместĕп! — терĕ вахтер.— Лакей мар эпĕ сирĕншĕн каллĕ-маллĕ чупкалама!

— Питĕ кирлĕ вăл мана... Ĕçпе, пысăк ĕçпе!

— Мĕн ĕçĕ пултăр канмалли кун?

— Эс паян радио итленĕ-и, Хумма мучи?

— Ма итлес мар-ха, репродукторĕ ман пуç çинчех янăрать...

— Икĕ ача çухални çинчен илтрĕн-и?

— Илтрĕм çав. Шел ачасене. Шăнса вилме те пулать кун пек çанталăкра...

— Манăн шăп çав ачасем пирки калаçмалла Ухтиновпа. Эпир унпа иксĕмĕр ĕнер курнă вĕсене... Чĕн-ха ăна часрах!

— Айван эсĕ,—терĕ вахтер,—сăмахна тӳрех çавăнтан пуçламаллаччĕ, чĕнеттĕм хальччен...

Тепĕр минутранах трубкăра Ухтинов сасси илтĕнчĕ.

— Кама кирлĕ пултăм-ши эпĕ?

— Мана,— терĕ Нелли.— Салам.

— Хăвна та салам-ха, эппин. Мĕн каласшăнччĕ-ши?

— Эсĕ радио итлерĕн-и?

— Эпĕ халь çеç тăтăм-ха. Канмалли кун васкамалли çук та. Мĕн вара?

Нелли радио мĕн çинчен калаçни, мĕн ыйтни çинчен пĕлтерчĕ.

— Астăватăн-и, каçхине 72-мĕш кварталпа пынă чух ик арçын ачана куртăмăр? Вĕсем пирĕнтен: «Хулана мĕнле каймалла?» — тесе ыйтрĕç... Шăпах çавсем çухалнă пулмалла. Милицие пĕлтерер пуль эпир вĕсене ăçтарах курнине. Шырама çăмăлрах пулĕ. Хăвăртрах тупĕç. Ачасем вĕт-ха, тем те пулĕ, хăрамалла!

—Тĕрĕс сан шухăшу, Нелли, халех шăнкăравласа каласа паратăп,— терĕ ăна хирĕç Ухтинов.

...Иван Павлович Йăлăмри вăрман хĕрринче пĕрмай калле-малле уткаласа çӳрерĕ. Пĕр-пĕр йĕлтĕрçĕ çаврăнса тухнине курсанах ун патнелле ыткăнчĕ. Анчах халлĕхе нимĕнле хыпар та пулмарĕ-ха. Ачасем тупăнмарĕç. Нивушлĕ пуçĕпех пĕтнĕ вĕсем?!

Милици машинин кабининче çав тери хуйхăрса кĕтсе ларакан Агния Ивановна та хăш енчен те пулин йĕлтĕрçĕ килни курăнсанах сиксе тухрĕ, ырă хыпар кĕтрĕ, анчах усси çав-çавах пулмарĕ-ха. Вара каллех макăрма тытăнчĕ вăл...

Сосновка поселокĕ енчен хуланалла, хуларан — унталла çынсем пĕр вĕçĕмсĕр утаççĕ. Ах, вĕсенчен хăшин те пулин Агния Ивановнăна ырă хыпар пĕлтересчĕ! Çук çав, никам та, ним те каламасть... Вăл ĕнтĕ хуйхăр-

нипе халран кая пуçларĕ, пуçне те аран çĕклерĕ, унтан майĕпе тĕлĕрсе кайнă пек пулчĕ.

...Кабина алăкне такам хуллен тăкăртаттарнине илтсен вăл карт! вăранса кайрĕ.

— Агния, паллаш, тав ту çак çынна, пирĕн турă вăл,— терĕ Иван Павлович, хăйĕнпе юнашар тăраканваткăллă фуфайка тăхăннă çын çине кăтартса.— Алпатов унăн хушамачĕ, сĕтел-пукан фабрикинче ĕçлекен рабочи...

Паян çак çын ир-ирех ухутана тухнă-мĕн, йĕлтĕр çине тăрса Сосновкăран чылай аякка кайнă. Пĕр мулкач тĕмсем хыçнелле чупнине курсан пăшал персе янă. Çав самантрах ача сассине илтнĕ.

Алпатов сасă илтĕннĕ çĕрелле пынă. Вара хайхи икĕ ачана тупнă, ачисем шăнса хытмах пуçланă, утайми те пулнă. Алпатов ачасен йĕлтĕрĕсене пĕрлештерсе çыхнă та, вĕсене лартса тӳрех больницăна илсе кайнă. Халĕ ачасем иккĕшĕ те Сосновкăри больницăра иккен. Тухтăрсем вĕсене пăхнă хыççăн: «Ытла хăрамаллиех çук»,— тенĕ...

Кун çинчен Иван Павлович ăнсăртран пĕлнĕ. Хула еннелле утакан çынран: «Çул çинче ачасене шыракан йĕлтĕрçĕсене тĕл пулмарăн-и?» — тесе ыйтсан, ку пĕтĕмпех каласа панă...

Агния Ивановна çак Алпатов хушаматлă çынна ыталаса илсех чуптурĕ.

— Ах, мĕнле тав тăвам-ши сире! — макăрса ячĕ вăл.

— Мĕнех тав тумалли пуруншăн? Хурлăха лекнĕ ачасене курсан, вĕсене пулăшмасăр тăма камăн чунĕ тӳстĕр? — терĕ Алпатов.

— Вăл тĕрĕс те-ха, анчах çăлаканни çапах та эсĕ пулнă-çке! — терĕ Агния Ивановна.— Санах тав тăвас пулать манăн, ĕмĕр-ĕмĕр телей пултăр сана куншăн, ырă çыннăм!

...Кайран, больницăра сывалнă хыççăн ачасене киле

йлсе пырсан, Иван Павлович полковник çапла каларӗ вӗсене:

— Эсир çухалнă кун сире шырама çитмӗл çичӗ çын тухрӗ. Çитмӗл çичӗ тус пулнă сирӗн вăл кун. Пирӗн пурнăç йӗрки çапла: кам та пулин йывăрлăха лексен, пурте ăна пулăшма тăрăшаççӗ. Ан манăр çавна. Хăвăр та яланах вăй çитнӗ таран çынна пулăшма тăрăшăр...

— Манмастпăр,— терӗç ачасем.— Нихçан та манмастпăр!

ТӖРӖС ЯТ

Кӗркунне ҫитнӗ ӗнтӗ, йывӑҫсем те ҫаралнӑ, анчах вӑхӑчӗ-вӑхӑчӗпе пӗлӗтсем хыҫӗнчен хӗвел курӑнать те шкул картишне ҫуллахи пекех ҫутатса ярать. Урокран тухнӑ арҫын ачасем унта хӗрсех футболла выляҫҫӗ. Сумкисене вӗсем сад хӳми ҫумӗнчи саксем ҫине пӑрахнӑ, хӑшӗсем тумтирӗсене те ҫавӑнтах хывса хунӑ. Ҫанталӑк лайӑх чухне никамӑн та тӳрех киле каяс килмест-ҫке. Юр ҫӑвиччен выляса юлас пулать...

— Эй, нянька, сумкăсем патĕнче тăр эсĕ! Сыхла! Пĕр-пĕр кăранташ çухалсан майна пăратпăр! — кăшкăрать вылякансенчен пĕри хӳме çумĕнче тăракан ачана.

— Асту, нянька, Дарвин сумкине хытăрах сыхла, унăн таракансем нумай унта, тарса пĕтме пултараççĕ! — янрать тепри.

— Таракан çеç мар, калта-шапа та пулĕ унăн!

— Нянька, пушмак шнурокĕ саланса кайрĕ, килсе çыхса яр-ха!

— Типсе вилетĕп, пĕр курка шыв ăсса килсе парха, нянька!

Анчах «нянька» тени вĕсене хирĕç нимĕн те чĕнмерĕ, кăшт тăрсанах шкул картишĕнчен тухса уттарчĕ.

— Килеваскать, мăнтарăн, унăн ачисем макăраççĕ-çке,— терĕ тахăшĕ, ун хыçĕнчен пăхса.

Арçын ачасем пурте каçса кайсах выляççĕ, савăнаççĕ, шавлаççĕ. Хĕрачасем те унтах сиккелеççĕ, вĕсен те хăйсен ваййи пур. Пĕр «нянька» çеç ниçта та хутшăнмарĕ, пĕр-пĕчченех уйрăлса кайрĕ. Манăн çак ачана шеллес килчĕ. Мĕншĕн-ха çавăн пек кулаççĕ, тăрăхлаççĕ унран? Чун чăтмарĕ вара, хайхине ятарласах хуса çитрĕм. Çулĕ те шăпах пĕр еннелле пулнă тата пирĕн.

— Мĕншĕн сана юлташусем «нянька» теççĕ, ачам? — алла ун хулпуççийĕ çине хурса ыйтрăм çакăнтан.

Ача ман çине темле тĕлĕнсе, куçĕсене чарса пăрахсах пăхрĕ.

— Мĕн тума кирлĕ ку сире? Ма ыйтатăр? — терĕ вăл.

Ача каласшăнах пулмарĕ, анчах манăн, пĕр пуçланăскер, ыйтса пĕлесех килчĕ.

— Паллах, манăн ĕçĕм çук-ха,— терĕм эпĕ, унпа юнашар кăшт утсан.— Анчах пĕчĕк чухне эп хам та çак шкулта вĕреннĕ... Ун чух пирĕн хальхи пек ваййă-

НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ
Ч-39750

сем те çукчĕ, тата... тата эпир пĕр-пĕринчен кулман, пĕр-пĕрне кӳрентермен...

— Халь те никам та кӳрентермест, ачасем шӳт тăваççĕ çеç.

— Эпĕ ăнланаймарăм-ши вара? Туйăнчĕ кăна-ши мана? Ан тĕлĕн-ха, эпĕ сирĕн пек ачасем çинчен кĕнекесем çыратăп та, манăн вĕсен пурнăçне пĕтĕмпех, пур енчен те пĕлес килет, çавăнпа ыйтатăп...

— Чăнах-и? Писатель-и эсир? — тĕлĕнсех кайрĕ хайхи ача. Вара эп хирĕç каласса кĕтмесĕрех хăй каласма тапратрĕ.— Каçарăр, тархасшăн, эп пĕлмен...— хĕрелсех кайрĕ хăй.— Усал ача тесе ан шутлăр эсир мана... Ачасем çинчен эпĕ темĕн те, темĕн те каласа пама пултаратăп...

— Çав териех нумай пĕлетĕн-и?

— Пĕлмесĕр! Пи-итĕ нумай пĕлетĕп!

— Малтан эсĕ хăвăн çинчен, ачасем хăвна мĕн пирки «нянька» тени çинчен каласа пар-ха.

— Ку вăл ытла вăрăм юмах...

— Эс кĕскерех кала, ăнланкалăп...

— Кĕскен каламалла пулать çав, килте анне кĕтет... Итлĕр, эппин. Кăçал пирĕн класра темле тĕлĕнмелле йăла тухса кайрĕ — кашнинех мĕнле те пулин ят параççĕ. Такам та пур пирĕн халь: Дарвин та, Ломоносов та, Софья Перовская та, Пушкин та, Чайковский те... Кам мĕне ытларах пултарать, çавăн майлă ят параççĕ: зоологипе лайăх вĕренекенни — Дарвин, сăвă çыраканни — Пушкин тата ытти те. Никам та кӳренмест — чаплă ятсемшĕн мĕн кӳренмелли пур? Мана çеç «нянька» теме тытăнчĕç. Тата Петя Арланова «тыква» теççĕ: вăл иртнĕ çулла пит пысăк кавăн çитĕнтернĕ те, кайран ăна районти выставкăна та илсе кайнă. Çавăншăн «тыква» теме пуçларĕç — мăшкăлласа та мар, юлташла тăрăхласа. Хама «нянька» тенĕшĕн те çилленместĕп эпĕ. Тĕрĕсех вăл — килте манăн пĕрмай хамран кĕçĕннисене пăхма тивет те... Аттепе анне ерçмеççĕ:

анне иртен пуçласа каçчен фермăра, атте — механизатор, вăл та килте сахал пулать. Пĕчĕк йăмăка никампа та хăварма çук. Кÿршĕри Анюк инке те, ман аннепе пĕрле фермăра ĕçлекенскер, хăйĕн Танюшне пирĕн пата ярса хăварать. Килте никам çук чух иккĕшех пурăнаççĕ. Пăхатăп вара çавсене, мĕн тăвас тетĕн. Пысăк переменăра та киле чупса кайса килетĕп. Апат çитеретĕп вĕсене, сĕт ĕçтеретĕп. Шкултан таврăнсан тула та илсе тухатăп, урамра та çÿретпĕр. Уроксене вĕсем çывăрса кайсан тин хатĕрлетĕп. Çавăншăн «нянька» теççĕ те мана...

— Ара, куншăн сана мухтамалла çеç, ачам: ырă ĕç туса аслисене пулăшатăн. Пит маттур! Паллашар-ха, эппин. Чăн яту мĕнле-ха санăн? Мана Кира Егоровна теççĕ.

— Эпĕ — Руслан, йăмăк Людмила ятлă.

— Э-э, питĕ лайăх ятсем иккен сирĕн! Пушкин кĕнекинчи ятсенех панă: Русланпа Людмила. «Нянька» теме май та çук сана. Яту — паттăр ячĕ.

— Людмила ÿсиччен кăна-ха ку, кайран ун пек чĕнме пăрахаççĕ пуль,— терĕ Руслан.— Асанне пурăннă пулсан кун пек пулмастчĕ те çав... Питĕ лайăх çыннччĕ вăл пирĕн, кашни кун аса илетĕп ăна,— ассăн сывласа илчĕ Руслан.— Асаннепе юлашки куна мĕнле иртттерни çинчен каласа парас-и? — ыйтрĕ унран сасартăк.

— Каласа пар, каласа пар, итлетĕп.

Эпир хуллентерех утрăмăр. Руслан хăйĕн калавне пуçларĕ.

— Çуркунне пирĕн чÿречесенчен ир-ирех хĕвел шуса кĕрет те пÿрт ăшчикки ялт! çуталса каять. Асанне яланах хĕвелпе тан тăрса ăшă сĕт суса кĕрет. Çав кун та çаплах турĕ вăл. «Руслан, тăр хăвăртрах, ачам, пÿрте куç тулли илем кĕчĕ»,— терĕ, тĕпелелле иртсе.

Эпĕ куç уçнă-уçман кайри стена çине хĕвел ÿкнине куртăм. Ырлăх ĕнтĕ — пÿртре çутă, ăшă. Манăн ытла

тӳрех тăрас килмерĕ те кăштах шухăша кайса выртрăм. «Асанне, хĕвел вăл — пире ăшăпа çутă паракан çăлтăр çеç,— терĕм унтан.— Эс пĕрмай «куç тулли илем, куç тулли илем» тесе çывăрма памастăн... Мĕнле илем пур çав хĕвел çумĕнче?» — «Э-эх, ача-ам! Шĕвĕркке çеç-ха çав эсĕ! Илеме ăна курма, туйма, ăнланма пĕлес пулать»,—терĕ вăл. «Эсĕ вĕрент, эппин, мĕнле курмалла, мĕнле туймалла вăл куç тулли илеме?» — «Юрĕ, ачам, юрĕ. Халех тăрса пит çу та, сĕт ĕç акă. Выçă хырăмпа нимĕнле илем те курăнмасть. Халех кайса кăтартăп сана тĕнче илемне...»

Тепĕр çур сехетрен эпир килтен тухрăмăр. Асанне пĕр аллине туя, теприне пĕчĕк пĕрне тытрĕ: «Çула май çерем кăмпи татăпăр, ку вăхăтри кăмпа питĕ тутлă пулать...» — терĕ.

Хĕвел çурт тăррисенчен кăшт çеç çӳлерех хăпарнăччĕ-ха. Тӳпе тап-таса, сенкер кăвак, пĕр пĕлĕт татки те çук. Эпир малтан уничерен иртсе айлăмалла антăмăр, унтан, кĕпер урлă каçса, майĕпен курпунтарах сăрт çине улăхрăмăр. Асанне хăш чух, чĕрине тыткаласа, чарăна-чарăна тăчĕ. «Саншăн çеç тухрăм, ахаллĕн пĕр утăм та тăвас çукчĕ»,— тет хăй.

Çемçе симĕс курăкпа витĕннĕ сăрт çинче пăхса тăма çав тери аван. Хĕвелĕ ăшшăн пăхса ачашлать, çанталăкĕ лăпкă, çил-мĕн вĕрмест. Сăртран пăхсан, пĕтĕм тавралăх таçта çитиех курăнать. Вĕçĕ-хĕррисĕр уйхире такам ятарласа сăрланă тейĕн: симĕс, сарă, хăмăр, хура лаптăксем сарăлса выртаççĕ. «Лайăхрах пăхма тăрăш, ачам: мĕн куратăн?» — тет асанне. Хăй çав вăхăтрах куç умне пулакан çерем кăмписене тата-тата илет.

Эпĕ куç хупаххисем ыратакан пуличченех тинкерсе унталла-кунталла çаврăна-çаврăна пăхатăп. «Ав, арман çулĕпе пĕр çын велосипедпа вĕçтерет,— тетĕп унтан.— Çыннине паллаймастăп».— «Тата мĕн курăнать?» — «Тата-и? Пĕчĕк варта кĕтӳ çӳрет».— «Кай,

ачам, шалт аптрамалла-иç санпа... Чи ыррине курмастăн пулать?» — «Тракторпа суха тунине хăвах куратăн пуль?» — «Эс ман пирки ан шарла. Эп курнине курма пĕл».

«Мĕн курать-ши асанне? Нимех те çук-çке»,— шухăшласа тинкеретĕп татах. «Э-э, пĕлтĕм, пĕлтĕм, вăрман! — терĕм унтан.— Вăрманне ăна такам та курать».— «Тата мĕн пур пирĕн умра?» — çаплах хистет асанне. «Урăх... урăх нимĕн те çук пек...» — «Çак анлă уйсене, шыв-шурне, улăхсене ăçта хуратăн? Шăп çавсем-иç куç тулли илем кӳрекенсем? Эх, ачам-ачам...» — «Эп татах темскер тесе...» — «Темскер мар — илем! Çурхи хĕвелпе çавсене пурне те чун кĕрет. Пĕтĕм халăхшăн савăнăç çитет, мĕншĕн тесен çаксем — йăлтах халăх пуянлăхĕ. Ăнланатăн-и?» — «Эсĕ, асанне, таçта Мускавра вĕреннĕ пекех нумай пĕлетĕн-çке?» — «Мускавсенчех пулса курайман çав эпĕ, анчах мана пурнăç вĕрентнĕ, ачам! Пурнăç! Сан пек пĕчĕккĕ чухне эпĕ пĕр телейлĕ кун та курман, пĕр савăнăç та пулман манăн».— «Мĕншĕн, асанне?» — «Мĕншĕн тесен çĕршыв пуянлăхĕ пĕтĕмпех пуянсен, карма çăварсен аллинчеччĕ. Пирĕн пек мĕскĕн чухăнсем вĕсен тарçисем çеç пулнă. Хамăра ирĕккĕн улăха анма та, вăрмана кайма та юраман пире. Питĕ лайăх астăватăп... Пĕррехинче мана, пĕчĕк хĕрачана, кӳршĕри хĕрарăмсем мăйăра илсе кайрĕç. Пĕрер хутаç мăйăршăн кунĕпе утса шутсăр ывăнтăмăр. Çапах та çурăм хыçĕнчи хутаç тулли мăйăр пулнăшăн хĕпĕртесе килелле хытах утрăмăр. Анчах каçалалла пире пуян таврашĕсем вăрман хĕрринче тытрĕç те хутаççене туртрĕç илчĕç, мурсем! «Мĕншĕн çын вăрманĕнче çӳретĕр, халех тытса хĕнетпĕр акă!» — тесе юнаççĕ пире. Юрать-ха, хĕнемерĕç... Ахалех, нимĕнсĕрех таврăнтăмăр вара... Ах, тур, мĕнле кăна мăшкăл тӳсмен пуль эпир патша саманинче! Халь те чун тарăхать çавăншăн! — аллипе хаяррăн

сулса илчĕ асанне.— Юрать, сире курма тӳр килмерĕ эпир курнине...»

Вăл хăйĕн пĕрнине самаях кăмпа татса тултарсан, эпир сăрт çинчен чалăш сукмакпа ана пуçларăмăр. Эп сиккипех чупрăм, асанне питĕ асăрханса анчĕ. «Пуç çаврăнса каять манăн, антар-ха»,— терĕ вăл.

Эп вара, тепĕр хут çӳле улăхса, ăна аллинчен çавăтсах антăм. Унтан ешĕл улăх урлă каçрăмăр та пĕчĕк сукмакпа айлăмрах вырăна çитрĕмĕр. Кунта тахçанхи кивĕ масар вырнаçнă. Чалăш-чĕлĕш хĕрессем, тайăлса кайнă юпасем лараççĕ. Салху вырăн, каламалли те çук. Унта-кунта лартнă йывăçсем çеç кăштах кăмăла уçмалла илем кӳреççĕ.

Асанне мана пĕр чылай хулăн юпа патне илсе пычĕ. Юпа тăррине шуçран касса сăрланă хĕрлĕ çăлтăр вырнаçтарнă. «Çакăнта санăн аслаçу выртать,— терĕ вăл, шухăша кайса.— Эп вилсен, мана та çакăнта пытарăр».

Эпир саваламан ансăр хăмаран тунă пĕчĕк сак çине юнашар лартăмăр. «Аслаçу, çавăн чухне, революци хыççăн, эппин, халăх ĕçне питех хутшăнман пулсан, халĕ те пурăнатчĕ пуль. Ăна çак Совет влаçĕшĕн хытă тăрăшнăшăн карма çăварсем çапса пăрахрĕç. Çĕр валеçнĕ чух пуянсен анисене чухăнсене партарнăшăн. Çынсене ыр тунă вăл, анчах хăй пĕтрĕ, хальхи ырă пурнăçа кураймарĕ»,— асанне тутăр вĕçĕпе куççулĕсене шăлса илчĕ. Эп ăна çав самантра калама çук хĕрхентĕм. Мĕн чухлĕ хуйхă-суйхă курнă вăл хăйĕн ĕмĕрĕнче! Унăн аслă ывăлĕсем иккĕшĕ те иртнĕ вăрçăра вилнĕ, манăн атте çеç амамса таврăннă...

«Эпĕ ĕнтĕ асаннене нихçан та, нимĕнпе те кӳрентермĕп, вăл мĕн хушнине яланах итлесе пурăнăп»,— тесе сăмах патăм хамăн ăшăмра.

Киле эпир такăр мăн çулпа таврăнтăмăр. Асанне, ватăскер, хытах ывăнчĕ пулас, киле çитсен тӳрех алăк патĕнчи вырăн çине выртрĕ. «Эсир ан шавлăр-ха, ача-

сем, эпĕ кăшт çеç канса илем. Кайран сире пăтă пĕçерсе çитерĕп»,— терĕ.

Анне ĕçе тухса кайрĕ. Эпĕ йăмăка урама илсе тухрăм. Асанне ватă, ывăннă, ăна хĕрхенес пулать, терĕм. Аçтан çӳретĕр-ха вăл Людмилăпа? Людмили ирĕкре çӳреме питĕ юрататъ. Эпир çырмана кайрăмăр, пĕве вĕçĕнче, тарăн мар çĕрте, шыва та кĕтĕмĕр. Кӳршĕ ачисемпе те чылай вылярăмăр. Киле хырăм хытă выçсан, каçалапа тин таврăнтăмăр. Пире хирĕç пӳртрен анне васкаса тухрĕ. Унăн сăнĕ улшăнсах кайнăччĕ. «Асаннӳ вилнĕ, ачамăрсем, мĕн тăвăпăр ĕнтĕ халь?» — терĕ те вăл, шăппăн йĕрсе ячĕ. Эпир те, йăмăкпа иксĕмĕр, ӳлесех макăрма тытăнтăмăр. Ытла та юратнă-çке эпир хамăрăн асаннене! Унтан анне майĕпе лăпланчĕ те пире те чарăнма хушрĕ. «Вилнĕ çынна макăрнипе чĕртеес çук»,— терĕ.

Темшĕн, асанне мана халь те вилмен пекех туйăнать... Эпĕ, вăл хушнисене яланах итлеме сăмах панăскер, халĕ те асанне мана ĕç хушса хăварнă тесе шутлатăп та, килти ĕçсене хам пултарнă таран пĕтĕмпех тума тăрăшатăп. Шкулти юлташсем ăна-кăна чухламаççĕ, çавăнпа «нянька» тесе чĕнеççĕ мана. Пĕтĕм историйĕ те çавă çеç...

Эпир Руслансен килĕ тĕлне çитсе тăтăмăр.

— Сывă пулăр, Кира Егоровна,— пуç тайрĕ мана арçын ача.— Ман васкамалла...

— Маттур эсĕ, Руслан! — çурăмĕнчен лăпкарăм ăна.— Сывă пул! Тен, хăçан та пулин татах тĕл пулăпăр-ха санпа...

* * *

Унтанпа чылай вăхăт иртрĕ. Эпĕ, тăван яла отпуска килнĕскер, çаплах килте пурăнтăм-ха. Пирвайхи юр та ирĕлчĕ, тепĕр уйăхран вара чăн-чăн хĕл ларчĕ. Астăватăп, пĕррехинче шултра та нӳрĕрех тăман çурĕ, каçа хирĕç тин чарăнчĕ. Шап-шур çемçе юрпа ачасем çеç

мар, мăннисем те пĕр-перинпе перкелешсе илме юрататтăççĕ.

Манăн хамăн та çемçе юр çийĕн утассăм килчĕ. Эпĕ аппасем патне кайрăм. Урамра пур çĕрте те вĕт-шак ачасем вылятчĕç. Юртан тăвайкки купалаççĕ, тем пысăкăш «кинемей» кĕлетки тăваççĕ, хăйсем ним майсăр шавлаççĕ, кулаççĕ, çуйăхаççĕ...

Чун чăтмарĕ — çак тĕлте эпĕ те чарăнса тăтăм. Ачасем хавассăн вылянине вăрахчен сăнаса пăхрăм. Хамăн ача чухнехи йывăр пурнăç, ют çынсем патĕнче хĕлĕпе, иртен пуçласа каçчен, чыхăна-чыхăна чăпта çапнине, пирвайхи укçапа пурнăçра пĕрремĕш хут çитсă кĕпе туянса тăхăннине аса илтĕм. Кăштах хурлантăм та пулмалла. Унтан çавăнтах хальхи ачасемшĕн, вĕсем телейлĕ пулнăшăн савăнтăм...

Ман йысна, колхозри бухгалтер, тин кăна ĕçрен таврăннă-мĕн те, апат хыççăн чей ĕçсе ларать. Мана та сĕтел хушшине лартрĕç. Вĕсен ачисем, Мишăпа Тима, урамра выляççĕ.

...Сасартăк тултан грузовик çав тери кĕрлесе илни, унтан ачасем кăшкăрни, çуйăхни илтĕнчĕ те шăп пулчĕ. Виççĕмĕр те чӳрече патне ыткăнтăмăр. Урамра, ачасемпе пĕрле, мăннисем те машина тавра кĕпĕрех пухăннă.

— Тахăшĕ грузовик айне пулман-ши унта? — терĕ йысна, хыпăнса.

— Тем курса ларăн ку ача-пăчапа! Атьăр-ха часрах! — кăшкăрсах ячĕ ман аппа.

Йыснапа иккĕшĕ те тăруках алăк патнелле вăркăнчĕç, эп те вĕсенчен юлмарăм. Йысна шутлани тĕрĕсех пулнă. Грузовик пĕр ачана хăрах çунаттипе çапса ӳкернĕ иккен. Халĕ вăл юр çинче йывăррăн сывласа выртать. Сăнĕ-пичĕ шуралса кайнă хăйĕн.

— Пурте сирĕлĕр, ан кансĕрлĕр! Куна часрах больницăна илсе каяс пулать! — кăшкăрчĕ йысна.

Хăраса ӳкнĕ шофер кузов хĕррине уçса пăрахрĕ.

Йыснапа тепӗр ҫын ачана васкасах машина ҫине вырттарчӗҫ те ӑсатма та хӑйсемех кайрӗҫ.

Ҫав вӑхӑтра пӗчӗк хӗрача калама ҫук хытӑ кӑшкӑрса макӑрса ячӗ:

— Пичче-е! Русла-ан!

Ку вӑл Руслан йӑмӑкӗ Людмила пулчӗ. Ӑна пӗр хӗрарӑм алла тытса йӑпатма пикенчӗ:

— Людмила, Люся!.. Ан макӑр, ан хӑра, пиччӳне ним те пулмасть, тухтӑрсем сыватаҫҫӗ ӑна, вӑл кӗҫех таврӑнать...

— Амӑшӗ ӗҫре вӗсен, ним те пӗлмест ӗнтӗ, кайса систерес пулать часрах,— терӗ тепри.

— Атя пирӗн пата, Люся, пирӗн Гальӑпа выльӑн... Галя, хамӑр пата илсе кай ӑна, теттесем пар...

Галя тени макӑракан хӗрачана ҫавӑтса кайрӗ.

Вӗсемсӗр пуҫне кунтан никам та пӑрӑнса каймарӗха. Пурте кун пек инкек мӗншӗн пулни ҫинчен пӗлесшӗн пӗр-пӗринпе калаҫаҫҫӗ. Анчах тӗрӗссине нихӑшӗ те пӗлсе ҫитеймест, кашни хӑй майлӑ калать.

Вара пӗр ватӑрах хӗрарӑм маларах тухса тӑчӗ.

— Эпӗ хамӑр пӳрт умӗнчи юра хыраттӑмччӗ. Хушӑран ачасем каҫса кайсах выляни ҫине пӑхкаласа илеттӗм. Ав, мӗн пысӑкӑш юр купи турӗҫ. Унта ак ҫакӑн пеккисем те тӑрӑшса ӗҫлерӗҫ.— Хӗрарӑм пӗчӗкрех хӗрача ҫине тӗллесе кӑтартрӗ.— Кӗтмен ҫӗртен грузовик килсе ҫитрӗ. Тӗксӗмрех пулнипе шоферӗ, тен, ку шур юртан тунӑ кӗлеткене те асӑрхамарӗ-и? Ун патнеллех пычӗ. Тепӗр енче вылякан вӗт-шаксем машин сассине илтмеҫҫӗ те пулас. Ҫапах та пӗри: «Пӑрӑнӑр!» — тесе кӑшкӑрчӗ... Вӗт-шакӑрсем унталла та кунталла сирпӗнчӗҫ. Хӑшӗсем ӳкрӗҫ. Эп вара, темрен тем пулӗ тесе, вӗсем еннелле чупрӑм. Ак ҫак Таня, юр ҫинче йӑваланаканскер, йӑпӑр-япӑр сиксе тӑраймарӗ. Машин ун ҫинеллех пырать... Вара пӗрре куҫ хупса илнӗ хушӑрах ун патне Руслан ыткӑнса ҫитрӗ те ачана пӗррех аяккалла илсе пӑрахрӗ. Анчах хӑй пӑрӑнса юлма ӗлкӗ-

реймерĕ, ăна хăрах енчен лекрĕ пулмалла. Хытах сусăрăлман пулсан юратчĕ хуть...

— Ах, мĕскĕн нянька...— терĕ çакна илтсенех ачасенчен пĕри.

— Мĕн калаçатăн çак, айван? Мĕншĕн мĕскĕн? Нимĕнле мĕскĕн те мар, нянька та мар, паттăр Руслан вăл! — терĕç ăна хирĕç темиçе çын пĕр харăс.— Паттăр! Нимрен те хăрамасăр, çынна çăлнă!

Куна хирĕç никам та чĕнмерĕ. Пурте килĕшрĕç пулас ку шухăшпа.

«Тинех тĕрĕс ят пачĕç ачана»,— шухăшларăм вара эпĕ те.

●

ХИСЕП

Çураки иртсен питĕ шăрăх кунсем пуçланчĕç. Акнă тырăсем шăткаласа тухрĕç пулин те, часах ӳсме чарăнчĕç. Çынсем хытă пăшăрханма пуçларĕç: çанталăк пĕрмай кун пек вĕри тăрсан, тырă пулмасть...

Анчах пĕр ирхине хĕвеланăç енчен тачка пĕлĕтсем

капланса килчĕç те çав тери вăйлă çумăр чашлаттарчĕ. Пурне те калама çук савăнтарчĕ ку çумăр. Тырă пулать, эппин, кăçал, пахчаçимĕçĕ те ӳсет!

Амăшĕ питĕ лăпкăн çывăракан вуникĕ çулхи ывăлне вăратрĕ:

— Никуш, тăр-ха хăвăртрах! Ĕç пур сан валли...

— Мĕн тумалла ара? — хуллен ыйтрĕ ача, куçне уçичченех.

— Кĕтӳç Укахви патне чуп-ха часрах! Пĕркун, çĕрулми лартнă чух, пирĕн кивĕ витресене илсе кайрĕ те темшĕн леçсе памарĕ. Çавсене илсе килесчĕ часрах. Çумăр шывне ытларах тултарса юлас... Илсе кайнă япалана каялла леçсе парасчĕ хуть, çук вĕт! Хăвăн япалушăнах сĕтĕрĕнсе çӳреме тивет...— мăкăртатса илчĕ амăшĕ юлашкинчен.

Никуш, амăшĕ хушнине яланах итлекен вашават ача, çавăнтах вырăн çинчен сиксе анчĕ те питне çуса та тăмарĕ, пуçĕ çине кивĕ карттус лартса ярса картишне тухрĕ. Çумăрĕ халĕ те çăвать-ха. Çумăр тумламĕсем кĕпе витĕрех ӳте тивнипе Никуш йăшаланкаласа илчĕ те тепĕр хут пӳрте кĕрсе пиншак тăхăнчĕ. Тин вара тăвалла чупрĕ.

Укахви пӳрчĕ ял вĕçĕнчех, вăл питĕ кивĕ, мунча пек кăна. Картишне лĕнчĕр-ленчĕр вĕрлĕк алăкпа кĕмелле, вăл уçах тăрать. Крыльца пеккин алăкĕ те çук, картлашкисем те çĕрнĕ. Никуш вĕсем урлă сиксе каçсах пӳрте кĕрсе тăчĕ.

— Эс мĕн капла, ир-ирех, çумăра та пăхмасăр, çӳретĕн? — ыйтрĕ Укахви, ун çине тĕлĕннĕн пăхса.

— Эпĕ... эп ахалех кĕтĕм... сирĕн тĕлпе иртсе каяттăм та,— терĕ Никуш, тăрук иметнĕ пек пулса.

Вăл урайне лартнă хăйсен витрисене, вĕсем çине маччаран çумăр шывĕ пат-пат-пат тумланине пăхса тăчĕ.

Укахви хĕрачи Нина, Никушпа пĕр класрах вĕренекенскер, ним те шарламасть, тĕпел кукринче тем мĕ-

шĕлтетет. Унăн йăмăкĕ Ринкка алăк патĕнчи кутнĕк сакки çинче çывăрать.

Никушпа Нина кăçал пиллĕкмĕш класра вĕренчĕç. Нина хăйĕн амăшĕ кĕтӳ кĕтнĕшĕн, хăйсем питех чухăн пурăннипе тăхăнмалли ырă япала çуккишĕн именет. «Кăçаллăха çеç çӳрет кĕтӳ патĕнче, ӳлĕмрен тек каймасть ĕнтĕ»,— тет вăл кашни çуллах. Анчах сивĕ хĕл иртет те, Укахви каллех колхозниксен выльăхĕсене пăхма кĕрĕшет. Йывăр çав ăна пĕччен пуçпа виçĕ ача пăхса ӳстерме. Упăшки вăрçăран таврăнман. Чăн аслă хĕрачи, Праски, иккĕмĕш çул ĕнтĕ район салинче, пĕр агроном патĕнче, нянькăра пурăнать. Халĕ иккĕмĕш хĕрачине, Нинăна та, çавăн пекех ача пăхма вырнаçтарать имĕш Укахви. Нинăн килтен каясси килмен, вăл малалла вĕренесшĕн пулнă. Никуш пырса кĕриччен вĕсем шăпах çакăн çинчен калаçнă курăнать. Нина çавăнпа кăмăлсăр пулнă. Никуш сисрĕ: Нина пичĕпе стена еннелле çаврăнса тăрса вăхăчĕ-вăхăчĕпе нĕшĕклесе илкелет.

— Эс ытлашши ан кулян-ха, ачам,— терĕ ăна амăшĕ хуллен.— Тен, пĕрре хăнăхсан, хăвнах лайăх пулĕ. Ав, ку пӳртре йышпа пурăнма та майĕ çук. Эпир Ринккапа епле те пулин майлашкаласа пурăнкалăпăр. Майĕпе, тен, пурсăмăр тăрăшса, çĕнĕ пӳртлĕх укçа та, тырă та пухăпăр. Хамăр тăрăшмасан, кам килсе туса парĕ пире? Ăнлан эсĕ...

Нина ассăн сывласа ун еннелле çаврăнса тăчĕ.

— Ç-çук, анне... Эп... эп... ним те мар! Эсĕ ху ан пăшăрхан маншăн. Каятăп, эппин, эпĕ. Эсĕ хушнă пекех пурăнăп унта...

Амăшĕ ăна çурăмĕнчен лăпкаса илчĕ:

— Телей пултăр сана... Мăн çул çине тух та, ут та ут, ниçталла та ан пăрăн. Чиперех çитетĕн...

— Пĕлетĕп, çӳресе курман мар.

Амăшĕ хĕрачана малтанах хатĕрленĕ пир хутаç тыттарчĕ.

— Улӑштарса тӑхӑнма ик кӗпе унта... Пуҫна ҫак клеенка татӑкӗпе хупла, ытла йӗпенесрен. Ҫумӑр витӗрех кайма тивет те-ха ӗнтӗ, мӗн тӑвӑн? Паянах ҫитес пулать, атту лешсем урӑххине илсе ярӗҫ.— Укахви шывланнӑ куҫӗсене шӑлса илчӗ.— Пурнӑҫ йывӑрри тӑвать-ҫке ҫакна. Ахалӗн тем парсан та килтен кӑларас ҫук та ҫав...

— Лӑплан, анне, ытлашши калаҫни кирлӗ мар,— терӗ ӑна хӗрачи.

...Никуш Нинӑпа пӗрлех урамалла тухрӗ. Шӑпӑртатса лӑпкӑ ҫумӑр ҫӑвать. Нина виҫ-тӑват утӑмранах чарӑнса Никушран тепӗр еннелле ҫаврӑнса тӑчӗ те сассӑр йӗрсе ячӗ.

— Нина...— терӗ Никуш,— епле-ха капла...

— Пӗлетӗн-и, Никуш, манӑн хамӑр ялтан ниҫта та каяс килмест. Тем тӑвӑттӑм килте! Вӑйӑм ҫитнӗ таран, колхозра та кунӗн-ҫӗрӗн ӗҫлӗттӗм...

— Ан кай пӗреххут,— ун куҫӗнчен пӑхрӗ Никуш.

— Ҫук ҫав, каясах пулать, анне калаҫса татӑлнӑ. Апат ҫитереҫҫӗ мана унта, тумлантараҫҫӗ, уйӑхра вунпилӗк тенкӗ укҫа та параҫҫӗ... Аннене ҫӑмӑлтарах пулать. Хӑҫан та пулин пӳрт лартмалла-ҫке пирӗн.

Хӗрача ассӑн сывласа илчӗ те тӑвалла утрӗ.

Никуш та юлмарӗ, ӑна ӑсатмалла юнашар пычӗ.

— Нина, эсӗ ан хыпӑн-ха,— терӗ вӑл сасартӑк.— Эп сана пулӑшма тӑрӑшӑп...

— Мӗн кирлӗ мара калаҫатӑн эс, Никуш? — ун ҫине тӗлӗннӗ пекрех пӑхрӗ хӗрача.— Мӗнпе пулӑшма пултаратӑн эс мана? Эс те ман пекех ача-иҫ?

— Ара, мӗнле те пулин... Паллах, ытла тӑруках мар. Ҫапах та шан эсӗ ман ҫине. Тӗрӗссине калатӑп!

— Юрӗ, юмах ярса ан пыр. Тата тек йӗпенсе те ан ҫӳре манпа, хамах пит лайӑх каятӑп.

Никуш ҫапах та мӑн ҫул ҫине тухичченех пычӗ унпа. Унта вара пӗчченех тӑрса юлчӗ. Нина малалла хӑ-

вăртран хăвăрт утрĕ. Ăна шелленипе чĕри пăчăртанса илчĕ Никушăн. Кăмăлĕ хуçăлчĕ...

— Ма илсе килмерĕн тата витрисене? Хăйсем килте çук-им? Пӳртне питĕрсе кайнă-и? — ыйтрĕ амăшĕ, Никуш киле таврăнсан.

— Ху кай та, ху илсе кил! Эпĕ илсе килместĕп,— терĕ арçын ача, пат татса.

— Мĕ-ĕн?

— Нимĕн те мар...

— Ай-уй, мĕн пулнă сана, аннӳпе мĕнле калаçатăн эсĕ?!

— Вĕсен пӳртĕнче...

— Мĕн вĕсен пӳртĕнче? Кашкăр ларать-им? Кĕме çук-им?

— Çӳлтен çумăр çуса тăрать! Тулти пек! Витрисем кирлĕ вĕсене. Шыв юхнă çĕре лартнă. Пире халь ним тума та кирлĕ мар-ха. Атте тимĕрçĕ-иç, кирлех пулсан хамăр валли çĕннисене тутăр.

— Витрисем çине çумăр шывĕ тулать, эппин?

— Иййя çав.

— Аплах пулсан... юрĕ-çке, халлĕхе витрисем унтах пулччăр, эппин.

Амăшĕ чăланалла кĕрсе кайрĕ, Никуш тĕпелелле иртсе ларчĕ. Унтан амăшĕнчен ыйтрĕ:

— Мĕншĕн-ха Укахви инке пӳртне юсаттармасть? Тăррине те пулин сӳтсе çĕнĕрен виттермелле...

— Эх, ачам, калаçатăн та çав эсĕ... Ку пӳртне юсама майĕ те çук ĕнтĕ, вăл çĕрсе пĕтнĕскер, çĕн пӳрт лартма вăй çитмест. Юмахри пек хăй тĕллĕн пулмасть-çке пӳрт тени! Укçи-тенки те нумай кирлĕ, йывăçне тупса илсе килме те ансат мар. Унсăр пуçне тата мăкне илмелле, кирпĕч туянмалла. Платникĕсене те тем чухлех тӳлемелле. Укахви хăй пĕччен кăна, ачи-пăчи — вĕтшакăр... Йывăр ĕнтĕ пурнăçĕ, мĕн каласси пур!

— Колхоз вёт-ха пирён. Ма пулăшмаççĕ ăна?

— Ара, мĕнле пулăшчăр тăруках? Колхозĕ те вăй лах мар-çке. Вăрçă вăхăтĕнче вăйсăрланчĕ. Ав, Пок шаш хĕрринчи ĕне витине те иккĕмĕш çул тăваççĕ — çаплах туса çитерейменççĕ. Ĕçлекенĕсем те çитмеççĕ. Хальхи вăхăтра, çак хăрушă вăрçă хыççăн, никама та çăмăл мар. Сăпаççип кала, хамăр ытлашши нушара мар. Аçу вăрçăран сывах таврăнчĕ, вăл тимĕрçĕ лаç çинче ĕçлени те самаях пулăшать. Çынсене ăна-кăна юсаса, сапласа памаллисем тупăнаççех, уншăн аçуна ахаль тумаççĕ, параççех мĕн чухлĕ те пулин. Эсир авă, шăллупа иксĕр, яланах тутă, тăхăнма çипуç та пур. Урăх мĕн кирлĕ сире?

— Мана, анне, ним те кирлĕ мар...

Никуш тек шарламарĕ. Крыльца çине тухрĕ те вă рахчен çумăр пĕр майлă шăпăртатса çунине пăхса тăчĕ. Тем çинчен çине тăрсах шухăшларĕ пулмалла арçын ача...

...Çĕрле çумăр чарăннăччĕ, анчах тепĕр ирхине кал лех чашлаттарма пуçларĕ. Картишсенче, урамсенче унта та кунта выçă выльăхсем макăрни илтĕнчĕ.

— Çанталăк йĕпене кайрĕ-çке,— терĕ Никуш амă шĕ, чӳречерен урамалла пăхса.—Кĕтӳ тухаймасть пул ĕнтĕ паян...

— Çумăрĕ çутăр-ха, вăл кирлĕ,—терĕ ашшĕ, тимĕ çĕ лаççине ĕçе кайма хатĕрленсе.

Çав вăхăтра вĕсем патне юнашарти Хримун арăм пырса кĕчĕ.

— Ыр кун пултăр-ха сире,— терĕ те вăл, кутнĕ çине ларчĕ.— Анкартисем хыçне ĕне çитерме каяс т сеттĕм те, урамра Укахвие тĕл пултăм. Выльăхсе çумăр витĕрех уя хăваласа тухас пуль, ытла пурте п канашлă пулнă пекех макăраççĕ, тӳсме пултарайма тăп, тет. Ан ухмахлан, пĕр кунтах выçă вилмĕç, анч

ху эсĕ кун пек çанталăкра йĕпенсе-шăнса чирлеме те пултаратăн, терĕм ăна. Шел-çке çынна, ахаль те йывăр пурăнать...

— Шутласан, вăл Укахви кĕтӳçĕ пулмах çуралнă, темелле. Питĕ юратать выльăхсене. Кашни сурăх-путеке паллать, хăш выльăхĕ камăн пулнине те пĕлет. Пĕрре, вăрçă вăхăтĕнчех пулчĕ-ха ку, пирĕн пĕр путек уйрах чирлесе ӳкнĕ-мĕн. Çавна уйрах пăрахса хăварас мар тесе, Укахви кунĕпе ача пек йăтса çӳренĕ. Каçхине, кĕтĕве яла кĕртсен, хамăр пата илсе килчĕ. Сĕт ĕçтерĕр часрах, тен вăй илĕ, тет. Чăнах та ураланчĕ çав путек ик-виç кунтан...

— Эс мĕнпе тав турăн вара ăна, анне? — ыйтрĕ алăк патĕнче çĕçĕпе тем каскалакан Никуш.

— Ара, мĕнпе тав тăватăн ун чухне? «Сăпаççипă сана»,— терĕм те, вăл тухса кайрĕ...

Никуш урăх ним те каламарĕ, тăрса пиншакне тăхăнчĕ.

— Ăçта каятăн тата çумăр витĕр? — ыйтрĕ амăшĕ.

— Пур-ха каймалли,— терĕ çеç Никуш.

Килтен тухсан, вăл тӳрех тимĕрçĕ лаççине, ашшĕ патне, кайрĕ. Лаçра, ун ашшĕпе пĕрле, çырма леш енчи Кăрнак мучи хăйĕн эрешлесе пĕтернĕ чăпăклă мăн чĕлĕмне мăкăрлантарса ларнă. Вăл хăйне витресем тĕплесе панăшăн тав тума пынă иккен. Пĕр кĕленче килте тунă эрех, çырткалама симĕс сухан илсе пынă.

— Атя, тепрер ярар, паян çанталăкĕ те йĕпе,— тет Кăрнак мучи, эрехне тимĕр кружкăна тултарса.— Ав, помощник те килчĕ санăн...

— Э-э, помощник пуласси инçе-ха! — ал сулчĕ ашшĕ, ывăлĕ çине пăхса илсе.— Халлĕхе çăкăр хурчĕ кăна...

— Ăçтан пĕлес, тен инçе те мар? — терĕ ăна хирĕç Никуш çирĕппĕн.— Анчах эсир вăт чăнах та никама та пулăшмастăр. Хăвăршăн çеç пурăнатăр!

— Мĕн, мĕн? Мĕн терĕн эсĕ? Кама пулăшмалла пирĕн? — тĕлĕнсе ыйтрĕ ашшĕ.

Никуш ун çине чăрлаттарса пăхрĕ:

— Эсĕ, атте, кам-ха çав?

— Мĕнле... кам? Сан аçу, кам тата!

— Эсĕ ман атте пулнине эпĕ ахалех пĕлетĕп. Эп урăххи çинчен...

— Мĕн çинчен тата?

— Эсĕ колхоз правленин членĕ марччĕ-и çав?

— Член пулсан, мĕн-ха вара?

— Эсир мĕншĕн кĕтӳç Укахвие пĕрре те пулăшмастăр?

— Мĕн пулнă ăна? Чиперех пурăнатчĕ мар-и?

— Çĕнĕ пӳрт лартса памалла ăна, акă мĕн! Вăл хăй пĕтĕм ялшăн тăрăшать, уншăн никам та хыпăнмасть.

— Ну, ывăлăм, ку ман ĕç мар вара,— пуçне пăркаларĕ ашшĕ.— Эп ăна пĕр-пĕр курка сапласа пама çеç пултаратăп...

— Эс мар, правлени пулăштăр! Вĕсен пӳртне çумăр шывĕ шарлаттарса юхса анать. Кайса куртăм, эп паян. Пурàнма май çук вĕсен пӳртĕнче, кĕç-вĕç йăтăнса анать! Çавна курмастăр эсир...

— Куртăн-и? — куçне хĕссе кулса илчĕ Кăрнак мучи, эрех ĕçнипе хĕрме пуçланăскер.— Çăмартисем чăххисене вĕрентеççĕ ку чухне...

— Эсир... Эсир эрех ĕçме çеç ăста! Çынсем çинчен шухăшласчĕ пĕртак та пулин! Нинăсен ашшĕ вăрçăра вилнĕ! — кăшкăрсах илчĕ Никуш. Чунĕ кӳтсе килчĕ пулас унăн, макăрса ярас килчĕ, анчах чăтрĕ. Макăракан йышши мар çав вăл. Тек калаçса тăмарĕ, çумăрнемĕнне те пăхмарĕ, урам варрипе тăвалла утрĕ те утрĕ. Уялла тухакан пралук тĕлне çитсен хăй ятне илтнĕрен çеç чарăнса тăчĕ.

— Никуш! Кĕр пирĕн пата! — чӳрече витĕр аллипе кăчăк туртрĕ унпа пĕр класра вĕренекен Ваçук.

— Ху тух кунта! — кăшкăрчĕ ăна хирĕç Никуш.— Сăмах пур!

Икĕ арçын ача хапха хӳттинче чылайччен тăчĕç. Никуш хăйĕн пусĕнче çуралнă шухăш-ĕмĕте юлташне каласа пачĕ...

— Çакăн çинчен хамăр колхоз председательне, Артем Захарча, тĕпĕ-йĕрĕпе ăнлантарса парсан, мĕнле-ши? Итлĕ-ши пире? Эс мĕнле шухăшлатăн? — терĕ Никуш юлашкинчен.

— Эс кама калаттарасшăн? — ыйтрĕ Васук.

— Иксĕмĕр кайса калаçатпăр, кам пултăр тата? Çитмест-им?

— Иксĕмĕр... сахал вăл. Атя, Юркăна та чĕнер хамăрпа пĕрле. Вара виççĕмĕр пыратпăр та председатель патне, калама тытăнатпăр ăна: эпир — тимуровецсем, пысăк ĕçпе килтĕмĕр сан патна, тетпĕр...

— Тĕрĕс, Васук! — килĕшрĕ унпа Никуш.— Эпир чăнах та тимуровецсем-çке! Анчах ку таранччен нимĕнле пысăк ĕçех те туман... Тимуровецсен йывăртарах пурнăçпа пурăнакан çынсемшĕн тăрăшмалла!

— Эпир те тăрăшатпăр ак! Артем Захарч патне пырăпăр та — çапла та çапла, Нинăсен килйышне халех пулăшас пулать, тейĕпĕр. Вĕсен ашшĕ Сталинграда хӳтĕлесе пуçне хунă... Ун пеккисене пулăшмасан, кама пулăшмалла тата?!

Халĕ ĕнтĕ ачасем пĕр кăмăллă пулса хавасланса кайрĕç.

— Хăçан тăвăпăр, эппин, ку ĕçе? Халех-и? Çумăр çăвать те ĕнтĕ... Тен, ырансем кайăпăр? — терĕ Васук кăшт тăрсан.

— Мĕн вăл çумăр! — ал сулчĕ Никуш.— Пире сахăртан туман пуль? Шутланă ĕçе ăна çийĕнчех туса хумалла. Малтан Юркăна чĕнер-и?

— Чĕнер, атя!

...Ашă çумăр çаплах лĕшкет-ха. Уйри çул шĕвĕ кĕсел пек пулса кайнă. Анчах виçĕ арçын ача ним çине

те пăхмаççĕ, утаççĕ те утаççĕ малалла. Çирĕп шухăш тытнă-çке вĕсем, пысăк ĕç тăвасшăн!

Акă вĕсем кӳршĕри яла пырса кĕчĕç, урама урлă лартнă тăрăхла çурт — колхоз правленийĕ тĕлне çитрĕç, чарăнса тăчĕç. Унтан шыв кӳлленчĕкĕ патне чупса пырса çара урисене çума тытăнчĕç.

— Эх, хамăн та паян çара уран тухмалла-мĕн, мĕнешкел ырлăх — кăвакалсем пек çăвăнма! — терĕ çав вăхăтра вĕсем патнех пырса тăнă хура уссиллĕ, пуçне сăран карттус тăхăннă çын.

Ку шăпах Артем Захарч, колхоз председателĕ, пулнă иккен. Ачасем, ăна курсан, савăнсах кайрĕç.

Пуринчен малтан Никуш сăмах хушрĕ:

— Артем Захарччă, эпир сан патна ĕçпе килтĕмĕрха! Пирĕн санпа питĕ-питĕ калаçмалла! — терĕ вăл, йĕпе аллисене йĕмĕ çумне шăлкаласа.— Тархасшăн, итле пире!

— Мĕн пулнă вара, ачасем? — тĕлĕнсе пăхрĕ ун çине Артем Захарович.— Атьăр-ха, эппин, правление кĕрер, ĕç çинчен урамра калаçма меллĕ мар.

Председатель пӳлĕмне кĕрсен, ачасем малтан, алăк патĕнчех кĕпĕрленсе, пĕр хушă ним чĕнмесĕр тăчĕç. Именчĕç пулмалла.

— Ну, пукансем çине ларăр та, каласа парăр, эппин, мĕншĕн килнине,— терĕ председатель кăмăллăн, хăй сĕтел пуçне ларса.— Итлетĕп!

— Никуш, эс кала...— ăна хулĕнчен тĕртрĕ Ваçук.

— Акă мĕн, Артем Захарччă,— хăюллăнах пуçларĕ вара хăй сăмахне Никуш.— Эсĕ пирĕн ялти кĕтӳçĕ Укахви пӳртне пĕлетĕн-и?

— Пĕлетĕп-çке,— терĕ председатель.

— Шала кĕрсе пăхнă-и?

— Ăна астумастăп... Тен, хăçан та пулин кĕнĕ те-и. Мĕн вара?

— Кĕмен пуль çав! Ун пӳртĕнче те тулти пекех çумăр шарлаттарать, ниçта кайса кĕме çук! Этем пурăн-

малли пӳрт мар вӗсен... Пӳрт тӑрри те, маччи те — ала пек. Хӑраса каймалла. Кӗрсе куртӑмӑр — урайне витресем, чӗрессем лартса тултарнӑ...

— Вара мӗн-ха, ачамсем?

— Вара... вара...— Никуш хӑйӗн юлташӗсем ҫине пӑха-пӑха илчӗ.— Епле пулсан та, колхозӑн Укахвие ҫӗн пӳрт лартса памалла! Текех ку пӳртре пурӑнаймаҫҫӗ вӗсем! Укахви хӑй тӗллӗн ҫӗннине лартма вӑй ҫитерес ҫук. Ӑна ман анне те ҫапла каларӗ... Вӗсен ашшӗ вӑрҫӑра вилнӗ. Сталинградра...

Артем Захарч тӑруках чӗнмерӗ, катӑк графинран шыв тултарса ӗҫрӗ, ачасене пӗрерӗн-пӗрерӗн пӑхса ҫаврӑнчӗ.

— Итлӗр-ха, вак халӑх...— терӗ унтан,— сире кун ҫинчен калаҫма вӑл хӑй хушса ячӗ-и? Укахви хӑй ма килмест ман пата?

— Хӑй, тетӗн-и? Хӑй килмест ҫав. Мӗншӗн тесен, ку ӗҫ пирки вӑл тахҫанах унта-кунта ҫӳренӗ иккен. Таҫта, районта та пулнӑ, тет. Кун ҫинчен мана Нина каласа пачӗ.

— Ман пата килнине астумастӑп-ҫке,— терӗ председатель.

— Ун чух эс кунта пулман, эс вӗреннӗ. Анчах сан вырӑнна юлнӑ Аливанов, ӳсӗрскер, Укахвие темтепӗр каласа тӑкнӑ. Питӗ кӳрентернӗ вӑл ӑна, сан йышшисем ҫӗрпӳртре те пурӑнма пултараҫҫӗ, улпутсемех мар, сысна кӗтӳҫисем ҫеҫ-ха, тенӗ. Ҫавӑн хыҫҫӑн вара Нинӑсен амӑшӗ: «Тек никама та кайса пуҫҫапмастӑп»,— тенӗ...

— Эсир вара халь кунта хӑвӑр шутланипех килтӗр-и? Никам та хушса яман-и сире?

— Хамӑрах килтӗмӗр ҫав. Эпир, Артем Захарччӑ, ахаль ачасем мар, тимуровецсем! Эпир ҫынсем кансӗр пурӑнни ҫине лӑпкӑн пӑхса тӑма пултараймастпӑр! Ун пек чух пирӗн ҫынна мӗнле те пулин пулӑшасах пулать. Тимуровецсен йӗрки ҫапла. Уйрӑмах фронтовик-

сен çемйисемшĕн тăрăшмалла пирĕн. Нинăсен ашшĕ Сталинградра паттăррăн çапăçса вилнĕ. Унăн орденне те ярса панă киле...

— Ăнлантăм, ачамсем. Пĕтĕмпех ăнлантăм,— терĕ председатель.— Тĕрĕс тăватăр, маттур... Халь акă мĕн. Итлĕр. Иртнĕ эрнере эпир хамăрăн правленире фронтовиксен çемйисене пулăшасси çинчен ятарласа калаçрăмăр. Укахви пирки те сăмах пулчĕ. Ку ĕçе эсир те хутшăнтăр пулсан, çирĕп сăмах паратăп: чăн малтан кĕтӳç Укахвие пулăшăпăр. Ларгса паратпăр ăна çĕнĕ пӳрт. Хальхи пек пĕр чӳречеллине те мар. Пилĕк чӳречеллĕ пулать унăн пӳрчĕ!

Председатель сăмахĕсем ачасене хĕпĕртеттерсех ячĕç.

— Ой, пит аван пулать апла!..

Çапах та Никуш иккĕленсе илчĕ:

— Артем Захарччă... Эс пире улталамастăн пуль те? Юри йăпатса каламастăн пуль те?

— Тĕп-тĕрĕссине калатăп, ачасем. Салтак вĕт эпĕ те. Салтак панă сăмах яланах тĕрĕс те çирĕп пулать!— Председатель Никуша, унтан унăн тусĕсене те пуçĕсенчен ачашласа илчĕ. Ачасем вара ун патĕнчен тулли кăмăлпа, йăл та йăл кулкаласа тухса кайрĕç.

...Ку вăл Аслă Отечественнăй вăрçă хыççăн ик-виç çултанах пулнăччĕ. Унтанпа пит нумай вăхăт иртрĕ. Çак ачасем пурăнакан ял сăн-сăпачĕ палламалла мар улшăнчĕ. Ачисем хăйсем те тахçанах мăн çын пулнă ĕнтĕ. Пурнăç çавăн пек вĕт: ваттисем — ватăлсах пыраççĕ, çамрăккисем ӳссе пыраççĕ, пурнăç хуçисем пулса тăраççĕ.

* * *

...Аслă урам. Ик енĕпе пĕр пекрех хитре йывăççсем ӳссе ларнă. Пӳрчĕсем кунта пĕринчен тепри илемлĕрех. Сап-сар пĕренесенчен тунисем хушшинче хĕрлĕ

кирпӗчрен тунисем те курӑнаççӗ. Тӑррисене тимӗр, шифер, яка чус-хӑма витнӗ, тӗрлӗ тӗслӗ сӑрсемпе сӑрланӑ. Чылай пӳртсен тӑррисенче телевизор антеннисем пӗлӗтелле кармашаççӗ.

...Укахви кинемейӗн пӳрчӗ те ыттисенчен пӗртте кая мар. Тимӗр тӑрӑллӑ вӑл, хӗрлӗпе сӑрланӑран ешӗл йывӑççен тураттисем хушшипе катаранах курӑнать.

Халь Укахви кинемей те тулли кӑмӑлпа, савӑнӑçлӑ пурӑнать. Хӑй колхозран пенси илет, хӗрӗсем вӗреннӗ çынсем пулчӗç: иккӗшӗ учительница, кӗçӗнни кӑçал агронома вӗренсе тухать те ӗçлеме хӑйсен тӑван колхознех таврӑнма шутлать.

Анчах çулсем хӑвӑрт иртсе пыраççӗ çав. Паян Укахви кинемей утмӑл çул тултарчӗ. Çав ятпа, колхоз правленийӗ йышӑннипе, халь кӑна унӑн çӳллӗ пӳрт çамкине «Кунта тава тивӗçлӗ колхозница Агафия Илларионовна Иванова пурӑнать» тесе пит хитре саспаллисемпе çырнӑ хӑма килсе çапрӗç. Ӑна Никуш,— халь вӑл Николай Павлович Смелов ӗнтӗ — колхозри трактористсен бригадирӗ, вырнаçтарчӗ.

Ял çыннисем пурте тенӗ пекех Укахви килӗ тӗлне пухӑнчӗç. Çитменнине тата, пушӑ алӑпа та мар — кучченеçсемпе, парнесемпе пынӑ. Пурте ыр сунаççӗ ӑна, хисеплесе саламлаççӗ, малашне те çирӗп сывлӑхлӑ, телейлӗ пулса нумай-нумай пурӑнма хушаççӗ.

Пӑлханнипе хӗрелсе кайнӑ Укахви темиçе сӑмах çеç калама пултарчӗ çынсене:

— Юратнӑ ялйышсем! Мана çакӑн пек хисеп тунӑшӑн сире мӗнле тав тумаллине те пӗлместӗп ӗнтӗ. Ӗмӗрӗм иртиччен те манмӑп, вӑйӑм çитнӗ таран сирӗнпе пӗрле ӗçлӗп... Тархасшӑн, пӳрте кӗрсе хаклӑ хӑнасем пулӑр-ха...

Вӑл савӑнӑç куççульне тутӑр вӗçӗпе шӑлса илчӗ те йӑл-йӑл кулчӗ.

САВĂНĂÇ

Хамăн пĕчĕк хĕрĕм Тоня пĕрре мана пионерсен çуртне пыма чĕнекен хут илсе килсе пачĕ.

— Концерт пулать,— терĕ вăл.

— Артистсем пыраççĕ-им? — ыйтрăм эпĕ.

— Чăн-чăн артистсене çеç курасшăн-и вара эс? — шикленерех ыйтрĕ Тоня.

Вăл мĕншĕн çапла ыйтнине çийĕнчех чухласа илтĕм. Эп пырас мартан хăрать ĕнтĕ ку.

— Юрĕ-çке, эппин, сана ăсатмалла пырăп,— терĕм вара ăна лăплантарас кăмăлпа.

— Çук, анне,— терĕ Тоня.— Эпĕ иртерех каятăп. Эс пилĕк сехет тĕлнелле пыр. Юрать-и?

— Юрĕ-çке, юрĕ, пырăп...

Вăхăт çитсен, эп вара, чăнах та, пионерсен çуртне кайрăм.

Хăвăрах пĕлетĕр ĕнтĕ: пионерсен çуртĕнче унта кирек хăçан та питĕ хаваслă. Илемлĕ картинăсем нумай, ачасем пĕр-пĕринпе савăнăçлăн калаçни те кăмăла çĕклет.

Нумаях та вăхăт иртмерĕ — сцена çине, чаршав умне, кăлкан пек сарă çӳçлĕ çамрăк хĕр тухса тăчĕ. Ку ĕнтĕ — пионерсен вожатăйĕ пулмалла, мăйне хĕрлĕ галстук çыхнă.

— Юлташсем,— терĕ вăл,— эпир паян шкулсенче вĕренӳ çулĕ ăнăçлă вĕçленнĕ ятпа ирттерекен пĕчĕк концерта пуçлатпăр...

Залри халăх ун сăмахĕсене хыттăн алă çупса йышăнчĕ.

Кĕçех чаршав уçăлчĕ. Чечексемпе илемлетсе пĕтернĕ сцена çинче кĕçĕн классенче вĕренекен пĕр пек тумланнă ачасем тăраççĕ. Чечексем хушшинче вĕсем хăйсем те чечексем пекех курăнаççĕ... Дирижер вырăнĕнче тăракан вожатăй икĕ аллипе пĕр харăс сулса ячĕ те ачасем «Эпир миршĕн» юрра хаваслăн шăрантарма тытăнчĕç. Сассисем ытла çирĕпех мар пулин те, юрри пит хӳхĕм тухать, итлеме çав тери кăмăллă. Ачасен пичĕсем çинче савăнăçпа телей çиçет, ку ĕнтĕ залра ларакансене те чунтанах хавхалантарать.

Савăннипе — хам та сисмен — манăн куççулĕ юхса анчĕ. Çынсем ан курччăр тесе, эп ăна хăвăрт кăна шăлса илтĕм.

Юрă хыççăн юрă... Кĕçех, ак, тата темиçе ача, пĕ-

рин хыççăн тепри, чуна çĕклентерекен сăвăсем калама тытăнчĕç, мăшăррăн-мăшăррăн тухса тĕрлĕ халăхсен ташшисене ташларĕç. Калама çук хаваслă пулчĕ!

Концертăн иккĕмĕш пайĕ пуçланиччен сцена çине каллех вожатăй тухрĕ.

— Халĕ вĕренӳ отличници Тоня Борисова «То березка, то рябина» ятлă юрра юрласа парать,— терĕ вăл.

Эпĕ тăруках çав тери пăлханса кайрăм.

— Тен, ман Тоня мар ку? Тоня Борисова ятлисем татах та пулĕ кунта! — хама хам лăплантарма тăрăшрăм çав самантрах. Чăнах та ĕнтĕ, хамăн пĕчĕк хĕрĕм халăх умне тухса юрлассине эпĕ пачах та кĕтменччĕ...

Анчах сцена çине урăххи мар, манăн Тоня тухса тăчĕ. Вара эпĕ тата хытăрах пăлханса кайрăм:

— Пултарĕ-ши... Çынсем умĕнче хĕрелмелле пулмĕ-ши? — тетĕп.

Кăлăхах пăшăрханнă эпĕ, хăрама кирлĕ пулман. Тоня чиперех юрлама пуçларĕ. Çепĕç сасси ытла та илемлĕ янăрать... Çитменнине, сцена çинче вăл хăйне хăй чăн-чăн артистка пекех тытать. Тинех лăплантăм вара эпĕ.

Тоня юрласа пĕтерсен, залри çынсем питĕ хытă алă çупрĕç. Унтан вăл тата икĕ юрă юрларĕ. Юлашкинчен пуçне кăшт кăна тайрĕ те сцена çинчен чупсах тухса кайрĕ.

Тепĕр самантран пионерсен вожатăйĕ ăна каллех сцена çине çавăтса тухрĕ, аллине илемлĕ чечек çыххи тыттарчĕ. Залри çынсем татах алă çупма тытăнчĕç...

Чăтаймарăм— амăшĕн чĕри çавăн пек ĕнтĕ — каллех куççулĕсене шăлма тытăнтăм.

— Эх, ашшĕ курасчĕ... Мĕн тери савăннă пулĕччĕши вăл...— шухăшларăм эпĕ. Анчах Тоньăн ашшĕ çук çав, вăл, хамăрăн ачасене телейлĕ пурăнмалла тăвассишĕн тискер тăшмансемпе çапăçса, паттăрсен вилĕмĕпе вилнĕ. Тоня ăна астумасть те, анчах та ашшĕн стена

çинче çакăнса тăракан портречĕ çине кашни кунах нумайччен пăхса тăрать. Вара мана вĕсем иккĕшĕ калаçнă пекех туйăнса каять...

...Темшĕн, çав вăхăтрах мана хам пĕчĕк чухне мĕнле пурăнни аса килсе кайрĕ.

Ман анне хутла пĕлмен хĕрарăмччĕ. Вăл пĕчĕк пулнă чухне ялти хĕрачасене хутла вĕрентмен, шав килте ĕçлеттернĕ: вырьăх-чĕрлĕх пăхтарнă, кĕнчеле арлаттарнă, чăпта çаптарнă... Атте те вулама-çырма пĕлмен; вăл эпĕ виççĕре чухнех чахоткăпа чирлесе вилнĕ. Ун чух пуян ачисем çеç вĕренме пултарнă çав!..

Эпир питĕ чухăн пурăнаттăмăр. Пурнăç йывăррине, епле пулсан та, чăткаланă ĕнтĕ, анчах каярахпа ман анне трахомăпа чирлесе суккăрланса ларчĕ. Вара ăна эп çавăтса çӳреме тытăнтăм. Ялтан яла ыйткаласа çӳреттĕмĕр эпир... Час-часах выçă та пулнă, хĕлле шăннă, кĕркунне-çуркунне çумăрпа йĕпеннĕ...

Анне вилсен, эпĕ, вунă çулхи хĕрача, тăр-пĕччен тăлăха тăрса юлтăм вара. Никам та çукчĕ пирĕн, ни тăвансем, ни хурăнташсем. Хуть те ăçта кайса кĕр. Вăл кунсене мĕнле тӳссе ирттернĕ-ши эпĕ? Ун çинчен халь аса илме те хăрушă. Телей пуласса шанман çав эпĕ ун чух. Анчах телейĕ куçа курăнмасăрах килсе тухрĕ.

Выçлăх çул мана тăлăх ачасемпе пĕрле ачасен çуртне ăсатрĕç. Ку вара манăн питĕ пысăк савăнăç, калама та çук пысăк телей пулчĕ. Çавăн чух эпĕ пирĕн çĕршывра Совет влаçĕ туса хунине пĕлтĕм. Совет влаçĕ пур чухăнсене, тăлăхсене телей кӳрет, терĕç, мĕншĕн тесен вăл власть — халăх влаçĕ, терĕç. Чăн та, мана та вăлах телейлĕ турĕ. Эпĕ хутла вĕрентĕм, çын пултăм!

...Концерт хыççăн манăн пĕчĕк хĕрĕм вожатăйпа пĕрле тухрĕ. Эпĕ ăна алăк патĕнче кĕтсе тăраттăм.

— Сывлăх сунатăп сире, Борисова юлташ,— терĕ мана вожатăй.— Ну, мĕнле, пирĕн «артистсем» кăмăла кайрĕç-и сире?

— Питӗ аван! Чуна савӑнтартӑр паян! — терӗм эпӗ.

Ҫав вӑхӑтрах пирӗн умма Тоньӑсене вӗрентекен учительница Нина Павловна пырса тухрӗ.

— Тӑхтӑр акӑ, ку пӗчӗк «артисткӑран» ӳлӗм чӑн-чӑн пысӑк та чаплӑ артисткӑх пулӗ-ха! Вӗсемшӗн халь пур ҫӗрелле те ҫул уҫӑ вӗт! — терӗ вӑл, манӑн алла чӑмӑртаса.

— Вӑл ҫапла та-ха, вӑрҫӑ тек ан пултӑрччӗ...— терӗм эпӗ.

— Тӗрӗс, пирӗн ачасем те, мӑнуксем те ан курччӑр-ччӗ ӑна. Яланах телейлӗ пулччӑрччӗ вӗсем!..

Эпир пурте пӗрле урама тухрӑмӑр.

Урамра ҫурхи лӑпкӑ та ӑшӑ ҫил ачашшӑн вӗрет. Ҫамрӑк йывӑҫ ҫулҫисем майӗпен вӑштӑртатса хумха-наҫҫӗ...

Учительницӑпа пионерсен вожатӑйӗ пире ырӑ сунса уйрӑлчӗҫ. Эпир, Тоньӑпа иксӗмӗр, ҫав тери савӑнса, тулли те телейлӗ кӑмӑлпа, ҫутӑ урам тӑрӑх киле тав-рӑнтӑмӑр.

...Ҫавӑн чух Нина Павловна калани тӗрӗсех пулчӗ. Ҫичӗ ҫул вӗреннӗ хыҫҫӑн манӑн Тоня музыка училищине кӗчӗ, кайран тата аслӑрах шкула, консерваторине кайрӗ. Унтан вӗренсе тухса театрта ӗҫлеме пуҫларӗ. Вӑл юрланине, тен, эсир те пӗрре кӑна мар илтнӗ-и?

ЧĔРЕ ĂШШИ

Виççĕмĕш класри Федя Мельников чирлени çинчен Виктор Петрович пĕрремĕш урок пуçланас умĕнех пĕлчĕ. «Шăнса пăсăлнă пулмалла, пĕçертсе пăрахнă āна»,— терĕç ачасем.

«Питĕ шел, йĕркеллĕ, лайăх вĕренекенсенчен пĕри. Кайса пăхас пулать... Амăшĕ тухтăра чĕннĕ-ши хуть? Ашшĕ килте çук-ха, правлени ăна Горькие колхоз валли çăмăл машина илме ячĕ...» — шухăшларĕ вăл.

Çак ял шкулĕнче вăтăр çула яхăн ĕçлет ватă учитель. Вĕренекенĕсемшĕн тăрăшакан, вĕсемшĕн чунне пама хатĕр çын, кун каçа Федя çинчен темиçе аса илчĕ, уроксем хыççăн вара килне те кĕрсе тăмарĕ, Мельниковсем патне кайрĕ.

Паян иртенпех кĕрпе пек юр çурĕ те, шăннă çĕр çийĕ чĕнтĕрпе витĕннĕ евĕр курăнать. Сивĕ хĕл вăй илме пуçларĕ. Çурçĕртен вĕрекен çил пит-куçа чĕпĕтет.

Пӳрте кĕрсенех Виктор Петровича шуранка сăнлă хĕрарăм, Федя амăшĕ, тĕпеле иртсе ларма сĕнчĕ. Учитель çĕлĕкне хывса пăтана çакрĕ, унтан хуллен кăна Федя мĕнле чирпе чирлени, халь хăйне мĕнлерех туйни çинчен ыйтрĕ.

— Йывăр-ха, вутри пекех çунса выртать,— ассăн сывларĕ хĕрарăм.— Темрен тем ан пултăрах...

— Тухтăра чĕнмерĕр-и?

— Паян кăна чĕнтĕм çав. Ĕнер каç фершăл патне кайса пăхрăм та, килте пулмарĕ, отпуска кайнă, тет. Паян Сĕнтĕртен тухтăр килет, терĕç-ха... Ытти чух, пылпа чей ĕçтерсе тарлаттарнă хыççăн, иртсе каяканччĕ, хальхинче темшĕн пулăшмарĕ ун пек туни те...

Федя чăнах та вĕри выртать иккен, йывăррăн, кĕскен-кĕскен сывлать. Куçĕсене те уçмасть, вăхăчĕ-вăхăчĕпе тем мăкăртатать, аташать пулмалла. Ачана хĕрхеннипе ватă учитель чĕри ыратса кайрĕ, анчах палăртмарĕ ăна, пит-куçне пĕркелентерсе илчĕ те кĕсйинчен темле таблетка кăларса хыпрĕ.

— Халех тухтăр кирлĕ. Правление çитсе тепре телефонпа калаçса пăхас мар-ши, Фекла Ивановна? — терĕ унтан.

Федя амăшĕ чӳречерен тинкерчĕ.

— Пĕлесчĕ çав, тухтăрĕ килме тухнă-ши?

Тек нимĕн те калаймарĕ, çав самантра урам енчи чӳрече тĕлĕпе «Москвич» кĕрлесе иртрĕ. Алăкĕ çинче хĕрлĕ хĕрес курăнчĕ. Эппин, ку вăл — участокри больница машини!

— Акă, тухтăр сăмах çинех килсе çитрĕ! — терĕ учитель.

Кĕçех пӳрте кĕске хура пальто, кăвак карттус тăхăннă çамрăк арçын кĕчĕ те алăк патĕнченех кил хуçине сывлăх сунчĕ.

— Çакăнта-и-ха чирлĕ ача?

— Кунта çав, кунта... ман ача-ха вăл.

— Юрать... Пăхăпăр ăна, пĕлĕпĕр, мĕн пулнă...

Тухтăр çиелти тумтирне хывса çакрĕ те чăматанĕнчен шурă халат кăларса тăхăнчĕ, тĕпеле иртсе аллине çурĕ. Вара Федя вырăнĕ çумне пырса ларчĕ те трубкипе итлеме тытăнчĕ.

Виктор Петрович тухтăра айккинчерехрен сăнаса тăчĕ. Кĕлеткипе спортсмен евĕрех патвар ĕнтĕ хăй, анчах пӳрнисем — музыкантăнни пек вăрăм та çинçе. «Хирург пулĕ ку, вĕсен аллисем сĕрме купăс калакансенни пек пулма тивĕç, теççĕ...» — шухăшларĕ учитель.

Вăрахчен тĕрĕслерĕ тухтăр Федьăна. Унтан амăшĕ енне çаврăнчĕ те хуллен каларĕ:

— Сирĕн ачан ӳпки шыçнă. Ик енчи те... Маларах эмеллеме тытăнмаллаччĕ, вара кун пекех йывăрланман пулĕччĕ. Халĕ пĕр тăхтамасăр больницăна хумалла.

— Эх, мăнтарăн! Пĕртен-пĕр ачана та халăх шутла пăхаймастăп, тытсах хĕнемелле мана! — ӳпкелешрĕ Федя амăшĕ.

— Эсĕ, инке, ытлашши ан кулян-ха,— лăплантарма тăрăшрĕ тухтăр.— Ун пекех хăрама кирлĕ мар, ывăлна больницăра сыватаççех. Ăшăрах тумлантар ăна...

Амăшĕ ывăл ачине ăшă кĕпе-йĕм, хулăн шăлаварпа çăм свитер, кĕрĕк тăхăнтарчĕ, çиелтен пысăк шальпе пĕркентерчĕ.

Çав вăхăтра çамрăк тухтăр учитель умне пычĕ те:

— Хисеплĕ Виктор Петрович...— терĕ.— Эсир мана паллаймарăр курăнать?

— Каçарăр, палласах çитейместĕп çав,— учитель васкасах куçлăхне кăларса тăхăнчĕ.

— Эп сирĕн ученик пулнă Шаваков Иван, Çыркассисем. Ачасем манран «шавак-шĕвек» тесе кулатчĕç. Астăватăр пуль?

— Э-э! Чăнах-çке! Халь палларăм! Палласа илтĕм! Тĕрĕс, мĕн чухлĕ ятламан пуль эп уншăн чарусăр ачасене... Имшерккеччĕ эсĕ, хăвна кӳрентерекен ачасене тавăрма тăрăшмастăнччĕ. Халь ав епле герой пулса кайнă эсĕ, э? Маттур, маттур! — тухтăра хулпуççинчен лăпкаса илчĕ учитель.— Ара, ăçтан паллас? Йăлтах улшăннă, йăлт! Институтран вĕренсе тухрăн, эппин?

— Вĕренсе тухрăм, Виктор Петрович. Пĕлтĕр диплом илтĕм. Ĕçлеме хамăр районах килес тĕрĕм.

— Питĕ лайăх тунă, тĕрĕс! Халăха кирлĕ çын халь эсĕ. Чăн-чăн этем.

Анчах тухтăрăн васкамаллаччĕ ĕнтĕ.

— Каçарăр, Виктор Петрович, тепĕр чух калаçăпăр, халь тытăнса тăма вăхăт çук, больницăна вĕçтерес пулать,— терĕ вăл, амăшĕ тумлантарнă ачана илсе тухма пулăшса.

— Паллах, ара, паллах. Тĕл пулăпăр-ха, калаçăпăр! Калаçасси тармĕ...

Тухтăрпа, Федя амăшĕпе пĕрле Виктор Петрович та урама тухрĕ. Вăл хĕрарăма лăплантарма тытăнчĕ.

— Эсĕ, Фекла Ивановна, ытлашши ан пăшăрхан. Ман ученик пулнă Ваня Шаваков Федьăна сывататех! Çапла-и, Ваня?

— Тĕп-тĕрĕс, сыватапăр! — йăл кулчĕ тухтăр.

— Тавтапуç, Виктор Петрович, ырă сăмахушăн,— терĕ хĕрарăм пĕрре учитель çине, тепре тухтăр çине пăхса.

Машина вырăнтан хускалчĕ те, тин çеç çунă юр çине хитре йĕр хăварса, тепĕр урамалла пăрăнчĕ. Виктор Петрович, кăкăр тулли сывласа, шкул еннелле утрĕ.

«Федьăшăн хăрамалли çук,— шухăшларĕ вăл,— анчах хăвăртрах сывалтăрччĕ, вĕренӳре кая юлмалла ан пултăр...»

Çав вăхăтра вată учитель чĕринче темле ăшă туйăм çуралчĕ, чĕри пăлханнă пекрех тапма пуçларĕ. Мĕн-ха ку? Малтанах вăл ăнланса та çитеймерĕ. Ара, паян пăшăрханмалли çеç мар, савăнмалли те пулчĕ-çке! Вăл вĕрентнĕ ача, Иван Шаваков,— тухтăр! Çынсене сыватакан, асап-хурлăхран хăтаракан çын!.. Епле савăнмăн-ха уншăн?!

Виктор Петрович кĕçех çитмĕле çитет, унăн тахçанах пенсие каймалла ĕнтĕ, анчах шкултан ниепле те уйрăласшăн мар. «Такăнса ӳкместĕп вĕт-ха, ма ĕçлес мар?» — текелет халĕ те час-часах. Çапах çитес çул пенсие тухатех, кун пирки вăл çирĕп шут туса хунă: ун вырăнне хăй çак шкулта вĕрентнĕ хĕрача Вера Уринова килет. Вăл кăçал педучилище пĕтерет. Ăна хăй вырăнне илсе килес пирки учитель кирлĕ çĕрте калаçса та татăлнă. Тĕлĕнмелле!.. Вера Уринова — учительница! Халь кăна пĕчĕк ачаччĕ. Эх, вăхăт, вăхăт! Шăвать вăл, пĕр чарăнмасăр шăвать. Ваттисем ватăлаççĕ, çамрăксем ӳсеççĕ. Кивви вырăнне çĕнни йышăнать...

...Учительсен канмалли çуртĕнчен таврăннă чух Виктор Петрович хуларан таксипе килнĕччĕ. Çавăн чухне те тĕлĕнмелли тупăннăччĕ: такси шоферĕ вăл вĕрентсе кăларнă Вася Шатров иккен. Хăй паллаштарчĕ, нумай пулмасть Совет Çарĕнчен таврăнтăм, унта танкист пулнă, терĕ.

— Виктор Петрович, тепре хулана килсен, ман пата кĕмесĕр ан кайăр, каялла хамах леçсе хăварăп,— асăрхаттарчĕ уйрăлнă чух.

Тепри тата, Кăвар Тимукĕ тенĕскер, пĕлтĕр Çĕнĕ Çул умĕн сăвăлла çыру çырса ячĕ. Унта Виктор Петрович мĕнле ĕçлени, халăха мĕн чухлĕ усă кӳни çинчен питĕ ăста çырса кăтартать. «Эс пирĕншĕн — тăван атте!» тесе вĕçленĕччĕ сăввине. Хăй район хаçат редак-

цийёнче ёҫлет иккен. Шкулта чухнех сăвăсем ҫыратчĕ, вĕсене стена хаҫатĕнче пичетлетчĕ. Кам пĕлет, пурăна-киле, тен, чăн-чăн поэтах пулĕ? Пултăрччĕ ҫав, пурнăҫра поэтсем те кирлĕ...

Пĕрин хыҫҫăн тепри аса килчĕҫ ватă учителе хăй вĕрентсе кăларнă ачасем. Миҫе-ши вĕсем? Нумай, питĕ нумай! Вĕсем пурте ҫĕршывшăн, халăхшăн усăллă ҫынсем!

Ҫавăнпа савăнать те ун чĕри...

ӰКЕРЧĔК

Эпĕ чылай хушă пĕр пысăк хулара пурăнтăм — малтан вĕрентĕм, унтан заводра ĕçлерĕм. Тăван яла кайса курма темиçе çултан тин вăхăт тупăнчĕ.

Пуйăс хамăр станцине çитнĕ чух çанталăк тăп-тăр уярччĕ — ытармалла мар. Ман телее, пирĕн ялалла каякан автобус та пур-мĕн. Ним тăхтаса тăмасăрах билет илтĕм те кĕрсе лартăм, хам çуралса ӳснĕ çĕршыва сăнаса пытăм...

Палламалла мар улшăннă пирĕн таврари вырăнсем! Çатма пек тикĕс çул хĕррипе электропередача линийĕ тăсăлать. Тимĕр карлăклă çĕнĕ кĕпер урлă каçрăмăр. Çулăн икĕ енĕпе те вăрман кашлать — çын лартнă вăрман. Ялсем витĕр тухнă чух çĕнĕ пӳрт-çурт курăнать, нумайăшĕ кирпĕчрен. Ĕçлет çав пирĕн халăх, ырми-канми ĕçлет, çулсеренех лайăхлатать хăй пурнăçне!

Аслă çул пирĕн ял вĕçĕпех иртет-мĕн. Тен, пĕлмесĕр иртсех каяттăм-и, юрать, çул хĕрринче ял ятне çырнă хăмана асăрхама ĕлкĕртĕм! Автобус çинчен антăм та каллех иккĕлентĕм. Йăнăш пулмарĕ-и? Ялăн анат вĕçĕнче пирĕн шкул çурчĕ пурччĕ. Йывăç çурт, колхоз тунă çулсенче кулаксен темиçе пӳртĕнчен сыпăнтаркаласа майланăскер. Халь ун вырăнĕнче икĕ хутлă, нумай чӳречеллĕ пысăк çурт ларать. Çĕнĕ шкул! Йĕри-тавра — хитре карта, ăна тăршшĕпех сенкер сăрпа сăрланă. Варринче — тимĕр хапха, тăрне пысăк саспаллисемпе «Автанкассинчи вăтам шкул» тесе çырса çапнă...

Эпĕ, тĕлĕннĕскер, тăп чарăнса тăтăм. Мăн чӳречесем çинче каçалла сулăннă хĕвел çути хĕмленет. Шкул тăрринче хĕрлĕ ялав вĕлкĕшет, хĕвел çутинче вăл та вут-çулăм пекех курăнать, ялавран кăшт айккинерех— телевизор антенни.

Çĕнĕ шкула тулаш енчен курнипех çырлахмарăм, шала кĕрсе пăхассăм килчĕ. Çуллахи каникул вăхăтĕнче никамах та пулас çуккине пĕлсех кĕтĕм. Сарлака та вăрăм коридорта пĕр хĕрарăм тăрăшсах чӳрече çăвать.

— Салам пултăр хамăр ялсене! — терĕм çакна.

Хĕрарăм ман еннелле çаврăнчĕ те аллинчи мунчалине витрене пăрахрĕ.

— Ай-уй! Иринкка, эсĕ тем ку?! — кăшкăрсах ячĕ вăл.— Ăçтан килсе тухрăн сасартăк?

Ку хĕрарăм — ача чух пĕрле вĕреннĕ Хветуç. Эпир пĕр-пĕрне ыталасах чуптурăмăр.

— Тăван яла, çуралнă çĕршыва килсе курас килчĕçке, Хветуç!

— Килмесĕр ара, килмесĕр! Килес пулать çав! Ахаль те пи-ит нумай пулать сана курманни... Вунă çул та иртрĕ пуль?.. Тепĕр тесен, сан пек вĕреннĕ çыннăн ялта мĕн тумалла? Инкӳсĕр пуçне тăванусем те çук. Эпĕ, ав, хамăр шкулта тăвата çул вĕреннĕ хыççăн малалла каяймарăм та, ĕмĕре килтех ирттеретĕп. Сакăр çул техничкăра ĕçлетĕп. Ырри сахалтарах та, мĕн тăвас? Сан пеккисем умĕнче те намăс...

— Мĕн намăсĕ пултăр? Пирĕн çĕршывра хуть те мĕнле ĕç те чыслă. Паллах, тăрăшса ĕçлесен... Пурнăçу еплерех-ха санăн?

— Пурнăçне ятламаллах мар, лайăхах пурăнатăп, тес пулать. Упăшка тимĕрçĕре ĕçлет, ачасем ӳсеççĕ. Çак шкула лартнă хыççăн ĕç те çăмăлланчĕ. Шыв кӳместпĕр — водопровод пур, вутă хутмастпăр... Пирĕн классене таса тытмалли çеç юлчĕ. Шкулĕнче таса пулсан, хамăн та чун савăнать, тупата!

— Аван ĕнтĕ, апла пулсан...

— Лайăх пулмасăр! Çуллахи вăхăтра колхозра ĕçлеме те вăхăт тупăнать. Пĕлтĕр икçĕр ĕçкунĕ турăм!

— Вашават çын çав эсĕ. Ача чухнех çивĕччĕ те...

— Ĕçĕнчен хăрамастпăр-ха унтан. Вăй пур чух ĕçлес пулать!

— Сансăр пуçне халь кунта кам та пулин пур-и?

— Çук никам та. Каникул вăхăчĕ, канаççĕ. Директор кашни кунах килсе пăхаканччĕ, паян вăл та çук, района кайрĕ.

— Шел... Кĕнĕ-кĕнех, шкула курса çӳрес тенĕччĕ. Мĕнлерех халь кунта, хамăр вĕреннĕ вăхăтпа танлаштарсан...

— Э-эй, каларĕ те çав! Шкулне курса çӳреме кам кирлĕ ара пире? Эп хам кăтартса çӳреме пултаратăп! Кунта эп халь — чи аслă начальник,— кулса ячĕ Хветуç.

— Кӑтартса ҫӳре, эппин, аслӑ начальник! — килӗшрӗм эпӗ.

— Халех! — Хветуҫ пиҫиххинчен ҫакса янӑ уҫӑсен ҫыххине вӗҫертсе илчӗ.— Куратӑн-и, пӗтӗм шкулӗ хам алӑра!

Тытӑнтӑмӑр вара Хветуҫпа иксӗмӗр класран класа, кабинетран кабинета, пӳлӗмрен пӳлӗме ҫӳреме. Мастерскойсенче те, спорт залӗнче те пултӑмӑр, пионерсен пӳлӗмне те кӗрсе тухрӑмӑр. Хветуҫ мана, чӑн-чӑн экскурсовод пекех, шкулта мӗн пуррине йӑлт кӑтартса ҫӳрерӗ. Шкул пурнӑҫне те лайӑх пӗлет иккен, пурин ҫинчен те тӗплӗн ӑнлантарчӗ.

Пионерсен пӳлӗмӗнче вара пуринчен те интереслӗрех. Автанкасси шкулӗн пӗтӗм историне пӗлме пулать унта. Тем тӗрлӗ экспонат та, тем тӗрлӗ ӳкерчӗк те пур. Ӑҫтан кӑна пухса ҫитернӗ вӗсене!

Акӑ, чи ӗлӗкхи, патша вӑхӑтӗнчи шкул — ялти хурал пӳрчӗ. Пысӑкрах мунча пек кӑна вӑл. Вутӑ хутсан, тӗтӗмӗ мӑрьерен мар, алӑкран тухнӑ. Ачасене ялан ӳсӗр ҫӳрекен тиечук вӗрентнӗ. Ӗненес те килмест пурнӑҫра ун пек пулма пултарнине... Акӑ эпир вӗренни. Темиҫе пӳрте тӗкӗштерсе тунӑ тӑрӑхла ҫурт. Ҫавӑнтах ун чухнехи учительсемпе ачасем пӗрле ӳкерттернӗ сӑнӳкерчӗк. Кивелнӗ вӑл, саралса кайнӑ, ҫапах ҫыннисене паллама пулать-ха. Эп унта хама та шыраса тупрӑм. Шӑпах Хветуҫпа юнашар тӑраттӑмӑр.

— Мӗнле шӗпӗнсем ара ҫаксем? — хамӑр сӑнсем ҫине кӑтартса ыйтрӑм Хветуҫран.

— Таҫта курнӑ пек туйӑнать...— йӑл кулчӗ Хветуҫ.

Шкулӑн хальхи пурнӑҫне кӑтартакан ӳкерчӗксем те нумай. Кабинетсенче опытсем туни, мастерскойсенче ӗҫлени, хӗлле йӗлтӗрсемпе чупни, ҫулла шкул тавра йывӑҫсем лартни, хор юрлани, спектакль кӑтартни, тем те пур...

Юлашкинчен маншӑн питӗ тӗлӗнмелли тупӑнчӗ. Акварельпе тунӑ пӗр пысӑк ӳкерчӗк. Ылтӑн тӗслӗ рам-

кăра лаша утланнă пĕр ача малалла ыткăнать. Пĕр аллинче пысăках мар хĕрлĕ ялав, тепĕр аллипе тути патне горн тытнă. Ӳкерчĕкĕ айне «Раман—Хăраман» тесе çырнă. Унпа юнашарах çар тумĕ тăхăннă каччă сăнӳкерчĕкĕ.

— Ку мĕнле ӳкерчĕк? — ыйтрăм Хветуçран.

— Ку-и? Ку вăл, тусăм, питĕ паллă ӳкерчĕк,— терĕ Хветуç.— Пурте çапла калаççĕ ун пирки. Пионерсем библиотекăри кивĕ кĕнекесем хушшинче тупнăскер вăл.

— Кама ӳкерсе кăтартнă унта?

— Йăкăнат Раманне астăватăн-и? Вăл пирĕнтен кăшт каярах вĕренсе тухрĕ-ха. Маттур ачаччĕ...

— Астăватăп. Чикан ачи пек хура кăтраскерччĕ, çапла-и?

— Тĕрĕс... Çав Раман хамăр вĕреннĕ йывăç шкула çунса каясран çăлса хăварчĕ.

— Мĕнле майпа?

— Ун чух колхозсем тин çеç пуçланнă-ха, тыррине те алăпа акнă, çурлапа вырнă...

— Астăватăп вăл вăхăта...

— Пĕр шăрăх кун ял халăхĕ уйра пуç çĕклемесĕр тенĕ пек тырă вырнă. Ытти ачасемпе пĕрле çак Раман та вырнă хыççăн тăкăнса юлакан пучахсене пуçтарнă. Хĕвел каçалла сулăнсан тин яла таврăннă ачасем. Раман выльăхсене шăварма шыв кӳресшĕн пулнă. Астăватăн пуль, шкултан инçех мар пурăнатчĕç вĕсем...

— Çапла, çапла... Вара мĕн пулнă?

— Раман шкул патнелле çывхарнă чух сасартăк çил-тăвăл тапраннă, хура пĕлĕтсем капланса килнĕ, çине-çине çиçĕм çиçнĕ, аслати кĕрленĕ. Ăна хам та лайăх астăватăп. Пирĕн тăрăхра çавăн пек хаяр çил-тăвăл пулнине урăх нихçан та курман, тупата! Мĕн чухлĕ çурт сийĕ сĕвĕнмерĕ, тăпăлса çилпе вĕçмерĕ, йывăç хуçăлмарĕ пулĕ çавăн чух! Юлашкинчен пăр çитсе çапрĕ те ялта пĕр чӳрече хăвармарĕ. Тĕнче пĕтсе килнĕ пекех

туйӑнчӗ! Ҫав ахӑрсамана вӑхӑтӗнче шкул ҫумӗнчи хӑрӑк ҫӑкана аслати ҫапнӑ. Вӑл ҫунма тытӑннине курсан, шкул ҫумне йӑпшӑнса тӑнӑ Раманӑн хӑрани таҫта кайса кӗнӗ. Мӗн шухӑшланӑ вӑл ҫав самантра — ӑна никам та пӗлмест. Хӳтлӗхрен чупса тухнӑ та Раман, пӑр ватнӑ чӳречерен шалалла сиксе, пионерсен пӳлӗмӗнчен горн илсе тухнӑ, кӗлет ҫумӗнче тӑракан лашана тытса утланнӑ та мӑн урамалла вӗҫтернӗ, горнне янратнӑ. Вӑхӑчӗ-вӑхӑчӗпе горнне вӗрме чарӑнса хыттӑн кӑшкӑрнӑ: «Пуша-ар! Шкул ҫуна-ать!..»

Астӑватӑп, пӗтӗм ял халӑхӗ шкул патнелле чупрӗ. Эпир те мӑннисенчен юлмарӑмӑр. Кӗҫех пушар насусне илсе пычӗҫ. Ҫунма памарӗҫ шкула, сӳнтерчӗҫ! Раман хӑюллӑ пулнипе, хӑрушӑ самантра ҫухалса кайманнипе ҫӑлӑнса юлчӗ пирӗн шкул. Пурте мухтарӗҫ Рамана. Ҫавӑн хыҫҫӑн ӑна «Раман—Хӑраман» теме пуҫларӗҫ... Ҫак ӳкерчӗке Раманпа пӗрле вӗреннӗ ача, унӑн тусӗ Макар Ваҫли, ӳкернӗ. Халӗ вӑл Шупашкарта картинӑсем ӳкерсе пурӑнать...

— Раманӗ ӑҫта тата? — ыйтрӑм эпӗ.

— Раманӗ-и? Ӳссе ҫитсен салтака кайрӗ те килне таврӑнмарӗ, ҫартах юлчӗ. Пысӑк командир, теҫҫӗ. Акӑ вӑл салтакран ярса панӑ сӑнӳкерчӗк...

— Хисеплеҫҫӗ, эппин, ӑна ачасем?

— Ара, ун пек ҫынсене те хисеплемесен! — терӗ Хветуҫ, Раман сӑнӳкерчӗкӗ ҫине тулли кӑмӑлпа пӑхса.— Пӗчӗккӗ чухнех шкула ҫӑлса хӑварнӑ, халӗ Тӑван ҫӗршыва сыхлать...

— Хисепе тивӗҫлӗ ҫав ун пек ҫынсем,— терӗм эпӗ, шкулпа сывпуллашса Хветуҫран уйрӑлнӑ май.

КАШНИ КУНАХ КУРАТĂП

Шупашкартан каякан поезд пирĕн пĕчĕк станцире пĕр минутлăха çеç чарăнать. Çапах та поезд çинчен анакансем те, ун çине ларакансем те ĕлкĕреççĕ. Вĕсен йышĕ кунта ытла пур чух та пĕр пек мар — нумайăн та, сахаллăн та пулкалаççĕ. Паян акă тĕрлĕ вагонсен-

чен шăп виççĕн тухрăмăр, лараканни пĕрре те курăнмарĕ.

Ватăрах арçын, поезд çинчен ансан, тӳрех чугун çул урлă каçса тепĕр еннелле утрĕ. Шупкарах кăвак плащ тăхăннă пĕр хĕрĕх пилĕк çулсенчи хĕрарăм хăйĕн пысăках мар чăматанне çĕре лартрĕ те унталла-кунталла пăхкаласа тăчĕ.

— Хĕрĕм, тăхта-ха,— терĕ вăл эпĕ ун тĕлĕпе иртнĕ чух.— Мăн Иштере ăçтан каймалла?

— Эпĕ шăпах çав еннелле каятăп, пирĕн ял Мăн Иштер хыçĕнче,— терĕм ăна хирĕç.

Вара эпир пĕрле утрăмăр. Иксĕмĕрĕн те пĕр çулпах кайма тӳр килнĕшĕн вăл та, эп хам та кăмăллă пултăмăр. Иккĕн утма кичем мар, сăмах-юмахĕ те тупăнать.

— Машинăсем çӳремеççĕ-им унталла? — ыйтрĕ хĕрарăм, кăшт утсан.

— Автобуссем Шупашкартан урăх çулпа çӳреççĕ çав,— терĕм эпĕ.— Анчах эпир тӳррĕн, вăрман витĕр тухатпăр. Пăшăрханмалли çук, инçе мар, пулсан пулĕ пĕр виçĕ километр.

— Ну, апла пулсан, кăшт уçăлса утмалăх çеç ку,— кăмăллăн килĕшрĕ хĕрарăм.— Эсĕ ху кунтисемех-и?

— Кунтисемех-ха. Халлĕхе... Эпĕ канмалли кун хамăрăн хулари тăвансем патĕнче пултăм та, киле таврăнатăп.

— Мĕншĕн «халлĕхе»? Кайран таçта каяс шут пур-им?

— Çавăн пек ĕмĕтпе пурăнатăп-ха.

— Ăçта каясшăн-ха, инçех-и?

— Çук, ун пек мар... Ялта сакăр çул вĕреннĕ хыççăн строительсен техникумĕнче вĕренме шут пур. Кайран хамăр ялах ĕçлеме таврăнатăп. Ӳлĕм пирĕн колхозра мăн çуртсем нумай пулмалла, тет. Хулари пек, эппин...

— Тĕрĕс шутлатăн, тусăм. Çамрăк чух вĕренсе юл-

ма тăрăшас пулать. Эпĕ хам та вăрçă хыççăн ĕçленĕ хушăрах ялхуçалăх институтĕнче заочно вĕренсе тухрăм. Йывăр пулчĕ, анчах мĕн тăвас тетĕн... Çамрăк чух аптрамастăн!

Çапла калаçса пынă вăхăтра хирĕç килекен грузовик пирĕн хушăранах кĕмсĕртетсе иртсе кайрĕ. Эпир ик еннелле пăрăнтăмăр та пĕр хушă шарламасăр утрăмăр. Унтан, шăп вăрмана пырса кĕрес умĕн, каллех пĕр çул çине тухса татах калаçма тытăнтăмăр.

— Питĕ илемлĕ вырăнсем сирĕн кунта, таçти чаплă курортсенчи пекех,— терĕ ют хĕрарăм, йĕри-тавралла пăхкаласа.

Аякран килекен çынна пирĕн тавралăх килĕшни мана савăнтарса ячĕ.

— Пирĕн кунтинчен илемлĕрех вырăнсем те нумай,— терĕм вара, кăшт мухтаннă пекрех.

— Эс мĕн ятлă-ха, хĕрĕм? Чылаях пĕрле килетпĕр ĕнтĕ, анчах хамăр паллашмарăмăр та...— ман çине пăхрĕ ют хĕрарăм.

— Регина ятлă эпĕ. Ялта Регуç теççĕ, анчах та ун пек чĕннине юратмастăп эпĕ. Хулари тăвансем Рега, теприсем ют çĕршывсенчи пекех Рег тесе чĕнеççĕ.

— Сайра тĕл пулакан ят санăн. Илемлĕ... Ан кӳрен те эсĕ, анчах мана Регуç тесе чĕнни ытларах кăмăла каять. Мана хама Роза Авдеевна теççĕ.

— Эсир хăвăр ăçтисем? Кунта пирвайхи хут килетĕр-и?

— Эпĕ, Регина, Смоленск облаçĕнчен. Совхозра аслă агрономра ĕçлетĕп.

— Сирĕн кунта... тăвансем пур-и мĕн?

— Тăван темеллех мар... анчах тăванран та хаклăрах çын пур. Вăрçă вăхăтĕнче эпĕ вăл ĕçлекен госпитальте выртнăччĕ. Мана вилĕмрен хăтарчĕ... Халь хамăн ĕçпе Шупашкара килме тиврĕ те, çитсе курас, терĕм...

Пирĕн çул вăрман витĕр тӳп-тӳрĕ тăсăлса выртать.

Вăрманта сывлăш сулхăнрах та, утма та çăмăл. Яштака хырсем пĕлĕтелле кармашаççĕ. Вĕсен парка тураттисем хушшипе сенкер тӳпе курăнкаласа каять, хĕвел пайăркисем унтан та кунтан прожекторсем пек çутаташĕ. Вăрманĕ тĕлĕрсе ларнă пек туйăнать...

— Ах, илемлĕ-çке! Хыр шăрши мĕне тăрать тата... — тет Роза Авдеевна, хушшăн-хушшăн чарăнса тăрса.

— Шурă вăрманта кунтинчен те илемлĕрех. Унта кăçал хуларан комисси килсе пăхнă, пионерсен лагерĕ тума йышăннă,— терĕм эпĕ Роза Авдеевнăна тата ыглараx тĕлĕнтерес шутпа.

— Мĕнле «шурă вăрман» тата вăл?

— Курас тетĕр пулсан, кĕрсе тухма пулать...

— Инçе-и вăл?

— Инçе мар. Çак сукмакпа кĕрсен, пĕр виççĕр метр пек çеç каймалла.

Роза Авдеевна ал тунине çыхнă ылтăн тĕслĕ сехечĕ çине пăхса илчĕ.

— Вăхăт пур-ха, кĕрсе курар, эппин...

Эпир мăн çултан сукмак çине пăрăнтăмăр. Айлăмалла анатпăр. Çӳллĕ те çăра курăк пирĕн урасене сĕртĕнет, типсе çитеймен сывлăмпа пирĕн пушмаксем нӳрленеççĕ.

Акă, пирĕн умра талккишпех шап-шурă, яштака та кăтра тăрăллă хурăнсем. Шӳлкеме тенкисем евĕр çулçăсем варкăш çилпе лăстăртатса ташлаççĕ. Пур енчен те тĕрлĕ кайăксен юрри янăрать. Вĕсем пире йыхăрнăн туйăнать: «Килсемĕр, юратсамăр, итлесемĕр!..»

Тепĕр чух эпир çак вырăнсене хамăрăн ĕнесене, пăрусене çитерме çӳретпĕр. Мĕн чухлĕ вылянă, кулнă, савăннă, юрланă эпир кунта! Хальхинче манăн хампа пĕрле Роза Авдеевнăна та савăнтарассăм килет. Анчах вăл савăнмасть пулас. Пачах урăхла: вăл темле шухăша кайрĕ, сăнран та улшăнчĕ. Малтанах тăрук хĕрелчĕ, унтан шуралса кайрĕ.

— Роза Авдеевна, сире кунта тем килĕшмерĕ пулас? — ыйтрăм вара эпĕ.— Кăмăлăр та хуçăлчĕ мар-и?

— Çук, çук, питĕ килĕшет, хĕрĕм! Ытармалла мар илемлĕ вырăн! Кăмăлĕ вăл... уншăн мар. Темле, ăш пăтранса килчĕ. Кун пекки пулкалать манăн. Сывлăх чаплах мар. Иртсе каять...

Эпир, ерипен утса, вăрман варринчи кӳлĕ хĕррине çитсе тăтăмăр. Хĕвел ăшшинче вăл тем пысăкăш тĕкĕр пекех çап-çутă. Çырансенчен шывалла ем-ешĕл курăкпа тĕрлĕ-тĕрлĕ чечексем усăнса анаççĕ...

— Ак ăçта вăл Швейцари! — терĕ Роза Авдеевна, тинех хавасланма пуçласа.— Чăн та ĕнтĕ, пионерсен лагерĕ валли кунтан ырă вырăн шыраса та тупас çук çав!

Унтан эпир кӳлле йĕри-тавра пăхса çаврăнтăмăр та урăх сукмакпа малалла утрăмăр. Нумаях та каяймарăмăр — вăрман хĕрри, унтан сарлака уй курăнчĕ.

Ансăр сукмакпа иккĕн юнашар утма та çук. Роза Авдеевна малта пырать, эпĕ ун хыççăн. Пĕр хушă чĕнмерĕмĕр. Сасартăк Роза Авдеевна шап-шур мăн хурăн çумне сĕвенчĕ те питне ик аллипе харăс хупларĕ. Эпĕ, тĕлĕннипе, ним тума аптраса тăратăп. Мĕн пулчĕ капла? Çав самантрах, темлерен, Роза Авдеевна умĕнчи тепĕр хурăн куç тĕлне пулчĕ. Этем пĕвĕ çӳллĕшĕнче çав хурăн хуппине чĕре пек туса касса кăларнă, чĕре ӳкерчĕкĕ айне тĕрлĕ саспаллисем картса çырнă. Каснă вырăнсенчен çумăр çунă чух çурт тăрринчен шыв тумланă пекех хурăн сĕткенĕ шăпăртатса юхать. Нивушлĕ çавăншăнах хурланать эп ăнсăртран паллашнă хĕрарăм?

— Роза Авдеевна, мĕн пирки эсир... капла? — тесе ыйтрăм вара.

— Каçар тархасшăн, Регина... Чун кӳтсе килчĕ...— терĕ вăл хуллен.

Хăй плащ тӳмисене вĕçертрĕ те шалти кĕсйинчен темле эмел таблетки кăларса хыпрĕ. Çав вăхăтра унăн

кăкри çинче темиçе орденпа медаль планкисем куран-са кайрĕç. Эп вара вăл хĕрарăмран тата ытларах тĕлĕнтĕм.

— Пĕлетĕн-и, хĕрĕм,— терĕ вăл, майĕпе лăплан-сан,— эпĕ хурăнсем макăрни çине лăпкăн пăхма пултараймастăп. Ку вăл вăрçă вăхăтĕнчи хурлăхран юлчĕ манăн. Тĕрĕссипе каласан, çав вăхăта пĕрре те аса илес килмест. Анчах манма та пултараймастăп. Ăçтан манатăн-ха, ун чухнехи хăрушă самантсем тĕлĕкре те часчасах курăнаççĕ пулсан?

— Каласа памăр-ши, эппин... кăшт та пулин?

— Кĕскен каласан, историйĕ çакăн пекрех вăл... Иртнĕ вăрçăра эп хам та салтак пулнă-çке, вăрçăра мĕн курмалли-тӳсмеллине пĕтĕмпех курса-тӳссе ирттернĕ. Ун чухне эпĕ, паллах, çамрăкчĕ-ха. Хĕрĕх виççĕмĕш çулхи çуркунне пирĕн дивизи, фашистсене пĕрмай хĕ-веланăçнелле хăваласа, куллен малалла пычĕ, ял хыççăн ял, хула хыççăн хула ирĕке кăларчĕ... Пуринчен ытла эпĕ Смоленск облаçĕнчи пĕр ялшăн шутсăр хытă пăлхантăм, манăн ăна часрах ирĕке кăларттарас килчĕ (пирĕн дивизи шăпах çав еннелле наступлени туса пычĕ). Тĕрĕссипе, ахаль ял та марччĕ вăл, район центрĕччĕ. Унта манăн аппа пурăнатчĕ. Учительница, шкулта ĕçлетчĕ. Ун упăшки вăрçа кайнине, хăй виçĕ ачапа юлнине çеç пĕлеттĕм, икĕ çул хушши вĕсем çинчен урăх нимĕн те пĕлмен. «Тен, халь вĕсем унта мар, тен, эвакуаци йĕркипе таçталла кайнă?» — теса шухăшлаттăм çеç.

...Акă ĕнтĕ эп часрах çитме ĕмĕтленсе пурăннă Костеркино. Эпир унта пĕр ирхине ирех, шăп хĕвел тухнă вăхăтра, пырса кĕтĕмĕр. Çунса пĕтнĕ çуртсем вырăнĕнче унта та кунта тĕтĕм йăсăрланатчĕ-ха. Çырман пĕр енчи урам çеç упранса юлнă, ăна нимĕçсем çунтарса хăварма ĕлкĕреймен иккен... Нимрен ытла эпĕ çавăнти çынсен куççулĕсене манаймастăп. Вĕсем аллисене пирĕн еннелле тăсса чупаççĕ, кашни салтаках ыталаса илсе

йĕреççĕ. Вĕсен куçĕсенче калама çук пысăк хуйхă пăлăрать, унпа пĕрлех çав тери пысăк савăнăç та çиçет.

...Кунти вăтам шкула та çунтарса янă иккен фашистсем. Шкул пахчинчи шурă хурăнсем çеç темле майпа сыхланса юлнă. Ним пулман пекех, вĕсем ем-ешĕл çулçăсем кăларнă. Яла ирĕке кăларнă хыççăн вĕсем те савăннă тейĕн, хуллен кăна вĕрекен варкăш çилпе çамрăк çулçăсем çатăл-çатăл силленсе илеççĕ... Ан чах çак шурă ращара çĕр çинчи чи хăрушă япалана курма тиврĕ. Пĕр-пĕринпе çывăх тăракан хурăнсем хушшине каштасем хунă та вĕсем çине вунă-вуник çынна çакса хăварнă. Хурăнĕсен хуппиcене çĕçĕпе касса «смерть коммунистам!» тесе çырса хунă. Каснă вырăнсенчен хурăн сĕткенĕ шăпăртатса юхать. Куççуль юхнă пек! Çавăнта, ыттисем хушшинче, эпĕ сасартăк хамăн аппапа унăн аслă ывăлĕ çакăнса тăнине курах кайрăм... Тӳрех куçпуç хуралса килчĕ, эп хăрушла кăшкăрса тăнсăр пулса ӳкнĕ.

...Кайран, тепĕр кунне, акă мĕн пĕлтĕм хамăн аппа çинчен. Вăл вăтам шкулта нимĕç чĕлхине вĕрентекен учительницăччĕ. Яла пырса кĕрсенех, нимĕçсем шкулти нумай кĕнекесене урам варрине кăларса ывăтса çунтарса янă иккен. Ун вырăнне хăйсен кĕнекисене илсе пынă. Вăл кĕнекесенче кашни страницăра тенĕ пекех хăйсен тискер «фюрерĕн» — Гитлерăн сăнĕ пулнă, вăл мĕн тери «чаплă та хăватлă» çын пулни çинчен çырса тултарнă. Ман аппана совет ачисене çав кĕнекесем тăрăх вĕрентме хушнă. Совет кĕнекисене вулама пачах чарнă. Аппа кунпа килĕшме пултарайман, вăл ачасене совет кĕнекисем тăрăхах вĕрентнĕ. Çакăн çинчен пĕлсен, нимĕçсем ăна пăхăнтармалли урăхла «меслет» тупнă — уроксенче автоматлă салтак сыхласа лармалла тунă. Анчах аппа автоматран та хăраман иккен. Нимĕç салтакĕ тĕрĕслесе ларма пырсан, пĕрремĕш урокрах класс умне тухса тăнă та ним шиксĕр, хăюллăн, уçă сасăпа аслă Ленин çинчен, вăл пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен

çулпуçĕ пулса тăни çинчен, унăн вĕрентĕвĕ вилĕмсĕр пулни çинчен калама тытăннă. Вырăсла ăнланакан нимĕç ăна чарăнма хушнă. Аппа итлемен. Вара нимĕç ăна çавăнтах, пĕтĕм класс умĕнчех çапса ӳкернĕ те урама сĕтĕрсе тухса хăрушла хĕнесе тăкнă. Каçалапа ăна шкул пахчинчех çакса вĕлернĕ. Унăн ывăлĕ Тима, амăшне çăлас пек, ун патнелле ыткăнса нимĕçсемпе çапăçма кĕрсе кайнă. Вара ăна та амăшĕпе юнашарах çакнă...

Роза Авдеевна куççулĕсене шăлса илчĕ.

— Аппун ытти ачисем сывах юлнă-и хуть? — ыйтрăм унран.

— Вĕсем сывах. Вăрçă хыççăн иккĕшне те хамах пăхса ӳстертĕм.

Тек вăл нимех те калаçмарĕ. Эпĕ те шухăша кайрăм. Мĕнешкел хăрушă вăхăта чăтса ирттернĕ иккен çак кăмăллă та чипер хĕрарăм! Вăл вăхăтри çынсем нумай тӳснĕ çав. Манăн хамăн атте те вăрçăра суранланса таврăннă пиркиех вăхăтсăр вилчĕ...

— Кур-ха, Регина, чăнласах макăрать вĕт йывăç,— терĕ унтан Роза Авдеевна, хурăн шывне ывăç çине юхтарса илсе.— Йывăçа çавăн пек асаплантаракан çынсем леш фашистсем пекех туйăнаççĕ мана. Мĕн тери ирсĕр чунлă çынсем вĕсем! Каплипех хăварсан, йывăç пĕтет ĕнтĕ, чире ерсе хăрма пултарать. Пулăшас пулать ăна...

Эп ним калама та пĕлмерĕм.

Вăл çулран кăшт аяккарах кайса тăмлăрах тăпрана ывăçласа илчĕ те чылайччен аллипе йăваларĕ. Унтан çав тăпрапа хурăна каснă вырăнсене сĕрсе лартрĕ.

— Аптрамĕ ĕнтĕ халь...

Эпĕ, ку хĕрарăма пирвайхи хут курнă пулин те, унран тĕлĕнмеллипех тĕлĕнтĕм. Вăл маншăн çав тери çутă сăнар пулса тăчĕ. Чăн-чăн Çын вăл! Пурте çавăн пек пулсанччĕ!..

Часах эпир вăрмантан тухрăмăр. Малта çурхи ешĕл

тикĕс уй сарăлса выртать, ытла инçетре те мар — район центрĕ Мăн Иштер курăнса кайрĕ.

Çул юппине çитсен эпир ал парсах уйрăлтămăр. Иксĕмĕр ик еннелле кайсан та чарăна-чарăна каялла пăхрăмăр, пĕр-пĕрне ыр сунса ал султăмăр.

Темшĕн-çке манăн унран уйрăлас та килмерĕ, хыççăнах утас килчĕ.

— Тек ĕнтĕ вăл çынна нихçан та тĕл пулас çук пуль. Питĕ шел! — çапла шухăшласа пăхса тăтăм эп ун хыççĕнчен.

Анчах тепĕр виç-тăватă кунтанах пирĕн районри хаçатра Роза Авдеевнăпа хамăр больницăра нумайранпа ĕçлекен, пурте хисеплекен Елена Кирилловна тухтăрăн сăнĕсем çапăнса тухрĕç. Иккĕшне пĕрле ӳкернĕ. Ыталанса, кăмăллăн йăл кулса тăраççĕ вĕсем. «Телей лĕ тĕлпулу» тесе çырнă ӳкерчĕкрен çӳлерех. Аялта — статья: çак икĕ хĕрарăм иртнĕ вăрçăра питĕ паттăр воинсем пулнă...

Эпĕ ку ӳкерчĕке хаçатран касса кăларса рамка ăшнех кĕртсе лартрăм та хамăр килти стена çине çакрăм.

Çавăнпа та Роза Авдеевнăна кашни кунах куратăп...

ÇУЛ ÇИНЧЕ

Алик вакун чӳречинчен пӗр уйрӑлмасӑр пӑхса пырать. Поезд çав тери хӑвӑрт малалла ыткӑнни тем пекех килӗшет ӑна. Ялсем, вӑрмансем, уй-хирсем вӗлтлетсе каялла шуса юлаççӗ. Ытла та лайӑх-çке çуллахи вӑхӑтра поезд çинче ларса çӳреме!

Пассажирсем Алика пурте юратаççӗ. Ӑна чӳрече уçса пӑхса пынӑшӑн та, выртмалли сак çинче утса çӳренӗшӗн те, вакун тӑрӑх шавласа калаçса чупнӑшӑн та ятламаççӗ. Ятлама мар — вӗсем унпа хӑйсем калаçма

тăрăшаççĕ, хăйсемпе пĕрле юнашар ларма чĕнеççĕ, канфетсем, тутлă пĕчĕк кукăльсем сĕнеççĕ.

Пуринчен ытла Алике: «Ăçта каятăн, каччă?» — тени йăлăхтарса çитерчĕ. Пурте çавăн пек ыйтаççĕ, тем тума кирлĕ вĕсене Алик ăçта кайнине пĕлме?

Акă, ăна хирĕç ларса пыракан карчăк татах çавна ыйтать.

— Ăçта каятăп терĕн-ха, ывăлăм?

— Паçăрах каларăм-çке... Мускава! Пирĕн атте унта вĕренсе пурăнать,— терĕ Алик ун çине çаврăнса пăхмасăрах.

— Э-э, чăнах та-çке, маннă эпĕ, каçар! Ватă пуç час манать-çке вăл...

— Алик, çиес килмест-и санăн? — ыйтрĕ çавăнтах амăшĕ.

— Çук, килмест,— пуçне пăркаларĕ ача.

— Эппин, кăштах тăхтăпăр, хырăму лайăхрах выçтăр!

— Тĕрĕс, выçнă-выçман çининчен усси çук,— каллех калаçăва хутшăнчĕ паçăрхи карчăк.

Кăнтăрлахи хĕвел, вакун чӳречисенчен шуса кĕрсе, пĕçерте пуçласан, поезд темле пысăк станцие çитсе чарăнчĕ. Пассажирсем вакунсенчен тухма тытăнчĕç.

— Сан валли мĕн илсе килес? — ыйтрĕ Алик амăшĕ те станцие тухас умĕн.

— Хăмла çырли илсе кĕр! — Вакун тĕлнех çырла сутма пырса тăнă хĕрарăмсене курсан, Аликĕн çав тери çырла çиес килнĕ.

Амăшĕ тухса кайсанах вăл, пуçне чӳрече витĕр кăларса, станци еннелле пăхма тытăнчĕ. Пысăк та хитре станци çурчĕ умĕнче халăх ярмаркăри пекех. Пĕрисем пĕр еннелле, теприсем тепĕр еннелле васкаса утаççĕ. Темĕн тĕрлĕ çын та пур! Вĕсем хушшинче çар çыннисем те курăнкалаççĕ.

Вăхăт нумай та иртмерĕ, поезд вăрăммăн кăшкăртса ячĕ. Вара çынсем васкасах каялла, вакунсене, кĕме

пуçларĕç. Кăшт тăхтасан, поезд ерипен кăна хускалчĕ. Хăшпĕрисем тин çеç чупса çитсе вакун картлашкисем çине сике-сике хăпарчĕç. Станцире тăрса юлакан çынсем аллисемпе сулма тытăнчĕç.

Шăп çав вăхăтра Алик вокзал алăкĕнчен хăйĕн амăшĕ чупса тухнине курчĕ.

— Анне, часрах! — кăшкăрса ячĕ вăл.— Часрах, чуп! юлатăн!

Алик амăшĕ тапраннă поезд хыççăн чупрĕ. Вăл хутпа чĕркесе тытнă çырлине те пăрахса хăварчĕ, анчах поезд хытăран хытă кайма пуçларĕ те, вăл ăна хăваласа çитеймерĕ...

Амăшĕ поездран татăлса юлнине ăнланнă Алик вара çав тери хăраса, хурланса макăрса ячĕ.

— Анне!... Анне юлчĕ!..

Хирĕç ларса пыракан карчăк Алике лăплантарма тытăнчĕ.

— Ан макăр, ачамçăм!.. Макăрнипе нимĕн те тăваяс çук ĕнтĕ халь. Ах, мĕнле ĕлкĕреймерĕ-ши тата?— вăл хăй те Аликпе пĕрле макăрса ярас патнех çитрĕ курăнать. Анчах Алик лăпланас вырăнне тата хытăрах ĕсĕклесе макăрма тытăнчĕ.

Ача макăрнине курса, çӳлти сак çинче çывăрса килекен хĕрарăм та, унтан анса, Аликпе юнашар ларчĕ.

— Ывăлăм, ан макăр, ан хыпăн! Мĕнех вара, эсĕ Мускава малтантарах çитетĕн кăна, аннӳ каярахран тепĕр поездпа хăваласа çитет,— терĕ вăл. Хăй çавăнтах Алике пысăк хĕрлĕ панулми сĕнчĕ, ăна пуçĕнчен шăла-шăла ачашларĕ, анчах ача пурпĕрех лăпланмарĕ.

Часах юнашар купери çынсем те, пĕр ача амăшĕ поездран юлнине пĕлсе, кунта пухăнма пуçларĕç. Хăшĕсем Алике канфет, теприсем çырла сĕнеççĕ. Çапах та Алик ĕсĕклеме чарăнмарĕ. Кăшт тăхтасан, пĕр ватăрах çын вылямалли лаша илсе пычĕ. Ку лаша çине Алик утланса ларма та пултарать.

— Ме, ывăлăм, выля!

Алик, кăштах лăпланса, лаша çине ăшă куçсемпе пăхса илчĕ. Лашана пуçĕнчен, çилхинчен тыткаласа пăхрĕ. Анчах кăшт тăхтасан татах шăппăн макăрма пуçларĕ. Текех ăна лаша та кирлĕ пулмарĕ.

Çав вăхăтра Алик умне вакунăн тепĕр вĕçĕнчен кунта çынсем мĕншĕн шавланине пĕлме ятарласа тăрса тухнă çамрăк летчик пырса тăчĕ.

Çӳллĕ, сарлака хулпуççиллĕ, илемлĕ çын.

— Ай-ай-ай!.. Арçын ятне яратăн-çке капла! Кун пек нĕшкекен арçын курманччĕ-ха ку таранччен! Мĕн ятлă-ха эсĕ? — терĕ вăл, аллине ача хулпуççийĕ çине хурса.

— А-а-алик,— ĕсĕкленипе аран çăвар уçрĕ арçын ача.

— Алик? Алексей? Апла, эсĕ манпа пĕр ятлах иккен! Анчах кун пек нĕшкекен аташ килĕшмест мана... Халех пăрах макăрма!

Çапла каланă хыççăн Алик кăштах лăпланнă пек пулчĕ, летчик çине куçĕсене шăлкаласа пăха-пăха илчĕ.

— Эп сана хам çинчен каласа парсан, итлетĕн-и?— терĕ унтан летчик, ун çумне вырнаçса ларса.

Алик летчик çине малтан тĕлĕнерех пăхрĕ, унтан, килĕшсе, пуçĕпе сулчĕ.

— Итле, эппин. Ку вăл 1941 çулта, Отечественнăй Аслă вăрçă пуçлансан, пулса иртрĕ. Эпĕ ун чухне шăп сан пек ачаччĕ. Эсĕ миçе çулта-ха халь?

— Тăххăрта...

— Эпĕ саккăрта кăна пулнă ун чух... Кĕркуннеччĕ, çанталăк сивĕ, çурçĕр енчен хаяр сивĕ çил вĕрет. Эпир виççĕн утатпăр: пĕри — манăн вунă çулхи пичче Коля, тепри — анне, виççĕмĕшĕ — эпĕ. Атте вăрçăра вилни çинчен пĕлтерекен хута илнĕрен варах чирлесе пурăнчĕ пирĕн анне. Ун чух та сывалса çитейменччĕ-ха вăл. Пирĕн яла кĕçех фашистсем килсе çитме пултараççĕ тенине илтнипе çеç ура çине тăчĕ. Вăл пире

инçетре пурӑнакан кукамайсем патне илсе кайрӗ. Нумай-нумай утрӑмӑр эпир...

...Анне мана тарӑн çырмари шыв урлӑ йӑтса каçарчӗ те ансӑр çулпа тӑвалла çавӑтса хӑпарчӗ, унтан, тӳрем вырӑна тухсан, чарӑнса тӑчӗ.

— Ларса канас килмест-и сирӗн, ачасем? — тесе ыйтрӗ вӑл.

— Канасчӗ çав, анне,— терӗмӗр эпир.

Эпӗ çерем çине выртсанах вилнӗ пек çывӑрса кайнӑ, нумай утнипе хытӑ ывӑннӑ пулас ёнтӗ.

— Алик, тӑр! Тӑр тетӗп, Алик! — сасартӑк Коля çине-çинех кӑшкӑрни пырса кӗчӗ ман хӑлхана.

Эпӗ куç уçса пӑхатӑп. Анчах Коля çав самантра, темшӗн, тӳрех аяккалла çаврӑнса тӑчӗ. «Тӑратӑн-и çак эсӗ, Алик?!» — тет вӑл, ман еннелле пӑхмасӑр. «Тӑтӑм-çке... Аннене те вӑратас пулать»,— тетӗп. Коля, темшӗн, чӗнмест. «Анне, тӑр»,— тетӗп эпӗ, хампа юнашарах выртакан аннене хуллен тӗртсе. Анне чӗнмест те, вӑранмасть те. «Ан тив, Алик, анне урӑх нихçан та тӑрас çук. Вилнӗ пирӗн анне»,— терӗ те Коля хыттӑн ӗсӗклесе йӗрсе ячӗ. Ӑна курса эпӗ те йӗрсе ятӑм...

— Мӗншӗн вилнӗ вара вӑл? — тӗлӗнсе ыйтрӗ Алик.

— Чӗри çурӑлса кайнӑ унӑн, малтанах хытӑ ырататчӗ чӗри,— терӗ летчик.

— Унтан вара... унтан мӗн турӑр?

— Коля аннене хӑйӗн тумтирӗпе витрӗ. Вара анне йӑтса килнӗ пӗчӗк чӑматана илчӗ те тепӗр аллипе мана çавӑтрӗ. «Атя, кайӑпӑр, Алик»,— тет. Эпӗ аннерен уйрӑлмасӑр йӗрсе тӑратӑп. Коля, ним тума аптранипе пулӗ ёнтӗ, мана тӗртсе илет: «Епле итлемелле мар вӑл?» — «Анне ятлать ак сана, ма тивен?» — татах йӗрсе яратӑп эпӗ. Анчах анне пӗр сӑмах та чӗнмест...

Эпир, алӑран алӑ тытӑнса, инçетре, кӑшт кӑна йывӑç тӑррисем курӑннӑ еннелле утатпӑр. Анчах ку ял мар, станци пулчӗ. Чугун çул кунтан таçта çити тӑсӑл-

са каять. Ун ҫинче йёрки-йёркипе вакунсем тăраççĕ. Пăравуссем вăрăммăн шăхăртаççĕ те станцирен иртсе малалла каяççĕ. «Поезд ҫине ларса каяс килмест-и санăн?» — тет мана Коля. «Каяс килет, анчах анне мĕнле?» — тетĕп эпĕ. «Кайран каллех килетпĕр кунта»,— тет вăл.

Эпир поезд патне пыратпăр. Кашни вакун алăкĕ умĕнчех халăх кĕпĕрленсе тăрать. Пурте ларасшăн тăрмашаççĕ, шавлаççĕ... Эпир те Кольăпа иксĕмĕр пĕр вакун алăкĕ умне хĕсĕнкелесе кĕрсе тăратпăр. Пире, ачасене, мăннисем пăхмаççĕ те, курмаççĕ те. Коля араҫ-аран вакуна кĕмелли картлашка ҫине хăпарса тăчĕ те мана пулăшма аллине тăсрĕ: «Часрах, Алик!»

Анчах ҫав вăхăтра татах мăн ҫынсем пырса чыхăнчĕҫ. Кайрисем малтисене тĕксе хĕссе лартрĕҫ. Вара эпĕ хама ытлах хĕстерсе лартасран аякалла пăрăнтăм. Ҫав вăхăтра поезд вырăнтан хускалчĕ. «Коля! Коля! Юлтăм вĕт!..» — кăшкăрса ятăм эпĕ. «Алик, тăхта, эпĕ сиксе юлатăп!» — кăшкăрать вăл та поезд ҫинчен.

Анчах поезд хытах чупать ĕнтĕ, сиксе юлма хăрушă. Эпĕ вара, тăр-пĕччен тăрса юлнăскер, питĕ хытă хăраса, хурланса йĕрсе ятăм...

Ҫав вăхăтра таҫтан самолетсем кĕрлесе вĕҫсе килчĕҫ. Унччен те пулмарĕ, таврара аслати авăтнă пек кĕмсĕртетме тытăнчĕ. Эпĕ макăрма чарăнтăм та нимĕн ăнланмасăр пăхса тăратăп. Ман умра ҫав тери хăрушă хура тĕтĕм мăкăрланса хăпарать. Коля ларса пыракан поезд арăш-пирĕн пăтранса сирпĕнет, хĕрлĕ ҫулăмпа явăнса ҫунать. Пĕр самант хушши тĕнче пĕтсе килнĕн туйăнчĕ мана. Эпĕ ҫаплах нимĕн ăнланмасăр тăратăпха. Сасартăк хам тĕлпе пĕр ҫамрăк хĕрарăм пĕчĕк ача пек ĕсĕклесе макăрса иртнине куртăм.

«Ах, чунăмҫăм, ывăлăм!.. Миша, Мишенька! Ма хамран уйăртăм-ши?! Ма лартса ятăм-ши?! — ниҫта кайса кĕрейми хыпăнать вăл.

Эпĕ ку хĕрарăма шутсăр шеллерĕм. Вара ун патне

утса пырса аллинчен тытрăм та: «Инке, мĕн пулчĕ?» — терĕм. «Ах, манăн Миша пĕтрĕ-çке!» — çаплах ĕсĕклет вăл. «Инке, ан макăр-ха...» — терĕм те эпĕ, хам та ĕсĕклесе йĕрсе ятăм.

Вара вăл куççулĕ витĕр ман çине пăхрĕ.

«Кам ачи эсĕ?» — «Никамăн та мар», — терĕм ăна. «Мĕнле никамăн та мар, аçу-аннӳ пур-и?» — «Çук, никам та çук халь манăн!» — Эпĕ ăна хăвăрт кăна хам çинчен каласа патăм. «Ах, эсĕ те телейсĕр иккен!..» — терĕ вара вăл, мана ыталаса илсе.

Эпĕ тата ытларах хурланса, ĕсĕклесе макăрма тытăнтăм.

«Ан макăр, ывăлăм, атя манпа», — терĕ вăл, мана алăран çавăтса.

* * *

— Åçта илсе кайрĕ вăл сана? — ассăн сывласа илсе ыйтрĕ Алик, летчик хăйĕн калавне вĕçленине сиссе.

— Хăй патне. Эпир унпа пĕрле пурăнма тытăнтăмăр. Нюра инке манăн анне пулса тăчĕ, эпĕ унăн ывăлĕ пултăм. Вăл мана вăрçă вăхăтĕнче те, вăрçă хыççăн та хăй ачине пăхнă пекех лайăх ӳстерчĕ. «Эсĕ манăн Мишша вырăнне тупăнтăн», — тетчĕ вăл мана ялана нах. Халĕ эпĕ отпуска киле каятăп. Тем пекех кĕтет мана унта иккĕмĕш анне! Вĕренсе тухсанах хам пата илсе каятăп, ахаллĕн пĕччен пурăнма кичем ăна. Вăт, çапла, тусăм Алик! Анчах халь, хăвах пĕлетĕн, вăрçă вăхăчĕ мар, çавăнпа та макăрни килĕшмест...

Летчик каласа панине Алик çеç мар, мăннисем те тимлесех итлерĕç. Хăшпĕр хĕрарăмсем куççулĕсене шăлкаласа та илчĕç. Летчикпа амăшне хăйсен ăшĕнче мухтарĕç, ырă сунчĕç.

Тек вара Алик пĕрре те макăрмарĕ, вăл хаваслăнах калаçма тытăнчĕ. Летчикпа туслашрĕ те текех унран уйрăласшăн та пулмарĕ. Вĕсем талăка яхăн пĕрле ларса пычĕç.

Поезд Мускав патне çывхара пуçласан, пассажирсем япалисене пухса тирпейлеме тытăнчĕç. Вĕсем пĕрпĕрине ырă сывлăх сунса уйрăлаççĕ. Пуринчен ытла Алике ырă сунса хăвăртрах ÿсме хушаççĕ.

Аликпе летчик вакун алăкĕнчен тухнă чух шурă халат тăхăннă хĕрарăмпа чугун çул çинче ĕçлекенсен тумне тăхăннă арçын пырса тăчĕç.

— Алексей Климов ятлă ача хăшĕ пулать кунта?— ыйтрĕç вĕсем.

— Алексей?! Акă вăл,— терĕ летчик.

— Ну, Алеша, эпир сана илме килтĕмĕр, атя пирĕнпе,— терĕ хĕрарăм йăвашшăн.

— Çук, эпĕ пымастăп,— пуçне пăркаласа хирĕçлерĕ Алик.

— Ун пек юрамасть, ачам, эсĕ пирĕнпе пыратăнах. Эпир аннÿрен телеграмма илтĕмĕр. Вăл сана та, хăвăрăн япаларсене те, хăй çитиччен пăхса упрама ыйтать. Аннÿ хăй тепĕр поездпа килсе çитет.

Алик, нимĕн калама пĕлмесĕр, пĕрре летчик çине, тепре хăйне илме килнĕ çынсем çине пăха-пăха илет.

— Атя, Алик, эпĕ те сана ăсатсах хăварăп. Аннÿ хушнине итлес пулать,— терĕ летчик.

Вокзалти «ачасемпе амăшĕсен пÿлĕмĕнче» таса та çутă. Пысăк чÿречесем çинче илемлĕ чечексем сарăлса лараççĕ. Урайне талккăшпех тĕрленĕ хулăн кавир сарса хунă. Йĕркерен сĕтелсем, çывăрмалли вырăнсем лартса тухнă...

Летчик юлашкинчен Алике хăйĕн сăнÿкерчĕкне парнелесе уйрăлчĕ.

— Ну, тусăм, сывă пул! Ÿссе çитсен, хăнана пыр. Халĕ ĕнтĕ тек ан найкăш, чăн-чăн арçын пек пул!— терĕ вăл, Алике çурăмĕнчен лăпкаса.

Арçын ачан халь ĕнтĕ унран уйрăлас та килмерĕ. Темиçе сехет хушши мар, тахçантанпах палласа, пĕрле пурăннă çын пек туйăнчĕ вăл ăна. Тăван пиччĕшĕ пек, чи çывăх çын пек çав! Ытла та юратмалла-çке ăна!

Пулаççӗ çавӑн пек çынсем: пӗрре курсанах кӑмӑла каяççӗ те, кайран ӗмӗрлӗхех асра юлаççӗ! Аликшӑн çак летчик шӑп çавӑн пек çын пулчӗ.

Çапах та уйрӑлма тиврӗ вӗсен. Пӗччен юлсан, Алик чылайччен чӳрече витӗр пӑхса ларчӗ — тулта пӑраВуссем кӑшкӑртаççӗ, пӗрисем каяççӗ, теприсем килеççӗ. Калле-малле васкаса утакан çынсен шучӗ те çук.

Ларсан-ларсан, ачан çывӑрасси килчӗ. Пуçне çитар çине хурсанах куçӗсем хупӑнчӗç унӑн.

...Алик ыйхӑран вӑраннӑ чух хӗвел пӳлӗмӗн сарлака чӳречисенчен çутатса пӑхатчӗ. Пӳлӗмре таса, ӑшӑ, шӑп. Хӗвел çути Алик çывӑракан вырӑн çине те ӳкнӗ. Ун çумӗнче амӑшӗ ларать.

— Алик, ывӑлӑм!..— тет вӑл, куççулӗсене шӑлса илсе.

— Ан макӑр, анне, халь вӑрçӑ çук вӗт,— тет Алик, амӑшне ыталаса.

КĔСЛЕ ЯНĂРАТЬ

Пĕр чарăнма пĕлмесĕр çуса тăракан кĕрхи çумăр çĕре ислентерсе лачака пек туса ячĕ. Сухаласа хăварнă уй урлă каçма çав тери кансĕр, çавăнпа та шкул ачисем, тавра пулин те, хăйсен ялне машинăсем çӳрекен мăн çулпа таврăнаççĕ.

Çурма çула çитсен, Тури Катраç курăнса кайрĕ. Ĕнтĕ ял хушшинчи пăч-пач çутăсем те палăра пуçларĕç.

— Паян Атапая артистсем килнĕ, клубра спектакль пулать,— терĕ çап-çавракан питлĕ Рима.

— Пирĕншĕн пулсан пурпĕрех мар-им? Çакăн пек çанталăкра такам каять-ха унта çити? Каяс тесен те килтисем ярас çук. Хамăр ялта клуб пулнă пулсан лайăхчĕ те çав...— терĕ унпа юнашар утакан Борис, йĕпйĕпе карттусне каçăр сăмси çинеллех антарса.

— Мĕн калăн ĕнтĕ! Хамăрăн клуб пулнă пулсан, никам та килте ларас çукчĕ çав, пурте спектакль курма каятчĕç,— терĕ Натали.

— Пирĕншĕн тата нимех те мар-ха. Шкултан таврăнсан, уроксем тумалла, унтан пĕр-пĕр интереслĕ кĕнеке вулатăн. Каçхине выляма тухатпăр — пире пĕртте кичем мар. Анчах та пирĕн атте-аннесем ытла та ним курмасăр пурăнаççĕ. Клуба инçе тесе çӳремеççĕ. Эпĕ тепĕр чух аннене кино курма кай, тетĕп те, вăл: «Унта çити утма манăн урасем ытлашши мар-ха»,— тесе хурать,— хушса каларĕ каллех Рима.

— Э-эх, мĕн калаçасси пур ĕнтĕ! Акă, сирĕн аçупа Веруксен ашшĕне нимĕн те кирлĕ мар. Вĕсем яланах конюхсен пӳртне домино çапма çӳреççĕ. Хăш чух картла та выляççĕ, тет. Унтан эрех ĕçеççĕ те киле киревсĕр юрăсем çухăрса таврăнаççĕ. Мĕн клубĕ кирлĕ вĕсене?— терĕ Борис.

— Санăн пиччӳ те вĕсенчен юлмасть-ха,— терĕ Верук, йĕпеннипе пичĕ çумне çыпăçнă çӳçне майлаштарса.

— Пичче пирки манăн ĕçĕм çук, вăл хăйĕнне хăй пĕлет,— хуравларĕ Борис.

— Çапла çав, эпир вĕсене чарма пултараймастпăр. Хамăр ялта клуб пулнă пулсанах ун пек пулас çукчĕ те, анчах мĕн тăвăн ĕнтĕ...— кулянса каларĕ Рима.

Çакăн пек шăкăл-шăкăл калаçса пынипе ачасем яла çитнине те сисмерĕç, унтан пĕрерĕн-пĕрерĕнех хăйсен килĕсене саланса пĕтрĕç.

Тури Катраç ялĕ пысăках мар. Вăл лапамра, Пак-

шаш шывӗ хӗрринче ларать. Кунти çынсем шкула та, лавккана та, клуба та ӗлӗкренпех Атапая çӳренӗ, халӗ те çавӑнтах утаççӗ. Юрать-ха, халӗ радио, электричество пур, ку та тем пекех!

Ирхине Римӑна амӑшӗ ыйхӑран вӑратса хӑварчӗ, хӑй фермӑна васкарӗ пулас. Анчах та амӑшӗ тухса кайсанах Рима тепӗр хут ваткӑллӑ утиялпа пуç урлах витӗнсе выртрӗ. Ӑшӑ вырӑн çинчен ниепле те тӑрса тухас килмест-çке,— вара вӑл тепӗр хут çывӑрса кайнӑ та çав тери ырӑ тӗлӗк курнӑ.

Вӗсен ялӗнче ытарма çук чаплӑ клуб туса лартнӑ пек. Клуб ӑшне тӗлӗнмелле хитре сӑрӑсемпе сӑрланӑ. Рима пӗчченех сцена çинче тӑрать. Хӑй шап-шурӑ кӗпе, урине пит илемлӗ сенкер пушмак тӑхӑннӑ. Темӗнле лайӑх юрӑ юрласа пӗтерчӗ те вӑл, çынсем ӑна уншӑн чечек çыххисем тыттараççӗ. Вара çав чечексем, Рима аллинчен вӗçерӗнсе, мӑнланса каяççӗ те, музыка инструменчӗсем пулса, сцена çине йӗркеленсе тӑраççӗ. Рима аллисене çӗклесенех пӗтӗм оркестр ытарма çук хитре музыка выляса ярать.

— Рима — дирижер! — тесе кӑшкӑраççӗ ачасем.

Çав вӑхӑтрах музыкӑна параппан çапни хупласа лартать. Рима параппанне чарасшӑн, анчах вӑл тата хытӑрах тӳнлеттерет.

Рима çав сасса илтнипех вӑранса кайрӗ. Анчах та ку параппан сасси мар, чӳречерен шаккани пулнӑ. Рима, вырӑн çинчен йӑпӑр-япӑр сиксе анса, чӳрече патне чупса пычӗ. Урамра Натали тӑрать.

— Тух хӑвӑртрах! — кӑшкӑрчӗ Натали.

— Пӳрте кӗр! — терӗ Рима.

— Эсӗ ху тух хӑвӑртрах! Урокран юлатпӑр вӗт!..

Рима васкаса тумланать, унтан çӑкӑр чӗллипе чӑкӑт илсе сумкӑна чикет та урамалла тухса чупать. Кӗçех Римӑпа Наталие Бориспа Верук хӑваласа çитрӗç. Çырма леш енчи урамран татах сумкӑллӑ ачасем пухӑнса

тухрĕç. Вара вĕсем ушкăнланса Атапай еннелле утрĕç. Яланхи пекех, утнă май тем çинчен те шăкăлтатса калаçма тытăнчĕç.

Рима хăйĕн тантăшĕсене паян ирхине курнă тĕлĕкĕ çинчен çав тери илемлетсе каласа пачĕ.

— Вăт, ку тĕлĕк-тĕк тĕлĕк! Пурнăçра чăннипех çавăн пек пулас пулсан, пĕтĕм тĕнчене тĕлĕнтерме пулать вĕт, э? — терĕ Натали.

— Пăрахăр палкама! Мĕн эсир çĕр çулхи карчăксем пек лĕпĕртететĕр? — çилленнĕ евĕр пăхрĕ вĕсем çине Борис.

— Паллах, тĕлĕк вăл нимĕне те пĕлтермест-ха, пустуй калаçни çеç,— терĕ Рима.— Ман шутпа, пирĕн хамăрăн оркестр тумалла. Акă, Борис мандолинăпа лайăх калама пĕлет. Эпĕ, тăрăшсан, гитара калама пултаратăп-и, тен? Верукпа Таня балалайка калаççĕ, Тимуш хуткупăспа пултăр. Тата урăххисене те хутшăнтарас— кам мĕнпе пултарать... Оркестр пулать вĕт çавăн пек пухăнсан? — Рима хăйĕн тантăшĕсем çине кăмăллăн пăха-пăха илчĕ.

— Паллах ĕнтĕ, эпир тĕнченех тĕлĕнтерес çук, анчах хамăр ялсене савăнтарма пулатех пуль,— килĕшрĕ унпа Натали, хавасланса кайса.

— Вăт, ку вара питĕ ырă шухăш! Кăна тума пултарсан эпир — чăн та маттурсем пулаттăмăр! — терĕ Борис.

— Эсир музыкине çеç калăр, эпĕ матрос ташшине çаптараканни пулăп,— терĕ ку таранччен чĕнмесĕр пынă Кируш.

— Питĕ лайăх пулать! — терĕ Рима.

— Эх, айвансем! Ара, концертне хатĕрлесен те, ăна ăçта кăтартас тетĕр? Çуллахи вăхăтра хуть урамра та кăтартма пулать, анчах хĕлле ăçта каятăр? Конюхсен пӳртне-и? — терĕ кĕтмен çĕртен Верук.

— Тĕрĕс çав. Эпĕ те çавнах каласшăнччĕ,— хутшăнчĕ Борис.

— Çавăнпа нимĕн те пиçмест пирĕн,— терĕ каллех Верук.

Лайăх ĕмĕтсемпе хавасланнă ачасем тăруках салхуланчĕç те пĕр хушă ним шарламасăр утрĕç.

— Мĕн тăвăн, нимĕн тума та çук, çăва тухасса кĕтес пулать,— терĕ унтан Рима та, кулкаласа.

— Анчах эп пĕлетĕп мĕн тумаллине. Калас-и сире? — маларах чупса тухрĕ Борис йăмăкĕ, хуп-хура куçлă пĕчĕк Наçтаç.

— Ан янра, айван! — кăшкăрса пăрахрĕ ăна пиччĕшĕ.

— Эсĕ ху ан янра! Эп санран ытларах пĕлетĕп! Пĕлетĕп! — чĕлхе кăтартсах сиккелесе илчĕ Наçтаç.

— Пĕлетĕн пулсан — кала, эппин! Качака путекки пек сиккелесе ан пыр!

— Ав, çăл патĕнчи кивĕ пӳртре... Вăрçă вăхăтĕнче правлени пулнă тет-и-ха унта? Çавăнта мĕншĕн клуб пекки тумалла мар пуль? Пӳрчĕ ытла пĕчĕкех те мар вăл...

— Эсĕ, Борис, Наçтаçа айван тетĕн те, анчах вăл пирĕнтен ăслăрах иккен! Тĕрĕс шухăш каларĕ вĕт, э? Укаххи кинемей хĕлле те кун сиктерсе вут хутса тăрать унта,— тӳрех килĕшрĕ Рима.

— Пӳртĕн тĕпсакайне колхоз çĕрулмине тултарнă та çав шăнасран хутаççĕ...— терĕ вăрăм Тимуш.

— Çĕрулми пире кансĕрлет-им? Эппин, Укаххи кинемейпе калаçса татăлмалла çеç,— терĕ Верук.

— Ку ĕçе халех тытăнас пулать,— çирĕплетрĕ Борис.

— Кам та кам Борис каланипе килĕшет, ал тăратăр,— терĕ Рима.

Ачасем пурте утнă çĕртех аллисене çĕклерĕç.

— Никам та хирĕç мар, питĕ аван! — терĕ Рима.— Шкултан таврăнсанах, Наталипе иккĕн кайса, кинемейпе калаçса татăлатпăр та вара çуртне тасатма пухăнăпăр. Хăçан пымаллине пĕлтерĕпĕр сире!

Тахӑшӗ шӑхӑрса юрла пуҫларӗ, унтан хӑшпӗрисем сасӑпах ӗнӗрлесе пычӗҫ, юлашкинчен пурте пӗрле юрласа ячӗҫ:

Ылтӑн тумлӑн ялкӑшса
Килчӗ тулӑх кӗркунне.
Ларса тухнӑ савӑнса
Эпир парта хушшине...

* * *

Урама урлӑ ларакан кивӗ ҫурт мӑрйинчен тӗтӗм мӑкӑрланса тухать те сывлӑшра ерипен сирӗлсе пӗтет.

Римӑпа Натали ҫак ҫурта шӑппӑн пырса кӗчӗҫ. Кинемей вӗсем кӗнине туймарӗ, ҫунакан кӑмака умӗнче тем мӗшӗлтетрӗ. Хӑйсем килнине систерес тесе, хӗрачасем ӳсӗркеленӗ пек туса илчӗҫ.

— Ай-уй, кам пур ара кунта? — тӗпелтен тухрӗ кинемей.

— Эпир килтӗмӗр-ха... Сывах-и эсӗ, кинемей? Сана курманни нумай пулать,— терӗ Рима.

— Ҫӳрекелетӗп-ха майӗпе, вӑйӑм ҫитнӗ таран,— терӗ Укаххи.

— Эсӗ, кинемей, каҫхине кунта пӗччен килсе ҫӳреме хӑрамастӑн-и? — ыйтрӗ Натали, маларах иртсе.

— Пӗччен мар эпӗ, манпа пӗрле яланах турӑ пур. Ҫапах та, ҫын-мӗн килсен, эпӗ питӗ савӑнатӑп. Вутти лайӑх ҫунать-ха паян, килсе ӑшӑнӑр...

Ачасем, кинемей каланине итлесе, тӗпелерех иртсе тӑчӗҫ. Кӑмакари вутти ялкӑшса ҫуннӑран пӗтӗм тӗпел кукри ҫуталса тӑрать. Ҫакӑн пек сивӗ ҫанталӑкра шатӑртатса ҫунакан вут умӗнче тем пекех ырӑ ҫав.

— Укахви кинемей, эсӗ ху хирӗҫ пулмасан, эпир кунта кашни каҫах килсе ҫӳрес тетпӗр,— кӑштах ӑшӑннӑ хыҫҫӑн сӑмах хушрӗ Натали.

— Килӗрех, килӗрех ара, эсир таса чунлӑ, ҫылӑхӑр ҫынсем вӗт-ха... Сирӗнпе пӗрле пурнӑҫ та савӑкрах пулнӑн туйӑнать!

— Апла пулсан, эпир чăн малтан çурт ăшчиккине çуса тухăпăр. Унтан, хамăр ял çыннисене кунта спектакльсем, концертсем кăтартма тытăнăпăр. Питĕ савăнăçлă пулать,— терĕ Рима.

Çапла каланине илтсен, кинемей тăрук тĕлĕнсе хытнă пекех пулчĕ.

— Çук, çу-ук, атьсемĕр,— терĕ вăл, пуçне пăркаласа,— кунта никама та кĕртме юрамасть. Тĕпсакайĕнче колхоз çĕрулмийĕ выртать, мана ăна сыхлама хушнă. Ун пек, çынсем çӳреме тытăнсан, тем курса ларăн!

— Камах тивет пуль сан çĕрулмине? Кашниннех пур-çке вăл?

— Тем пулсан та, кĕртме хушман, кĕртместĕп! Эпĕ пуçлăхсем хама мĕн хушнине çирĕп тытса пыратăп.

— Кинемей, эсĕ ун пекех хăратăн пулсан, çĕрулмине эпир хамăр, черетпе сыхлăпăр,— ӳкĕтлерĕç ачасем.

— Эй, ара-а, ача-пăча хыççăн каякан сĕм-суккăр пулнă тенине илтмен-и эсир?..

— Эпир ахаль ача-пăча кăна мар, кинемей, эпир — пионерсем!

— Мĕнле пивонерсем тата? Тав турра, тăн çухатман-ха, хамăр ялсене пурне те паллатăп. Эсĕ Сахар ачи, ку акă Раманăн, хăй пекех сарă та чиперскер,— терĕ кинемей, юлашкинчен Римăна тĕллесе кăтартса.

Хĕрачасем пĕр-пĕрин çине пăхса йăл-йăл кулкаласа илчĕç.

— Атя, Натали, пурпĕрех капла ĕç тухмасть пирĕн,— терĕ Рима.

— Атя, эппин, тӳрех Касьянов бригадир патне каятпăр!

— Кайăр, кайăр! Каçйан пиччӳ мĕн калĕ? Вăл чармасть пулсан — эпĕ те хирĕç мар, мана мĕн? — терĕ кинемей.

Хĕрачасем вара тек тытăнса тăмарĕç.

* * *

Хуть те мĕнле çанталăк пулсан та, каçсенче ачасем яланах урама тухаççĕ. Акă паян та нумайăшĕ Римăсен лаçĕ умĕнчи пĕрене купи патне пухăнчĕç. Выляççĕ, кулаççĕ, шавлаççĕ. Урама тухманнисене чĕнсех тухаççĕ.

Ачасем пухăнса çитсен, Римăпа Натали хăйсем Укаххи кинемей патĕнче пулни, вăл ачасене хăй тĕллĕн ирĕк парайманни çинчен каласа кăтартрĕç.

— Атьăр, эппин, Каçйан пичче патне,— терĕ Борис.

— Ушкăнĕпех-и?

— Ытла пурте мар ĕнтĕ. Рима, Натали, Борис — виççĕр кайăр!

Шавлăн калаçса, виçĕ «делегат» Касьянов бригадир пӳрчĕ умне çитрĕç, шала та пĕрлех кĕчĕç.

— Ăçта кайма тухнă ку ача-пăча çĕр хута? — терĕ Каçйан арăмĕ, тĕлĕннĕ пек пулса.

— Халĕ çĕрле мар-ха, каç пулнă çеç. Кăнтăрла пирĕн вăхăт çук,— терĕ Борис.— Эпир Каçйан пичче патне ĕçпе килтĕмĕр.

— Пăх-халĕ, ĕçпе, тет-ха! Мĕн ĕçĕ пултăр ĕнтĕ сирĕн пек вĕт-шаксен?

— Каçйан пиччепе хăйĕнпе кăна калаçмалла пирĕн,— терĕ Рима та.

— Вăл, халь çеç ĕçрен таврăнса, канма выртрĕ те— вăратас пулать-и, эппин?

— Вăрат-ха, инке, вăл пире шутсăр кирлĕ.

Каçйан арăмĕ, пĕчĕк пӳлĕме кĕрсе, упăшкине вăратрĕ.

— Нихçан килмен хăнасем килнĕ-çке! Карчăк, ма эс вĕсене алăк патĕнчех тăрататăн? — терĕ Касьянов, тăрса тухсанах ачасем çине кăмăллăн пăхса.

— Эпир хăнана мар, ĕçпе килтĕмĕр,— терĕ Рима.

Ачасем пĕрин хыççăн тепри хăйсен шухăшĕсемпе ĕмĕчĕсем çинчен каласа пачĕç.

— Питĕ лайăх ăнлантăм сире, ачасем. Укаххине калăр, Касьянов кĕртме хушрĕ, тейĕр.

— Эх, тăмсай! — пÿлсе хучĕ арăмĕ Каçйан пичче-не.— Ара, ача-пăча тем те шухăшласа кăларĕ, вара мăннисен вĕсем хыççăн каймалла-и? Укаххи кинемей тĕрĕс тунă, колхоз çĕрулмине ăна хăвăннинчен ытларах сыхлас пулать. Уншăн кинемей çеç мар, эсĕ те ответ тытатăн. Мĕн те пулин пулсан, кама айăплаççĕ-ха? Сана! Никамран малтан сана!

— Мĕнех пултăр-ха унта?

— Эсĕ, шакла пуç, пĕртте каллĕ-маллĕ шухăшласа пăхма пĕлместĕн çав!

— Тархасшăн ан хутшăн ман ĕçе! — терĕ упăшки çилĕпе.

— Мĕ-ĕн? Эпĕ хутшăнмасан, эсĕ çĕр çинче те пурăнаймастăн! Нивушлĕ сан пуçунта арпа çеç? Пушар-мĕн пулсан, вара мĕн, кала-ха? Çук, çук, кун пирки ан та шухăшлăр эсир, ачасем. Халĕ кайма та пултаратăр,— терĕ Каçйан арăмĕ, пÿрт алăкне уçса.

Ачасем, тек нимĕн те чĕнеймесĕр, çав тери тарăхса, урама тухрĕç. Кунта вĕсене тÿрех ыттисем сырса илчĕç, вара питĕ шавлă калаçу пуçланчĕ.

— Ахальтен мар-иç колхозниксем: «Пирĕн бригадир — Касьянов мар, унăн арăмĕ»,— теççĕ,— çилĕпе ал сулчĕ Борис.

— Халĕ ăна хамăр куçпах куртăмăр ĕнтĕ,— терĕ Рима.

— Эппин, Касьянов арăмĕн мăшкăлĕ пулса тăтăмăр иккен,— терĕ Тимуш.

— Чăн та мăшкăл ку!

— Çук, ачасем, тавайăр-ха, пĕр шутланă ĕçе пăрахмастпăр! — шавлакан ачасен варрине кĕрсе тăчĕ Рима.— Ку ĕçе пирĕн вĕçнех çитерес пулать. Колхоз председателĕ патнех каяс мар-и? Вăл пирĕн ялсем мар пулин те, пурпĕрех хамăр колхоз председателĕ, ăнланмаллах унăн!

— Тĕрĕс! Мĕнех вара, каятпăр та пĕтĕмпех каласа паратпăр! — килĕшрĕç ыттисем.

— Ыран, шкултан тухсан, ушкăнĕпех правление кĕрсе тухăпăр, эппин...

— Мĕн тума ушкăнĕпех çӳрес?

— Пĕччен-иккĕн кайсан, каллех ĕç тухмарĕ-тĕк? Ушкăнĕпе кайсан вăйлăрах пулатпăр,— терĕ юлашкинчен Рима.

— Каятпăр!..

* * *

Колхоз председателĕ Ларион Егорчă вăтам çулсенчи кăмăллă çын. Паян вăл фермăна кайса унта ĕçлекенсен пухăвне ирттерме хатĕрленнĕ-мĕн. Шăп çав вăхăтра унăн пӳлĕмĕн алăкĕ уçăлчĕ те хĕр-счетовод кĕрсе тăчĕ.

— Ларион Егорчă, сан пата шкул ачисем килчĕç, питĕ пысăк ĕçпе, теççĕ,— пĕлтерчĕ вăл.

— Мастерской туса пĕтертĕмĕр-çке, тата мĕн кирлĕ-ши вăл шăркалчăсене? — хĕр çине тĕлĕнерех пăхрĕ председатель.— Кала, кĕччĕр, эппин.

Паян иртенпе çумăрпа хутăш тăман çăвать, çавăнпа урайне йĕп-йĕпех йĕрлесе кĕчĕç ачасем.

— Çанталăкне те пăхса тăман-çке эсир, вак халăх,— терĕ Ларион Егорчă вĕсене сывлăх сунас вырăнне.

— Эпир питĕ васкавлă ĕçпе килтĕмĕр,— пуриншĕн те ответ пачĕ Рима.

— Мĕнле ĕç сиксе тухрĕ-ши тата ун пекех? — ачасем çине кăмăллăн пăхса кулкаларĕ председатель.— Каласа парăр, эппин, итлетĕп...

— Эпир пурте Тури Катрас ачисем,— терĕ Рима.— Хăвăрах пĕлетĕр, пирĕн ялта клуб та, библиотека та, шкул та çук.

— Правлени пирĕн ялта мар,— хушса хучĕ пĕчĕк Наçтаç.

— Правлени пирки пурӑнма пулё-ха... Ытти ялсенче ферма общежитийёсем пур, пирён ялта вӑл та ҫук,— терё тахӑшё.

— Ан кансёрлёр-ха,— терё Рима аллипе сулса.— Эпё кёскен ҫеҫ ӑнлантарса паратӑп. Клуб инҫетре пулнӑ пирки ял ҫыннисем киносене те, спектакльсене те, вечерсене те пачах ҫӳреймеҫҫё. Анчах эпир, Катраҫри пионерсем, хамӑр ял ҫыннисене текех кичем пурнӑҫпа пурӑнтарасшӑн мар.

— Эсир хӑвӑр ялта Шупашкарти пек мӑн театр лартма шухӑшламарӑр пуль те? — кулса илчё Ларион Егорчӑ.

— Мӑн театр кирлё мар пире, анчах клуб пекки уҫасах пулать. Пирён ялта ёлёк правлени пулнӑ ҫурт пуш-пушах янраса ларать. Ҫавӑнта эпир хамӑр ялсем валли пёчёк клуб тӑвасшӑн. Унта вара спектакльсем те, вечерсем те пулаҫҫё...

— Пысӑк ёҫ тума шут тытнӑ эсир, ырламалла ҫеҫ куна,— терё председатель.— Маттур ачасем!

— Анчах пирён ёҫ чарӑнса тӑчё-ха...— Рима Укаххи кинемейпе Касьянов арӑмё ҫинчен каласа пачё.

— Ай-ай-ай,— кӑмӑлсӑр пулса, пуҫне пӑркаларё Ларион Егорчӑ.— Пурте хуҫа иккен, анчах пёри те нимён те тумаҫҫё!

Вӑл ҫавӑнтах, телефонпа шӑнкӑравласа, шофера килме хушрё.

...Хурарах симёс «газик» часах правлени умне ҫитсе чарӑнчё те темиҫе хут нарт! нарт! тутарчё.

— Атьӑр, кайрӑмӑр, ушкӑнёпех! — терё председатель, аллипе урамалла сулса.

Ачасем правленирен кёпёрленсе тухрёҫ. Председатель машина алӑкне уҫрё те вёсене кёрсе ларма хушрё. Савӑннӑ ачасем шавласа каларма, кулма тытӑнчёҫ.

Машина уя тухсанах лапра-ҫёпрене ик еннелле сирпёнтерсе ту еннелле ыткӑнчё. Часах Тури Катраҫ ялёнчи йывӑҫ тӑррисем те курӑна пуҫларёҫ. Уй хапхине

уçма Ларион Егорчă хăй тухрĕ. Унтан вăл каллех шоферпа юнашар кĕрсе ларчĕ.

Машина сассине илтсен, Касьяновпа арăмĕ те урама чупса тухрĕç.

— Пăх-халĕ, старик, хаклă хăна килчĕ пирĕн пата! — хыпăнса ӳкрĕ Каçйан арăмĕ, председателе курсан.— Атя, тӳрех пӳрте кĕр, Ларион Егорчă...

— Тавтапуç! Пӳрте кĕрсе тăма вăхăт çукрах-ха. Урăх пӳрте каятпăр, кĕрсе лар, Касьянов юлташ,— терĕ председатель.

— Мĕнле пӳрте тата? — тĕлĕнчĕ Касьянов.

— Ĕлĕк сирĕн правлени пулнă çĕре.

Тинех вара вăл ачасем председатель машинипе мĕншĕн ярăнса çӳренине ăнланчĕ.

* * *

Хайхи кивĕ çурт çăрапах питĕрĕнсе тăрать. Каçйан пичче Укаххи кинемей патне хăй чупрĕ.

— Тултан пăхма йĕркеллех пек-ха ку пӳрт,— терĕ Ларион Егорчă, ун тавра утса çаврăнсан.— Кивĕ пулин те, çирĕп вăл.

Ачасем председательпе пĕрле çурт умĕнче тăраççĕ, савăннипе ниçта кайса кĕме пĕлмеççĕ.

— Йĕркеллех çав! Чип-чипер çурт ним усăсăр сая кайса ларать,— терĕ тăсланкă Тимуш.

— Тĕрĕс! Анчах кĕрсе пăхар-ха, шалта мĕнлерех вăл? Мĕн майĕ пур унта?

Каçйан пичче часах çăраççи илсе пычĕ. Пурте шала кĕчĕç.

Темиçе çул хушши тасатман пӳртре сарай шăрши кĕрет. Маччаран эрешмен картисем уртăнаççĕ, кĕтессенче те туллиех вĕсем, хутламăн-хутламăн, хутаçсем пек карăнса тăраççĕ. Урайĕ вара сухаласа тăкнă çĕр пекех, тăпра муклашкисем аплипех хыта-хыта ларнă.

— Кунта такăнса ӳксе ура хуçма та пулать! — терĕ

Ларион Егорчă.— Вăрçă вăхăтĕнчи çĕр пӳртсенче те кунтинчен тасаччĕ.

— Ара, çĕрулми пӳрчĕ вĕт ку? Мĕн таси кирлĕ? Туй тумастпăр-иç кунта? — терĕ çав вăхăтра Укаххи кинемей, алăкран кĕнĕскер.

— Вăл çапла пулнă пуль те-ха,— терĕ ăна хирĕç председатель, каска пуканĕ çине ларса,— анчах малашне кунта çĕрулми пӳрчĕ мар, хăвăр ялăн клубĕ пулать. Акă, сирĕн ачасем çавăн пек шут турĕ. Чарас мар вĕсене. Вара сан валли те кунта ĕç нумайланать: тасатасси, пуçтарасси. Уншăн эпир сана хушса тӳлесе пырăпăр.

— Юрать ара, икĕ алла пĕр ĕç! — тӳрех килĕшрĕ Укаххи.

— Эпир ăна хамăр та пулăшатпăр,— терĕ Рима.

— Паллах, пулăшатпăр! — терĕç ачасем.

— Ӳркенсе тăмастпăр!..

— Сан валли те ĕç пур-ха кунта,— Каçйан çине пăхрĕ председатель.— Клуба йĕркелеме ачасене пулăшас пулать. Çĕрулми пирки кулянма кирлĕ мар, çапнă та лартнă ăна, çуркуннеччен выртать, ăçта кайтăр!

— Эпĕ хам та малтанах хирĕç пулас темен, манăн карчăк чарса лартрĕ ку ĕçе,—терĕ Каçйан, хăйĕн айăпне сирме тăрăшнă пек.

— Пăх-халĕ, мĕн калаçать вăл? Хăвăн пуçу çук-им санăн? — терĕ çав самантрах Каçйан арăмĕ.

Вăл хăш вăхăтра пӳрте кĕрсе тăнине унччен никам та асăрхаман.

— Ав, каллех çĕмĕрлет,— аллипе сулчĕ Каçйан.

— Мĕн каллех? Мĕн каллех? Ан чĕн пĕреххут! Ачасем, эсир киле кайса апат çийĕр! Эпĕ кунта хамах шыв кӳрсе тултаратăп. Унтан кинемейпе пĕрле вут хутса ăшăтатпăр. Хырсах çуса тасататпăр.

Ачасем, Каçйан арăмĕнчен тĕлĕннипе пĕр-пĕрин çине пăхса, кулкаласа илчĕç.

— Эсир, мĕн, мана ĕненместĕр-им? Ак хăвăрах ку-

răр-ха... Кайса витресем илсе килем,— терĕ те вăл, чăнах та пӳртрен тухса кайрĕ.

— Халь пулăшать ĕнтĕ. Çынни çавăн пекскер вăл, лайăх-и, япăх-и, хăй мĕн шухăшлать — çавна тăвать, ăна вара никам та чараймасть,— кулчĕ Каçйан.

— Лайăххине тусан — лайăх-ха! — терĕ Ларион Егорчă. Унтан вăл ачасем çинелле пăхрĕ те: — Татах ыйтмалли пур-и сирĕн? — терĕ.

— Çук! Урăх нимĕн те çук! — пĕр харăс хуравларĕç ачасем.

Тепĕр кунне Каçйан пиччепе Митрахван платник кунĕпех клубра ĕçлерĕç. Вĕсем пӳрте варринчен пӳлнине сӳтсе пăрахрĕç, вара шалта чылаях асланнă пек туйăнчĕ. Кăмака енчи малти пайне хăмапа картласа, пĕчĕк сцена пекки турĕç. Юлашки хăмисенчен саксем туса тултарчĕç.

— Пулчĕ те хайхи клуб! Ыран Микулана каласа ярас-ха, хуларан пысăк лампăсем илсе килтĕр,— терĕ Каçйан пичче.

— Тавтапуç сире иксĕре те,— терĕç ачасем вĕсене.

— Пире мĕн! Хушнă — тунă эпир,— терĕ Митрахван.

Вырсарникун ачасем хăйсем те кунĕпех клубра тăрмашрĕç. Плакатсем çырса çыпăçтарчĕç, хитре портретсем илсе пырса çакрĕç. Кайран вара Римăна клуб пуçлăхĕ пулма суйларĕç. Унтан тӳрех вечера хатĕрленме тытăнчĕç.

— Ман шутпа çапла тумалла: тухса калама пурин те пĕрер сăвă вĕренмелле, ăна кашниех пултарать ĕнтĕ. Юрлама пĕлекенсем — юрăсем вĕренччĕр, ташăсем те хатĕрлемелле,— терĕ Рима.

— Ман шутпа та ку тĕрĕс. Атьăр-ха, çав хушăрах оркестр майлаштарар? Ик-виçĕ кĕвĕ каласан та, малтанлăха темех тăрать,— терĕ Борис.

— Анчах та хамăр тĕллĕнех ĕç тухĕ-ши? — иккĕленчĕ Рима.

— Ěçе малтан пуçласа яни паха, вара каять! Юрлама вĕрентекен учительницăна, Вера Ивановнăна, чĕнетпĕр. Вăл пĕр ик-виçĕ хут килсе кăтартсан — аптрамăпăр,— терĕ Тимуш.

Çавăнтан вара клубра кашни кунах репетицисем пулса иртрĕç. Оркестр янрани урамах илтĕнчĕ.

Укаххи кинемейĕн килĕнче инвалид ывăлĕпе кинĕ çеç. Мĕн туса лартăр-ха вăл кунта? Кинемей кашни каçах клуба пырса ачасем вечера мĕнле хатĕрленнине савăнса итлесе ларать. Мĕн те пулин кулăшла пек туйăнсан, вăл вара каçса кайсах кулать.

* * *

Унтри мучи çăла шыв ăсма тухрĕ те хăйĕн хапхи çумĕнче сăрласа пĕтернĕ хаçат пысăкăш шурă хут çакăнса тănине курчĕ. Вара шыв витрисене çĕре лартрĕ, кĕсйинчен куçлăх кăларса чылайччен хут çине пăхса тăчĕ.

Унтри мучи хут пĕлмест, вулама та, çырма та пултараймасть. Вăл ача чухне ку тăрăхра шкул пулман, хресчен ачисене вĕрентесшĕн никам та тăрăшман. Кайран, Совет влаçĕ пулсан, мăннисене ликпунктра вĕрентнĕ. Анчах Унтри мучи, вăрманта хуралçă пулса пурăннипе, унта та çӳреймен.

Çавăнпа та Унтри мучи хут çине пăхса тăнине курсан, ун тĕлĕпе иртсе пыракан Борис питĕ тĕлĕнчĕ. Ăна вуласа парас тесе, тӳрех ун патне пырса тăчĕ.

— Кала-ха, ачам, мĕн чĕмери ку? Кам манран, ват çынран, мăшкăллама шут тытнă? — терĕ старик.

— Мĕнле мăшкăл, Унтри мучи? — тĕлĕнсе ыйтрĕ Борис.

— Ыйтса тăрать-ха тата! Мĕн тума ман хапха умне килсе çакнă ку хута? Кирлĕ çĕре çакасчĕ хуть.

— Ăна таçта çаксан та пурĕпĕрех.

— Ăçтан пурĕпĕрех пултăр-ха?! Лайăх мар ку, эпĕ ват çын ĕнтĕ, мĕн тума кирлĕ вăл мана?

— Çук, мучи, эсӗ ахалех кӳренетӗн! Ку хута мăшкăллас шутпа мар, сана хисеплесе çакрăмăр. Сана эпир хамăрăн вечера чӗнетпӗр, унта пирӗн концерт пулать. Ав, ӗлӗкхи правлени çуртне пымалла. Халӗ унта — клуб. Çавăн çинчен çырнă кунта. Итле, мӗн çырнине вуласа парам:

«Пӗлтерӳ. Паян, октябрӗн 20-мӗшӗнче, каçхине 7 сехетре, хамăр ялăн пӗчӗк клубӗнче концерт пулать. Пионерсем хăйсен пултарулăхне кăтартаççӗ. Пурне те, ватти-вӗттипех, пырса курма чӗнетпӗр. Килте ларса ан юлăр, вăхăта сая ан ярăр. Пионерсен ушкăнӗ». Ăнлантăн-и халь?

— Ăнлантăм пек те-ха... Манăн та пымалла-и вара?

— Санăн та пымалла çав!.. Тархасшăн пырса кур!..

— Ыр сăмахушăн тавтапуç, эппин, ачам! Шухăшласа пăхăп-ха каçчен,— терӗ те Унтри мучи, шыв витрисене çӗклесе, килне кӗрсе кайрӗ.

Борис клуба хашкаса чупса кӗчӗ. Ачасем вăл кая юлса репетицие чарса тăнăшăн сăмах тӗксе илчӗç.

— Эсир мана ятличчен малтан çынни мӗн пирки кая юлнине ыйтса пӗлӗр,—терӗ Борис, сывлăш çавăрса.

— Мӗн пулчӗ, йытă çыртрӗ-им? — терӗ Рима, кăмăлсăрланса.

Борис вара хăй Унтри мучипе тӗл пулни çинчен каласа пачӗ.

— Юрӗ ӗнтӗ, каçарăпăр, усăллă ӗç,— терӗ Рима, тинех лăпланса.

Кăмака умӗнче вут çунтарса тăракан кинемей те çак калаçăва илтрӗ. Вара вăл тӗпел кукринчен тухрӗ те:

— Темле-çке, Унтри мучăра эсир килтен кăларма пултарăр-ши? Вăл, хӗллехи упа пекех, хăй шăтăкӗнчен ниçта тухмасăр пурăнса ирттерчӗ хăй ӗмӗрне. Халăх хушшине ниçта та тухмасть...— терӗ.

— Мӗншӗн? Мӗншӗн ун пек? — ыйтрӗç ачасем.

ПĔЛТЕРӲ

— Пурнăçĕ унăн çавăн пек пулса пынă, юмахри евĕрлĕрех.

— Мĕнле? Каласа пар-ха, кинемей!

— Пĕлесех килет пулсан, каласа пама пултаратăп... Унтри мучăр вăл питĕ чухăн çын ачи пулнă. Унăн ашшĕне те ялта Саплăк Емеленĕ тесе чĕнетчĕç. Вăл вăрмана çатра пуçтарма кайсан шăнса вилнĕ. Вара Унтри, пирĕнпе пĕр вăхăтрискер, çамрăклах тăлăха юлчĕ. Пи-итĕ ĕçчен ачаччĕ хăй! Кама мĕн ĕçлесе памастчĕ пуль ялта! Çавăн пекех тăранкаласа пурăнса ўсрĕ, каччă пулчĕ. Килĕ-çурчĕ çав тери япăхчĕ те, ăна пĕрмай унтан-кунтан юсакалатчĕ. Хăй вара темĕн тума та пĕлетчĕ. Шуçран куркасем тăватчĕ, витресем тĕплетчĕ, йывăçран та тем те майлаштаратчĕ... Пĕрре вăл çимĕк пуххине кайнă та темле çын кĕсле каланине илтнĕ. Тахçанччен çав çынран уйрăлаймасăр тăнă. Кĕслине ыйтса хăй аллипе тыткаласа пăхнă. Киле таврăнсан вара хăй тĕллĕнех шăп çавăн пек кĕсле туса хунă. Ай-я-ай лайăх калатчĕ-çке кĕслине! Çуллахи каçсенче вăл кĕсле каланине итлеме ялти яш-кĕрĕмсемпе хĕрупраçсем пурте пухăнаттăмăр... Эпир пĕлмен те, Унтри çав кĕслене Васса ятлă пĕр хĕре юрасшăн тунă, тет. Хăй чухăн пулнăран именнипе, чĕринчи шухăшĕсене сăмахпа калайман имĕш. Çавăнпа та кĕсле каласа хăйĕн чунне уçса панă. Чăнах та, вăл калама тытăнсан хăш чухне куççуль те тухатчĕ çав!..

Васса тени — хамăр ял хĕрехчĕ. Пукане пек илемлĕччĕ. Вăл хăй те Унтрие килĕштернĕ, кĕсле каланине ыттисенчен кая юлсах итлетчĕ.

Анчах та, пĕррехинче, çуллахи лăпкă та илемлĕ каç, Васса кĕсле каланине итлеме тухмарĕ. Эпир, ялти çамрăксем, пурте карталансах тăратпăр. Унтри çав каç нихçанхи пек мар лайăх, çав тери чуна пырса тивекен кĕвĕсем каларĕ. Хăй вăхăчĕ-вăхăчĕпе Вассасен еннелле пăха-пăха илет. Мăнтарăн çамрăк чунĕ, Вассана кĕтет ĕнтĕ. Васса темшĕн час тухманшăн эпир те тарăхатпăр.

Унтрийĕ татах ытармалла мар калать. Çав кĕвĕ халь те хăлхарах янраса тăрать...

Вăхăт шурĕ, çуллахи каç иртсе пычĕ. Малтан тӳпере çутă çăлтăрсем нумайччĕ, унтан вĕсем те тĕксĕм пĕлĕтсем хыçне пытанса пĕтрĕç.

Кĕтмен çĕртен — такам пулчĕ-çке, халĕ астумастăп — эпир тăнă çĕре чупса çитрĕ те: «Вассана çураçса тухса кайрĕç»,— терĕ. Çав самантрах кĕсле хĕлĕхĕсем чирлĕ çын пек найкăшса шăпланчĕç.

— Мĕнле, кам çураçнă? — ыйтрĕ Унтри, каска çинчен сиксе тăрса.

— Кунтисем мар, инçетрен килнĕ,— терĕ тахăшĕ.

Эпир пурте килсене салантăмăр. Унтри пирĕнтен çаплипех пуçне пĕксе ларса юлчĕ.

Çавăнтан вара вăл урама тухса ларма пăрахрĕ, унта-кунта курăнса çӳреми пулчĕ. Унăн кĕсли сассине те тек никам илтмен. Пĕрре те алла тытман, тет, вăл унтанпа кĕслине.

Кайран, темиçе çултан, Унтри пурнăçĕнче татах тепĕр инкек пулса иртрĕ. Ку вăл чи йывăр вăхăтра, выçлăх çул пулчĕ. Çуркунне, пĕр хĕвеллĕ ăшă кун, пирĕн ял урамĕпе пилĕк-ултă çулхи ывăл ача çавăтнă хĕрарăм утса пынă. Çурăмĕ хыçне вăл хутаç çакнă, паллах, ыйткаласа çӳреме тухнă ĕнтĕ. Анчах те ывăнса çитнипе, те выçă аптранăран, вăл урам варринчех ӳкнĕ те тек тăрайман. Хăранипе унăн ачи çухăрса макăрма тытăннă. Вара унта çынсем пухăннă. Шавланине илтсен, эпĕ те чупса пытăм. Чирлĕ хĕрарăма никам та киле кĕртесшĕн мар. Шăп çавăн чух Унтри пычĕ те пĕр каласа тăмасăрах хĕрарăмпа ачана хăй килне илсе кайрĕ. Вăл вĕсене лайăх пăхса пурăнни çинчен ялĕпех пĕлеççĕ. Хĕрарăм сывалса чиперех çӳрекен çын пулчĕ. Урине ятлăскерччĕ, вăл çав тери кăмăллăччĕ, ĕçченччĕ. Вĕсем пĕр килйыш пек пулса, такама та кăмăла каймалла, килĕшӳллĕ пурăнма пуçларĕç.

Анчах Урине йывăр чире — чахоткăна ернĕ пулнă,

çур çулсем пурăнсан каллех урараи ўкрĕ те нумаях та пурăнаймарĕ, вилсех кайрĕ. Вара Унтри унăн ачине— ачи Якур ятлăччĕ — хăй пăхса ўстерчĕ. Лешĕ ăна атте тесех чĕнетчĕ. Вăл та, Унтри пекех, питĕ пултаракан ачаччĕ. Колхозра та тăрăшса ĕçлетчĕ, шкулта та лайăх вĕреннĕ, тет. Хайхи кĕслене вăл, тен, Унтрирен те лайăхрах калатчĕ-и? Шкулти вечерсенче те яланах унпа тухатчĕ. Эх, вара шутсăр хытă ал çупатчĕç ăна. Çавнашкал лайăх каччă ўсрĕ Унтри патĕнче.

Мĕн тăвăн-ха, каллех ăнмарĕ Унтри пурнăçĕ. Вăрçă пуçланчĕ те, пирĕн ялти маттурсем пурте тăшманпа çапăçма тухса кайрĕç. Унтрин Якурĕ те ытти тантăшĕсенчен юлмарĕ. Унтри хăй колхозра питĕ хытă ĕçлерĕ, ăçта, мĕнле йывăр ĕç пур, вăл яланах унтаччĕ.

Вăрçă пĕтсен чылайăшĕ килĕсене таврăнчĕç. Унтри Якурĕ вăрçăран таврăнаймарĕ, вăл вилни çинчен хут çеç килчĕ.

Унтри вара ватăлса, кукăрăлсах ларчĕ. Эпĕ ун патне хам нихçан та кĕрсе курман. Çынсем каланă тăрăх çеç пĕлетĕп: Якур вăрçа тухса кайнă чух кĕслине епле çакса хăварнă, вăл халĕ те çавăнтах, малти стена çинчи пăтара, çакăнса тăрать, тет. Тусан туласран Унтри ăна шурă мăн тутăрпа витсе хунă, тет.

Çавăнтанпа Унтри пушшех килĕнчен тухми пулчĕ. Уншăн пулсан праçник те, ĕçкĕ-çикĕ те, çынсемпе хутшăнса сăмах хушса калаçасси те çук. Колхоза ĕçлеме тухсан та, вăл çынсемпе пĕрле мар, яланах аякра, пĕччен ĕçлет. Те хăйне тĕллĕн çăмăлтарах ăна? Кам пĕлет, çын ăшĕнче темскер, кĕрсе курма çук...— терĕ кинемей юлашкинчен, ассăн сывласа.

Пĕр хушă никам та чĕнекен пулмарĕ. Ачасем, Унтри мучи пурнăçĕ çинчен пĕлсен, тĕлĕнсех кайрĕç.

— Тем пултăр та, ăна пирĕн вечера илсе килесехчĕ,— терĕ Борис.

— Тĕрĕс! Унăн кăмăлне çĕклеме май тупас пулать,— терĕ Рима.

Çав вăхăтра шкулта юрлама вĕрентекен çамрăк учительница Вера Ивановна пырса кĕчĕ.

Ачасем, пĕр харăс ура çине тăрса, ăна сывлăх сунчĕç.

— Каллех килтĕм-ха, хирĕç мар-и эсир? — терĕ учительница.

— Питĕ савăнатпăр эсир килнĕшĕн!—терĕç ачасем.

— Сирĕн паян вечер пĕрремĕш хут пулать, çавăнпа та тепре репетици туса ирттерни кансĕрлемĕ. Ларион Егорчă та сире пулăшма хушрĕ. Лайăх ĕçлесе пырсан, ӳлĕмрен вăл сире инструментсем те илсе парас пек калаçрĕ...

Вера Ивановна çапла сăмахлани ачасене çунатлантарсах ячĕ. Вĕсем тепĕр хут репетици тума тытăнчĕç.

Акă, юлашкинчен, кĕтнĕ каç та çитрĕ. Ачасен телейне, çанталăкĕ вăл кун уяр, лăпкă пулчĕ. Урам тăрăх икшерĕн-виçшерĕн çынсем ута пуçларĕç. Клуба чиперех халăх пухăнса пычĕ.

Ачасем пуринчен ытла Унтри мучи пирки пăшăрханчĕç: «Килĕ-ши, килмĕ-ши?» Вăхăт чылай иртнĕ пирки вĕсем мучие чĕнме яма та шутларĕç, анчах çав вăхăтра кинемей чаршава уçса пуçне кăтартрĕ те: «Килчĕ хайхискер, ав, алăк патĕнче ларать»,— терĕ.

— Ăна маларах ирттересчĕ,— терĕ Борис.

— Тĕрĕс! Атьăр, кайса чĕнетпĕр.

Ачасем Унтри мучи патне тухрĕç те ăна маларахра вырăн тупса пачĕç.

— Ак тата... Вырăнĕ кунта та лайăхчĕ-ха,— терĕ мучи, çапах та ачасем хыççăн малалла иртрĕ.

Вечера уçма Римăна хушрĕç.

— Хаклă хамăр ял çыннисем! — терĕ Рима, хытă пăлханса.— Пирĕн паян питĕ пысăк савăнăç. Эпир хамăр ялта клуб уçатпăр! Паллах, ку вăл пурне те хавхалантармалла... Малашне пирĕн клубра час-часах вечерсем пулĕç, спектакльсем лартăпăр... Халĕ, чăн малтан, оркестр каланине итлĕр...

Ерипен чаршав уҫӑлчӗ. Сцена ҫинче ачасем йӗркеленсе тӑнӑ. Кашнин аллинчех мӗн те пулин пур: хуткупӑс, гитара, балалайка, шӑхличсем, параппан...

— «Тӑван ҫӗршыв, юратнӑ ҫӗршыв» ятлӑ юрӑ итлӗр! — терӗ Рима.

Унтан аллисене ҫӳле йӑтса сулчӗ те, питӗ хаваслӑ, кӑмӑла ҫӗклекен кӗвӗ шӑранма пуҫларӗ. Пӗр кӗвӗ хыҫҫӑн тепӗр кӗвӗ... Ҫав хушӑрах сӑвӑсем тухса каларӗҫ, юрларӗҫ, ташлани те пулчӗ.

Пӗр вӑтӑр-хӗрӗх минутран чаршав хупӑнчӗ, концертӑн пӗрремӗш пайӗ пӗтрӗ. Вӑл тепӗр хут уҫӑлсан, ачасем сасартӑк Унтри мучи вырӑнӗ пуш-пушах пулнине асӑрхарӗҫ. Вара вӗсене темскер ҫитмен пекех туйӑнса кайрӗ. Анчах та, юрлама тытӑнсан, вӗсем ун ҫинчен шутлама пӑрахрӗҫ. Кӑшт тӑхтасан, Унтри мучи тепӗр хут клуба пырса кӗчӗ. Хӑйӗн аллинче — пысӑк шурӑ тутӑрпа чӗркенӗ кӗсле.

— Пӑртак кансӗрлеме юрать-и? — терӗ вӑл, ачасем юрлама чарӑннӑ хыҫҫӑн ура ҫине тӑрса.

— Юрать, мучи, юрать, ирт кунтарах!

— Эпӗ те хамӑн кӗсленене янратса илес тетӗп...

— Ой, ку питӗ аван пулать! Кала мучи, янрат пӗрре!

— Кала, Унтри мучи, кала! — кӑшкӑрчӗҫ клубра ларакансем те.

— Кӗтетпӗр!

— Каласси пулать-и, пӳрнисем хытнӑ ӗнтӗ манӑн...

Ҫапах та мучи маларах тухрӗ те, ҫӗлӗкне хывса хурса, сцена хӗррине ларчӗ. Унтан кӗслине чӗркуҫҫийӗсем ҫине вырнаҫтарчӗ, хӑшпӗр хӗлӗхсене туртӑнтарса тӗрӗслерӗ. Кӗҫех ҫепӗҫ кӗвӗ ерипен янрама тытӑнчӗ, унтан хытӑран хытӑ, чуна хумхантармалла хӑватланса пычӗ.

Итлесе ларакансем шӑп пулчӗҫ. Ҫав самантра вӗсем пурте Унтри чунне ӑнланчӗҫ пуль. Ачасем те тӗлӗнсе кайсах итлерӗҫ.

Юлашкинчен мучи кĕвве каллех майĕпе шăплантарса пырса вĕçлерĕ.

Пурте каçса кайса алă çупрĕç, «Маттур, мучи, тавтапуç, мучи!» — тесе кăшкăрчĕç.

Мучи ура çине тăчĕ те ачасем умнерех çывхарчĕ.

— Акă мĕн, ачамăрсем, тавах сире, эсир паян манăн савăнма маннă ватă чуна савăнтартăр! Çавăншăн эпĕ хамăн ывăлăн, Якурăн, кĕслине сире парнелес терĕм. Вăл кĕсле нумай çулсем хушши сас кăларман. Халĕ ĕнтĕ эсир унăн сассине янратăр. Малашне те, яланах çынсен чунне савăнтарăр!

— Тавтапуç, мучи! Эс каланă сăмахсене эпир асрах тытăпăр, санăн кĕслӳ яланах янăрĕ! Унăн сассипе çынсен чунĕсене савăнтарăпăр тесе, пионерла сăмах паратпăр! — терĕ мучи кĕслине тытнă Рима.

...Концерт малалла тăсăлчĕ. Ачасен уçă сасси пĕчĕк клубра тепĕр хут хавассăн янраса кайрĕ:

Яланах хĕвел култăр,
Яланах телей пултăр...

...Унтанпа вунă çул та ытла иртрĕ. Тури Катраç варринче халь тимĕр витнĕ икĕ хутлă пысăк çурт ларать. Аякранах курăнать вăл. Унта пурте пур—виççĕр çын вырнаçакан зал та, сцена та, артистсем валли тунă пӳлĕмсем те. Çуртăн тепĕр вĕçĕнче ял Совечĕ, колхоз правленийĕ. Кунĕпех çын татăлмасть ку çуртран. Каçкаç кино кăтартаççĕ, спектакльсем, концертсем пулаççĕ.

Хальхи клуб чаплă пулин те, ял çыннисем ĕлĕк çак вырăнта ларнă «ачасен клубне» час-часах аса илеççĕ. Ырăпа асăнаççĕ...

ÇĔНĔ ÇУЛ УМĔН

Хĕллехи кун çав тери кĕске вăл. Ёлка тумалли чăрăш касма пынă Сашăпа Тимуш вăрманта нумай та çӳремерĕç, анчах каç пулса та килчĕ. Чăрăшсене сĕтĕрсе, вĕсем район центрнелле каякан мăн çул çине васкаса тухрĕç те малалла хуллентерех утрĕç, мĕншĕн тесен кунта çухалса каяс çук ĕнтĕ, тăршшĕпех телефон юписем тăсăлаççĕ...

Çанталăкĕ вăл кун сивех пулман. Кăнтăрла иртсен шултра та нӳрĕрех юр лăпсăртатса çума тытăнчĕ, çулсене курăнми шăлса лартрĕ. Халь акă Сашăпа Тимуш йĕлтĕрĕсем ун çине сарлака йĕрсем туса хăвараççĕ.

Ырантан тепĕр кунне Çĕнĕ Çул пуçланать. Пур ачасем те ăна хавассăн кĕтсе илме хатĕрленеççĕ. Шкула ĕнтĕ ĕнерех мачча çӳллĕш ёлка лартса ăна капăрлатма пуçларĕç. Уроксем хыççăн Сашăпа Тимуш та юлса ĕçлерĕç. Питĕ илемлĕ пулать шкулти ёлка, ун пекки ку таранччен пĕрре те пулманччĕ-ха. Паян вара вĕсем вожатăйран ыйтсах тухрĕç:

— Эпир хамăрăн килте те ёлкăсем тăвасшăн, çавăнпа та вăрмана кайса килес тетпĕр те...

Килĕсенче вĕсен иккĕшĕн те пĕчĕк шăллĕсемпе йăмăкĕсем пур, Сашăпа Тимушăн вĕсене те савăнтарас килет-çке! Шкулти ёлкăна пырса кураймаççĕ вĕсем, пĕчĕккĕ-ха. Ан тив, килте савăнччăр...

Нӳрĕрех юр йĕлтĕр тĕпĕсене çыпăçать, вĕсем япăх шăваççĕ. Утнă май чăрăшĕсем те йывăрланнă пек туйăнаççĕ, анчах ачасем малтан-малах пыраççĕ. Хăйсене ăшă пулса кайнă ĕнтĕ, çамкисем çине тар тапса тухнă, çăварĕсенчен тухакан вĕри сывлăш тĕтĕм пек пăсланса пырать.

Сасартăк вĕсен çурăмĕсем хыçĕнче машина кĕрленĕ сас илтĕнсе кайрĕ, унтан çул çине çутă ӳкрĕ. Ачасем йăпăр-япăр çултан пăрăнса тăчĕç. Машина çав тери хăвăрт ыткăнса килет...

— Лартса каймĕ-ши ку пире? — терĕ Саша.— Питĕ аван пулатчĕ...

— Ыйтса пăхар,— килĕшрĕ Тимуш.— Ытла туллиех пулмасан, тен, лартса та кайĕ...

Вĕсем çул хĕрринерех пычĕç те иккĕшĕ те пĕр харăсах аллисене çĕклерĕç. Вара машина, вĕсен тĕлне çитсен, пăтах чарăнса тăчĕ.

— Ларас тетĕр-и?—ыйтрĕ шофер, пуçне кабинăран кăларса.

— Ийя çав... Каштах ывăнтăмăр...

— Ларăр, эппин!

Сашăпа Тимуш пĕр самантрах, кăптăр-каптăр хăпарса, кузоври темĕнле ещĕксем çине ларчĕç те кабина тăрринчен шаккаса илчĕç:

— Вырнаçрăмăр!..

Машина каллех тапранса кайрĕ. Савăннипе, Саша юрласах ячĕ:

Капитан, капитан, улыбнитесь...

Анчах ытлашши савăнма иртерех пулнă-мĕн. Пĕр çур километр пек кайсан, машина сасартăк темĕнле лакăма кĕрсе ларчĕ. Çиелтен юр çуса лартнипе, шоферĕ ăна асăрхасах çитереймен пулас. Мотор тăрук юрласа, ӳлесе илчĕ, анчах машина малалла каяймарĕ, унăн кайри кустăрмисем пĕр вырăнтах çаврăнса, кăпăшка юра каялла сирпĕтме тытăнчĕç. Шофер кабинăран тухса машинăна йĕри-тавра пăхса çаврăнчĕ те каллех мотора ӳхĕртме тытăнчĕ. Усси пулмарĕ... Унтан шофер татах тухса, кустăрмасем айĕнчи юра кĕреçепе ăса-ăса ывăтма тытăнчĕ; ачасем те, сиксе анса, шофер мотора çĕнĕрен ĕçлеттерме тытăнсан, машинăна хыçалтан тĕртме пикенчĕç.

Грузовик пурпĕрех вырăнтан тапранса каяймарĕ.

— Ну, ачасем, мана кĕтсе ан тăрăр эсир, кайăрах хăвăр çулпа,— терĕ вара шофер, ассăн сывласа.— Кам пĕлет, тахçанччен чакаланмалла пулать манăн кунта... Эсир шăнса кайма та пултаратăр, тата аннĕрсем те эсир час таврăнманшăн пăшăрханма пултараççĕ...

Ачасен нимĕн тумалли те юлмарĕ, вĕсем пĕр-пĕрин çине пăхса илчĕç те йĕлтĕрĕсем çине тăрса малалла шурĕç...

Кайсан-кайсан вĕсем чарăна-чарăна итлерĕç: машина сасси илтĕнмест-и? Килмест-и вăл?

Анчах телефон пралукĕсем кĕрленисĕр пуçне, тав-

рара пĕр сас-хура та пулман. Эппин, машина халĕ те малтанхи вырăнтах тăнă, ун патĕнче шофер пĕр-пĕчченех тăрмашнă...

— Итле-ха, Саша...— терĕ Тимуш.

— Мĕн?

— Эпир ытла васкаса килтĕмĕр. Кăштах тăхтамаллаччĕ пуль пирĕн... Шухăшла-ха, кам пырса пулăшать ăна? Пĕччен вăл...

— Вăл пире хăй кайма хушрĕ-çке?

— Пире хĕрхенсе каларĕ те-ха ара... çапах та, тăхтамаллаччĕ, тен, усă тăваттăмăр ăна? Атя, каялла каятпăр! Чăрăшĕсене кунтах пăрахса хăварăпăр та... Çĕрле кам илет вĕсене? Атя, э?

Саша ку шухăшпа килĕшрĕ. Вара ачасем каялла çаврăнчĕç те машина тăрса юлнă çĕрелле васкарĕç.

Вĕсене курсан, шофер тĕлĕнсех кайрĕ:

— Мĕн пулчĕ? Кашкăр курса тарса килмерĕр пулĕ те?

— Çук, ним те курман эпир,— терĕ Тимуш.

— Мĕншĕн килтĕр, эппин?

— Сана мĕнле те пулин пулăшаймăпăр-и, терĕмĕр те...

— Мĕнле пулăшайăр ĕнтĕ эсир? — Шофер тарласа кайнă çамкине çĕлĕкпе шăлса илчĕ.— Уйра вĕт-ха, кустăрмасем айне хума нимĕн те тупма çук, вăрманта пулсанах апла марччĕ те... Вăрманĕ инçе кунтан. Ял та çывăх мар.

— Тимуш...— терĕ Саша шăппăн, çавна илтсен.— Кустăрмасем айне пирĕн чăрăшсене хурсан мĕнле-ши? Юрамасть-ши?

— Хамăр чăрăшсăрах юлар-и вара? — тĕлĕнерех ыйтрĕ Тимуш.— Хамăра кирлĕ-çке вĕсем? Юри çавăншăн килтĕмĕр пулать те...

— Вăл нимĕн те мар,— аллипе сулчĕ Саша,—ыран уроксем хыççăн килсе, çĕнĕрен касса кайма пултаратпăр!

— Мĕн пирки тавлашатăр çак эсир? — ыйтрĕ шофер, машинăн тепĕр енчен çаврăнса тухса.

Саша ăна хăйĕн шухăшне каласа пачĕ.

— Аванччĕ те, шел-çке-ха вĕсене, хăвăра кирлĕ,— терĕ шофер.

— Эпир ыран каллех касса килетпĕр.

— Апла пулсан хуть...

Шофер каласа та пĕтереймерĕ, ачасем хăйсен ĕлка валли каснă чăрăшĕсем выртакан çĕрелле чупрĕç те тепĕр вунă-вунпилĕк минутран вĕсене илсе те пычĕç:

— Мейĕр, хурăр!

Шофер вара чăрăшсене кайри кустăрмасем айне тăрăххăн вырнаçтарса хучĕ те, кабинăна кĕрсе ларчĕ. Часах мотор ĕçлеме тытăнчĕ, фарăсем çутăлса кайрĕç. Машина малалла шурĕ, анчах кăшт тăхтасанах каллех чарăнса ларчĕ. Шофер татах машинăран тухса чăрăшсене тӳрлетсе хучĕ.

Акă, мотор тепĕр хут вăйлăн кĕрлеме тытăнчĕ. Машина ерипен малалла куçса пырса, мамăк пек çемçе юр тулнă лакăмран тухса кайрĕ.

— Пулчĕ! Тухрĕ! — савăнăçлăн тăпăртатса илчĕç ачасем. Çав вăхăтрах шофер вĕсене:

— Ларăр хăвăртрах! — тесе кăшкăрчĕ.

— Халех! Ларатпăр!

Тепĕр çур минутран вара машина район центрĕ еннелле çил-тăвăл пек ыткăнчĕ... Часах малта вĕтĕ-вĕтĕ çăлтăрсем пек çутăсем курăнчĕç, унтан çуртсен мĕлкисем те палăрма пуçларĕç...

Хапхаран кĕрсен, шофер, машинăна чарса тăратса, кабинăран пуçне кăларса ыйтрĕ:

— Хăш урамра пурăнатăр эсир, ачасем?

— Почта çывăхĕнче, иккĕмĕш пӳрт, анаталла! — кăшкăрчĕ Саша.

— Эпĕ те çавăнтах, анчах пирĕн пӳрт — кил хушшинче,— хушса хучĕ Тимуш.

— Юрать! Сире килех çитерсе хăваратăп, эппин!

Кĕçех машина почтăран иртсе чарăнчĕ те, ачасем ун çинчен сиксе анчĕç.

— Тавтапуç сана, шофер пичче!

— Хăвăра тавтапуç! Эсир пулман пулсан тахçанччен тăрмашмалла пулатчĕ-ха манăн... Питĕ пысăк тав! Ёлкисене шел те-ха ĕнтĕ, анчах ытла ан хуйхăрăр эсир, вĕсем тупăнĕç. Эпĕ машина çинчи çимĕçсем шанса каясран питĕ хăранăччĕ, çăлса хăвартăр эсир Çĕнĕ Çул кучченеçĕсене... Çавăншăн пушшех тавтапуç сире! Сывă пулăр!..

Ачасем машина тепĕр урамалла пăрăнса куçран çухаличченех пăхса тăрса юлчĕç.

— Кучченеçсем терĕ вĕт, э? — ыйтрĕ Тимуш.

— Çапла каларĕ çав. Мĕнле кучченеçсем-ши?

— Панулми пулмалла, çул тăршшипех панулми шăршине туйса пытăм эпĕ...

— Эппин, ыран хĕл мучи панулми çитерет? Тен, вăл пире те лекĕ, э?

— Лекме те пултарать.

— Ыран чăрăш касма каятпăр-и ĕнтĕ?

— Каятпăр!

Вĕсем пĕр хапхапах кил хушшинелле кĕрсе кайрĕç.

...Тепĕр кунне ачасене хĕллехи каникула салатрĕç. Сашăпа Тимуш шкултан тухсанах килĕсене васкарĕç: апат çиетпĕр те, каçчен вăрмана кайса килетпĕр, тесе калаçса татăлчĕç вĕсем.

Çывăхрах пурăннă пирки, Саша киле малтарахран çитрĕ. Юрлă урисене çенĕкре кăшт-кашт шăлкаласа пӳрте кĕрсе тăрсан, вăл тĕлĕнсе чĕлхине çыртсах лартрĕ: урай варринче маччапа тан ёлка ларать.

— Мĕне пĕлтерет ку? Кам илсе килчĕ? — ыйтрĕ вăл амăшĕнчен.

— Хам та пĕлеймерĕм,— терĕ амăшĕ.— Такам машинпа килсе чарăнчĕ те тӳрех йăтса кĕртрĕ... «Сирĕн ывăл ача пур-и?» — тет. «Пур»,— тетĕп. «Эппин, йăнăшман эпĕ,—тет.—Акă ăна валли ёлка илсе килтĕм!»

Урăх эпĕ лайăххăн ыйтса та пĕлеймерĕм. «Ывăлăра салам калăр»,— терĕ те машинĕ çине ларса кĕрлеттерчĕ кăна...

— Хайхи шофер тунă ĕнтĕ куна! — тавçăрса илчĕ Саша.— Чупас, часрах Тимуша кайса пĕлтерес кун çинчен!

Вăл кил хушшине тухрĕ кăна — ăна хирĕç Тимуш чупса килет.

— Мана ĕлка илсе пырса панă! — аякранах кăшкăрса ячĕ вăл.

— Сана та-и?

— А мĕн, сана та килсе панă-и мĕн?

— Мана та çав!..

— Мĕн тери ырă çын пулнă иккен вăл!

— Тĕлĕнсе каймалла! Манман хăйне ыр тунине!..

Вĕсем малтан Сашăсем патне кĕрсе тухрĕç, унтан Тимушсем патне кайса курчĕç. Каласа памалла мар савăнчĕç çав куншăн, ниçта кайса кĕме пĕлмерĕç! Унтан часрах ĕлкăсене илемлетме тытăнчĕç. Малтан Тимушăнне, унтан Сашăнне. Питĕ хитре пулчĕç вĕсем. Хăйсенчен те ытларах вĕсен пĕчĕк шăллĕсемпе йăмăкĕсем хĕпĕртерĕç...

УЛĂХРА

Настя паян хăйне никам вăратмасăрах питĕ ир тăчĕ те шкула кайма пуçтарăнма тытăнчĕ. Малтан питкуçне çурĕ, шăлĕсене тасатрĕ, çӳçне тирпейлерĕ, сумкинчи кĕнекисемпе тетрачĕсене пĕрерĕн-пĕрерĕн кăларса тĕрĕслесе хучĕ, унтан чăлана кĕрсе ирхи апат çисе тухрĕ.

— Аçта васкатăн капла? — ыйтрĕ тултан кĕнĕ ама-

шĕ.— Шкула кайма ир-ха, радио та калаçма пуç-ламан...

— Эп дежурнăй-ха паян, манăн пуринчен малтан çитсе класра кирлĕ йĕрке тăвас пулать. Тупса пар-ха мана пĕр-пĕр таса кипке татăкĕ, доска шăлма кирлĕ пулать...

Çапла çав, унăн паян хăйсен класĕнче дежурнăй пулмалла. Кăçалхи вĕренӳ çулĕнче пĕрремĕш хут. Малтанхи кунсенче А. Б. В саспаллисемпе пуçланакан хушаматлисем дежурнăй пулчĕç, паян Г саспалли çине çитрĕ — унăн, Григорьева Настьăн, черечĕ. Вăл — хăйсен класĕнче чи лайăх вĕренекен хĕрачасенчен пĕри, пĕлтĕр ун пирки стена хаçатĕнче те çырнă, çулла ăна ытти отличниксемпе пĕрле Шупашкара экскурсие те илсе кайнă, çавăнпа та вăл паян та юлташĕсем умĕнче намăс курасшăн мар. Пурте йĕркеллĕ, тирпейлĕ пултăр унăн дежурстви вăхăтĕнче, ачасене те аван пултăр, учительницăна та кăмăла кайтăр.

Юлашкинчен вăл амăшĕ тупса панă таса кипке татăкне сумкине чиксе хучĕ те, хавассăн темле юрă кĕввине юрласа ярса, килтен чупса тухсах кайрĕ.

Сентябрь — кĕрхи уйăх шутланать, анчах ун чухне те çуллахи пекех ăшă кунсем пулаççĕ-ха. Паян та çанталăк питĕ лайăх-мĕн. Кăвак тӳпе тап-таса, ниçта пĕр пĕлĕт татки те çук, колхоз сачĕ хыçĕнчен хăпарса тухнă хĕвел çав тери кăмăллăн çутатать, хăй ăшшине ним хĕрхенмесĕр çĕр çине сапать...

Настьăсен хăйсен ялĕнче, вăл ытла та пĕчĕккĕ пирки, шкул çук; вĕсем юнашар яла çӳреççĕ. Анчах унта инçе мар, пулсан пулĕ пĕр километр çурă. Ялтан тухсанах çул анаталла каять, унтан кăштах улăхпа пымалла, çӳçе тĕмисемпе хупланнă çырма урлă каçмалла та сăрта хăпармалла çеç. Унта, илемлĕ сăрт çинче, хĕвел питтинче, пĕлтĕр кăна туса пĕтернĕ пысăк шкул çурчĕ ларать. Инçетренех курăнать вăл, хăйĕн симĕс тăррипе, сарлака чӳречисемпе хăй патнелле илĕртет...

Настя фермăн вăрăм та сарлака çурчěсем тěлěпе иртрě те уя тухрě. Лаша çулěпе пăртак утсассăн, сулахаялла каякан ансăр сукмак çине пăрăнчě. Вăл çиппе çапнă пекех тӳрě — леш енчи сăрт çинче курăнакан шкул еннелле каять.

Ěнер пионерсен дружинин сборěнче вěсем Октябрь праçникне малтанах хатěрленсе пырасси çинчен калаçнă. Настьăна та пěр сăвă вěренме хушрěç. Нимěнле ěçе те кая хăвармма юратман хěрача ăна çиййěнчех çырса илчě те каçхине вěренсе те хучě.

...Куллен эпир кěтсе илетпěр
Шурăмпуçне, çут хěвеле.
Чи аслă телее чěнетпěр
Эпир хěвел ячěпеле.
Хěвел пăхсассăн — кун та ырă.
Хавассăн çуталать тěнче,
Тулса пиçет сěтеклě тырă,
Ачашшăн саралать чечек.
Хěвел пăхсассăн — ăшă кулă
Вылять ача сăнарěнче;
Хěвел пăхсассăн — пурнăç тулăх
Тăван совет çěршывěнче...
Хěвел! Хěвел! Пěр çакă мар-и
Çунать халь пирěн чěрере!

Сукмак улăха анчě. Кунта кăçал пěрре пит лайăх утă туса илнě пулин те, каллех вăрăм курăк ӳссе ларнă. Каю, теççě ăна. Çав каю çинче халь кунсерен фермăри пăрусем ыр курса çӳреççě, ем-ешěл те сěтеклě курăка çăвар туллин нăтăртаттараççě...

Улăхра нӳрě, пусмассеренех шыв тухать. Юлашки кунсенче вăйлă çумăрсем пулчěç çав кунта. Настя пушмакěсем йěпенме пуçларěç, çавăнпа вăл сăввине калама пăрахса, епле те пулсан урине йěпетес мар тесе, асăрханарах утса пычě. Анчах та çырма тěпěнчи пěчěк шывăн икě енěпе ӳсекен çӳçе тěмисем патнелле çывхарса пынă май, ура айěнче нӳрěрех те нӳрěрех пулса пычě.

— Татах çумăр çусан кунтан çӳреме те май килмест пуль пире...— шухăшларĕ Настя, типĕрех вырăнсем шыраса.

Çав вăхăтра таçта инçех те мар темле выльăх сасси илтĕнчĕ:

— Ём-мме-е!... Ём-мме-е...

Анланса илме те пулмарĕ — те сурăх, те пăру сасси пулчĕ ку? Настя çавăнтах унталла та кунталла пăха-пăха илчĕ.

Çывăхра нимĕн те курăнмарĕ, анчах кăшт тăрсан çав сасă каллех илтĕнчĕ. Халь вара Настя ку сасă — пăру сасси пулнине уççăнах уйăрса илчĕ. Анчах та ăçта вăл? Ахăртнех, çав çӳçе тĕмисем хушшинче пулĕ? Ăçтан килсе лекнĕ вăл кунта, таврара пĕр выльăх чунĕ те çук-çке? Çухалса кайнăскер пулсан анчах? Тата камăн-ши вăл? Хуçисем шыраççĕ пуль-ха хăйне... Теп, лачакана кĕрсе ларнă?

Çак шухăшсемпе Настя, çӳçесем хушшинелле кĕрсе кайса, куçа курăнман пăрăва шырама тытăнчĕ.

— Тынашка, тынашка! Ăçта эсĕ?

Хирĕç сас пулмарĕ. Чылайран тин тепĕр хут, анчах хуллен кăна «ём-мм...» тени илтĕнчĕ. Настя çав сас илтĕннĕ çĕрелле, лапри-мĕнне пăхмасăрах, чупса кайрĕ те вăрăм хăях ăшĕнче хуп-хура пăру пуçĕ курăннине асăрхарĕ. Вăл, мĕскĕн, чăнах та лачакана кĕрсе ларнă иккен, çур хырăмĕ таранах путнă, вырăнтан та хускалаймасть. Хăçан, мĕнле килсе лекнĕ вăл кунта — паллă мар, анчах та хăй чылай тапаланнă курăнать— таврари хăях лапчăнса лапăртанса пĕтнĕ...

— Эх, ухма-ах! Мĕн шыраса кĕрсе виртрăн-ха эс кунта? — шеллесе кăшкăрса ячĕ те Настя, часрах пăру патне пыма тăчĕ, анчах унăн икĕ ури те пакăлчак таранах путса ларчĕ.

— Капла май килмест... Мĕн тăвас?

Пăру ăна курса татах мĕкĕрсе илчĕ. «Тархасшăн, пулăш мана, пĕтетĕп вĕт»,— тенĕ пекех пулчĕ вăл...

Настя йăпăр-япăр уринчи пушмакне, чăлхине хыв-са пăрахрĕ, кĕпи аркине саппун пиçиххийĕ хыçне пуç-тарса чикрĕ те, çемçе пылчăк ăшне чĕркуççи таранах путса, пăру патне пырса тăчĕ. Тĕрĕс, лачакаран тухма тăрăшса, пăру нумай тапаланнă... Анчах вăйĕ çитей-мен мĕскĕнĕн.

Настя ун патне пĕшкĕнчĕ те хыçалтан тĕксе хăва-лама тытăнчĕ:

— Ну, тух тавай, тух! Эп пулăшăп сана, пулă-шăп... Тух!

Пăру тăпăлт-тапăлт, тăпăлт-тапăлт! тукаларĕ, ан-чах нимĕн усси те пулмарĕ. Халтан кайса çитнĕскер, вăл каллех пылчăк ăшне лаштах кĕрсе выртрĕ. Настя вара, ун патне мал енчен пырса, ик аллипе малти ури-сем айĕнчен тытса туртса кăларма тăчĕ, анчах капла та ĕç тухмарĕ — ытла та йăпăлкаланса кайнă иккен вăл, аларан йăлт çеç вĕçерĕнсе каять. Нимĕнле те çăл-ма çук!

— Иккĕн пулсанах кăпараттăмăр та ĕнтĕ...— ун-талла-кунталла пăхса илчĕ Настя. Таврара никам та, пĕр çын та курăнмарĕ. Шкул ачисем те ав çула май каякан машина çине ларнă та мăн çулпа иртсе кай-рĕç... Настьăн хăйĕн те васкамалла тата, пуринчен малтан çитмелле — дежурнăй! Анчах, куçпа курнă çĕртех, пăрăва та пăрахса хăварма юрамасть, пионерла пулмасть вара вăл. Пăрушĕ хуть те камăн пулсан та — шел ăна, шăнса пăсăлма е вилсех кайма пултарать...

Шалт аптрарĕ Настя. Мĕскер тăвас, мĕнле çăлас ку айван выльăх чĕппине? Кама та пулин курмастăп-и тесе, сăрталла та хăпарса пăхрĕ вăл, анчах çав-çавах никам та курăнмарĕ. Хуть те мĕн ту ĕнтĕ!

Вăл каллех пăру патне пычĕ те ăна татах малти урисенчен турткаласа пăхрĕ. Усси çук, алă вĕçерĕнсе каять...

Сасартăк вăл иртнĕ çуркунне фермăри пĕр ĕне çавăн пек лачакана путса ларсан мĕнле туртса кăларнине

аса илчӗ: ун чух ялтан вӗрен илсе анчӗç те хырăмӗ айӗнчен яваласа илсе туртрӗç... Куна та çапла тумалла та... анчах мӗнпе? Ни пăяв, ни кантра çук...

— Чим! пулать! — терӗ вăл кăшт шухăшласа тăрсан.— Пулать пăяв!

Çавăнтах сумкинчен паçăр килтен чиксе тухнă кипке татăкне туртса кăларчӗ, пилӗкӗнчи пиçиххине салтрӗ. Кипкине сыпăкăн-сыпăкăн чăр-чар! чăр-чар! çурчӗ, вара пиçиххине тата çав сыпăксене пӗрин çумне теприне сыпма тытăнчӗ. Темиçе минутран унăн чăнах та самаях вăрăм пăяв пулса тăчӗ.

Пăрушӗ çав вăхăтра, Настя мӗн тума шутланине ăнланнă пекех, хурлăхлă куçӗсемпе ун çине пăхса выртрӗ.

— Халех, тынашка, халех...— терӗ ăна Настя.— Ну, тавай...

Вăл пăрăва хырăм айӗнчен яваласа илчӗ те мӗн вăй çитнӗ таран туртма тытăнчӗ.

— Атя, атя! Ху та тăрăш! ну! ну!

Настя туртрӗ, пăру куçӗсене чарса пăрахсах тапкаланчӗ. Акă, вăл малти урисене пылчăк çине кăларса хучӗ, татах малалла сикрӗ. Пӗрре сикрӗ, иккӗ, виççӗ... Унтан тата тепре тапăлтатса илчӗ те хăях çине тухса ӳкрӗ. Настя та каялла ывтăнса кайрӗ, анчах алăри пăявне вӗçертмерӗ, выртакан пăрăва типӗ çӗрелле сӗтӗрчӗ...

Çăлăнчӗ пăру! Хăй çаплах макăрать: мӗскӗн, ге хăранипе, те шăнса кӳтнипе, пӗтӗм кӗлеткипе чӗтрет, анчах халь хăрамалли нимӗн те çук ӗнтӗ, вăл çирӗп çӗрте тăрать!

Настя ăна çӳçе тӗмисем хушшипе улăхалла кăларчӗ. Пăрăва вилесрен хăтарнăшăн вăл питӗ савăнчӗ, анчах малалла мӗн тумалла-ха? Аçта чикмелле ăна? Кунтах хăварсан, вăл каллех инкеке лекме пултарать, ăна епле пулсан та яла леçмелле. Ăна валли Настьăн вăхăт çук, унăн шкула васкамалла, ахаль те кая юлчӗ

пуль-ха... Примерлӑ дежурнӑй пулас тенӗччӗ — май килмерӗ...

Вӑл часрах шыв хӗррине алли-урисене ҫума анчӗ. Кӗпи аркисем те лапӑртаннӑ иккен, вӗсене те ҫумалла пулчӗ. «Вера Петровнӑна тӗрӗссипе каласа паратӑп та, ятламасть пулӗ-ха...— шухӑшларӗ хӗрача.— Ятлама кирлӗ мар, выльӑха ҫӑлса хӑвартӑм-ҫке...»

Хыҫалта ҫӳҫе тураттисем чӑштӑртатни, унтан хӗрарӑм сасси илтӗнчӗ:

— Э-эй, мур чӗппи! Эс кунта иккен! Путсӗр япала!..

Ҫавӑнтах тата ҫат! ҫат! тутарни илтӗнчӗ.

Настя уҫӑ ҫӗре сиксе тухрӗ. Ун умӗнче фермӑра ӗҫлекен Праски инке тӑра парать. Пӑрӑва хӑлхинчен тытнӑ та, ҫапать те ҫапать ӑна.

— Ма тиветӗн эс ӑна? Мӗн турӗ вӑл сана? —ҫилӗпе кӑшкӑрса ячӗ Настя.— Вӑл ахаль те аран сывлать авӑ...

— Мӗнле тивес мар-ха?—куҫӗсене ҫутӑлтарса илчӗ Праски.— Мӗншӗн ҫухалса юлнӑ вӑл ӗнер? Пурте киле пынӑ, ку пӗр-пӗччен, тӑмана пек, тайӑлса юлнӑ! Тул ҫутӑлнӑранпа шыратӑп эп ӑна, усала! Шалт ывӑнса ҫитрӗм!

— Хӑвӑр айӑплӑ, мӗншӗн ӗнерех асӑрхаман вӑл ҫуккине? Пӗчӗк выльӑх мӗн ӑнланать вӑл? — мӑн ҫын пекех хӑтӑрса тӑкрӗ ӑна Настя.— Юрать-ха, вилсе кайман! Кама айӑплатчӗҫ-ха вара? Ман куҫ тӗлне пулчӗ те — туртса кӑлартӑм...

Праски тек нимӗн те чӗнмерӗ, хулӑ илчӗ те пӑрӑва хӑваласа кайрӗ. Вӑл фермӑра начар ӗҫлени ҫинчен чылайранпа калаҫатчӗҫ ӗнтӗ, халь те, ав, мӗн пулса тухнӑ.

— Стена хаҫатне ҫырса паратӑп ак кун пирки,— шухӑшларӗ Настя, шкул еннелле утнӑ май.— Наянсене вӗрентес пулать!

...Вӑл шкула ҫитнӗ чух ачасем пӗрремӗш урока ларнӑ пулнӑ. Настя класа кӗрсе тӑрсан, ун ҫине пурте ҫав

тери тĕлĕнсе пăхрĕç: вăл урока кая юлса пыни нихçан та пулман-çке ку таранччен! Епле-ха апла? Настьăна хăйне те тем пекех аван мар пулчĕ, анчах урок пĕтиччен вăл нимĕн те шарламарĕ. Переменăра вара Вера Петровна патне пычĕ те паян çырмара мĕн пулни çинчен каласа кăтартрĕ.

Иккĕмĕш урок пуçлансан, ачасем халь те Настя çине чалăшрах пăхнине асăрхаса, Вера Петровна пурне те пĕлтерчĕ:

— Настя паян маттур ĕç тунă, ăна тиркеме кирлĕ мар...

Тепĕр икĕ кунтан унăн мухтава тивĕçлĕ ĕçĕ çинчен шкулти пур пионерсен пухăвĕнче те каласа кăтартрĕç.

ÇĔНĔ ÇУРТ

Ванюшпа Левăн пĕчĕкçеç йăмăкĕ Таня пур. Вĕсем ăна питĕ юратаççĕ. Кашни кунах ир тăрсан чăн малтан унăн кравачĕ патне пырса пăхаççĕ, вăл çĕр каçа мĕн чухлĕ ӳснине сăнаççĕ. Вĕсен Таньăна епле те пулсан хăвăртрах ӳстерес килет, анчах йăмăкĕ, юри тенĕ пекех, питĕ вăраххăн улшăнса пырать.

Амăшĕн отпуск вăхăчĕ пĕтсен, Таньăна никампа киле хăварма çук пулчĕ. Вара вĕсен ашшĕ, яла кайса,

Ванюшпа Левӑн асламӑшне илсе килчӗ. Ҫапла килйыш татах пысӑкланчӗ, вӗсен ҫырма хӗрринче ларакан пӳрчӗ тӑвӑрлансах ларчӗ. Ку пӳрте вӗсен ашшӗ вӑрҫӑран таврӑнсанах ниҫта пурӑнма ҫуккипе хӑех хӑмасенчен ҫапса, ик енчен тӑмпа шӑлса тунӑ пулнӑ. Халӗ ӗнтӗ пысӑк килйыша кунта йӗркеллӗ выртса тӑма та вырӑн ҫитми пулчӗ...

Ванюшпа Левӑн ашшӗпе амӑшӗ те пӗр заводрах ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсем ирхине ирех васкаса апат ҫиеҫҫӗ те ӗҫе тухса каяҫҫӗ. Сехет йӗппи тӑххӑр еннелле сулӑнсан, Ванюшпа Лева та ларса чей ӗҫеҫҫӗ те шкула чупаҫҫӗ. Шкултан таврӑнсан, вӗсен яланах киле парса янӑ уроксене вӗренмелле... Ҫавӑн чух вара тӑвансем часчасах пӗр-пӗринпе хирӗҫсе каяҫҫӗ. Кӑранташпа йӗр туса ҫурмаран уйӑрнӑ сӗтел ҫитмест-ҫке-ха вӗсене!

— Манӑн вырӑн ҫапла таран, эсӗ манӑнне йышӑннӑ!

— Эсӗ ху ман енне каҫса кайнӑ! — кӑшкӑраҫҫӗ вӗсем пӗрне-пӗри. Тепӗр чух чышкаласа та илеҫҫӗ.

— Чарӑнӑр, тархасшӑн, ача ҫывӑрать вӗт! Эх, ҫак Таня пулман пулсанах сирӗн патӑрта пӗр кун та пурӑнмӑттӑм,— тет вара асламӑшӗ тарӑхнипе.

Пӗрре, каҫхине, Ванюшпа Левӑн ашшӗпе амӑшӗ ҫитес ҫул хӑйсем валли ҫӗнӗ пӳрт лартасси ҫинчен калаҫма тытӑнчӗҫ.

— Укҫа-тенкӗне тирпейлӗрех тытса, перекет касси не хурса пырас... Пӗр хушӑ япаласем те илмелле пулмасть... Пирӗн халь пӗтӗм вӑя ҫӗнӗ пӳрт лартнӑ ҫӗре ярас пулать,— терӗ амӑшӗ.

— Илтрӗр-и, шӑнкӑрчсем! Ну, мӗнле пулӑшас тетӗр-ха аҫӑрпа аннӗре? — ывӑлӗсене пуҫӗсенчен ачашласа илчӗ ашшӗ.

— Никам валли те мар, сирӗн валли пулать вӗт вӑл ҫӗнӗ пӳрт!

— Мороженӑйпа канфет сахалтарах ҫинипе ҫеҫ пулӑшас пулать ӗнтӗ вӗсен...— кулса илчӗ амӑшӗ.

— Асту, унпа пулăшĕç-ха вĕсем! Чармасан, канфетне пĕрре тытăнсанах килограмĕпе чăмласа яраççĕ пуль! — терĕ асламăшĕ те, калаçăва хутшăнса.

— Эпир-и? Суя ку! — иккĕшĕ те пĕр харăс кăшкăрса ячĕç Ванюшпа Лева. Хăйсем кĕрхи панулми пекех хĕрелсе кайрĕç.

— Эсир çав, кам пултăр тата?

Юлашки вăхăтра Ванюшпа Левăна Таня самаях йăлăхтарса çитерчĕ. Вăл час-часах çĕрле вăранать те, макăрма тытăнса, никама та çывăрма памасть. Ăна пулах асламăшĕ Ванюшпа Левăна пĕрре те шавлаттармасть, пĕрмаях ятлаçать, тепĕр чух çурăмсенчен çапкаласа та илет. Çавăнпа та халь вĕсем йăмăкĕ патне питех пырса пăхмаççĕ. Вăл кăшт саса кăларсанах, кăмăлсăр пулса: «Пуçланчĕ ĕнтĕ музыка!» — теççĕ.

Хĕл варринче вĕсен ашшĕ отпуск илчĕ те килте пĕр кун канса пурăнмасăрах вăрмана тухса кайрĕ. Вăл унта çĕнĕ пӳрт лартма йывăç хатĕрлетĕп, терĕ. Анчах хăй нумаях та ĕçлеймен иккен, темшĕн чирлесе ӳкнĕ те, ăна хулана илсе килсе больницăна хунă. Ку вара пĕтĕм килйышшăн çав тери пысăк хуйхă пулса тăчĕ. Пĕчĕк Таня çеç нимĕн те ăнланаймасть. Вăл Ванюшпа Левăна курсанах аллисемпе кармашса йăл та йăл кулать...

Пĕр уйăхран тин тухрĕ вĕсен ашшĕ больницăран. Хăй питĕ начарланса, шуралса кайнă, пĕртте малтанхи пек мар. Вăрмана вăл урăх кайса çӳремерĕ вара.

Вăхăт çур еннелле сулăнчĕ, кунсем самаях вăрăмланчĕç. Хĕвел ытларах та хĕрӳллĕрех пĕçертсе пăхма пуçларĕ. Ванюшпа Лева шкултан кашни кунах йĕппйĕпе пулса таврăнаççĕ. Куншăн асламăшĕ вĕсене текех ятлаçрĕ: «Сире типĕтсе ĕлкĕрме çук»,— тет вăл. Анчах ачасем, темле ятласан та, çав-çавах йĕпенсе таврăнчĕç.

Ашшĕпе амăшĕ яланхи пекех пĕрле, пĕр вăхăтрах ĕçе çӳреççĕ. Пĕррехинче вĕсем çав тери савăнăçлă тав-

рăнчĕç те Ванюшпа Левăна та, Таньăна та ытала-ытала чуптуса илчĕç.

— Акă вăл, пирĕн çĕнĕ пӳрт! — терĕ ашшĕ, аллинчи хут татăкне çавăркаласа кăтартса.— Савăнăр пурте, ташлăр, юрлăр!..

Çакă вăл çĕнĕ хваттере куçмалли ордер пулнă.

Хулан тепĕр енче, яп-яка асфальт сарнă аслă урамра, пилĕк хутлă пысăк чул çурт ларать. Ăна нумай пулмасть туса пĕтернĕ, вăл çĕп-çĕнĕ, илемлĕ, таса... Кун пек çуртсем кунта йĕркеренех, вĕсем çине пăхсан, чун темле хавасланса каять, таçта халиччен пулса курман урăх хулана килнĕн туйăнать. Çакăнта пурăнма куçса килчĕ те ĕнтĕ халь Ванюшпа Левăсен телейлĕ килйышĕ.

Вĕсен хваттерĕ тăваттăмĕш хутра, виçĕ пӳлĕмлĕ, сарлака чӳречисем хĕвелтухăçнелле пăхаççĕ. Уçă сывлăша тухса тăма балкон та пур. Кашни пӳлĕмĕн стенисене уйрăм тĕслĕ чечексемпе эрешлесе илемлетнĕ. Чӳрече рамисемпе алăк суллисем çуталсах тăраççĕ. Урайĕсем çине пăхсан, тĕкĕрти пек сăн курăнать. Вуттине те хутса янтăланă — чугун батарейăсем яланах пĕр пек ăшă парса тăраççĕ. Витре йăтса шыв патне каяс хуйхи те çук, крансенчен сивви те, вĕриййĕ те юхса килет. Апат-çимĕç пĕçерме те кал-кал, кăвакăн-сенкерĕн курăнса çунакан газ çинче апат наччасрах хатĕр пулать.

— Ырлăх, мĕн тери ырлăх!.. Тата çĕр çул пурăнăттăм кун пек çĕрте! — хавассăн мăкăртатрĕ асламăшĕ, пӳлĕмрен пӳлĕме çӳресе.

Çĕнĕ хваттере вĕсем йăлтах çĕнĕ сĕтел-пукансем, шкапсем, икĕ диван илсе пырса лартрĕç. Вара хваттере тата ытларах илем кĕчĕ.

— Ĕлĕк патша та кун пек пурăнман пуль,— тĕлĕнчĕ асламăшĕ.

— Тĕрĕс, патша вăхăтĕнче газ пулман,— терĕ ăна хирĕç ашшĕ.

Ванюшпа Левăшăн çав тери ырă вăхăт çитрĕ. Вĕсем халь иккĕшĕ те пĕр пӳлĕмре, кашни уйрăм кравать çинче çывăраççĕ. Каçхине выртсан, çĕрĕпех кĕнеке вула е пĕр-пĕринпе калаç — никам та чарас çук. Ĕнтĕ Таньăна та тарăхма пăрахрĕç, ăна хăйсен пӳлĕмне илсе пыра-пыра унпа выляççĕ.

Май уявĕнче вĕсем патне хăнасем нумай пухăнчĕç. Хуçисем çĕнĕ хваттере куçнă ятпа пурте парнесем илсе пычĕç. Сĕтел хушшинче кăшт ларкаласан, хăнасене лайăххах савăнтарма Ванюшпа Лева ашшĕ радиоприемникпа музыка янратма тытăнчĕ. Музыки тата çав тери хаваслăскер пулчĕ. Тен, çавăнпах та-и, хăнасем кил хуçисене ташласа пама ыйтрĕç.

— Атя, ташлар эппин, Лисук! Пирĕн ташламасан, камăн ташлас? Патшалăх пире чул çурт лартса пачĕ! — терĕ ашшĕ, атă кĕллисемпе тапăртаттарма тытăнса.

Вăл пӳлĕм тавра çут хуçса çаврăнать, амăшĕ пĕвĕпе авкаланса шăвăнать, хăнасем пурте алă çупаççĕ. Асламăшĕ Таньăна чĕркуççи çине тăратса сиктерсе ларать. Ванюшпа Лева хăнана пынă çынсен ачисемпе пĕрле пӳлĕмрен пӳлĕме чупкаласа çӳреççĕ.

Çĕнĕ чул çуртра выляма тухма та лайăх: Ванюшпа Лева пек ачасем картишĕнче туллиех, выля та кул кăна!

Пĕррехинче, каçалла сулăнсан, кӳршĕ ачисем — Сеньăпа Витя — Ванюшпа Левăна коридор вĕçне чĕнсе илчĕç те вылямалли пистолетсем сĕнчĕç. Тытăнчĕç хайхи ачасем шартлаттарма! Вĕсен кашнин коридорти маччара уйрăм пăнчă тупса тĕл пемелле... Çур сехетрен вара мачча пăрçа сапнă урай пекех пулса тăчĕ.

Пистонсем пĕтсен тин вĕсем картишне чупса тухрĕç. Тӳрех нимĕн тума аптранăран пулас, Сеня кĕсйинчен пысăк хура кăранташ туртса кăларчĕ те çурт стени

çине тĕрлĕрен тĕрлĕ кукăр-макăр ӳкерчĕксем тума тытăнчĕ. Витя çак çуртри ачасен ячĕсене çырма тапратрĕ.

Тепĕр кунне вĕсем «рогаткăран» пемелле вылярĕç. Вĕтĕ чулсем сарай чӳречисен кантăкĕсене лексе чылайăшне ватрĕç. Унтан, мăннисем ятласран хăраса, унталла та кунталла тарса пĕтрĕç.

Ванюшпа Лева, хăйсем пурăнакан хута чупса хăпарсан, чарăнса тăчĕç. Вĕсен киле халех кĕрес килмест-ха... Çакăнта вара Ванюш та, хăйĕн кĕсйинчен хĕрлĕ-кăвак кăранташ кăларса, стенана тĕрлеме тытăнчĕ.

...Çакăн хыççăн темиçе кунтан шкулта пысăк пуху пулса иртрĕ — вĕренекенсем хулари строительсемпе тĕл пулчĕç. Сĕтел хушшинче учительсемпе пĕрле палламан икĕ çын лараççĕ. Вĕсенчен пĕри çамрăк, çӳллĕскер, тепри пĕр хĕрĕх çулсенче пулĕ, пысăк усиллĕ, сăнран хаяртарах пек курăнать.

— Ачасем, паян пирĕн пата хăйсен ĕçĕпе чапа тухнă паллă строительсем, пире валли çĕнĕ çуртсем тăвакан ăста рабочисем хăнана килчĕç. Вĕсене ырă кăмăлпа кĕтсе илер! — терĕ шкул директорĕ, алă çупма тытăнса.

Вара ачасемпе учительсем те пĕр харăс шапăр-шапăр алă çупса илчĕç.

— Малтан эпир Строгов юлташ сăмахне итлĕпĕр. Çирĕм çул хушшинче вăл халăх валли пайтах çĕнĕ çуртсем туса лартнă...

— Хаклă ачасем! — терĕ ватăрах рабочи.— Эпир паян сирĕн пата хулари строительсен ырă саламне илсе килтĕмĕр. Сире лайăх вĕренме, çирĕп сывлăхлă ӳсме сунатпăр...

Ачасем алă çупма чарăнсан, вăл çак çитес çулсенче хулара мĕн тери пысăк стройкăсем пуласси, вĕсем коммунизм стройкисем пулса тăни, çынсем валли пурăнмалли çуртсем мĕн чухлĕ тăвасси çинчен каларĕ...

— Эсир хăвăрах куратăр ĕнтĕ, стройкăсенче ĕç пĕр кун та чарăнмасть, мĕншĕн тесен пирĕн партипе правительство хамăрăн халăха чаплă, лайăх çуртсенче пурăнтарасшăн... Çавăнпа та эпир, строительсем, çĕнĕ çуртсем ытларах тăвасшăн ырми-канми ĕçлетпĕр... Анчах та сирĕн хушăра, ачасем, хăшпĕрисем пирĕн ĕçе хакламаççĕ. Пар-ха, Михайлов, паçăрхи хута,—терĕ вăл хăй юлташне.

Лешĕ кĕсйинчен шурă хут татăкĕ кăларса пачĕ.

— Кунта, пухура, Ванюшпа Лева ятлă ачасем пур-и? — ыйтрĕ вăл.

Ванюшпа Лева ку шкулта — çĕнĕрен килнĕ ачасем, çавăнпа та вĕсене ытла пурте пĕлмеççĕ-ха... Пĕр сăмах чĕнмесĕр, çав тери хăраса, вăраххăн ура çине тăчĕç вĕсем.

— Пĕлетĕр-и, мĕн хăтланнă çак икĕ ача? — терĕ строитель.— Халь кăна туса пĕтернĕ çĕнĕ çуртăн çӳлти хутĕнчи коридор стенисене йăлт вараласа пĕтернĕ, темĕн те пĕр сăрласа тултарнă.

— Ана эп мар, Ванюш...— терĕ Лева чĕтрекен сасăпа.

— Эсĕ ху сăрларăн вĕт...— терĕ Ванюш.

Пухури ачасем кулса ячĕç.

— Тусăмсем, кунта кулмалла мар, макăрас пулать!—терĕ рабочи.—Акă тата Антонов Семенпа Пунцов Виталий унтан та ытларах иртĕнсе кайнă. Вылямалли пистолетсенчен персе коридор маччине тĕп-тĕрлех тунă, стенасене те вараланă...

Строитель тата чылай ачасен ятне асăнчĕ.

— Çавăн пекех Хĕрлĕ пралукри çĕнĕ çурта ниепле те кăçал туса пĕтернĕ çурт теме çук. Унăн стенисене темĕн те пĕр çырса, шăйăрса, пылчăкпа вараласа пĕтернĕ. Коридорти чӳрече кантăкĕсене çĕмĕрнĕ, алăк умĕнчи электричество пралукĕсене татнă. Çак урамрах тата нумай çуртсем умне лартнă йывăçсене хуçса пĕтернĕ... Çакăн пек шăмăрлăхсене курсан, пирĕн, строи-

тельсен, тӳсме çук чун ыратать. Эпир тунӑ çуртсенче япӑх хуçасем пурӑннишӗн тарӑхас килет! — терӗ те строитель, сӗтел хушшине ларчӗ.

— Мӗнле-ха капла эсир, ачасем,— терӗ ун хыççӑн ура çине тӑнӑ директор,— эсир пурте пионерсем вӗт!.. Çынсем пӗтӗм чуна хурса сире валли çуртсем тӑваççӗ, эсир — çӗмӗретӗр, вараланӑр... Куншӑн сирӗн чӑннипех ответ тытмалла пулать! Калӑр-ха хӑвӑрӑн шухӑшӑрсене, мӗн тумалла çавӑн пек иртӗнекенсене?

Ачасем сывламан пекех пулчӗç. Айӑплисем, никам çине пӑхмасӑр, пуçӗсене пӗксе ларчӗç. Айӑпа кӗменнисем те вӗсемшӗн намӑсланса пӑшӑрханаççӗ. Кӗрхи пилеш пек хӗрелсе кайнӑ Ванюшпа Лева юлташӗсем çине те пӑхаймаççӗ...

— Мана калама юрать-и? — терӗ кӑшт тӑхтасан хыçалти партӑ хушшинче ларакан хӗрача.

— Кала, Тамара,— пуçӗпе сулчӗ ӑна директор.

— Пирӗн хушӑрах лараççӗ вӗсем, киревсӗр ӗçсем тӑвакан ачасем. Вӗсене пула пӗтӗм шкул усал ят илтет. Ман шутпа вӗсене пионертан кӑлармалла! — терӗ вӑл.

Унтан çавӑнтах Тамарӑпа юнашар ларакан тепӗр хӗрача сиксе тӑчӗ.

— Тӗлӗнсех каймалла, мӗнле-ха вӑл ху пурӑнакан çурта çавӑн пек япӑха ямалла? Эх, эпӗ çавӑн пек чаплӑ çуртра пурӑнас пулсан, таса мар урапа та алӑкран кӗмӗттӗм. Мӗн шутласа иртӗнеççӗ вӗсем, хайсем каласа паччӑр!..

Çав самантра Ванюшпа Лева иккӗшӗ те хӑйсем унчен мунча пек çуртра тертленсе пурӑннине, çӗнӗ çурта куçсан пурте мӗн тери савӑннине, çав ятпа ашшӗпе амӑшӗ хӑнасем пухнине те аса илчӗç. Çӗнӗ чаплӑ çурта варалама юраманнине мӗнле малтанах чухласа илеймен-ха вӗсем?

Ачасем айӑплисен сӑмахне кӗтрӗç.

— Эпӗ урӑх нихçан та ун пек хӑтланмастӑп. Эсир

каçарсан, строитель ёçне вёренме шутлатăп,— терĕ Ванюш аран-аран.

— Эпĕ те,— пăшăлтатрĕ Лева.

Ытти ачасем те, урăх ун пек тумастпăр тесе, сăмах пачĕç. Анчах пионерсен вожатăйĕ вĕсене пурпĕрех ятласа калаçрĕ.

— «Урăх ун пек тумастăп» тени сахал. Малтан хăвăр мĕн пăснине, вараланине тӳрлетес, тасатас пулать!

— Кам пăснă, çав тӳрлеттĕр! — кăшкăрчĕ тахăшĕ.

— Ку та тĕрĕс мар, çуртсене лайăх пăхса упрасси пирĕн, пионерсен, ĕçĕ! Тепĕр чух мăннисем те çуртсене пăсаççĕ. Кунта тĕслĕренех пулма пултарать: çурт çывăхне таса мар япаласемех пăрахаççĕ, стенасене, маччасене шăтараççĕ... Пионерсен çакăн пеккисене те курмалла, ун пек тума юраманнине асăрхаттармалла...

Вожатăй хыççăн татах калаçакансем тупăнчĕç. Юлашкинчен ачасем ушкăнĕпех пĕр шухăшлă пулчĕç: строительсенчен каçару ыйтас, мĕн пăснисене тӳрлетес, малашне çĕнĕ çуртсене нихçан та нимĕнле сиен те кӳрес мар, пачах урăхла, стройкăра ĕçлекенсене пур майсемпе те пулăшса пырас.

Яланлăхах астуса юлчĕç ачасем çак пухăва, текех нихçан та ал çĕкленмерĕ вĕсен алли çуртсене япăха кăларма.

УНĂН СУКМАКĔ

Ачасем кашни каçах ĕнесене çитерме уя тухаççĕ: пĕрисем униче хыçĕнче çӳреççĕ, теприсем вăрман хĕрне çитичченех каяççĕ, măн çул тăрăх çавăтса çӳресе çитерекенсем те пур. Каçхи ĕнтрĕкре вара унта та кунта ача-пăчасен уçă сассисем илтĕнеççĕ.

Таруç та хайсен ӗнине çурăмӗнчен лăпка-лăпка çул хӗрринчи кӗççе пек çемçе те сӗткенлӗ курăка çитерсе çӳрет. Ара, ӗне тенине пăхма пӗлсен, ăна лайăх тăрантарсан, вăл сӗтне нумай парать-çке!..

...Хальхи пекех астăвать Таруç: ун чухне вăл тин çеç шкула çӳреме тытăннăччӗ-ха. Пӗрре, шкултан таврăнсан, вăл хăйӗн йăмăкӗсем иккӗшӗ те урамра вылянине курчӗ. Çур еннелле сулăннă май ăшăннă çанталăк ачасене питех те илӗртет, çавăнпа та вӗсем кунӗ-кунӗпех тулта пулаççӗ.

— Таруç, паян пирӗн ӗне пăруларӗ! Пăрушӗ — тына! — хавассăн пӗлтерчӗç вӗсем, аппăшне курсан.

Чăнах та, пӳрте кӗрсенех Таруç урайӗнче ула пăру выртнине курчӗ. Амăшӗпе асламăшӗ çав тери савăнна.

— Тинех кӗтсе илтӗмӗр вӗт, Таруç! Питӗ ăнăçлă пулчӗ-ха, пирӗн ӗне хальхинче тына туса пачӗ,— терӗ асламăшӗ.

— Ӗнтӗ ку пăрăва усратпăрах, амăшӗ ватăлса çитрӗ. Лайăх ӗне пулать ун вырăнне,— терӗ Таруç амăшӗ.— Пăх-ха эс, епле хитре вăл!

Ик-виçӗ кунтан пăру чиперех ура çине тăрса çӳрекен пулчӗ. Унăн сасси питӗ уçăччӗ, çимелли вăхăт çитсен, вăл хăех вăрăммăн «ӗм-ме-е!» тесе ыйтма пуçлатчӗ. Таруççем ăна Уланкă тесе ят пачӗç.

Унтанпа чылай хӗлсем-çусем иртрӗç. Таруç кăçал улттăмӗш класа куçрӗ. Уланкă та ӳссе çитсе патвар, сӗт лайăх паракан ӗне пулса тăчӗ. Халӗ çав Уланкăна çитерсе çӳрет те ӗнтӗ Таруç.

Пӗррехинче, кăнтăрла иртсен, Атăл вăрманӗ хыçӗнчен хура пӗлӗтсем шуса тухрӗç. Вӗсем ял çинелле васкарӗç. Кӗçех, вут-çулăмлăн ялтлатса, çиçӗм çиçме пуçларӗ, умлăн-хыçлăн аслати кӗрлерӗ те питӗ вăйлă çумăр çума тытăнчӗ, часах вара урам тăрăх шыв юхса анчӗ.

Вăхăт нумай та иртмерӗ, анатри хапхаран ялалла лачкам пулнă кӗтӳ шавласа кӗчӗ. Таруçсен ӗни хăйсен

хапхи умне çитсенех «му-у-!» тесе мĕкĕрсе ячĕ те, асламăшĕ, çумăр витĕрех чупса тухса, ăна картишне кĕртрĕ.

Çапах та çумăр нумаях пымарĕ, иртсе кайрĕ. Каллех хĕвел çутатрĕ. Малтанхи пекех ăшă пулчĕ, анчах сывлăш уçăлса, тасалса юлчĕ.

Картишĕнче Уланкă çине-çинех сас пама тытăнчĕ. Унăн каллех ирĕке, ешĕл курăк çине каясси килчĕ ĕнтĕ.

— Ĕнине суса илес те çитерме ярас,— терĕ Таруç амăшĕ, колхоз пахчинче ĕçленĕ çĕртен çумăр пирки таврăннăскер.

— Паян текех кĕтӳ тухас çук, туй пулать-те-ха. Çумăрĕ çуман пулсан та, кĕтӳçисем пурпĕрех кĕртсе яратчĕç. Çитерме каймах тивет. Эпĕ тухса сăвам, эсĕ çикелесе хатĕрлен, Таруç,— терĕ асламăшĕ.

Çитерме каякансем татах та пур-ши тесе, Таруç урамалла тухрĕ. Пĕр-пĕр пысăк праçник çитнĕ пекех туйăнса кайрĕ ăна. Пĕрисем туя кайма, теприсем курма хатĕрленеççĕ. Унта та кунта шăнкăрав сассисем янăраççĕ, халех юрлакансем те пур. Шукăль тумланнă хĕрсем, хĕвелçаврăнăш шĕкĕлчесе, урам тăрăх каллĕ-маллĕ уткаласа çӳреççĕ. Ача-пăчасем пĕр тĕле пухăннă та тем выляççĕ, шавлаççĕ. Ĕне çитерме каяс текенсемех палăрмаççĕ. Таруç тусĕ Ларис та халех каймастăп-ха, терĕ.

Хĕрача, кăмăлсăр пулса, тутисене тăсса, киле кĕчĕ. Унăн та тăр-пĕччен ĕне çитерсе çӳрес килмест, туй курас килет.

— Ĕнӳ-япалу! Йăлăхтарчĕ! — терĕ вăл.— Çынсем туй кураççĕ, манăн уй тăмани пек пĕр-пĕччен ĕне çитерсе çӳрес пулать. Сарайне хупса, утă пăрахса парсан та тăрать!

— Эх, ачам, мĕнле ăс çитертĕн пуль кун пек калаçма? — терĕ асламăшĕ, ун умне пырса.— Пĕлетĕн-и эсĕ, ĕне вăл пирĕншĕн — пурнăç! Санăн хăвăн пурнăçу та

сĕт ҫинче тытăнса тăрать! Ҫăвĕ те, хăйми те, турăхĕ-тăпăрчи те... Мĕне кăмăл туртать, ăна ҫиетĕн. Эсĕ тин кăна шăтса тухнă симĕс курăк ҫеҫ-ха, ҫавăнпа та нимĕн те ăнланмастăн. Ёлĕк, авă, куланай вăхăтра тӳлейменшĕн страшниксем пирĕн ĕнене хамăр куҫ умĕнченех илсе тухса кайрĕҫ те, килйышĕпех выҫҫа юлтăмăр. Ман атте чирлĕччĕ те, сĕтсĕр нумай та пурăнаймарĕ. Тăлăха юлса, эпир, ача-пăчасем, унталла-кунталла саланса пĕтрĕмĕр. Пĕрисем пуянсем патĕнче тарҫă пултăмăр, теприсем ыйткаласа та ҫӳрерĕҫ... Эх, хĕрĕм, пур ĕнене ăна савăнсах пăхас пулать,— ĕлĕкхине хурланса аса илнĕрен ассăн сывларĕ асламăшĕ.

— Маншăн ҫеҫ-им? Эпĕ кăна сĕт ҫиетĕп-и? — йĕрсе ячĕ Таруҫ.

— Урасем ыратман пулсан, хамах кайнă пулăттăм та...

— Аҫу илтсен, сана куншăн ай-ай лекет-ха!..—терĕ амăшĕ те ҫиллессĕн.— Мĕн пур ҫав туй патĕнче? Ӳсĕр ҫынсене курман-и?

— Юрĕ-ҫке, каятăп эппин, лăпланăр! — терĕ те Таруҫ, пӳртрен чупса тухса ĕнине урамалла хăваларĕ.

Хурăн варне ҫитсенех Уланкăна ирĕке ячĕ те хăй сăрт ҫине улăхса ларчĕ. Пĕччене ҫав тери кичем пулчĕ, вăл тек-текех ял еннелле пăха-пăха илчĕ. Унта халь пурте савăнăҫлă... Юрать-ха, вăл инҫене каймарĕ. Хурăн варĕ ял хыҫĕнчех, ялта юрланисем те илтĕнеҫҫĕ.

Кăшт тăхтасан, вăл ялтан тахăшĕ тепĕр ĕне хăваласа тухнине курчĕ. Ку Ларис пулнă иккен.

— Лари-ис! Кунта ки-ил!—кăшкăрчĕ Таруҫ савăнса кайнипе.

Лешĕ ăна илтрĕ пулас, ав, кунталлах килет. Ĕнтĕ вĕсем иккĕн пулаҫҫĕ, кичем мар.

Нӳрĕ курăка ĕнесем каҫса кайсах ҫиеҫҫĕ. Таруҫпа Ларис малтанах пĕр чĕнмесĕр ларчĕҫ. Унтан, ним тума аптранă енне, Ларис Таруҫăн хулăн хура ҫӳҫ тунине сӳтсе турама тытăнчĕ.

— Эсӗ тухнине пӗлсен, килтисем мана хӑваласах кӑларса ячӗҫ,— терӗ Ларис кӑмӑлсӑр.— Халь ӗнтӗ иксӗмӗр те туй курмасӑрах юлатпӑр...

— Тепӗр тесен, мӗнех вара вӑл туй? — терӗ Таруҫ, кӑвак куҫӗсемпе Ларис ҫине пӑхса.— Ӳсӗр ҫынсем сикни ҫеҫ!

— Ку тӗрӗс ӗнтӗ...

Кӑшт ларсан, Ларис пионерсен ҫӗнӗ юррине юрласа ячӗ. Таруҫ та хӑйӗн уҫӑ сассипе унпа пӗрле юрлама тытӑнчӗ.

Каҫалла сулӑннӑ май туй сасси тата хытӑрах кӗрлеме пуҫларӗ.

— Манӑн хӗрӗ тухса кайнине ҫеҫ курасчӗ,— терӗ Таруҫ.

— Атя, киле таврӑнатпӑр, ҫитет кун чухлӗ ҫитернипе,— сӗнчӗ Ларис.

— Ҫук, юрамасть, ытла халех таврӑнсан ятлаҫаҫҫӗ, ӗнисен чарисем те тулман та...

— Эппин, пӗлетӗн-и, мӗн тӑвӑпӑр? Ман пӑявпа сан пӑявна сыпӑпӑр та пӗр ӗнине вӗренлӗпӗр, теприне тӑллаcа ярӑпӑр. Акӑ, манӑн пиҫиххи ҫирӗп, темле туртсан та татӑлмасть. Тӑллатпӑр ҫавӑнпа! Вара шанчӑклӑ пулать, пӗринчен тепри ниҫта та уйрӑлса каймасть. Хамӑр йӑпӑртлӑха туй курма кайса килетпӗр. Мӗнле пек сан шутпа?

— Вӗренӗ татӑлса кайсан?

— Пурпӗрех вӗсем ниҫта та каймаҫҫӗ, эпӗ ун пек пӗрре кӑна мар тунӑ.

— Хӑшне вӗренлетпӗр?

— Хуть те хӑшне, пурпӗр мар-и!

— Кӳр эппин пиҫиххӳне, хамӑнне тӑллатӑп эпӗ, эсӗ хӑвӑртрах вӗренле,— терӗ юлашкинчен Таруҫ, васкама тытӑнса.

Ларис хӑйӗн ӗнине пӗр ҫамрӑк хурӑнран кӑкарчӗ. Ҫакӑншӑн хӗпӗртесе, вӗсем ял еннелле чупсах кайрӗҫ.

* * *

Икĕ хĕрача хашкаса туй хĕрне çитсе тăчĕç. Картиш тулли халăх: ватти те, вĕтти те кунта, пурте курма пуханнă. Анчах та курмалли нимех те çук пек. Малта, шыльăк хушшинче, ĕçнĕ çынсем тусан мăкăрлантарса ташлаççĕ, пырĕсене çурса пăрахас пек çухăрса юрлаççĕ — çавă çеç!

Таруçпа Ларис чылайччен халăх хушшинче тĕрĕнкелесе çӳрерĕç. Хĕрне илсе тухса каяссине кĕтрĕç вĕсем, анчах та вăл çаплах тухмарĕ.

Тĕттĕмленме пуçласан, хĕрачасем хăйсен ĕнисем çинчен аса илчĕç.

— Атя хăвăртрах, киле илсе килетпĕр,— терĕ Ларис.

— Атя çав. Тен, хĕрне илсе кайнине курма та ĕлкĕретпĕр,— килĕшрĕ Таруç.

Вĕсем анаталла, Хурăн варĕ еннелле, вĕçтерчĕç. Ларис ĕни кавлесе тăнине вĕсем катаранах курчĕç, анчах Таруç ĕни курăнмарĕ. Хурăн варĕнче пĕр кукрашка, пĕр шырлан хăвармасăр шырарĕç вĕсем, ăçта та пулин кĕрсе выртнă пуль тесе, лакăм-тĕкĕмсене те пăхрĕç, ячĕпе те кăшкăрчĕç, анчах ĕне çав-çавах тупăнмарĕ.

— Тен, вăл киле таврăннă? Утнă май тăллани татăлса кайнă пуль те... — хăрарах сăмах хушрĕ Ларис.— Тен, аннӳ килсе илсе кайнă?..

— Анне ерçмест, вăл килес çук,— терĕ хăранипе чĕтреме тытăннă Таруç.

Хĕрачасем татах шырама тытăнчĕç. Вĕсем сăрт çине улăхрĕç те унталла-кунталла чупкаласа: «Уланкă! Уланкă!» — тесе кăшкăрчĕç. Унтан уй тӳпинелле чупса çаврăнса килчĕç. Çук, ĕне тупăнмарĕ.

— Ăçтах кайтăр ĕнтĕ вăл? Çисе тăраннă та хăех ялалла утнă пуль,— терĕ татах Ларис.

Тавралăх тĕттĕмленсех çитрĕ. Тӳпере çăлтăрсем тухса çуталчĕç. Ывăнса çитнĕ хĕрачасем, ял еннелле

утнă май, çаплах унталла-кунталла пăхкаласа, Уланкăна чĕне-чĕне пычĕç.

Киле çывхарнă чух Таруçăн чĕри хытăран хытă тапма пуçларĕ. Хапха умĕнче вăл чарăнса тăчĕ, шăтăк витĕр кил хушшинелле пăхрĕ, анчах ĕне тавраш не курмарĕ.

«Тен, сунă хыççăн асанне ăна сарайне хупнă»,— лăпланмалли май шыраса шухăшларĕ вăл.

Ăна асламăшĕ кĕтсех тăнă иккен.

— Чун юлмарĕ хăранипе, ма ку таранччен çӳретĕн тата? — терĕ вăл Таруç картишне кĕрсенех.— Ĕни ăçта?

— Ĕни тарнă. Киле килмен-и вăл? — шăппăн çеç каларĕ Таруç тата ытларах хăраса кайнипе.

— Мĕнле тарнă? Эсĕ ху ăçта пулнă? Выртса çывăртăн-им?

Чунĕ кӳтсе çитнипе Таруç макăрсах ячĕ. Ĕне мĕнле çухални çинчен асламăшне аран-аран каласа пачĕ вăл.

Шăп çав вăхăтра Таруçăн ашшĕпе амăшĕ те ĕçрен таврăнчĕç. Васкавлă ĕç пулнăран вĕсем туй курма та кайман иккен. Таруç ĕне çухатни çинчен пĕлсен вĕсем тӳрех ятлаçма тытăнчĕç.

— Ĕне тупăнмасан, сана ай-ай лектеретĕп! Нихçан курмаççине кăтартатăп! — терĕ ашшĕ, пӳрт çумĕнчи тенкел çине аттине хывма ларсан.

— Таçтах кайман пулĕ-ха, пĕр-пĕр киле кĕме пултарнă е ферма ĕнисемпе пĕрлешсе кайнă-тăр... Сĕтне суса илчĕç пулĕ те, çавăнпа киле всакамасть ĕнтĕ вăл,— лăплантарма тытăнчĕ асламăшĕ.— Хăех килсе çитет акă...

Унтан вăл пурне те каçхи апат çиме чĕнчĕ. Анчах сĕтел хушшине Таруçăн икĕ йăмăкĕпе пĕрле ашшĕ çеç кĕрсе ларчĕç. Çĕрле пулин те, Таруçпа амăшĕ ĕне шырама кайрĕç. Кашни урамра, уничере, фермăсенче пулчĕç вĕсем. Анчах вĕсен ĕнине курни çинчен калакан çын пĕрре те пулмарĕ.

— Тен, вӑл вӑрманалла кӗрсе кайнӑ? Унта Яракассин ферма ӗнисем ҫӳреҫҫӗ, ҫавсемпе пӗрлешсе кайма пултарнӑ. Ыран ирех каятӑп-ха унта,— терӗ амӑшӗ.

Хуйхӑрнипе Таруҫӑн апат та ҫиес килмерӗ, ҫапах та асламӑшӗ ӑна ҫине тӑрсах вӗретнӗ сӗт ӗҫтерчӗ.

* * *

Ҫывӑрма выртсан та, Таруҫӑн йывӑр шухӑшсем пуҫран тухмарӗҫ.

«Ӑҫта кайрӗ-ши? Мӗншӗн киле килмест-ши? Ку таранччен нихҫан та ҫухалманччӗ-ҫке? Ыран тупӑнӗ-ши?»

Вӑрахчен ҫавӑн пек шухӑшласа выртнӑ хыҫҫӑн тин ҫывӑрса кайрӗ вӑл. Ир-ирех вара такамсем шавлӑн калаҫнине илтсе вӑранчӗ.

— Эпӗ малтанах вӑл кам ӗни пулнине уйӑрса та илеймерӗм... Ӗнер каҫ эсир ӗне шыраса ҫӳренӗ тенине илтсен вара тӳрех кунта чупса килтӗм,— терӗ темле арҫын.

Таруҫ, хӑйсен ӗни тупӑннӑ тесе, ҫав самантрах вырӑн ҫинчен сиксе анса картишне чупса тухасшӑнччӗ. Анчах та ҫавӑнтах амӑшӗ калаҫнине илтрӗ те тӑхтаса тӑчӗ.

— Тен, вилсех кайман-ха вӑл? — ыйтрӗ амӑшӗ.

— Э-э, ӗнерех хытнӑ. Ҫавӑн чухлӗ клевер хыпса тултарнӑскер, ӑҫтан чӑттӑр? Хырӑмӗ хӗрӗх витре пичкипекех кӳпсе кайнӑ...

Таруҫ уй хуралҫинче ҫӳрекен Раман мучи сассине уйӑрса илчӗ.

— Эх, эсремет ачи-пӑчи, ҫапса пӑрахмалла ҫеҫ вӗсене! — терӗ Таруҫ ашшӗ хаяррӑн.

Куншӑн ашшӗ хӑйне каҫарас ҫуккине Таруҫ питӗ лайӑх ӑнланчӗ. Ӗнер калани те аса килчӗ.

— Халех, халех пытанас пулать... Унсӑрӑн пӗтереҫҫӗ мана...

Вара чатӑр айӗнчен шӑппӑн кӑна тухрӗ те, ҫенӗк

урайӗн пӗр хӑмине илсе, пусма айне сикрӗ. Йӑмӑкӗсем ҫывӑрсах юлчӗҫ, сисмерӗҫ.

Ак ӗнтӗ вӑл пусма айӗнчи кив хӑмасем ҫинче шӑппӑн ӗсӗклесе выртать. Вӑл асламӑшӗн сӑмаххисене аса илчӗ. Ӗлӗк вӗсен ӗнине страшниксем илсе тухса кайсан, пӗтӗм килйышӗпе выҫӑ тӑрса юлнӑ... Акӑ, халӗ, Таруҫ айӑпӗпе вӗсен килйышӗ те сӗт-ҫусӑр аптрать ӗнтӗ. Мӗн тери лайӑх ӗнеччӗ Уланкӑ, епле шеллес мар ӑна!

«Ма кайрӑм-ши ҫав туй патне, ма кайрӑм-ши!..» — ӳкӗнчӗ хӗрача, куҫҫуль ҫӑта-ҫӑта.

Раман мучипе пӗрле Таруҫӑн ашшӗпе амӑшӗ те тухса кайрӗҫ. Ӗне тирне те пулин сӗвсе илес терӗҫ.

Асламӑшӗ ҫав вӑхӑтра куҫҫульне шӑлкаласа типӗтрӗ те Таруҫ ҫывӑракан чатӑра уҫрӗ.

— Ай-уй, ачи ӑҫта кайнӑ тата? Таруҫ! Таруҫ! — кӑшкӑрчӗ вӑл.— Таруҫ ӑҫта?— кӗҫӗннисене вӑратса ыйтрӗ.

Лешсем нимӗн те пӗлмеҫҫӗ иккен.

— Эх, мӑнтарӑн ачи, каллех ӗне шырама тухса чупрӗ пуль ӗнтӗ,— терӗ те асламӑшӗ, ахлата-ахлата пӳртелле кӗрсе кайрӗ.

Таруҫ вара пусма айӗнчен тухрӗ те пӳрте кӗрсе асламӑшне лӑплантарасси ҫинчен шухӑшларӗ. Анчах та, ашшӗпе амӑшӗ халех таврӑнасран хӑраса, чарӑнса тӑчӗ.

— Ҫук, юрамасть, чӑтас пулать...

Вара вӑл пусмасӑр-мӗнсӗрех кӗлет маччи ҫине хӑпарса выртрӗ. Кунта ӑна никам та шыраса тупас ҫук. Выртма та мелле. Ав, хӑма хушӑкӗсенчен ирхи хӗвелӗн ҫутӑ пайӑркисем сӑрхӑнса кӗреҫҫӗ.

Мӗн тумалла-ха ӗнтӗ унӑн? Эх, ӑҫта та пулин аякарах тармалли вырӑн пулсанччӗ!.. Хулара вӗсен Евсей куккӑшӗ пурӑнать, анчах Таруҫ вӑл ӑҫта ӗҫленине те, хӑш урамра пурӑннине те пӗлмест. Унта вӑл пӗрре те кайса курман.

Хӗвел самаях ҫӳле хӑпарсан, ашшӗпе амӑшӗ тавӑрӑнчӗҫ. Таруҫ йӑмӑкӗсем те вӑранса пӳртрен тухнӑччӗ ӗнтӗ. Ашшӗ кӗлет умне ларса: «Эх-ха-хай! Ӗнесӗр хӑварчӗ пире Таруҫ!» — терӗ те, ассӑн сывласа, хуйхӑрчӗ. Ҫакна илтсен, Таруҫ куҫӗсенчен татах куҫҫулли шӑпӑртатрӗ.

— Ачи хӑй ӑҫта тата, куҫа та курӑнмасть? — ыйтрӗ амӑшӗ.

— Ара, эсир ӑна тӗл пулмарӑр-и? Вӑл иртенпех ҫук паян, ӗне шырама тухса кайнӑ пулмалла,— терӗ асламӑшӗ.

— Шыратӑр, шыратӑр... Такӑнса ӳкичченех шыратӑр! — терӗ ашшӗ ҫилӗпе.

Таруҫ хӑйӗн ашшӗ ҫав тери тарӑхнине ӑнланса илчӗ. «Ун куҫӗ умне пулсанах хӗнесе тӑкать вӑл мана... Сусӑрлатса та пӗтерӗ...» — шухӑшларӗ те вӑл чӗрӗп пек хутланса выртрӗ.

Ирхине апат ҫинӗ хыҫҫӑн Таруҫ ашшӗ, колхозра платник пулса ӗҫлекенскер, хул хушшине муртӑ хӗстерчӗ те килтен тухса кайрӗ.

— Ӑҫта ҫӳрет-ши-ха леш ухмахӗ? Инҫех кайнӑ-ши? Хӑй ан ҫухалтӑр тата! — амӑшӗ кулянарах калаҫнине илтрӗ Таруҫ.

— Килет пулӗ-ха, таҫтах каймӗ,— терӗ асламӑшӗ.

Амӑшӗ те кӗреҫе йӑтса колхоз пахчине ӗҫлеме тухса кайрӗ. Йӑмӑкӗсем асламӑшӗ хушнипе картишне шӑлма тытӑнчӗҫ. Таруҫ вӗсене ӑмсанса пӑхса выртрӗ. Вӗсем нимӗн хуйхи-суйхи тӗлне те пӗлмеҫҫӗ... Таруҫ ҫын куҫ умне курӑнма та пултараймасть, мӗншӗн тесен вӑл айӑплӑ, телейсӗр, мӗскӗн...

Ҫапла асапланса выртсан-выртсан, Таруҫ сисмесӗрех ҫывӑрса кайнӑ. Хӑй мӗн чухлӗ ҫывӑрнине пӗлмерӗ вӑл, шӑнса хытнипе вӑранса кайрӗ. Унӑн тем пекех ҫиесси килчӗ, анчах кӗлет маччи ҫинчен анма халӗ те хӑрарӗ-ха. Чӑнах та, пӳртрен ашшӗпе амӑшӗ, вӗсем хыҫҫӑн асламӑшӗ ҫав тери кӑмӑлсӑр калаҫса тухрӗҫ.

— Çапса пăрахмалла ку ачана пĕреххутчен! Пĕр инкекĕ пулни çитмест, тата уншăн хăйшĕн шухăшласа тăнран тухас пулать. Аçта сĕтĕрĕнсе çӳрет-ши, каттăршнăй! — терĕ ашшĕ çав тери тарăхса.

— Инкек çине синкек ан пултăрччĕ... Ним шутлама та пĕлместĕп ĕнтĕ. Ялта çитмен вырăн та хăвармарăм. Учительница патне кайман-ши? — терĕ амăшĕ.

— Тĕрĕс, кайса пăх-ха хăвăртрах! Эпĕ вăрман еннелле çаврăнса килем.

— Эх, турăçăм, кам ылханĕ çитрĕ-ши пире,— пĕчченех мăкăртатса юлчĕ асламăшĕ. Вăл кĕлет умне ларчĕ те макăрма тытăнчĕ. Таруç ăна çав тери хĕрхенчĕ.

— Асанне,— терĕ вăл шăппăн, кĕлет маччи çинчен аялалла пăхса.

— Ай тур-тур! Таруç, эсĕ-и ку? — сиксе тăчĕ асламăшĕ.

— Асанне, мана пĕр татăк çăкăр килсе пар-ха!

— Аçта эсĕ? Тух-ха куç умне, ачам!

— Эсĕ никама та ан кала, асанне. Эп кунта, кĕлет тăрринче. Ансан, хĕнеççĕ вĕсем мана.

— Никам та тивмест сана, ан хăвăртрах! Аçупа аннӳ те сана шыраса хăшкăлчĕç ĕнтĕ.

Вăл васкасах урама тухрĕ те ывăлĕпе кинне каялла таврăнма чĕнчĕ.

«Хуть те тем туччăр ĕнтĕ... маншăн пурĕпĕрех»,— шухăшларĕ Таруç, кĕлет маччи çинчен майĕпен анса.

Ашшĕпе амăшĕ хăйсен аслă хĕрачине хĕнемерĕç те, ятламарĕç те. Таруç питĕ тĕлĕнчĕ.

— Юрать-ха, тупăнчĕ, кĕçех чĕре çурăлса каять пуль тесеттĕм,— мăкăртатрĕ ашшĕ.

Таруçăн чунĕ çавах лăпланмарĕ. Темскер çитмест ăна, кичем, тунсăх! Вăл йăмăкĕсемпе пĕрле шыва кĕме те каймарĕ. Çук, савăнса çӳреме пултараймасть вăл халь... Каç пулсан çеç йăпăртлăха хăйсен тĕлне урама тухрĕ.

Каçхи сулхăн пĕтĕм тавралăха сарăлса канлĕх кӳ-

рет. Анчах Таруçа пурпĕрех канлĕ мар. Ав, вĕсен тĕлĕпе ачасем хăйсен ĕнисене хăваласа иртрĕç, каллех çитерме каяççĕ. Таруç вĕсене салхуллăн пăхса юлчĕ. Унтан чăтса тăраймарĕ, ансăр сукмакпа çырма урлă каçса уялла тухрĕ, вăрманти уçланкăна çитрĕ. Кунта çав тери илемлĕ. Лапамран таса çăлкуç юхса тăрать.

Таруç уçланкăри чечексене таткаларĕ те çав çăлкуç умне пычĕ, чечекĕсене шывпа чӳхерĕ.

Шăп çав вăхăтра таçта инçетре те мар пăру макăрнă сасă илтĕнчĕ. Кăшт тăхтасан сайра йывăçсем хушшинчен пăру кĕтĕвĕ тухрĕ. Вĕсене Кĕтерин инке çĕр каçма фермăна хăваласа таврăнать иккен. Таруç кĕтĕве вар пуçĕнчен тӳррĕн илсе тухма пулăшрĕ. Ял вĕçĕнче ферма çурчĕсем курăнсанах, пăрусем, ниçта пăрăнмасăр, хăйсемех анлă картишне пырса кĕчĕç.

— Кил тĕлне лайăх пĕлеççĕ вĕсем, анчах уçă сывлăшран ниепле те таврăнасшăн мар,— терĕ Кĕтерин инке.

— Пирĕн Юлипе Елюк пекех эппин, вĕсем вара каç пулсан та киле кĕресшĕн мар,— терĕ Таруç.

— Ара, кусем те ача-пăчасем вĕт, çавăн пекех ĕнтĕ...

Тепĕр кунне Таруç татах çăлкуç патне тухрĕ. Кĕтерин инке паян та пăрусемпе çакăнтах çӳрет иккен.

— Кĕтерин инке, сана пĕччен кичем мар-и? — ыйтрĕ Таруç.

— Çук! Ăçтан кичем пултăр? Пăх-ха вĕсем çине, ытармалла мар-иç! — терĕ Кĕтерин инке, пĕр пăрăвне ачашласа.

— Чăнах та хитре çав,— килĕшрĕ Таруç.

Каçхине Таруç амăшĕ фермăран пĕр чăм сĕт илсе таврăнчĕ.

— Текех ĕне усрамастпăр та пулĕ. Унпа чăрмавĕ нумай, канлĕх çук. Колхозра халь лайăх ĕçлекенсене ĕçкунĕ шучĕпе сĕт хуть те мĕн чухлĕ параççĕ,— терĕ вăл.

Анчах Таруç ун пек шухăшламасть. Вăл сĕчĕшĕн те кулянмасть, ĕнесĕр пурăнма кичем пек туйăнать. Эх, ĕни пулнă пулсан, халь вăл ăна çĕрĕн-кунĕн çитерме çӳрĕччĕ!..

Пĕр-икĕ кун иртсен, Таруç каллех çăлкуç патне пăрусем курма тухрĕ. Вăл кĕтӳ çӳренĕ çĕре пырсанах унта çĕнĕ ула пăру хутшăннине асăрхарĕ. Пăру хăйĕн пĕчĕк урисемпе тăпăл-тăпăл сиккелесе илет, чупкаласа çаврăнкалать, пирвайхи хут уçă сывлăша тухнăшăн çав тери савăннă пулас.

Таруç чăтса тăраймарĕ, ăна астарма, ачашлама тытăнчĕ.

— Ку тата мĕн ятлă, Кĕтерин инке?

— Ятлă пулмалăх пурăнман-ха вăл, темĕнле чĕнсен те ăнланмасть халь,— терĕ Кĕтерин инке.

— Ăна эсир Уланкă тесе ят парăр...

— Тĕрĕс, ку ят уншăн килĕшӳллĕ пулать,— терĕ Кĕтерин инке.— Список çине çаплах çырса хурас-ха.

Çав вăхăтра уя ферма пуçлăхĕ Михеев, хĕрĕхсене çитнĕ усăк уссиллĕ çын, пырса тухрĕ. Темиçе çул каярах, колхоз пĕчĕкрех чухне, вăл председательччĕ, халь ферма ĕçне пĕлсе, тĕплĕн туса пырать.

— Эсĕ, Кĕтерин инке, хăвна пулăшма юлташ тупрăн-и çак? Эп сана кун çинчен тахçанах каланăччĕ,— терĕ вăл.

— Килĕшекенсемех пулмарĕç-ха... Акă, мана Таруç питĕ лайăх пулăшать, анчах хăй кăшт çамрăкрах-ха çав,— терĕ Кĕтерин инке, куляннă пек пулса.

— Çамрăкки-мĕнĕ... Пултарать пулсан — ĕçлетĕр! Çу каçа ĕçлемелĕх пур. Кĕркунне эпир ăна шкула каймa чăрмантарса тăрас çук. Ачи хăй килĕшет-и-ха?

— Килĕшетĕп. Мана килтисем те чармаççĕ,— терĕ Таруç.

— Апла, сан ятна çырсах хуратăп, фермăра ĕçлекенсен шутĕнчех пулăн. Асту, ирхине ирех тăрас пулать вара.

— Эпĕ асанне пĕрре чĕнсенех сиксе тăратăп.

— Маттур эппин.

— Пит аван пулать. Ачи ман пекех, пăрусене питĕ юрататъ,— терĕ Кĕтерин инке, Таруçа пуçĕнчен шăлса илсе.— Иксĕмĕр килĕштерсе ĕçлĕпĕр.

Таруç киле калама çук савăнса таврăнчĕ. Вăл ытти чухнехи пек мар хаваслă пулнине килтисем тӳрех асăрхарĕç.

— Тем тупнă ку ача, йăл та йăл кулать кăна,— терĕ асламăшĕ.

— Тупнăшăн çеç савăнаççĕ-им? Эпĕ ĕçлеме кĕтĕм, фермăна, пăрусем пăхма,— терĕ Таруç.

Вăл халь кăна ферма пуçлăхĕпе тĕл пулни çинчен каласа пачĕ.

— Ĕçе пуçăнни — ырă япала! Урамра йытă хăвалаеа çӳрени мар,— терĕ ашшĕ.

— Пурĕпĕрех, хампа пĕрле пахчара ĕçлеттерме тытăнас тесеттĕм. Эппин, унта та юрать, ан ӳркен çеç,— терĕ амăшĕ.

— Тинех хăвăн сукмаку çине тухатăн ĕнтĕ, ачам! Çав сукмакран унталла-кунталла ан пăрăн вара,—терĕ асламăшĕ.

...Кашни ир Таруç фермăналла утать. Васкаса, вăл яланах пахча витĕр тухать те çырма урлă тӳрĕрен чупса каçать. Ялан пĕр çулпа утнăран, унăн фермăна çӳремелли хăйĕн сукмакĕ пулса тăчĕ. Ку сукмакпа унсăр пуçне урăх никам та ниçта та каймасть. Çакă вăл, чăн та, асламăшĕ урăх çĕрелле пăрăнма хушман пĕртен-пĕр сукмак пекех туйăнать Таруçа.

Ирхи хĕвел çутçанталăка ерипен ăшăтма пуçлать. Ял хушшинче тĕрлĕ-тĕрлĕ сасăллă автансем пĕр-пĕринпе ăмăртнă пек авăтаççĕ. Часах колхозниксене ĕçе йыхăрса рельс татăкне çапнă сасă янраса каять. Ял вăранать, ĕçе тытăнать...

Таруç чăн малтан хăйне уйăрса панă пăрусене витерен кăларать те кашнине мăн турапа тураса таса-

тать. Унҫан ферма картишĕн хапхине уҫать, вара пăрусем хăйсемех улăхалла тухаҫҫĕ. Вĕсене вăл чи лайăх курăклă вырăнсенче ҫитерсе ҫӳрет. Кăнтăрла ҫитсен, ҫăлкуҫĕнчен витрепе ăсса, кашнине уйрăммăн шăварать. Ҫав тери тăрăшса, пĕтĕм чунне парса пăхать пăрусене Таруҫ, унăн вĕсене епле те пулсан хăвăртрах ӳстерес килет.

Кĕркунне, шкула каймалли вăхăт ҫитсен, ирĕксĕрех пăрусенчен уйрăлмалла пулчĕ. Анчах пĕрре хăнăхнă ĕҫе пурĕпĕрех манаймарĕ вăл, кашни кун тенĕ пекех фермăна пырса Кĕтерин инкене пулăшрĕ. Ҫăва тухсан вара каллех унта ĕҫлеме тытăнчĕ.

Ялти шкулта сакăр ҫул вĕренсе тухнă хыҫҫăн Таруҫ яланлăхах фермăна ĕҫлеме кĕчĕ. Ҫав ҫулах тата, выльăх-чĕрлĕх йышĕ ӳссе кайнă май, правлени хăшпĕр выльăхсене Атăл леш енче усрама йышăнчĕ. Таруҫ хĕл каҫнă пăрусене ҫăвĕпех йăлăмра пăхса пурăнма килĕшрĕ. Кĕтерин инке, ачисем пĕчĕкреххипе, йăлăма пыраймарĕ, хăй вырăнне ытла ватах мар амăшне ячĕ.

— Таруҫпа шанчăклă, ним хăрамалли те ҫук. Эсĕ ăна апат пĕҫерсе параканни пул, выльăхсене вăл хăех пăхать,— терĕ Кĕтерин инке амăшне.

Чăн та, ҫавăн пекех пурăнма тытăнчĕҫ вара вĕсем. Кăнтăрла, шăрăх вăхăтра, кинемей ытларах ҫĕрпӳртре ларать. Ҫĕрле вара вăл картана хупнă пăрусене хуралласть.

Ҫĕр иртет те, каллех ир пулать. Анатран, Атăл хыҫĕнчен, хĕвелтухăҫĕ ҫуталса килет. Ылтăн хĕвел пуҫне кăларсанах йăлăм ҫине йăлтăркка шевлесем ӳкеҫҫĕ.

Ҫĕрĕпе каннă, хырăмĕсем выҫнă пăрусем вăрман хĕрринчи уҫланкăра сывлăмлă курăка ҫăвар туллин ҫиеҫҫĕ. Таруҫ хĕвел ăшши ӳкнĕ чи ҫӳллĕ вырăнта тăрать. Кунтан ăна талккишпе сарăлса выртакан ешĕл йăлăм та, кĕмĕл тĕслĕ Атăл та лайăх курăнать.

Ав, анатран шурă пăрахут хăпарать. Ун ҫинчен музыка янраса, ирхи уҫă сывлăшра таҫта ҫитиех сарă-

лать. Çав илемлĕ музыкăна Таруçа хавхалантарма янратаççĕ тейĕн...

Кăнтăрла çитсен, Таруç кĕтĕве Атăлăн пĕчĕк юппи патне шăварма илсе анать. Пăрусем ĕçнĕ май шыва кĕрсех каяççĕ. Вĕсемпе пĕрле Таруç хăй те кĕрет, вара пăрусене кашнине тăр шывпа çуса ярать. Унтан пăрусем хăйсемех сулхăн вырăна кайса выртаççĕ.

Каçхине Таруç пысăкрах тынасене çиллисене турткаласа пăхать. Куна вăл ӳлĕмрен доярка пулма вĕренес ĕмĕтпе тăвать. Тепĕр енчен, кун пек тунипе тынасем малтантарах сĕт антарма хăнăхаççĕ.

Çуллахи кунсем вăрăм, анчах та Таруç вăхăт иртнине сиссе те юлаймасть. Кун хыççăн кун, эрне, уйăх... Çаплах çу та иртсе каять. Кĕркунне вĕсене каялла колхоза илсе каçрĕç. Çу каçипе ирĕкре ӳснĕ пăрусем питĕ тĕрекленсе кайрĕç. Çавăнпа та, колхоза таврăнсанах, пăру фермине дояркăсем пырса тулчĕç.

— Эпир суйлама килтĕмĕр,— терĕ вăрăм Укçини.

— Мĕн суйлама? — тĕлĕнсе ыйтрĕ Таруç.

— Хамăра валли ĕнесем суйласа илетпĕр. Михеев хăй çапла хушрĕ.

Чăнах та суйлама тытăнчĕç хайхискерсем. Таруç вĕсем çине пăхса тăчĕ-тăчĕ те хăй те пăрусем хушшине чупса кĕрсе кайрĕ.

— Эсир тăхтăр-ха, аппасем! Сирĕнтен малтан эпĕ хама валли суйласа илетĕп! — терĕ вăл.

Пурте ун çине тĕлĕнсе пăхрĕç.

— Эсĕ мĕн тăватăн вĕсемпе?

— Мĕнле мĕн тăватăн? Сăватăп!

Дояркăсем кулсах ячĕç. Михеев вĕсем çине çиллессĕн пăхсан çеç шăпланчĕç.

— Кунта кулмалли нимĕн те çук. Таруç маттур хĕрача, вăл лайăх доярка пулма пултарать,—терĕ вăл.

Вара Таруç, хăй юратнă пăрусене суйласа илсе, ĕне фермине куçарчĕ. Урăх ĕнесем те хушса пачĕç ăна. Акă ĕнтĕ Уланкă та ун патне таврăнчĕ.

Çав тери хастарланса ĕçе тытăнчĕ Таруç. Ĕнесем тăракан вырăнсене хырса тасатрĕ, хăйсене тураса якатрĕ. Кашнин умне пĕр тан апат парса тухрĕ. Унтан сумаллисене сума тытăнчĕ. Анчах мĕншĕн-ха сĕтне питĕ сахал параççĕ ĕнисем? Сĕт суса илесси çăмăл ĕçех мар иккен... Çитменнине тата, пĕр ĕни Таруçа тапсах ячĕ. Вара Таруç нимĕн тума аптранипе ытти дояркăсем сунине пăхса çӳрерĕ. Лисук аппа çакна ăнланса илчĕ те ăна сума вĕрентме тытăнчĕ, мĕнле пуçламаллине, алсемпе еплерех тытмаллине ăнлантарса пачĕ.

— Чĕччисене эсĕ пĕтĕм чышкăпа чăмărта, унтан пӳрнисемпе хĕссе, вĕçнелле шутар,— терĕ.

Таруç каллех хăй ĕнисем патне таврăнчĕ те, тепĕр хут сума ларчĕ. Хальхинче ĕç чиперех пула пуçларĕ. Шурă сĕт вĕçĕмсĕр юхать, часах витре те тулать.

Тепĕр кунне унпа Михеев калаçрĕ.

— Мĕнле пек, сума вăй çитет-и? — ыйтрĕ вăл.

— Çитет! — терĕ Таруç.

Лисук аппа вĕрентнисене Таруç яланах асра тытрĕ. Ытти дояркăсем мĕнле ĕçленине сăнаса пычĕ, хăйĕн ĕçĕнче мĕнле те пулин йăнăш тăвас мар тесе тăрăшрĕ.

Ĕçе лайăх вĕренсе çитсен тин вăл хăйне хăй чăн-чăн доярка тесе шутлама тытăнчĕ. Вăл суса илнĕ сĕтпе миçе çын тутă пулма пултарать! Апла эппин, вăл та халăха усă кӳрет! Çавăнпа та Таруç питĕ телейлĕ...

...Кашни ирех Таруç такăр сукмакпа фермăна васкать. Çак сукмак ăна пурнăçăн аслă çулĕ çине илсе тухатех!

УРОК ПУÇЛАНЧĔ

Паян шкула кăшт каярах юлса пынă Олег класа кĕрсенех ачасем тăрук шавласа кайрĕç. Кулма, палкама тытăнчĕç:

— Ак хайхи, хăй çитрĕ!

— Тинех килчĕ пирĕн паттăр!

— Расланов-арăслан, кур-ха хăвна! Ха-ха-ха!

Олег, алăк патĕнчех чарăнса тăрса, ним ăнланмасăр ыйтрĕ:

— Ма кулатӑр? Мӗн курмалла манӑн?..

— Ав, стена хаҫачӗ ҫине тинкер! — кӑшкӑрчӗҫ иккӗн-виҫҫӗн.

Мал енчи стена ҫинче, полушарисен карттипе юнашар, класра кӑларакан стена хаҫачӗн ҫӗнӗ номерӗ ҫакӑнса тӑрать иккен.

Олег ун умне пырса тӑчӗ те пысӑк саспаллисемпе ҫырнине вуларӗ: «Расланов арӑслан пулма тӑрӑшать»...

Ун ҫинчен ҫырнӑ! Ӑна урамри хулиган, тенӗ, вӑл хӗрачасене юри тарӑхтарса ҫӳрет, пӗчӗкреххисене юр ҫинче йӑвантарать, час-часах макӑртать иккен, ун пек ашкӑнакан ача пионер галстукне ҫыхса ҫӳреме те тивӗҫсӗр... Заметка айне иккӗн ал пуснӑ: Д. Верхова, Н. Тискова.

Олегӑн пӗтӗм пит-куҫӗ пӗҫерсе кайрӗ. Ара, мӑшкӑлиҫ ку!

Ачасем ун ҫине пӑхса лӑх-лӑх кулчӗҫ.

— Ну, мӗнле пек, Раслан-арӑслан? Лайӑх ҫырнӑ вӗт?

— Ытараймасӑр, тепре вула-ха!

Олег тӳрех хыҫаларахри парта хушшинче ларакан Дина Верховӑпа Нина Тискова патне пырса кӑшкӑрчӗ:

— Элекҫӗсем! Йӗпӗлтисем! Акӑ, ҫакна курнӑ-и эсир? — Вӑл сылтӑм чышкине кӑтартрӗ.

— Нимӗнле элекҫӗсем те мар эпир! Тӗрӗссине ҫырнӑ! — терӗ ӑна хирӗҫ Дина.

— Ан юна, эпир хӑракан йышшисем мар! — хушса хучӗ Нина.

— Мана мар, сире хӑвӑра пионертан кӑлармалла! Ну, курӑпӑр-ха малашне! Сирӗн пек йӗпе сӑмсасене пӑхӑнса пурӑнас ҫук!

Самантранах Олег каялла ҫаврӑнса пат! пат! утса кайрӗ те, пурин умӗнчех стена хаҫатне туртса антарчӗ, ӑна лутӑркаса урайне пӑрахрӗ. Унтан хӑйӗн портфельне илчӗ те класран чупсах тухрӗ.

— Ай-уй!.. Мĕн хăтланать ку ача? Ухмаха ернĕ пуль?..— тĕлĕнчĕç ачасем.

* * *

Пăлханса тарăхса кайнă Олег шкул картишĕнчен тухмалли хапха еннелле мар, пахча хыçнелле чупрĕ. Кунта питĕ лăпкă вырăн. Тарăнах мар çырма урлă каçсанах ялти пек урам тăсăлса каять. Икĕ енĕпе йывăç çуртсем лараççĕ. Машинăсем те сайра-хутра çеç тĕл пулкалаççĕ. Шăв-шав çук.

Çапах та ача ниепле те лăпланаймарĕ-ха. Эппин, унăн пĕр юлташ та çук? Пурте ăна хирĕç, пурте унран кулаççĕ! Динипе Нина хăйсем чарусăр ашкăнакан хĕрачасем! Ăна пурте пĕлеççĕ. Пĕркун Олег хăй курчĕ: «Кунта ухмах Иван пурăнать!» тесе çырса хучĕç вĕсем Иван Даниловăн алăкĕ çине... Тупăннă примерлă пионеркăсем! Олегран хăйĕнчен те час-часах кулаççĕ вĕсем: «Олег, мекек! Раслан-арăслан!..

Пĕррехинче, каç пулсанах, Олег çак икĕ хĕрачапа урамра тĕл пулчĕ. Виççĕшĕ выляма тытăнчĕç. Олег вĕсене тарăн юр çине ўкерсе йăвалантарчĕ. Çилĕпе мар, ахалех. Шăп çав вăхăтра, таçтан-çке, Дина амăшĕ пырса тухрĕ те Олега тĕмтепĕр каласа вăрçма тытăнчĕ. Паллах, Олег та парăнмарĕ. «Спекулянтка!» — тесе хучĕ вăл ăна, тарăхнипе. Ун çинчен çынсем картишĕнче калаçнине пĕрре мар илтнĕ-çке: пĕрмаях тĕрлĕ япала илет-сутать, илет-сутать, теççĕ-ха. Çавăн пек тўрĕ сăмахшăн çиленнĕ те ĕнтĕ Дина Олега, çавăншăнах тавăрнă...

Вăрахчен шухăшласа çўресен, Олег хăйсен килĕ еннеллех утрĕ. Ку вăхăтра килте никамах та пулмалла мар-ха. Ашшĕ те, амăшĕ те ĕçре, йăмăкĕсем ачасен садĕнче.

Хваттере хăй çумĕнчи уççипе уçса кĕчĕ. Портфельне коридорти пĕр кĕтесе пăрахрĕ. Тепĕр хут тухса почта ещĕкĕнчен хаçатсем кăларса илчĕ. Хаçатсемпе пĕрле

ещёкрен темёнле пёчёк хут татки сиксе тухрё-ха тата... Мён-ши ку? «Расланову Борису Петровичу» тенё. Ку унăн ашшё патне янă çыру. Ним шутласа тăмасăрах Олег ăна уçса вуларё. Класс руководителё Олег ашшёне паянах шкула пыма хушнă. «Питё васкавлă калаçу пур»,— тенё.

Мёншён чённи, мён çинчен калаçасси паллă ёнтё! Олег пирки, вăл стена хаçатне çурса тухса кайни çинчен пулать сăмах... Ай-ай, питё хăвăрт ёçлеççё! Олег тухса кайнă хыççăнах дежурная чуптарнă пуль. Олега ятлаççё ёнтё. Сўтсе яваççё, айăплаççё... Тен, шкултан та кăларса ярёç?

Тем тёрлё те шухăшласа, арçын ача чўрече витёр тулалла пăхса тăчё. Урам кёрлет кăна — çăмăл машинсем, автобуссем, троллейбуссем чупаççё. Çуран утакансем те нумай, таçта васкаççё. Пурин те ёç пур ёнтё. Олег кăна пёччен, ним тёлсёр тăрать...

— Тепре тесен, тухатăп та таратăп акă килтен! Аçта тарас? Яла, кукамай патне! Шкул унта та пур; унта та пирён пек ачасемех вёренеççё,— тăрук тёлёнмелле шухăш пырса кёчё ача пуçне.

Вăл çавăнтах ашшёне шкула пыма чёнсе çырнă хута çурса карçинккана пăрахрё, сётел ещёкне уçса виçё тенкё укçа илчё. Ку таранччен Олег амăшёнчен ыйтмасăр пёр пус та тытман. Çавăнпа та, пăлханнипе, ун алли те чётреме тытăнчё. Нимён тума та çук, каяс пулсан билет валли укçи кирлех! Амăшне хисеплет Олег, ăна кулянтарма шутламасть. Тетрадьрен пёр листине татса илсе хăвăрт çырчё:

«Аннеçём! Эпё виçё тенкё укçа илтём. Çак самантра питё кирлё пулчё. Мёншённе халь калама пултараймастăп. Ман пирки ан пăшăрхан, эп айăпа та кёмен, кёрес те çук...»

Çак кёске çырăва вăл сётел ещёкнех, укçапа пёрле хучё.

Унтан, питё хыпаланса, шкула çўремелли тумне

хывса çакрĕ, ăшă кĕпе-йĕм, резин тĕплĕ пушмак тăхăнчĕ те урама тухрĕ. Темиçе самантранах анатран хăпарнă троллейбуса кĕрсе ларчĕ... Автовокзала çитсен, сиксе анчĕ.

Кунта çула тухма хатĕрленнĕ автобуссем тем чухлех тăраççĕ. Олег пăхкаласа çӳрерĕ те хăйне кирлине тупрĕ. Васкасах кассăна кайса билет илчĕ те хайхи автобус патне таврăнчĕ. Вăл кĕрсе ларнă чух машинăра пассажирсем туллиехчĕ, шоферĕ те вырăнтах. Шăп мотор кĕрлеме тытăннă самантра мал енчен темле арçын шлепкипе сула-сула кабина умне чупса çитрĕ. Вăл питĕ çине тăрса ыйтрĕ пулас: шофер, автобус алăкĕсене тепĕр хут уçса, хăй те кабинăран тухрĕ. Шлепкеллĕ çынпа иккĕшĕ вĕсем пĕр ватă инвалида автобуса кĕме пулăшрĕç. Пурте ун çине пăхрĕç: кăвак сухаллă, начарккарах пит-куçлă пĕчĕкрех старик çӳллĕ çухави пек курăнакан сăран корсет тăхăннă. Хăй мăйне унталла-кунталла пăраймасть та иккен, кирлĕ пулсан пĕтĕм кĕлеткипе пăрănать.

— Ура çинче тăрса пыма йывăр-ха ват çынна, ăçта вырнаçтарас-ши ăна? — шофер, автобуса кĕрсенех, ун-кун пăхса илчĕ.

— Ак, ман вырăна лартăр, эп тăрсах пыма пултаратăп,— терĕ Олег, хăйĕн чи малти вырăнĕнчен сиксе тăрса.

— Ай, тавах сана ачам, тавах! — терĕ старике ăсатма килнĕ çын.

Вара старике Олег вырăнне лартрĕç.

— Ачам, пĕреххут санах ӳкĕтлем-ха эппин. Эсĕ çул çинче те пулăшкалама пултармăн-ши çак мучие? — Олег куçĕнчен пăхса ыйтрĕ старике ăсатаканни.

— Пултарнă таран пулăшăп,— тӳрех килĕшрĕ арçын ача, хăйне мăн çын вырăнне хурсах калаçнăшăн хавасланса. Олег çӳллĕрех те патвартарах... Çавăнпа аслăрах ача теме те пулать.

— Ой, тата тепĕр хут тавтапуç сана! Ку мучи вăл

вăрçă инваличĕ, ăна пĕччен çӳреме йывăр-çке! Хулана комиссине килнĕ вăл, пĕччен ех. Эпĕ хам инвалидсене пулăшу паракан учреждени сотрудникĕ кăна, автобус çине те пулин лартса ярас, терĕмĕр. Эппин, пулăш-ха, ан пăрах ăна!

— Юрĕ, йăлтах ăнлантăм...

— Чипер çитмелле пултăр эппин сирĕн!

Автобус кĕр-р! кĕрлесе вырăнтан хускалчĕ те çатма пек тикĕс урампа пырса хуларан ыткăнса тухрĕ. Çав самантра автобусра радио юрласа ячĕ.

Олег халь ĕнтĕ лăпланчĕ, паян мĕн пулса иртни çинчен шухăшламарĕ. Вăл, çул çинче ытларах курса пырас тесе, пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçрĕ, чӳрече витĕр кармашсах пăхрĕ.

— Эй, ачам! Эсĕ старике асту-ха, ӳкет акă! — терĕ хыçалтарахра ларакан хĕрарăм сасартăк.

Чăнах та, ват çын тĕлĕрсе кайнипе пĕр еннелле тайăлнă иккен. Ăнсăртран ӳкме те пултарать. Олег васкасах ун çумне пырса ларчĕ те ăна хăйĕн хулпуççийĕ çинелле тайăнтарчĕ. Чылай хушă çапла ларса пымалла пулчĕ унăн вара, инвалид вăраниччен ех тӳссе пычĕ вăл.

— Эккей, çывăрсах кайнă-çке эпĕ, ватсупнă! Ма вăратмарăн! Йывăр пулчĕ пуль капла, мана тĕкĕлесе пыма? — терĕ старик, пĕр çур сехетрен вăрансан.

— Çу-ук, йывăр пулман мана,— терĕ Олег, ывăннă хулпуççине сăтăркаласа.— Сана канлĕрех пултăр, терĕм...

— Питĕ ăслă ача иккен эсĕ, тавтапуçах сана!

— Мĕнех тав тумалли пур уншăн...

Автобус район центрне шăп кăнтăрла çитсе чарăнчĕ. Пассажирсем пурте хăвăрт тухса пĕтрĕç, анчах Олег инвалида халь те пăрахса хăвармарĕ, ăна автобус çинчен анма пулăшрĕ.

— Тен, сана, мучи, киле çитиех ăсатса ярас? Ăçтарах санăн килӳ? — ыйтрĕ вăл старикрен...

— Манăн кил кунта мар çав, татах каймалла-ха,— терĕ лешĕ.

— Ăçта вара сан кил?

— Кишек тенине илтнĕ-и эсĕ? Çавăнта пурăнатăп.

— Аван апла пулсан! Манăн шăпах Кишек урлă каймалла. Каллех пĕрле кайма пултаратпăр. Халех пĕлсе килетĕп, билетсем сутаççĕ-и?

— Анчах манăн кунта та ĕç пур-ха, ачам. Пенси пиркиех районри пĕр кантура кĕрсе тухмалла. Собес, теççĕ... Çавăнта кĕмелле.

— Атя, эппин, малтан унта каяр. Кайран автобус çине ларатпăр та — малалла кĕрлеттеретпĕр...

— Тем пекчĕ, ачам... Анчах эс васкамастăн-и-ха? Сана чăрмантарма та лайăх мар!

— Васкамастăп, вăхăт пур манăн!

Олег пĕр аллипе старикĕн сумкине йăтрĕ, тепринпе ăна хул айĕнчен тытрĕ. Вара вĕсем урам урлă каçрĕç те, хăма сарнă тротуар тăрăх утса кайса, тепĕр вунă минутран икĕ хутлă йывăç çурт тĕлне çитсе чарăнчĕç.

— Çакăнта-ха вăл, мана кирлĕ кантур,— терĕ старик.— Анчах малтан, сывлăш çавăрмаллăх, ларса канар мар-и?

— Юрать ара,— килĕшрĕ Олег.

Вĕсем çурт умĕнчи хыçлă тенкел çине юнашар ларчĕç. Вĕсен тĕлĕпе унталла та кунталла çынсем иртсе çӳреççĕ.

— Эсĕ, ачам, мĕн ятлă çак? — ыйтрĕ старик,— пĕрле çӳретпĕр, хамăр пĕр-пĕрин ячĕсене те пĕлместпĕр.

Олег хăйĕн ятне каларĕ.

— Лайăх ят,— ун çине пăхса илчĕ ват çын.— Мана эсĕ Ехрем мучи, те. Ехрем Егорч Ехремов эпĕ...

Ача ун-кун пăхкаланине асăрхасан, старик ăна:

— Çапах та эс васкатăн пулас, ачам,— терĕ.— Эппин, каях, хăвăн çитмелли çĕре çит. Мана пулăшакан ыра çын, тен, татах тупăнĕ-ха.

— Çук, çук, Ехрем мучи,—терĕ ăна хирĕç Олег.—

Ара, пӗрлех каятпӑр терӗмӗр-иҫ?! Пӑрахмастӑп сана! Эпӗ пионер вӗт-ха, пирӗн, пионерсен, хуть те хӑҫан та ваттисене те, ӗттисене те пулӑшмалла!

— Юрӗ, эппин, апла пулсан...

Пӑртак тӑхтасан, Ехрем мучи хӑйне кирлӗ «кантура» кӗрсе кайрӗ, Олег урамрах ларса юлчӗ. Анчах нумай кӗтмелле пулмарӗ унӑн,— старик пӗр вунӑ-вунпилӗк минутранах тухрӗ. Хаваслӑ хӑй, кулкаласа та илчӗ:

— Ӑнӑҫлӑ пулчӗ-ха паянхи кун маншӑн! Мӗн тумаллине ытлашши чӑрмавсӑрах туса ҫитертӗм! Атя, ачам, халь столовӑя кӗрсе апат ҫисе тухар! Иртенпе ҫимен эпӗ. Санӑн та хырӑму выҫнӑ пуль-ха...

— Ҫук, мучи, эпӗ пӗртте выҫӑ мар. Эс кӗрсе ҫи, эп кӗтӗп сана,— терӗ Олег, хӑйӗн апат ҫимеллӗх укҫа ҫуккине аса илсе.

— Ан калаҫ кирлӗ мара, ачам! Мӗнле выҫӑ мар? Укҫа пур манӑн, тӑраниччен ҫиетпӗр. Пӗлетӗн-и эсӗ, малашне мана пенси икӗ хут ытларах пама пуҫлаҫҫӗ.

— Ҫавӑн пек туса пачӗҫ-и?

— Ийййя ҫав! Атя, кайрӑмӑр!

Хальхинче старик ачана хулӗнчен хӑй тытрӗ.

Столовӑйӗнче вӗсем тӑраниччен ҫирӗҫ: какай шӳрпи, ӑшаланӑ чӑх тукмакки, тутлӑ компот... Халь ӗнтӗ вӗсен вӑй та хутшӑнчӗ. Столовӑйран тухса автостанцие ҫитсен, каллех телей пулчӗ: унта Кишеке каякан автобус пур иккен!

— Чӑн та, пурнӑҫ ӑнсах пырать паян! — терӗ старик тулли кӑмӑлпа.— Пӗр чӑрмав та ҫук пирӗншӗн! Ларатпӑр та каятпӑр ак...

— Вӑл апла та-ха, анчах манӑн кӗҫӗр станцирех ҫӗр выртма тивет пуль,— терӗ Олег.— Ку автобус ман кукамайсен ялне ҫитмест иккен. Унта ҫитекенни ыран ирхине тин пулать... Расписани вуларӑм...

— Ак тата тамаша!—туйипе тӑк! тутарчӗ те Ехрем мучи, шухӑша кайнӑ пек пулчӗ.— Апла пулсан... Эпир

çапла тăвăпăр, тусăм,— терĕ унтан.— Халĕ Кишеке çити пĕрлех кайăпăр та эсĕ ман патра çĕр выртăн. Ыран ирхине шкул ачисемпе пĕрле ларса каятăн. Вĕсене унта çити кашни кунах машинăпа ăсатаççĕ.

— Аван мар ун пек, чăрмантаратăп сире,— терĕ Олег.

— Ан калаç кирлĕ мара, ывăлăм. Эсĕ маншăн яра куна ирттертĕн пулать те, ман вара хама ырă тăваканшăн кăшт та тăрăшмалла мар-им? Ан хирĕç, эп каланă пекех тăватпăр!

Кишек патне çывхарнă чух хĕвел те анса пытанчĕ. Çав енче вара хĕрлĕ хăмач пек сарлака йĕр палăрса çеç тăчĕ. Каярахран вăл та каçхи тĕксĕмпе хупланчĕ.

Малта çутăсем курăнса кайрĕç, кĕçех автобус яла кĕрсе чарăнчĕ те пушансах юлчĕ.

— Пит лайăх-çке, машини пире килех илсе çитерчĕ! — терĕ Ехрем мучи, автобусран тухсанах, тулли кăмăлпа.

Унччен те пулмарĕ, старикпе арçын ача умне хура сăхман тăхăннă карчăк пырса тухрĕ.

— Çитрĕн пулать, Ехрем?.. Сана кĕтни, сана кĕтни! Ма нумай пурăнтăн? — терĕ вăл, те кулянса, те савăнса...

— Эсĕ ху кайса пăх-ха, мĕнле унта, час пулать-и? Эпĕ хуть мĕн тумаллине йăлтах туса килтĕм! — терĕ мучи мăнкăмăллăн. Унтан Олег çине тĕллесе кăтартрĕ: — Пĕлетĕн-и, Акрунь, ак çак Олег ятлă ача кунĕпе манпа пĕрле çӳрерĕ, питĕ нумай пулăшрĕ. Мана пула вăл кĕçĕр кукамăшĕ патне те çитеймерĕ. Эс ăна паян хаклă хăнана йышăннă пекех хăнала...— Старик халь Олег еннелле çаврăнса калама тытăнчĕ: — Ку вăл ман аппа, Акрунь кинемей, те эсĕ ăна. Эпир икĕ ватă кăна пурăнатпăр. Унăн старикки вилчĕ, эпĕ те пĕлтĕр карчăксăр тăрса юлтăм. Çамрăксем унталла-кунталла саланса пĕтрĕç...

Ехрем мучин килĕ-çурчĕ питĕ тирпейлĕ иккен, пӳр-

тӗнче те таса, йӗркеллӗ. Пурин пекех электричество, радио.

Акрунь кинемей ҫитнӗ-ҫитмен вучах умӗнче тăрмашма тытăнчӗ, ҫăмарта ăшаларӗ, чăмпа кăвас кăларса лартрӗ. Ҫиесех килмен пулин те, Олег Ехрем мучипе пӗрле ҫырткаларӗ.

Кăшт калаҫса ларнă хыҫҫăн ăна алăк патӗнчи сарлака сак ҫине вырăн сарса ҫывăрма вырттарчӗҫ. Питӗ лайăх, канлӗ пулчӗ вырăнӗ. Часах тӗлӗрсе те кайрӗ вăл. Ват ҫынсем те нумаях лармарӗҫ курăнать, ҫывăрма выртрӗҫ. Анчах вăхăт нумай та иртмерӗ — тултан такам кӗпсӗртетсе кӗни илтӗнчӗ.

— Ман килес! — кăшкăрнă пекех каларӗ вăл кӗнӗкӗмен мăн сасăпа.— Мӗнле пурăнатăр?

— Эс ан янра-ха, Шамыков, пирӗн ҫывăракан пур,— терӗ Ехрем мучи.

— Тӗрӗссипе каласан, ҫавăнпа кӗрес терӗм те эпӗ, Ехрем Егорчă! Астăвăр, ҫап-ҫара тăрса ан юлăр. Ют ҫын вăл... ют ҫын!

— Чипер калаҫ, Шамыков, ман хăна ун йышши мар, шанчăклă! — терӗ мучи хаяртараххăн.

— Эсӗ ăҫтан пӗлме пултартăн ăна, Ехрем Егорчă? Малтан ун пеккисем пыл та ҫу! Анчах кайран... Ав, леш енчи Сахар Кӗркурине еплерех якатса кайрӗҫ! Малтан пӗр каччă ҫӗр выртма ыйтса кӗнӗ. Анчах ҫӗрле хăй теприне уҫса кӗртнӗ. Ирхине вара ҫынни те ҫук, япалисем те пăштик! Ак мӗнлерех камит пулса тухма пултарать, граждан-юлташсем!

— Лăпăртататăн кирлӗ мара! — ал сулчӗ мучи.

Ҫак сăмахсене пӗтӗмпех илтсе выртнă Олег йăпăр-япăр вырăн ҫинчен сиксе тăчӗ.

— Эсӗ... Эсӗ, мучи, ан пăшăрхан, эп мӗн... эп халех тухса каятăп,— терӗ вăл, пушмакне тăхăнма тытăнса.

— Ачам, ывăлăм, лăплан! Ку этем сăмаххисене хăлхана та ан чик! Эпӗ хам та итлеместӗп вăл ухма ха,— терӗ пăлханса кайнă старик.

— Çывăрах, ачам, çывăр, эпир çын çинчен нихçан та усал шутламастпăр,— терĕ Акрунь кинемей те.

— А эсĕ, Шамыков, ĕçсе супрăн пулсан, тухса кай кунтан халех, ан çӳре çынсене пăлхатса! Сан валли эрех хатĕрлесе лартман никам та!

— Эпĕ сире ырă тăвас тесе çеç килтĕм...— мăкăртатса илчĕ леш çынни.

— Кай, тухса кай, теççĕ сана!

— Эпĕ кайăп-ха, анчах асту, ӳкĕнмелле ан пултăр!

— Çитĕ! Эсех çынсене ырă сунас çук-ха, пĕлетпĕр!..

Ӳсĕр çын тайкаланса тухса кайрĕ. Старикпе карчăк татах темтепĕр каларĕç ун пирки. Анчах Олег та кайма хатĕрленсе ура çине тăчĕ.

— Чипер юлăр, эп каятăп...

Старик ăна хулĕнчен ярса тытрĕ.

— Ниçта та каймастăн çĕр хута! Çав ӳсĕр калаçнине пула çĕрле кăларса ямастăпах сана! Лар-ха, лăплан...

Олег вара старик çумне пырса ларчĕ. Ват çын ачана пуçĕнчен ачашласа илчĕ, ăшă сăмахсем каларĕ. Те кунĕпе чунĕ кӳтсе çӳренĕрен, те халь çав ӳсĕр çын кӳрентерсе хăварнăран — тӳсеймерĕ ача, унăн куççулĕсем шăпăртатса анчĕç.

— Ун пекех ан пăлхан-ха, ачам! Ӳсĕр çын сăмаххине хăлхана чикме те кирлĕ мар,— терĕ Акрунь кинемей те, ача умне пырса тăрса.— Ара, нимĕн те пулманçке! Макăрма сăлтавĕ те çук!

— Паллах, нимĕн те пулман,— терĕ мучи.

— Пулнă çав! Пулнă манăн! Эсир пĕлместĕр ăна!— тата ытларах нĕшĕклерĕ Олег.

— Мĕнех пулма пултарнă вара санăн? Каласа пар, эппин. Тем пулсан та, эпир никама та пĕлтерес çук. Тен, пулăшма та пултарăпăр сана? Пĕлетĕн-и, ăшри вутпа пурăнма йывăр. Ăна сӳнтерме тăрăшмалла. Анлантăн-и?

— Ăнлантăм...

Вара Олег мĕн пулса иртни çинчен ерипен кăна пĕ тĕмпех каласа пачĕ. Ват çынсем ăна тимлесех итлесе ларчĕç.

— Э, ку ара темех мар-иç, ача вăййи çеç,— терĕ Акрунь, Олег каласа пĕтерсен.

— Апла мар çав,— терĕ ăна хирĕç Ехрем мучи,— сана ку ача-пăча вăййи пек туйăнать, анчах Олегшăн ку вăйă мар. Çапах та, ку пăтăрмаха пĕтерме мĕн те пулин тăвас пулать санăн, ачам,— терĕ мучи.

— Нимĕн те тумастăп,— пуçне пăркаларĕ Олег.— Эп айăплă-и вара?

— Эсĕ, Олег, ман шутпа харăсах икĕ йăнăш тунă. Пĕри — хаçат çурса тăкни, тепри — килтен тухса тарни. Çак йăнăшсене санăн халех тӳрлетмелле.

. — Мĕнле... тӳрлетмелле?

— Акă мĕнле. Ыран ирех тăратăн та, пирвайхи автобуспах киле таврăнатăн. Килтисене, аçупа аннӳне лăплантаратăн. Унтан шкула каятăн. Стена хаçачĕшĕн вара пĕтĕм класс умĕнче каçару ыйтма тивет.

— Ахалех иртсе каять, ыйтмастăп.

— Апла юрамасть, ачам. Унта сана тиркесе çеç мар, ыттисен лайăх ĕçĕсем çинчен çырнисем те пулнă пуль-ха. Санăн юлташусем, хаçатне кăларма сахал мар тăрăшнă ĕнтĕ, паллах... Эсĕ вĕсен ĕçĕсене ним вырăнне хумасăр хăтланнă... Шухăшласа пăх-ха, тĕрĕс-и ку?

— Апла шутласан... Тĕрĕс мар ĕнтĕ.

— Пурнăçра, ачам, кирек камăн та йăнăш пулма пултарать. Йăнăш туса хума йывăр мар. Анчах çыннăн ăна вăхăтра тӳрлетме пĕлмелле. Ăнлантăн-и?

— Ăнлантăм... Май килсен тӳрлетĕп...

— Май килсен мар, çине тăрсах тӳрлет хăвăн йăнăшна! Халь çывăрах ĕнтĕ. Ирхине эп сана ăсатсах ярăп...

Старик арçын ачана çурăмĕнчен лăпкаса илчĕ.

— Йăнăшсене çийĕнчех тӳрлетнине нимĕн те çитмест, тусăм...

* * *

Йывăр пулчĕ Олега киле таврăнма. Хытă пăлханчĕ вăл. Хăрани те пулчĕ. Чĕри сиксе тухас пек тапать...

Хулана çитнĕ чух ĕç кунĕ пуçланнăччĕ ĕнтĕ. Ку вăхăтра килте никам та пулмалла мар. Хваттер алăкне питĕ шăппăн уçса кĕчĕ Олег. Коридорти алăк хыçĕнчех тăракан портфельне илсе каялла тухасшăнччĕ çеç, амăшĕн сассине илтсе чарăнса тăчĕ.

— Олежка, эсĕ-и ку? — Малти пӳлĕмрен васкаса тухрĕ амăшĕ.— Мĕн пулнă сана, ывăлăм?

— Нимĕн те пулман...— ун куçĕнчен пăхмасăр каларĕ Олег.

— Улталатăн эсĕ. Пулнă çав, пĕлетпĕр!

— Пĕлетĕр пулсан, ыйтма та кирлĕ мар.

— Эс манпа йĕркеллĕ калаç! Ăçта çĕр каçрăн каçхине?

— Кукамай патне çитсе килтĕм...

— Кун пекех суйма хăçан вĕрентĕн? Эпир аçупа иксĕмĕр çĕр каçа чăлкăм куç хупман. Ниçта кайса кĕме пĕлмерĕмĕр. Кĕтрĕмĕр, шырарăмăр... Тул çутăличченех кукамупа телефонпа калаçрăмăр. Аçу аран ĕçе кайрĕ, эпĕ, пуç кашланипе, ĕçе те каяймарăм,— куççулĕсене шăла-шăла каларĕ амăшĕ.

Ун çине пăхса, Олегăн чĕри пăчăрăнса илчĕ.

— Анне! Аннеçĕм, каçар! — чупса пырса ăна ыталарĕ вăл.— Эпĕ кун пек тăвас теменччĕ...

Вара вăл ĕç мĕнле пулса тухнине, ăçта пулнине ним пытармасăр, пĕтĕмпех каласа пачĕ.

— Ах, Олежка, Олежка...— хурланса ассăн сывларĕ амăшĕ.— Мĕншĕн ун пек турăн-ха эсĕ? Ытла та лайăх мар-çке ку!

— Ан кулян, эс, анне, ан пăшăрхан,— терĕ Олег хуллен.— Хам тĕрĕс мар тунине йăлтах ăнланатăп. Тӳрлететĕп хамăн йăнăша... Халех шкула каятăп та пуринчен та каçару ыйтатăп...

— Тĕрĕс, Олежка! Хăравçă ан пул! Хăравçăсем çеç хăйсен айăпĕнчен пăрăнма тăрăшаççĕ, е айăпне урăххисем çине яма тăрăшаççĕ.

— Эпĕ халех шкула каятăп, анне...

— Кай! Эпĕ те ĕçе каятăп. Аçуна пĕлтерес, лăпланса ĕçлетĕр.

Кил — килех! Килте яланах çăмăл. Анчах шкула епле пырса кĕрес-ха? Ку йывăртарах... Юлташсем мĕн калĕç? Аван мар, намăс. Çапах та, шăла çыртсах, куçа хупсах тенĕ пек класа пырса кĕме тивет...

— Ну, Расланов, вперед! — терĕ вăл хăйне хăй шкул патне çывхарнă чух. Класс алăкне пĕр сассăр уçса шала кĕрсе тăчĕ.

— Здравствуйте! — терĕ хуллентереххĕн.

— Здравствуй, Олег! Кĕрсе лар хăвăн вырăнна,— терĕ учительница Римма Гордеевна, ним пулман пекех.

Класри ачасем пурте çăвара шыв сыпнă пек пулчĕç. Перемена вăхăтĕнче те вĕсем ушкăнĕпех тухса кĕчĕç, Олега нихăшĕ те пĕр сăмах та чĕнмерĕ.

Унпа Римма Гордеевна кăна йăвашшăн калаçрĕ.

— Эсĕ ан кулян, Олег. Ху таврăнса килни те пит аван. Малашне те яланхи пекех аван вĕрен,— терĕ.

Анчах ытла та тăруках нимĕн те улшăнмасть çав. Арçын ачан чунĕ пурĕпĕрех лăпланмарĕ. Унăн куçĕсем пĕрмаях кĕтесре ларакан çӳллĕ шкап çинелле пăхрĕç. Унта чĕркесе хунă хулăн хут çаврашки выртать... Пурте класран тухса кайсан чăтаймарĕ, ăна тытсах пăхрĕ. Чăн та, йăнăшман иккен вăл, шухăшлани тĕрĕс пулнă: стена хаçачĕ ку! Вăл ăна хутлатса хăйĕн портфельне чикрĕ...

Киле таврăннă чух, çула май, хут-кăранташ сутакан магазина кĕрсе пысăк хут листи, акварель сăррисем илчĕ. Ыран вырсарникун — ку хаçата çĕнĕрен сăрласа çырма пултарать!

Чăн та, çапла турĕ вăл. Лутăрканса пăсăлнă хаçата тӳрлетсе урайне сарчĕ. Питĕ лайăх пулчĕ капла: пăхса

ил те çыр, пăхса ил те çыр! Ӳкерчĕксене те çĕнĕрех турĕ. Тĕрĕссипе, хаçат халь малтанхинчен илемлĕрех пулчĕ!..

Тунтикун Олег шкула никамран малтан, ир-ирех çитрĕ.

— Чăхсем те вăранман пуль, эсĕ шкула килетĕн!— кăмăлсăр мăкăртатрĕ техничка, хăй çапах та шеллерĕ ачана, шкул алăкне уçса кĕртрĕ.— Мĕн тума ытла ир персе çитрĕн?

— Хаçат кăларса çакмалла,— терĕ ăна хирĕç Олег.

Вăхăт майĕпе шурĕ. Олег ачасем пухăнасса кĕтрĕ. Мĕн калĕç-ши?

Паллах, уроксем пуçланиччен пурте çĕнĕ хаçата курчĕç, каçса кайса вуларĕç. Çав-çавах, ним улăштармасăр çырнă, хаçачĕ малтанхинчен те илемлĕрех, тасарах.

— Курăр-ха, курăр! Хаçат тепĕр хут тухнă пирĕн!

— Кам кăларнă-ха ăна? — тĕлĕнчĕç ачасем.

Класа пырса кĕрсен Римма Гордеевна та çĕнĕ хаçата курса темиçе самант тĕлĕнсе тăчĕ.

— Мĕншĕн киввинех тепĕр хут çыртăр? Пĕреххут çĕнĕ хаçат кăлармаллаччĕ мар-и? — тесе ыйтрĕ вăл, хаçат редакторĕ Юля Шуркова умне пырса.

— Эпир çырман ку çĕнĕ хаçата, эп ним те пĕлместĕп,— терĕ лешĕ.

— Апла пулсан... ăнланатăп! — терĕ те учительница, Олег Расланов çине ăшшăн пăхрĕ.— Эсĕ тунă вĕт ку ĕçе?

— Эпĕ... Эпĕ хамăн йăнăша тӳрлетрĕм çеç,— терĕ Олег, хăмач пек хĕрелсе кайса.

— Маттур иккен пирĕн Раслан-арăслан! — терĕ тахăшĕ.

— Тĕрĕс. Ачасем, Олег Расланов хăйĕн йăнăшне тӳрлетнĕ çеç мар, вăл тата тепĕр ырă ĕç тунă,— терĕ те Римма Гордеевна, хăйĕн сумкинчен сенкер конверт кă-

ларчĕ.— Ун пирки паян çыру килчĕ. Итлĕр акă, вуласа парам сире...

Пурте шăп пулчĕç. Олег пичĕ-куçĕ вут пек пĕçерсе кайрĕ: ку мĕне пĕлтерет тата? Мĕнле çыру пултăр ун пирки?!

Римма Гордеевна пурне те илтĕнмелле вулама тытăнчĕ:

«Хисеплĕ учитель юлташсем!

Ку çырăва сирĕн пата ватă салтак, пĕрремĕш группа инваличĕ Ефрем Егорович Ефремов, çырать. Çак кунсенче манăн хулара медицина комиссинче пулма тиврĕ. Сывлăхăм начар пирки мана пĕччен çӳреме питĕ йывăр. Мана автостанцире сирĕн шкулта вĕренекен Олег Расланов ятлă ача тĕл пулчĕ те килех çитерсе ячĕ. Çавăншăн эп ăна пĕтĕм чун-чĕререн тав тăватăп. Сире те, учитель юлташсем, çавăн пек ачасене вĕрентсе ӳстернĕшĕн питĕ пысăк тав! Малашне те хамăрăн тăван çĕршыва нимрен ытла юратакан патриотсем вĕрентсе ӳстерме ырă сунатăп...

Ефремов, «Герой» колхозри ватă колхозник».

Класра пĕр хушă шăп пулчĕ, унтан тахăшĕ ал çупса ячĕ те, пĕтĕм класс ал çупнипе, савăнăçлăн калаçнă сăмахсемпе кĕрлерĕ...

— Эпĕ ку çырăва халех стена хаçачĕ çумне çыпăçтарса хума сĕнетĕп,— терĕ унтан учительница.— Олег Расланова хăйĕн йăнăшне тӳрлетнĕшĕн ырлăпăр, инвалида пулăшнăшăн мухтăпăр...

Ачасем каллех савăнăçлăн шавласа ячĕç, шапăр-шапăр ал çупрĕç.

— Халь ĕнтĕ урок пуçлăпăр,— терĕ Римма Гордеевна.

Урок пуçланчĕ...

ШАНЧӐКЛӐ ТУС

Вӑрӑм коридорта шӑнкӑрав сасси янраса илсенех, пур классен алӑкӗсем те шӑлт-шалт! уҫӑлса кайрӗҫ. Шкул ачисем — аслӑраххисем те, кӗҫӗнреххисем те — кӗпӗртетсе, пӗр-пӗрне ҫурӑмӗсенчен тӗрткелесе, кулса, шавласа коридора сиксе тухрӗҫ, анчах унта ним чухлӗ те тытӑнса тӑмарӗҫ, часрах урама, уҫӑ сывлӑша ыткӑнчӗҫ.

Тулта — çуркунне! Çулталăкри чи илемлĕ те чуна савăнтаракан вăхăт... Юлашки кунсенче çанталăк ăшăтсах ячĕ, пĕрмай хĕвел пăхрĕ те, шкул умĕнчи çерем типсе самаях симĕсленчĕ ĕнтĕ, пахчари йывăçсем те çулçă кăлара пуçларĕç. Кун пек чух ачасен класра ларас килмест çав, чун тулаллах туртать. Çавăнпа та вĕсем кашни переменăрах тулта, ирĕкре чупаççĕ. Пĕрисем тӳрех волейболла выляма тытăнаççĕ, теприсем футбол хăвалаççĕ, хăшĕсем тата пĕр-пĕринпе тытăçса кĕрешме тапратаççĕ. Янраса кăна тăрать шкул умĕнчи сарлака площадь!

Вĕренмелли те нумай юлман ĕнтĕ—тепĕр виç эрнерен çуллахи каникул пуçланать. Çав саманта ачасем тем пекех кĕтеççĕ. Анчах унччен питĕ хытă тăрăшмалла-ха. Вĕренмелле, вĕренмелле! Ним çине пăхмасăр! Ара, вĕренӳ çулĕ пĕтес умĕн камăн иккĕсем илсе ларас килтĕр? Малтарахран ун пек начар паллăсем илнĕ пул сан та, вĕсене пĕтерес пулать!

...Переменăсем вăхăтĕнче вляни, мечĕк хăвалани, пĕр-пĕринпе ăмăртса чупни, кĕрешни ачасемшĕн усăллă çеç, вăл шăмма-шакка çăмăллатать, пуçа уçăлтарать. Ак халĕ те, сарлака крыльца çинчен чупса ансанах, ачасем выляма, чупкалама тапратрĕç. Кăшкăраççĕ, кулаççĕ. Пурте питĕ хаваслă. Çĕр тĕслĕ сасă илтĕнет.

Пĕр пилĕк минут иртрĕ çапла. Унтан сасартăк тахăшĕ аллипе урамалла сулса питĕ хытă кăшкăрчĕ:

— Ачасе-ем! Пăхăр-ха-а! Тукма-ак! Кашкă-ăр!.. Кашкăр çавăтса килет такам!.. Ай, хăрамалла...

Сигнал пекех пулчĕ çав ача кăшкăрни. Пурте, выляма-шавлама пăрахса, урамăн тепĕр еннелле пăхрĕç. Унта, пӳртсем умĕнчи такăрлатнă сукмакпа (урам варри типсех çитеймен-ха) симĕс накидка, кивĕрех симĕс карттус тăхăннă арçын утнă, унпа юнашар лайăх кăна пăру пысăкăш йытă пынă.

Йытă темелле те мар ĕнтĕ, чăн-чăн кашкăр, пирĕн енчи пек каласан — тукмак! Ачасем, чĕрĕ кашкăра

пĕрре те курман пулин те, пĕлеççĕ: çав йытă пекех кăвак вăл, çавăн пекех тĕреклĕ, хăлхисене чăнк tăратать, хўри вăрăм та усăк унăн. Киносенче те, телевизорпа та кăтартаççĕ хăш чух кашкăрсене. Кĕнекесенче те ўкерчĕксем пулаççĕ час-часах.

Кĕпĕр-р... чупса тухрĕç шкул ачисем урам хĕррине. Пĕри те шарламасть, пурте çăвара шыв сыпнă пек тăчĕç пĕр хушă. Тĕлĕнмелле-çке! Халиччен вĕсен ялне кун пек чаплă йытă пĕрре те килсе кĕмен-ха. Кинора курни мĕн вăл? Кино — картинккă, ўкерчĕк çеç. А ку — чĕрри, чăн-чăнни. Çынпа юнашар утать. Ниçталла та пăхмасть тата. Шухăша кайнă пек пырать...

Кăшт тăрсан тин пăт-пат калаçни илтĕнчĕ ачасем хушшинче. Аслăрах классенче вĕренекенсем калаçрĕç:

— Овчарка. Немецкая овчарка, теççĕ кун пек йытасене...

— Чи ăслă йышши ăратă, тет, вăл.. Вĕсем пограничниксемпе пĕрле пирĕн çĕршыв чиккисене сыхлаççĕ, тĕрлĕ вăрă-хурахсене йĕрпе кайса тытаççĕ...

— Хĕлле «Ко мне, Мухтар!» ятлă кино куртăмăрçке, епле çулса илчĕ вăл пăшаллă бандита!

— Тен, ак ку та çавăн йышши?

— Ăçта илсе каять-ши ăна ку çын?

Çав хушăра накидкăллă çынпа унăн йытти урампа самаях аякка кайрĕç. Шкулта шăнкăрав янраса илчĕ — урока чĕнчĕ. Ачасем урамран таврăнса классене вырнаçса ларчĕç. Анчах тепĕр переменăра та, уроксем хыççăн та паян урамра ăнсăртран курнă кашкăр евĕрлĕ йытта манаймасăр ун çинчен калаçрĕç.

— Çапах та, ăçта, мĕн тума илсе килчĕ-ши ăна леш çын?

— Çынни — кам-ши вăл? Милици те мар пулмалла, ахаль карттусах тăхăннă.

— Аçтан пĕлес, тен, юри çавăн пек тумланнă? Тепĕр чух милицисем те ахаль тумпах çўреççĕ, тет, хăй-

сем шыракан вăрă-хурахсем патне паллаттармасăр пыма...

— Ку йытти, ман шутпа, тем тесен те йĕр йĕрлекенни! Тен, тахăш ялта кама та пулин çаратнă пуль те... вăррисене тупма йытăллă милицие чĕннĕ?

— Ун пек — кун пекки çинчен сас-хура пулмарĕ-çке?

— Асту, сана килсе калаççĕ пуль...

Тем тĕрлĕ калаçсан та, темле шухăшласан та, тĕрĕссине пĕлеймерĕç ачасем. Ăçтан пĕлетĕн? Йытăллă çын шкул тĕлĕпе утса иртсе кайрĕ кăна вĕт-ха. Енчен те вăл чарăнса тăнă пулсан, ачасем унран ыйтса пĕлетчĕçех ĕнтĕ — кам вăл, ăçта каять, ун йытти мĕнлескер...

Тĕрĕсси тепĕр кунне паллă пулчĕ. Ана пĕрремĕш урок пуçланиччченех улттăмĕш класра вĕренекен Павăл Ухватов каласа пачĕ.

— Ну, атьсемĕр, кăçал пирĕн колхоз садне улмаçырла вăрлама никам та кĕреймест!—терĕ вăл.—Эпир ĕнер курнă йытта сад хуралçи Ваççили Михалч Пушмаков валли илсе килнĕ...

Çапла каласанах, ачасем Павăла сырса илчĕç. Ытла та тĕлĕнмелле хыпар пулчĕ-çке ку пуриншĕн те! Пĕр-пĕрне пӳлсех ыйтса тĕпчеме тапратрĕç:

— Чăнах калатăн-и, Павăл?

— Тыттармастăн-и пире, Ухват? Тепĕр чух пит суятăн эсĕ!

— Кам каларĕ сана кун çинчен? Тен, тĕрĕс мар?

— Питĕ шутсăр тĕрĕс! — терĕ Павăл, ыттисем пĕлменнине хăй çеç пĕлнĕшĕн мăнкăмăлланса.—Эпир Ваççили Михалчсемпе юнашар пурăнатпăр-çке. Ĕнер шкултан таврăнсанах Ваççили Михалч хăйсен картишĕнче темле ют çынпа калаçнине илтрĕм те, темшĕн пĕлес килсе кайрĕ: кампа калаçать ку старик? Вара хӳмери шăтăк витĕр пăхрăм та — курах кайрăм: лаç çумĕнчи сак çинче Ваççили Михалчпа юнашар хайхи çын —

шкул тӗлӗпе йытӑ ертсе кайни — ларать, ун урисем тӗлӗнче йытти выртать... Пӗлес килнипе пӗтӗм ӑшчик пӗҫерсе кайрӗ манӑн: мӗн тума кӗнӗ ҫав йытӑллӑ ҫын старикпе карчӑк патне? Кам вӑл? Йыттине мӗншӗн илсе ҫӳрет хӑйӗнпе пӗрле?.. Пӳрте кӗрсенех аннерен ыйтрӑм: пирӗн кӳршӗсем патне кам килнӗ ара, пӗлместӗн-и? Ҫук, пӗлместӗп, курман никама та, тет... Вара эпӗ нумай шутласа тӑмарӑм, Ваҫҫили Михалчсем патне кайсах курас, терӗм.

— Хӑрамарӑн-и йытти туласа тӑкасран? — ыйтрӗ ачасенчен пӗри.

— Хуҫи пур-ҫке, мӗн хӑрамалли? Пӑхса тӑрсах тулаттармасть ӗнтӗ! Тата ун йышши йытӑсем ялти шӑкӑр-макӑр йытӑсем пек ҫынсем ҫине ним сӑлтавсӑрах сикмеҫҫӗ тенине илтнӗ эпӗ... Хайхи, картишне кӗтӗм те... ҫапах та шиклентӗм пулмалла ҫав, ытла тӳрех малалла иртмерӗм, калинкке патӗнче чарӑнса тӑтӑм. Ҫӗрте выртакан йытӑ ман ҫине пӑхрӗ те, ҫӑвар та уҫмарӗ, сас та кӑлармарӗ. Унтан хаш! сывласа илчӗ те пуҫне малти урисем ҫине хучӗ. «Ирт, ирт малалла, кил кунта, Павӑл, ан хӑра,— терӗ мана Ваҫҫили Михалч.— Айӑпа кӗмен ҫынна тивмест вӑл, культурнӑй йытӑ, вӗрентнӗскер!» Эпӗ, ху-уллен утса пырса, старикпе юнашар тенкел пуҫне лартӑм. Анчах унччен те пулмарӗ, хайхи йытӑ майӗпе, ним васкамасӑр, ҫӗртен тӑчӗ, темшӗн карӑнса илчӗ те ман паталла утрӗ. Пы-ысӑк, мур, ак ҫакӑн ҫӳллӗшех хӑй (Павӑл, аллине хӑйӗн пилӗкӗ тӗлӗнче тытса, йытӑ мӗн ҫӳллӗш пулнине кӑтартрӗ). Чун юлмарӗ манӑн! Халех сиксе ларать те ҫурса тӑкать мана!.. Урасене тенкел айнелле пытартӑм, аллӑмсене ҫурӑм хыҫнелле тытрӑм—ал-урасӑр ан хӑвартӑрах! Вӑл мана халех, ҫак самантрах, тулама тытӑнасран хӑраса куҫӑмсене те хупрӑм... Тен, кӑвакарса та кайрӑм-и ҫав самантра...

Эп вилеслех хӑранине курса, Ваҫҫили Михалч хӑни, мана хулпуҫҫирен тӗртсе илсе, хуллен кӑна каларӗ:

«Ан шиклен, ачам, тĕкĕнмест вăл сана, ним те тумасть. Паллашасшăн çеç вăл санпа!»

Çакна илтсен, эп куçа уçрăм та, йытă ман урасене, пĕçĕсене шăршласа тăнине куртăм. Вăл мана çыртма шутламаннине ăнланса, хăюлантăм кăштах. «Мĕн ятлă вăл сирĕн?» — тесе ыйтрăм ют çынран. «Мотор»,— терĕ Виççили Махалч хăни.

Хăйĕн ятне илтсенех, йытă, хуçи еннелле çаврăнса, ун куçĕнчен пăхрĕ — хăйне тем хушасса кĕтнĕ пек. Хуçи ăна ик хăлхи хушшинчен хыçкаласа илчĕ те хуллен кăна «лежать» терĕ. Йытă тӳрех ун урисем тĕлне выртрĕ. «Ку сирĕн... мĕн йышши йытă? Мĕнле ăратă?» — тесе ыйтрăм эпĕ. «Восточно-европейская овчарка»,— терĕ хуçи. «Санăн хăвăн-и вăл?» — «Хамăнах темелле мар. Милицин пулнă. Эпир унпа пĕрле ултă çул ĕçленĕ... Чылай преступниксене тупнă. Лайăх ĕçленĕшĕн медальсем те илнĕ вăл. Анчах та шел — ватăлать. Çитменнине, çур çул каялла пĕр хурах, Мотор хăйне хуса çитсе пусса антарсан, унăн кайри сулахай урине çĕçĕпе чиксе амантнă та, халь кăштах уксахлать вăл, текех службăра пулма пултараймасть, çавăнпа та ăна Ваççили куккана килсе парас терĕм. Сад хуралланă çĕрте ăна пулăшаканĕ кирлĕ-çке! Ватăрах пулин те, куккашăн пит лайăх помощник пулать-ха вăл...»

Павăл каласа пани ачасене тĕлĕнтерсех ячĕ. Эппин, малашне колхоз садне унччен милицире ĕçленĕ йытă, чăн-чăн овчарка, сыхлать!.. Колхозăн сачĕ питĕ пысăк, çирĕм гектар ытла, теççĕ, ăна ĕлĕкрех ним усăсăр выртнă çырма-çатрасенче лартса ӳстернĕ. Тем тĕрлĕ улмаçырла йывăççи те пур унта. Сад тавра колхоз лайăх кăна хӳме тытнă пулин те, çимĕçсем пулнă вăхăтра унтан-кунтан çĕмĕрсе кĕрекенсем те пулаççĕ-ха çав, тепĕр чух çамрăк улмуççисене те хуçса-амантса хăвараççĕ намăса пĕлмен çынсем. Сад хуралçин, Ваççили Михалчăн, килти йытă пур-ха та, пĕр пĕчĕкскер кăна çав, вĕресси вĕрет, анчах хăйне тăпра муклашкипе

персенех йынăша-йынăша аяккалла тарать. Куна ĕнтĕ, овчарка тенине, хăратаймăн! Тукмак пекех вĕт. Пĕрре çулса илчĕ-тĕк...хуть те кăравул кăшкăр!

Павăл каласа пĕтерсенех, ачасем шавласа кайрĕç:

— Вĕрентнĕскер ĕнтĕ вăл, тем тума та пĕлет пуль!

— Паллах ара, милици йытти пулнă та...

— Преступниксене нумай тытнă, тет те, мĕн калаçмалли пур!

— Эх, хамăр куçпа курасчĕ...

— Кама, йыттине-и? Ăна ĕнер куртăмăр-иç?

— Çук-ха, вăл мĕн-мĕн тума пултарнине! Йĕрпе мĕнле пырать, çухалнă япалана мĕнле шырать...

— Ăна пĕлессӳ килет пулсан, эс кĕçĕрех камăнне те пулин пĕр-пĕр качака вăрласа тух та, пытар ăна. Ху та пытан унпа пĕрле. Ирхине Ваççили Михалч хăни хăйĕн йыттине шыраттарма тытăнать те, лешĕ вара сана тупса пĕççӳнтен шатăр-р! çыртса лартать...

Ачасем ахăлтатса кулса ячĕç.

Çав вăхăтрах шăнкăрав янăраса кайрĕ — пĕрремĕш урок пуçланасса пĕлтерчĕ.

* * *

Ваççили Михалч Пушмаков «Çутă çул» колхоз çĕрĕ çинчи çырма-çатрасенче улма-çырла сачĕ лартса ӳстерес ĕçе пуçласа яракан хастар çынсенчен пĕри пулнă. Нумай тăрăшнă вăл кунта: фашистла Германие çĕнтернĕ хыççăн вăрçăран таврăнсанах ĕçлеме тытăннă та, çирĕм пилĕк çул ытла садрах пурăннă темелле. Çулла та, хĕлле те. Çăмăл пулман хăйăрла-тăмлă сăртсем çинче сад ӳстерме. Миçе çĕр шăтăк алтнă пуль тĕрлĕ-тĕрлĕ улма-çырла йывăççисем лартма! Миçе пин витре шыв йăтнă пуль! Çамрăк йывăççене мулкачсенчен, шăшисенчен хăтарма шартлама сивĕре хуппа, йĕплĕ çатрапа, улăмпа мĕн чухлĕ чĕркенĕ-ши тата! Ăна никам та шутласа кăларас çук...

Паллах, пĕр-пĕччен ĕçлемен вăл. Унăн пĕр çич-са-

кăр çынлă пĕчĕк бригада пулнă,— пуринчен ытларах хĕрсем ĕçленĕ унпа пĕрле. Çуллахи каникул вăхăтĕнче, биологи учителĕ ертсе пынипе, садра шкул ачисем те сахал мар ĕçленĕ. Лайăх, тăрăшса ĕçленĕ!

Çирĕм пилĕк çул хушшинче Ваççили Михалч бригадинче нумай çын улшăннă. Каникул кунĕсенче пырса пулăшакан шкул ачисем, ӳссе çитсе, пĕрисем Совет Çарне кайнă, теприсем аслă шкулсене вĕренме кĕрсе тухтăрсем, инженерсем, агрономсем, учительсем пулнă. Хăшĕсем тракторист, комбайнер, шофер пулса ĕçлеме тытăннă. Ваççили Михалч çав-çавах садра ĕçленĕ, мĕншĕн тесен чунтан юратнă вăл ку ырă ĕçе.

Икĕ хутчен орден пачĕç ăна çакăн пек тухăçлă пысăк сад пăхса ӳстернĕшĕн, унта ырми-канми ĕçленĕшĕн. Фронтра фашистсене хирĕç паттăррăн çапăçнăшăн панă «Мухтав» орденĕ çумне малтан «Хисеп паллн» хушăнчĕ (ăна Ваççили Михалч утмăл çул тултарнă кун пачĕç), унтан, çитмĕле çитсен, унăн кăкри çинче Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕ йăлтăртатрĕ...

Хисеплеççĕ çав пирĕн çĕршывра лайăх ĕçлекенсене!

Халь Ваççили Михалч ватă ĕнтĕ. Çитмĕл иккĕре вăл. Хăш чух чирлекелени те пулать. Садри ĕçсене унăн мăнукĕ, пĕр-ик çул каялла сад-пахча техникумĕнчен вĕренсе тухнă Витали ертсе пырать, анчах Ваççили Михалч та садран каймасть. Вăл, халь хуралçă вырăнĕнче çеç шутланать пулин те, малтанхи пекех ĕçлет хăйĕн çеммипе. Кашни йывăçа пĕлет вăл—хăçан ларгнă ăна, еплерех ӳснĕ, мĕнле чир-сиен пулнă унăн. Юг çын пĕрремĕш хут пырса кĕрсен, хăйĕн сачĕ çинчен Ваççили Михалч пĕр кĕнеке çырмалăх каласа кăтартма пултарать. Çав тери юратса калаçать улма-çырла йывăççисем çинчен!

Анчах вĕсене сиен кӳрекенсене тӳсме пултараймасть. Панулми е чие-слива татнă чух кам та пулин ăнсăртран пĕр турат хуçсан та, ватă сад ăсти вăл çынна айăпласа çур сехет ятлама-хăтăрма пултарать. Айă-

па кётён пулсан — ан курăнах ун куçĕ умне, пĕтерет сана намăслантарса!

Сада панулми вăрлама кĕрсе улмуççисене силлекенсене, туратсене хуçкаласа-амантса хăваракансене вара тем тĕрлĕ те ылханать. «Этемсем мар вĕсем, тискер кайăкран та тискер кайăк, аллисене тытса хуçса ярас пулать вĕсенне!» — тет. Çавăнтах хуçăлнă-чĕлпĕннĕ туратсене тӳрлетет, усăнса аннисене çĕклесе малтанхи вырăна лартать, аманнă вырăнсене кипке татăкĕсемпе чĕркет — суранланнă çынна бинтпа çыхнă пек...

Колхоз пысăк сад тунă вăхăтра ял çыннисем те хăйсен кил вырăнĕсене улма-çырла йывăççисем нумай лартнă, халь ĕнтĕ пурте садлă, темелле. Çапах та иртĕхекенсем пур вĕт-ха, килти çитмест вĕсене, колхоз садне кĕрсе кайса сăтăр тăваççĕ!

— Йытă кирлĕ мана, кашкăр пекки! Пĕрре хамлатсах çав намăссăр сăтăрçăсене чĕтреме ертекенни! — тенĕ Ваççили Михалч пĕррехинче, хăйĕн йăмăкĕн ывăлĕ Егор Малов çула май пырса кĕрсен.— Тупса пар-ха çавăн пеккине, тăванăм! Сирĕн ытлашши çук-и унта?

Ахальтен ыйтман Ваççили Михалч. Унăн тăванĕ, Егор Малов, хĕрĕх çулалла çитнĕ тĕреклĕ, хĕп-хĕрлĕ питлĕ патвар çын, милицири аслă лейтенант пулнă, нумайранпа хулара, уголовнăй розыскра, йĕр йĕрлекен йытăсемпе ĕçленĕ.

— Тупса пама пулать те пуль сана ун пеккине, кукка,— тенĕ Малов.—Пур-ха пĕрре, хампа ĕçлениех... Калама та çук ăслă чĕрчун, анчах службăран кăлараççĕ курăнать ăна — аманнă, кăштах уксахлать, тата ытла çамрăках та мар...

— Уксах пулсан... юрăхсăр, эппин, вăл? Ун пеккинчен мана та уссиех пулмĕ? — иккĕленнĕ старик.

— Çук, ун пекех тиркемелле мар, пирĕн службăра çеç пултараймасть пуль малашне, саншăн—пит лайăх помощник пулать!

— Апла-тăк, илсе кил-ха. Укçа тӳлесех илетĕп!

— Укçи кирлех те пулмасть-и, тен. Тăхта пăртаках.

— Ой, тăванăм, тем пекех тав тăвăттăм сана!

...Ак халĕ, çак калаçу хыççăн ик уйăхран, Егор Малов çав йытта Ваççили Михалч патне чăнах та илсе килчĕ. Питĕ хĕпĕртерĕ уншăн старик. Анчах иккĕленсе те илчĕ вăл:

— Усрама-пăхма пĕлĕп-ши эпĕ ку кашкăра? Итлекен пулĕ-ши вăл мана? Ансăртран, хама тытса çурса тăкмĕ-ши? Мĕн те пулин килĕшмĕ те, сиксе хăпарса ларĕ те тытăнĕ тулама! Кравул кăшкăрса та ĕлкĕреймĕн, карчăк та тăлăха тăрса юлĕ...— шӳтленĕ пекрех каларĕ старик, янахне хыçкаласа.

— Ан хăра, кукка, ун пек-кун пекки нимĕн те пулмĕ,— лăплантарчĕ ăна аслă лейтенант.— Эп халь отпускра. Йытта хăнăхтарма темиçе кун пурăнатăп та сирĕн патăрта, пĕтĕмпех йĕркеллĕ пулать.

— Э, апла пит аван! — савăнсах кайрĕ старик.

Вăл савăнчĕ-ха, анчах унăн карчăкĕ, Фетис инке, питех хавасланни курăнмарĕ çав. Тӳрех каласа хучĕ стариккине:

— Ку тукмака мĕнле тăрантарса усрас тетĕн эсĕ?! Ана пĕрре çитерме те пĕр така пĕççи кирлĕ пуль? Хамăрăн Дружок пек, апат юлашкисемпе пурăнас çук вăл! Выçса çитсен, садри кӳлĕре çӳрекен хур-кăвакалсене те тытса çиме пуçлĕ, урамри путексене те туртса антарĕ таçта! Типшар курса лар вара унпа! Хуçисене тӳлесе те çитереймĕн! Çук-çук, пирĕнтен пулмастех ăна усрасси, Якур, эс ăна хăвăнпа пĕрлех каялла илсе кай...

— Уншăн ан çĕтĕл-ха эсĕ, карчăк,— ал сулчĕ Ваççили Михалч карчăкне хирĕç,— сан пуçнах çисе ярас çук пĕр анчăк, ун валли колхоз столовăйĕнче те шăмă тем чухлех. Тепĕр тесен, сад сыхланăшăн ăна колхоз та тăрантармалла!

— Хур-кăвакал пирки те пустуй каларăн эсĕ,

акай,— хушса хучĕ Малов,— ман Мотор чĕрĕ аш çимест, пĕçернине çеç çиет.

— Айтурух, ашне сан йыттуна çатма çинче çупа ăшаласа памалла мар-и тата?! — кăшкăрсах пăрахрĕ Фетис инке.

— Хăш чух ун пек те юрать,— кулса илчĕ Малов,— тутлă çиме юратать вăл: сахăр, канфет...

— Тьху! — çилĕпе сурчĕ карчăк.— Йытă мар, улпут эппин вăл санăн! Хуть те мĕн хăтланăр, эп хутшăнмастăп, мана кирлĕ мар ун пек хăрушă чĕрчун!

— Анчах мана кирлĕ! Эпир унпа халăх пурлăхне сыхлатпăр! — пăт татса хучĕ Ваççили Михалч.— Çавăнпа та кун пирки тек тавлашса çăвар тутине ямăпăр.

— Ара, пĕр чăхăмлама тапратсан, кам çĕнтертĕр сана...— мăкăртатса илчĕ çеç вара Фетис инке.— Пурăнах хăвăн тукмакупа садри хурал пӳртĕнче, киле те ан кил! Килте эпир Дружокпа иксĕмĕр те пит лайăх пурăнăпăр...

— Юрĕ-çке, акай, ан çиллен ытлашши, ним те пулман вĕт-ха,— лăплантарма тăрăшрĕ ăна Малов.— Теп, пурăна-киле ку йытта эсĕ ху та юратса пăрахăн! Чăнах лайăх йытă вăл...

— Эпĕ-и?! Çак тискер кайăка юрататăп-и? — куçĕсене чарсах пăрахрĕ Фетис инке.— Кай, ухмах пуль эсĕ, Якур! Ĕмĕрне те пулас çук ун пекки!..

* * *

Юлашки переменăра шкул картишне выляма тухсан, Павăл Ухватов патне хăйĕнпе пĕр класра вĕренекен Вихтăр Петуховпа Аркади Васьков пырса тăчĕç.

— Итле-ха, Палюк, пире те илсе кай-ха çав йытта курма,— терĕ Вихтăр.— Çывăхран курас килет...

— Эсир мĕн, Ваççили Михалч тĕлне хăвăр пĕлместĕр-им? Кайăр та курăр тăраниччен,— терĕ вĕсене хирĕç Павăл.

— Пĕлессине пĕлетпĕр те-ха, Ваççили Михалччи

хӑй палласах каймасть пуль пире, эпир унран инҫетре пурӑнатпӑр. Эсӗ — ун кӳрши...

— Мӗншӗн питех курас килчӗ вара сирӗн вӑл йытта?

Вихтӑрпа Аркади иккӗленнӗ пекрех пулчӗҫ. Кӑшт тӑрсан тин Аркади каларӗ:

— Мӗншӗнни-мӗнӗ... Эпир унта йыттишӗнех те мар, Ваҫҫили Михалчӑн тӑванӗпе калаҫса пӑхма каясшӑн...

— Мӗн ҫинчен калаҫасшӑн вара эсир унпа?

— Йытӑсене мӗнле вӗрентмелли ҫинчен. Тен, унӑн ҫавӑн йышши кӗнекесем пур пуль. Пирӗн хамӑрӑн килти йытӑсене вӗрентме шут пур.

— Атьӑр ара. Мана мӗн, ертсе кайӑп, паллаштарӑп, темех мар вӑл,— ал сулчӗ Павӑл.— Анчах хӑвӑрӑн йыттӑрсене пурпӗр вӗрентейместӗр — ухмах вӗсем сирӗн.

— Ҫу-ук, пирӗн пӗртте ухмах мар,— пуҫне пӑркаларӗ Вихтӑр.

— Манӑн та питӗ ӑслӑ,— хушса хучӗ Аркади.

— Мӗн тума пӗлеҫҫӗ вара вӗсем?

— Пирӗнни «аллуна пар» тесенех, лаппине тыттарать...

— Манӑн аяккалла ывӑтнӑ карттуса илсе пырса парать...

— Тупнӑ мухтанмалли! Ун пеккине пирӗн кушак та туса кӑтартма пултарать! — каллех ал сулчӗ Павӑл.

— Вӗрентме пӗлейместпӗр-ҫке! — кӑмӑлсӑрланчӗ Вихтӑр.

— Ҫавӑнпа калаҫса пӑхасшӑн эпир...

— Калаҫма пулать, анчах усси... темле-ҫке!

Чӑнах та, уроксем пӗтсен вӗсем тӳрех Ваҫҫили Михалч патне кайрӗҫ. Анчах вӑл килте ҫук иккен.

— Ирхи апат хыҫҫӑнах Якурпа иккӗшӗ ун йыттине ҫавӑтса тухса кайрӗҫ те — ҫухалчӗҫ,— терӗ Фетис инке.

— Ӑҫта кайрӗҫ вара вӗсем? — ыйтрӗ Павӑл.

— Садра пуль, ман старикки урăх ăçта кайтăр вăл?

Ним шутласа тăмасăрах, ачасем Ваççили Михалч килĕнчен тухрĕç те, сылтăмри ансăр пралукалла пăрăнса, сад еннелле утрĕç.

Сăмах каллех йытă çинчен пуçланчĕ.

— Питĕ лайăх вĕрентнĕскер-ши вара вăл?

— Милицире вĕрентмен йытта мĕн тума усраччăр-ха!

— Пĕлесчĕ: мĕн-мĕн тума пултарать-ши...

— Пĕлесчĕ кăна мар, курасчĕ!

Вăхăт нумай та иртмерĕ — ачасем колхоз садне пырса кĕчĕç, çырмари мăн пĕве урлă каçса, ик енĕпе лутра йышши чие йывăççисем лартса тухнă, вăрманти проççек пек тӳрĕ çулпа утрĕç. Ун вĕçĕнче сад хуралçин пӳрчĕ курăнать.

— Шикленмелле-ха, атьсемĕр...— терĕ Вихтăр, вĕсем çав хурал пӳрчĕ патнелле çывхарнă май.

— Мĕншĕн? — ун çине пăхса илчĕ Павăл.

— Ара, пире курсан лешĕ... хăр-хар! тесе сиксе тухĕ те... лăр-лар! çурма тытăнĕ...

— Ун пек хăтланма вăл сан йытту пек тăнсăр мар пуль-ха,— терĕ Павăл.— Пĕлетĕп эпĕ, вуланă, милицири тата чикĕри йытăсем хăйсене команда памасăр, хуçи хушмасăр нимĕн те тумаççĕ...

Сасартăк хыçалта такам хытах та мар шăхăрни илтĕнчĕ. Ачасем пĕр харăсах каялла çаврăнса пăхрĕç те колхозри шофер Микиш хăвăрт утса килнине курса чарăнса тăчĕç. Микиш çамрăк çын-ха, пĕр-ик çул малтарахран çеç Совет Çарĕнчен таврăннăскер. Питĕ хавaслă этем вăл, тата тем те пултарать: купăс та калать, хăй те шутсăр лайăх ташлать, спектакльсенче те вылять — пуринчен ытла култармалли рольсем аван пулаççĕ унăн. Ачасемпе туслă пурăнать, — пушă вăхăтра шкулти спортплощадкăна пырса волейболла та вылять, «брусья», «кольца» çинче пуç çаврăнса каймалли

«номерсем» туса кăтартать. Хăй вăл чĕлĕм туртмасть, ăнсăртран шкул ачисенчен хăшĕ те пулин пирус таврашĕ хыпнине курсан (аслăрах классенче ун пеккисем те пулкалаççĕ хăш чух), тӳрех пирусне çăвартан кăларса пăрахса таптать те ятлама тытăнать:

— Эс ухмаха ертĕн-и? Мĕн тума хыпатăн çак усал япалана, сысна та, йытă та çимен «апата»?! Наркăмăш вĕт вăл! Санăн мĕн, çамрăклах ват старик пек пулса ларас килет-и? Е чахоткăпа, ракпа чирлес килет? Ку ирсĕр япалана çăвара чикнине тепре курсан — асту, тупата хăлхуна тытса пăратăп!

Çавăнтах пӳрнипе хытă юнать.

Ачасем юратаççĕ ăна, çав вăхăтрах кăшт хăраççĕ те унран, ытлашширех иртĕнме юратакансем те ун умĕнче тӳрех шăпланаççĕ.

Халĕ вăл ачасене хуса çитрĕ те тӳрех ыйтрĕ:

— Ăçта каять ку халăх?

— Овчарка курма,— пуриншĕн те ответ пачĕ Павăл.

— Эпĕ те çавăн пиркиех килетĕп-ха,— терĕ Микиш.— Хулара пурăнакан пĕр юлташ, çарта манпа пĕрле пулнăскер, мана тепрер уйăхран овчарка çури туянтарма пулчĕ. Çавна илсе килсе ӳстерес шут пур. Анчах ахаль ӳстернинчен усси çук, вĕрентес пулать ăна, чăн-чăн ăслă тус пултăр! Тăнсăр, ним тума пĕлмен йытă кама кирлĕ?

Ачасем унпа пĕрле малалла утрĕç. Микиш çаплах калаçрĕ:

— Овчарка вăл, атьсемĕр, питĕ кирлĕ йытă. Нумай пулмасть эпĕ пĕр хаçатра вуларăм: Çĕпĕрти тахăш ялта ачасем ЮДМ — «юные друзья милиции» — ушкăнĕ тунă, тет те, кашниех пĕрер овчарка ӳстернĕ. Кайран çав йытăсене пĕрисем милицие, теприсем Совет Çарне панă. Пĕрин овчарки ӳссе çитнĕ чух унăн пиччĕшĕн шăпах Совет Çарне каймалли вăхăт çитнĕ. Унăн пограничник пулас килнĕ. Вара вăл районри çар комисса-

риатӗнче каласса таталнӑ та, шӑллӗ пӑхса ӳстернӗ йытта хӑйӗнпе пӗрлех Çара илсе кайнӑ...

— Чикӗре вара вӗсем шпионсене тытнӑ-и? — ыйтрӗ Вихтӑр.

— Тытнӑ çав, пӗр питӗ хӑрушӑ диверсанта тытнӑ, тет, ахалӗн ма çырччӑр хаçатра? Вунӑ километр таран чупнӑ шпион хыççӑн унӑн йӗрӗпе, çапах та хуса çитнӗ. Лешӗ парӑнасшӑн пулман, патронӗсем пӗтичченех пенӗ пограничникпа унӑн йыттине, çыннине хулӗнчен амантнӑ...

— Йыттине лекмен-и?

— Ӑна тивертеймен. Диверсантӑн патронӗсем пӗтсен, пограничник йытти ун çине сиксе пусса антарнӑ...

— Кайран вара?

— Пограничник ун аллисене каялла пӑрса çыхса лартнӑ та заставӑна илсе пынӑ...

— Эх, çавӑн пек пуласчӗ манӑн та! — ассӑн сывласа, аллисене хире-хирӗç сӑтӑркаласа илчӗ Вихтӑр.

— Мӗнех вара, пулма та пултаратӑн! — ун çине пӑхса йӑл кулчӗ Павӑл.— Çара каймалли вӑхӑт çитсен Хураçкуна çавӑтса утмалла çеç... Сирӗн вӑл кӳршӗсен чӗпписене тытса çиме пӗлет вӑл, тен — шпионсене те тытӗ!

— Манран тӑрӑхласси ех пӗтмест ӗнтӗ санӑн!—кӑмӑлсӑрланчӗ Вихтӑр.— Темшӗн кураймастӑн... Пӗрре-пӗрре кӑтартатӑп-ха çавӑншӑн!

Ачасем хирӗççех каятчӗç-и, тен, анчах вӗсене Микиш чарчӗ:

— Ха, ача-пӑча! Тӳсме пултараймастӑп кирлӗ-кирлӗ маршӑн хирӗçнине! Пӗр-пӗрине кӳрентерме тӑрӑшни — ырӑ япала мар! Эсӗ, Павлуша, Вихтӑрӑн Хураçкинчен кулма хӑтланатӑн, анчах ун пирки эп сире акӑ мӗн калама пултаратӑп. Тепӗр чух ялти йытӑсем хушшинче те, вӗсене никам та, ниме те вӗрентмен пулин те, тӗлӗнмелле ӑслисем тӗл пулаççӗ!

— Пӗр кӗнекере вуланӑччӗ эпӗ...— терӗ Павӑл.

— Вуланине мар, эп сире пурнăçра пулнине каласа парăп. Хам тĕп-тĕрĕс пĕлнине... Итлес кăмăлăр пур-и?

— Пур, пур, итлетпĕр! — терĕ Вихтăр пуринчен малтан.

Каласа пар! — терĕç ыттисем те.

Микиш чарăнса тăрсах калама тытăнчĕ вара.

— Хурамалăхра пурăннă пирĕн кукаçи — халь çук вăл, вилнĕ — пĕррехинче вăрмана кăмпа татма кайнă. Унпа пĕрле вĕсен Нăрă ятлă йытти те пынă — кукаçирен нихçан та уйрăлман вăл, лешĕ таçта кайсан та ун хыççăнах çӳренĕ. Кăмпи питех тупăнман пулмалла, пирĕн кукаçи вăрманалла шалтан шала кĕнĕ. Паллах, Нăрри та унран юлман, йывăç тĕмисем хушшинче чупкаланă, темле кайăксене хăратнă. Унтан кукаçи кĕтмен-туман çĕртен, хăрах урипе икĕ йывăç кăкĕ хушшине лексе такăннă та, малалла ӳкнĕ чух урине шатăрт! хуçса пăрахнă. О-ой! тесе вăрăммăн йынăшса янă та... тек тăрайман. Паллах, тăма пикеннĕ вăл, анчах ури çине пусайман, лĕнчĕрех авăнса аннă. Мĕн тумалла халь? Таврара никам та çук, вăл пĕчченех. Пĕччен мар ĕнтĕ, йытăпа иккĕшĕ пулнă вĕсем. Анчах мĕн тума пултартăр йытă? Çынна çĕклесе каяймасть-çке вăл. Кукаçи халь ĕнтĕ, хăй тĕллĕн киле çитме мар, вăрмантан та тухаяс çуккине ăнланса, вăйĕ çитнĕ таран вăрахчен кăшкăрнă: «Килĕр-ха, пулăшăр»,— тенĕ. Ăна хирĕç сас-хура паракан çын пулман... Ĕнтĕ каç та пулса килнĕ, çитменнине тата, лăпăс-лăпăс çумăр çума пуçланă. Пĕтес пулать-иç капла! Тахçанччен выртсан та, никам та килсе çăлас çук! Кукаçи, вăрман урлă каякан шоссе çине тухас тесе, тăвата уран упаленме тытăннă. Унта тухса выртсан, ăна кам та пулин курса пулăшатех! Ку шоссе тăрăх машинсем те сахал мар çӳреççĕ, час-часах çĕрле те чупаççĕ... Йытти питĕ тĕлĕннĕ кунтан — ма-ха унăн хуçи тăрса утмасть, упаленет? Хуçине хĕрхеннĕ пек, йынăшма пуçлать. Пĕрре пĕр енчен чупса пырать, тет, тепре тепĕр енчен... Мала-

рах чупса каять те каялла таврăнса пырать, тет. Анланнă пуль ĕнтĕ вăл хуçине инкек пулнине!

Анчах нумай каяйман кукаçи. Ват çыннăн вăйĕ те пĕтнĕ пуль, хуçăлнă ури те тӳсме çук ыратнă унăн. Пĕр аллă метр пек упаленса кайсанах, тăсăлса выртса вăраммăн йынăшса янă. Йытти те, ун тавра чупкаласа, кĕскен-кĕскен нăйкăшнă.

— Нăрă, Нăрă... кил-ха кунтарах, тусăм... — чĕннĕ ăна кукаçи.

Йытă, хӳрине тăратса, ун умнех пырса тăнă. Кукаçи куçĕнчен: «Мĕн кирлĕ, мĕн хушасшăн эс мана?» — тенĕ пек, пăхать, тет, нăйкăша-нăйкăша. «Йытă ун пек ăслăн пăхнине нихçан та асăрхаман эпĕ»,— тетчĕ кайран кукаçи.

Вăл Нăрра пуçĕнчен ачашла-ачашла каланă:

— Киле чуп часрах, тусăм, систер килтисене мана инкек пулни çинчен!—Кукаçи аллипе ял еннелле сулнă.— Кай, кай часрах!

Анланнă çакна йытă! Ик-виçĕ хут вĕрсе илнĕ. Ку ĕнтĕ: «Юрать, халех каятăп!» — тенĕ пекех пулнă. Çавăнтах йывăç тĕмисем хушшинелле тапса сикнĕ. Анчах темиçе самантранах, вĕре-вĕре, каялла пынă, çĕрте выртакан кукаçи тавра чупкалама тытăннă.

— Ма каймастăн тата? Кай, киле кай, чуп часрах! — хушнă кукаçи.

Йытă çав тери хурлăхлăн йынăшнă. «Эп кайăп-ха, анчах сана пĕччен мĕнле пăрахса хăварас?» — тенĕ пуль ĕнтĕ хăйĕн чĕлхипе.

Кукаçи татах кайма хушсан, Нăрă ун тавра юлашки хут сиккелесе çаврăннă та ялалла чупнă...

Вăл киле çитнĕ чух ман куккасем иккĕшĕ те, каç пулса килнĕ май, ĕçрен таврăнса лаç умĕнче канса калаçса ларнă. Хапха айĕпех шуса кĕнĕ Нăрă — чĕлхине тем тăршшĕ кăларса хашкаканскер — тӳрех вĕсем патне ыткăнса пырса вĕрме тытăннă. Малти урипе куккасен аттисене чава-чава илнĕ: пĕринне, тепринне.

— Мĕн пулнă сана, Нăрă? Такам кӳрентерчĕ-им? — куларах ыйтам пекки тунă аслă кукка.

— Юри вылять, тунсăхланă пире иртенпех курманнипе,— тенĕ кĕçĕн кукка.

Çав вăхăтра крыльца çине инкесенчен пĕри тухса тăнă та, йытта курсанах, каланă:

— Ара, вăл аттепе пĕрле вăрмана кайнăччĕ-çке? Халь пĕчченех килчĕ-им? Атте ăçта?

Нăрă çаплах вĕрнĕ... Вĕрнĕ те хапха патнелле ыткăннă, унтан каялла чупса пырса найкăшнă.

— Кай, ырра мар ку! — тенĕ аслă кукка, тăрук пăшăрханма пуçласа.— Аттене тем пулман-и? Тен, Нăрă пире чĕнме килнĕ?

— Ытла тата эс... Йыттăнах ун пек тума ăс çитес çук-ха!

— Кам пĕлет! Тен, вăл пирĕнтен те ăслă!

— Айван ачасем пек тавлашса ан тăрăр-ха эсир, ик мăнттай, урама тухса унталла-кунталла пăхкалăр! — çилĕпе кăшкăрнă вара инке.— Пĕлме çук, тен хурлăх пулнă!

Куккасем Нăрă хыççăн калинккерен тухсанах, вăл малалла ыткăннă. Аяккарах кайсан, чарăнса тăрса вĕре-вĕре илнĕ — çынсене хытăрах утма васкатнă. Унтан каллех сиккипе малалла чупнă...

— Ăçта илсе каясшăн пире ку анчăк? — тĕлĕннĕ куккасем. Хăйсем хытах пăшăрханма тытăннă: — Чăнах, аттене тем пулман-ши? Ват çын вĕт-ха... Сасартăк чирлесе ӳкрĕ пуль те...

Вĕсем йытăран юлмасăр уя тухнă, утнă çĕрте утса, чупнă çĕрте чупсах пынă. Вăрмана çитнĕ, Нăрă хыççăн йывăçсем хушшине кĕрсе кайнă. Халь куккасем иккĕленмен ĕнтĕ: ашшĕ тем инкеке лекнĕ тенĕ. Нăрă вĕсене ун патне илсе каять!..

Чылай пынă вăрманпа. Нăрă — малта, пĕрмай йынăшкаласа, çĕре шăршласа, тек-текех каялла çаврăнса пăхса чупнă вăл. Куккасем — ун хыççăн. Юлашкин-

чен кукаçи патне çитсе тухнă-тухнах вĕсем! Старик ним хускалмасăр, аран йынăшкаласа выртнă. Хуçалнă ури пĕрене пекех шыçса кайнă, ăна вырăнтан та тапратайман вăл. Куккасем вара ăна ерипен кăна мăн çул çине çĕклесе тухнă та, вĕсенчен пĕри часрах яла чупса колхоз машинине илсе пынă...

— Йыттине те машин çинех лартса кайнă пуль? — ыйтрĕ Вихтăр.

— Паллах лартса кайнă, машина хыççăн ăçтан ĕлкĕрсе пытăр вăл! Кайран пирĕн кукаçи ку йытта хăйĕнчен пĕр шит те уйăрман, питĕ туслă пурăнчĕç вĕсем. Вилес умĕн те хушса хăварнă: астăвăр, манăн тусăма нихçан та ан кӳрентерĕр, çемьери çын шутĕнчех пултăр вăл, тенĕ. Шел, кукаçи вилнĕ хыççăн Нăрă та нумаях пурăнаймарĕ...

— Мĕн пулнă вара ăна? — пăшăрханса ыйтрĕ Павăл.

— Кашкăр çурса тăкнă...

— Ăçта? Вăрманта-и?

— Çук, килтех. Хĕллехи пĕр тĕттĕм каç кашкăрĕ кукаçисен картишне пырса кĕнĕ. Выçса çитнĕскер пулнă пуль. Нăрă, çавна сиссе, ăна хирĕç сиксе тухнă. Пĕчĕк йытă кашкăра мĕн тума пултартăр-ха? Лешĕ Нăрра тӳрех пăвса пăрахнă...

— Ай, хĕрхенмелле-çке! Çавăн пек ăслă йытта...

— Хĕрхенмелле пулмасăр ара! Куккасен арăмĕсем те, ачисем те куççулĕпех макăрнă уншăн.

— Кашкăрне хăйне тытнă-ши хуть кам та пулин?

— Çав каç тытайман. Тарнă лешĕ. Пĕр-ик кунтан колхозăн сурăх витине çӳлтен шăтарса кĕнĕ вăл хурах — хĕлле юр çурт тăррисем таранах шăлса лартать-çке, унта хăпарасси ним те мар,— анчах, çынсем хăйне хупăрлама тапратсан, алăк айĕпе тухса тарма тăнă та хĕсĕнсе ларнă. Кунта вара ăна çынсем ярса тытнă та...

— Пит аван лекнĕ вăл капкăна!

— Çавӑн пек пулнӑ, тусӑмсем,— терӗ юлашкинчен Микиш.— Килти йытах çын пурнӑçне çӑлнӑ. Лайӑх ӑратлӑ, ятарласа вӗрентнӗ йытӑсем вара тем те тума пултараççӗ. Иртнӗ вӑрçӑра та питӗ нумай усӑ кӳнӗ вӗсем. Пӗрисен çурӑмӗсем çине минӑсем çыхса хунӑ та, вӗсем çав минӑсемпе тӑшман танкӗсем айне кӗрсе кайса вӗсене аркатнӑ, теприсемпе аманнӑ салтаксене çапӑçу хирӗнчен турттарса тухнӑ...

— Аçтан пӗлетӗн эс кун çинчен, Микиш пичче?

— Вуланӑ. «Вокруг света» ятлӑ журнал çырӑнса илетӗп эпӗ. Унсӑр пуçне, манӑн «Мир приключений» ятлӑ кӗнекесем пур. Тем çинчен те çыраççӗ унта! Йытӑсем çинчен çырни те нумай...

— Пире те вулаттармӑн-ши вӑл кӗнекесене?

— Вулӑр ара. Анчах тирпейлӗ тыткалӑр, ан варалӑр. Тӳсме пултараймастӑп кӗнеке варалакана!

— Çук, çук, Микиш пичче! Учебниксене те, шкул библиотекинчен илнӗ кӗнекесене те хаçатпа чӗркесе тытатпӑр эпир!

— Юрӗ, калаçса татӑлтӑмӑр, тейӗпӗр. Халь ӗнтӗ çав «хула хӑнине» çитсе курар-ха. Манӑн ун хуçипе паллашса калаçас килет...

* * *

Сад хуралçи Ваççили Михалчпа унӑн тӑванӗ Егор Малов, йытта хӑйӗн малашне сыхласа пурӑнмалли вырӑнсемпе паллаштарас тесе, унпа пӗрле пӗтӗм сад тавра çаврӑннӑ. Чылай утма тивнӗ вӗсен — колхоз сачӗ пысӑк-çке, тӳрем вырӑнсем çеç мар, çырмасем те пур унта, сӑртсем те, варринче — пысӑк кӳлӗ. Халь вӗсем хуралçӑ пӳрчӗ умӗнчи сак çинче, каçалла сулӑннӑ хӗвел питтинче, канса ларнӑ. Мотор вӗсен умӗнче, тин çеç тапранса тухнӑ ешӗл курӑк çинче выртнӑ.

Анат енчен темле çынсен сассисем илтӗнсенех, Мотор пуçне çавӑнталла пӑрса хӑлхисене чӑнк тӑратрӗ.

Унтан тăват ура çине сиксе тăчĕ те хуллен хăрлатса га илчĕ.

— Камсем кусем? — ыйтрĕ Малов, хăйсем патнелле виçĕ арçын ачапа пĕрле вĕсенчен чылай çӳллĕ йĕкĕт утса килнине курсан.

— Хамăр ял ачисем, сан йыттуна курма килеççĕ пуль-ха,— терĕ Ваççили Михалч.— Варринче пыраканĕ — колхоз шоферĕ Микиш, пит йĕркеллĕ йĕкĕт. Шофер кăна мар, техник-механика та пултарать. Ачисенчен пĕри, кăвак пиншакли, хамăн кӳршĕ ачи, ĕнер пулчĕ-ха пирĕн патра, ыттисене палласах кай мастăп...

Çитесси пĕр аллă утăм çеç юлсан, кĕтмен хăнасем тăпах чарăнса тăчĕç, йытта курса, тăруках çывхарма шикленчĕç пулмалла.

— Çисе ямасть-и ку пире? — аякранах кăшкăрчĕ Микиш.

— Хăвна мĕнлерех тыткаланинчен килет вăл,— шӳтлесе илчĕ ăна хирĕç Ваççили Михалч.

— Ан хăрăр, килĕрех, килĕр! — кăчăк туртрĕ Малов, хăй çавăнтах йыттине хушрĕ: — Лежать, Мотор! Лежать!

Йытă выртрĕ, арçын ачасемпе Микиш хуралçă пӳрчĕ патне, Ваççили Михалчпа Малов умне, пырса тăчĕç. Микиш вĕсене сывлăх сунчĕ, унтан тӳрех ыйтрĕ:

— Мотор — тетĕр-и-ха эсир ку... кашкăра?

— Çавăн пек,— терĕ Малов.— Килĕшмест-им?

— Килĕшет! Питĕ лайăх ят. Мотор... Чăвашла калаçнă чух ăна «Маттур» теме те пулать. Чăнах маттур ĕнтĕ! Пăх-ха ăна, мĕн пысăкăш вăл! Хĕл каçнă пăру пек! Хĕлле çунашкана кӳлсе чупма та пулать...

— Вăйĕ пур çав унăн. Хуть те кама та пĕрре сиксех ураран ӳкерме пултарать.

— Пулкаланă-и ун пекки?

— Пулмасăр тата! Ултă çул хушшинче пирĕн унпа тем тĕрлĕ приключени те пулса иртнĕ.

Микиш Маловпа юнашар сак ҫине ларчӗ, ачасем ура ҫинчех тӑчӗҫ.

— Манӑн та ҫакӑн йышши йыт ҫури ӳстерес шухӑш пур-ха,— терӗ Микиш.— Питӗ юрататӑп мар-и!

— Аван шухӑш, ырлатӑп,— пуҫӗпе сулчӗ Малов.— Анчах йыт ҫурине пӑхса ӳстерме, ӑна вӗрентме пӗлес пулать. Ҫӑмӑлах та мар вӑл.

— Ҫавӑн пирки килтӗм те сан пата. Мӗнле вӗрентмелле?

— Ӑна тӑруках каласа пама ҫук, юлташ. Кӗнекесем вулас пулать.

— Тупаймарӑм-ха эпӗ ун пек кӗнекесем... Санӑн ҫук-и?

— Ма ҫук пултӑр? Вӑхӑтлӑха, вуласа тухма ярса пама пултаратӑп.

— Ярса пар-ха, тархасшӑн, ак, Васҫили Михалч ячӗпе те пулин!

Калаҫӑва старик хутшӑнчӗ:

— Пулӑшасах пулать ӗнтӗ ачана, ун пек ыр шухӑш тытнӑскере... Лайӑх йытӑсем хамӑра та, патшалӑха та кирлӗ.

— Юрӗ, пулӑшӑп. Кукка патне килсен пырса та курӑп — тӗрӗс вӗрентетӗн-и эс ӑна, ҫук-и? Санӑн йыт ҫуррийӗ халь пысӑк-и ӗнтӗ? Миҫе уйӑхра-ха?

Микиш тӑруках чӗнеймерӗ, Васҫили Михалч кулса ячӗ:

— Ҫук-ха унӑн нимӗнле йыт ҫури те! Туянма ҫеҫ шутлать вӑл...

Малов та йӑл кулчӗ:

— Апла, эпир санпа тӗлӗкре курнӑ йыт ҫурине вӗрентсе ӳстерме хатӗрленетпӗр-иҫ?

— Ҫ-ҫук, ун пек мар,— терӗ Микиш, пуҫне пӑркаласа,— кӗҫех туянатӑп, чӑн-чӑн восточно-европейская овчарка ҫури илсе килетӗп. Хуҫипе килӗшнӗ ӗнтӗ. Ахаллӗн мӗн тума калаҫатӑп вара? Эпӗ пуш параппан ҫапакан ҫын мар... Эпӗ этемми ҫавӑн пек: пӗр-пӗр ӗҫ тума

шут тытрăм пулсан, манăн ăна епле пулсан та туса çитермеллех! Темле йывăр пултăр, тем тĕрлĕ чăрмав сиксе тухтăр ман умма — пурĕпĕр тăватăп хам пĕрре шухăшласа хунине. Çамкана çапса çурам та — тăватăпах!

— Çамкана çапса çурни — ытлашширех те пуль, ма тесессĕн, çамка вăл пурнăçра кирлĕ япала,— кулса ячĕ Малов,— анчах шутласа хунине çине тăрса, нимĕнле йывăрлăха та пăхмасăр туса çитерни — питĕ аван.— Вăл Микишпа пĕрле килнĕ ачасем çине пăхрĕ.— Эсир мĕнле шутлатăр? Пуçланă ĕçе туса çитермесĕр пăрахма юрать-и?

— Паллах, юрамасть,— пуриншĕн те ответ пачĕ Павăл.

— Тĕрĕс. Пурнăçра яланах асра тытăр çакна. Эсир пурсăр та пулас салтаксем вĕт-ха. Ӳссе çитсен Тăван çĕршыва сыхлакансем пулатăр. Салтакăн уйрăмах çирĕп кăмăллă пулмалла, хамăр халăх хушнине чун-чĕререн туса пымалла, хуть те мĕнле йывăрлăха та çĕнтерме пĕлмелле. Çапла-и?

Ачасемшĕн каллех Павăл ответ пачĕ:

— Ăна пĕлетпĕр эпир, вăрçăра пирĕн салтаксем епле паттăр пулни çинчен нумай вуланă...

— Вуланă пулсан — пит аван. Вăрçăра паттăр пулмасан тăшмана çĕнтерейместĕн, анчах çыннăн ахаль пурнăçра та мемме, кĕсел пулмалла мар,— терĕ Малов юлашкинчен.— Ăнланмалла калатăп-и эпĕ?

— Питĕ ăнланмалла,— терĕ ăна хирĕç Микиш.

«Вĕрентме юратакан çын иккен ку,— шухăшларĕ хăй çав вăхăтрах.— Анчах тĕрĕссине калать...»

* * *

...Хуларан илсе килнĕ овчарка, çынсем каласнине ăнлансах итленĕ пек, лăпкăн выртрĕ. Хушăран çеç хăлхисене хускаткаларĕ те, тем пирки куляннă пек, хашш! сывласа илчĕ.

— Егор Иванч,— терĕ кăшт тăхтасан Микиш, йытă ҫине пăхса,— питĕ пĕлес килет пирĕн, каласа пар-ха... Мĕнле кăткăс ĕҫсенче пулнă эсир ку Моторпа? Мĕнле преступниксене тытнă?

— Чăнах та, шутсăр пĕлес килет ҫавна! — ун хыҫҫăнах каласа хучĕ Павăл.

— Ĕҫĕсем нумай пулнă пирĕн,— терĕ Малов.— Эпир унпа хулара ҫеҫ ĕҫлемен, ялсене те тухса ҫӳренĕ, сахал мар йĕр-йĕрленĕ, мĕн шыранине тупнă. Пурне каласа та пĕтерес ҫук...

— Пĕр-иккĕшĕ ҫинчен те пулин илтесчĕ...

— Сăмахран каласан, виҫĕмҫул пĕр ялти лавккана ҫаратнăччĕ. Хурахсем, лавккан ҫырма енчи чӳречине ҫĕмĕрсе, ун ҫинчи тимĕр решеткене тăпăлтарса кăларса кĕнĕ те, хаклă япаласене чылай илсе тухнă. Опергруппăпа пĕрле пире те, Моторпа иксĕмĕре, илсе кайрĕҫ ҫавăнта. Питĕ кансĕр пулчĕ — эпир пыриччен лавкка таврашĕнчи ҫĕре таптаса пĕтернĕ. Вăхăчĕ те чылай иртнĕччĕ — виҫĕ сехете яхăн. Ҫапах та эпĕ Мотора лавкка ăшчиккине, унта юлнă таварсене лайăххрах шăршлаттартăм та, леш ҫырма енчи ванчăк чӳрече умне илсе пытăм. Вăрăсем ҫавăнтан кĕнĕ-ҫке, таварĕсене те ҫав чӳрече витĕрех илсе тухнă... Ман Мотор шăршлакаларĕ те ҫакăнти таптаннă вырăнсене, кăшт тăхтасанах ҫырманалла вирхĕнчĕ. Эп — ун хыҫҫăн. Йĕр-йĕрленĕ чух ăна алран вĕҫертме юрамасть... Ман хыҫҫăн ытти оперативниксем пыраҫҫĕ... Ҫырма тăрăх кайсан-кайсан, сăрта хăпарса уя тухрăмăр, ыраш хушшипе чупрăмăр. Малта вăрман курăнса кайрĕ. Унта пырса кĕтĕмĕр. Пĕр пĕчĕк уҫланкăра ман Мотор чарăнчĕ, пĕр вырăнта ҫаврăнкаласа шăршларĕ. Пушă кĕленче, лутăрканнă пирус коробки тупăнчĕ кунта: вăрăсем кансса ларса эрех ĕҫнĕ, чĕлĕм туртнă эппин... Нумай чарăнса тăмарăмăр, Мотора каллех: «След! Ищи! След!» — тесе команда патăм та, вăл пире малалла илсе кайрĕ... Татах чупрăмăр ун хыҫҫăн. Тепĕр ҫур сехетрен ҫырма-

налла антăмăр, ун тĕпĕнче — пĕчĕк кăна пӳрт, кив мунча пекскер курăнчĕ. Кайран пĕлтĕмĕр — тахçан кунта тахăш колхозăн утарĕ, пулă кӳлли пулнă, тет те, ку пӳрте хуралçă валли лартнă. Анчах халь кунта утар та, кӳлĕ те пулман, пӳртĕнче те никам та пурăнман...

— Çавăнта вĕсем! Тем тесен те — çав пӳрте пытаннă! — терĕ ман юлташсенчен пĕри.

— Çитсен курăпăр,— терĕм те ăна хирĕç, Мотор хыççăн малалла кайрăмăр. Халь вăл хытăран хытă туртăнчĕ. Хăй шыракан тăшмансем инçетре те мар, çывăхрах пулнине туйрĕ курăнать...

Пӳрт патне пыриччен, унран самай аякра, самантлăха чарăнса тăтăмăр. Эпир тăваттăнччĕ (Моторпа — пиллĕкĕн), пирĕн ушкăн пуçлăхĕ капитанччĕ, Русаков хушаматлăскер, чăвашла та питĕ лайăх пĕлекен вырăс. Çав каларĕ:

— Пӳрчĕ пĕчĕккĕ пулсан та, унăн леш енче чӳрече пурах. Пĕрре те мар-и тен. Эпир алăкран шакканă хушăра (алăкне питĕрнех пулĕ-ха!) шалти çынсем чӳрече витĕр сиксе тухма та ĕлкĕрĕç. Çавăнпа та пӳрте малтанах пур енчен те çавăрса илмелле. Эпир, Маловпа иксĕмĕр, йытăпа пĕрле, алăк патне пырăпăр, эсир, йывăçсем хыççăн пытанса, пӳртĕн леш пуçне кайăр, тарма пикенекенсене кĕтсе илме хатĕр тăрăр,— хушрĕ вăл пирĕнпе пынă Ванюковпа Мигушов сержантсене.

— Итлетпĕр,— терĕç лешсем.

Мотор çав вăхăтра ниçта кайса кĕрейми пăлханчĕ, пĕтĕм кĕлеткипе чĕтрерĕ, пӳрт еннелле туртăнчĕ, аран чарса тăтăм ăна. Халь мĕн тăвасси çинчен калаçса татăлсанах пӳрт патнелле чупрăмăр. Алăкне чăнах та шалтан тĕкĕленĕ иккен. Мотор каçса кайса вĕрме, алăк çинелле сикме, ăна чĕрнисемпе чавма тапратрĕ.

— Кунта вĕсем,— терĕ те мана капитан, çавăнтах алăка чышкипе шаккаса хыттăн кăшкăрчĕ: — Уçăр! **Уçмасан — çĕмĕретпĕр!**

Шалтан сас памарĕç, анчах тĕпĕр-тепĕр тукалани, унтан кантăк чăнкăр-р! туни илтĕнчĕ.

— Ак хайхи! Тараççĕ вĕт! — кăшкăртăм эпĕ.

— Тараймаççĕ, унта Ванюковпа Мигушов! — ал сулчĕ Русаков, анчах хăй пӳрт пуçнелле ыткăнчĕ. Эпĕ те Моторпа пĕрле унтах каясшăнччĕ ĕнтĕ, çав самантра пӳрт алăкĕ ярр! уçăлчĕ те, картлашка çинчен пиҫĕ тĕреклĕ, çӳллĕ çын сиксе анса вăрманалла чупрĕ. Эпĕ хăвăрт кăна Мотора вĕçертсе ятăм: «Фас, Мотор! Взять!..»

Йытă вăрра нумай та ямарĕ, хуса çитсе ун çурăмĕ çине сикрĕ те çĕре персе антарчĕ.

— Ча-ар! Чар йыттуна-а! — асаплăн кăшкăрса ячĕ вăрă.

Эп чупса çитрĕм те, вăрă кăкри çине малти урисемпе пусса тăракан Мотора ошейникĕнчен тытса çынран уйăртăм. Йытă ниепле те лăпланасшăн пулмарĕ: ма-ха ăна хăй шыраса тупнă ирсĕр çынна тивтермеççĕ? Çаплах хăрлатрĕ, вĕрчĕ, халь ĕнтĕ аллисене те тăратнă вăрăм çӳçлĕ этем еннелле туртăнчĕ.

Çав вăхăтра Русаков сасси илтĕнчĕ:

— Малов, илсе кил ăна кунта!

Эп çаврăнса пăхрăм та, ман юлташсем чӳречерен сиксе хăтăлма пикеннĕ икĕ вăрра тытса вĕсен аллисене çурăмĕсем хыçнелле çыхса хума ĕлкĕрнине куртăм.

— Камсем, мĕнлескерсем пулнă вара вăл мурсем? — ыйтрĕ ку таранччен чĕнмесĕр ларнă Ваççили Михалч.

— Çапкаланчăксем, ниçта ĕçлемесĕр пурăннăскерсем! Пĕри нумай та пулмасть тĕрмерен тухнă та, тӳрĕ кăмăлпа ĕçлесе пурăнас вырăнне каллех вăрлама тытăннă. Пур-ха ун пек ирсĕрсем!

— Вĕсем вăрланă таварĕсене тупрăр-и?

— Йăлтах тупрăмăр. Темиçе пин тенкĕлĕх илсе кайнă вĕсем лавккаран. Анчах пĕр пуслăх та усă курайман...

Егор Малов, пӗшкӗнсе, хӑй умӗнче выртакан йытта икӗ ҫӗрле хушшинчен лӑпкаса илчӗ.

— Мотор лайӑх пулӑшрӗ, унсӑр тӑруках тытаймастӑмӑр-ха...

— Татах пулнӑ-и ҫакӑн пек ӗҫсем? — Куна халь Микиш мар, Павӑл та мар — Вихтӑр ыйтрӗ.

— Пулкаланӑ! Темиҫе те! Вуннӑран та иртнӗ пуль. Анчах эсир ҫавӑн пек йӗр-йӗрлесси ҫӑмӑл тесе ан шутлӑр. Вӑрӑсем те чее вӗт! Хӑш чух, хӑйсен йӗрӗсене йытӑ тупмалла мар туса, дуст, вӗтӗ пӑрӑҫ, эрех, одеколон тата темтепӗр сапса хӑвараҫҫӗ. Ун пек туса хӑварни — йытӑшӑн чӑн-чӑн асап. Анчах ман Мотор пӗр-икӗ хутчен ҫавӑн пек йывӑрлӑхсене те ҫӗнтерчӗ, мӗн шыранине тупрӗ-тупрех...

— Ҫавӑнпа «Маттур» та вӑл! — терӗ Вихтӑр.

— Вӑрӑсене йӗрлесе тупнисӗр пуҫне тата мӗн те пулин тунӑ-и ку йытӑ? — ыйтрӗ Павӑл.

— Тунӑ, тем те тунӑ! — терӗ Малов.— Пурнӑҫра тӗрлӗрен кӗтмен япаласем сиксе тухаҫҫӗ-ҫке! Акӑ, сӑмахран, пӗлтӗр ҫулла, сӗм ҫӗрле, Атӑл леш енчи канмалли ҫуртран шӑнкӑравларӗҫ. Икӗ ача ҫухалнӑ! Ашшӗ-амӑшӗ пӳлӗмре домино ҫапса ларнӑ чух тулта хӑйӑр ҫинче вылянӑ вӗсем. Унтан пӑхаҫҫӗ — ачасем ҫук! Унталла, кунталла чупкалама тытӑнаҫҫӗ — тупаймаҫҫӗ. Хӑрамалла-ҫке! Йӗри-тавра вӑрман, инҫетре те мар — тарӑн кӳлӗсем. Атӑлӗ те ҫывӑхрах. Тем те пулма пултарать. Канмалли ҫуртри пӗтӗм халӑха ура ҫине тӑратнӑ, вӑрманти ҫулсем, сукмаксем, проҫҫексем тӑрӑх ҫӳренӗ, таврари кашни йывӑҫ тӗмми айне пӑхнӑ, кӑшкӑрнӑ, чӗннӗ... Усси пулман. Тупайман ачасене!

— Ачисем миҫерискерсем пулнӑ? — ыйтрӗ тахӑшӗ.

— Арҫын ачиултта кайнӑ, хӗрачи унтан та кӗҫӗнтерех. Ну, вара, аптраса ҫитнипе, милицие пӗлтерме шут тытнӑ. Вӑл каҫ эпӗ шӑпах дежурствӑраччӗ. Лерен шӑнкӑравласанах, аслисем пире унта кайма приказ парачӗҫ, вара эпир иккӗн (Моторпа виҫҫӗн) васкасах Атӑл

хĕррине тухрăмăр та, хамăрăн милици катерĕ çине ларса анаталла кĕрлеттертĕмĕр... Канмалли çурт тĕлĕнчи пристаньре пире кĕтсех тăнă. Тул çутăлатчĕ ĕнтĕ ун чух. Çухалнă ачасем ашшĕ-амăшĕпе пĕрле пурăннă пӳлĕме пырса кĕрсен, эпĕ чăн малтан Мотора çав ачасен кравачĕсене, вĕсен япалисене, вылямалли теттисене шăршлаттартăм. Эсир пĕлместĕр те пуль-ха: кашни çыннăн хăйĕн, хăйне майлă шăрши пур. Ачасен шăрши мăннисен шăршинчен хытăрах та палăрать... Ну, унтан Мотора ачасем вылянă хăйăр çине илсе тухрăм. Кунта вăл ачасен йĕрне тӳрех тупрĕ, анчах та аяккалла кайма тăрсанах çухатрĕ. Ачасем вылянăранпа такам та таптанă-çке ку вырăна! Мотор çаврăнкаларĕ-çаврăнкаларĕ те, тап! чарăнса, хăй пысăк айăпа кĕнĕ пек йынăша-йынăша, мана куçран çав тери хурлăхлăн пăхрĕ.

«Лайăх, лайăх, ним те пулман, ан пăшăрхан»,— тесе, эп ăна хăлхисем хушшинчен лăпкаса илтĕм.

Çав вăхăтра пирĕн пата брезент пиншаклă курпунтарах старик пырса тăчĕ. Хуралçă иккен вăл. Эпир мĕншĕн килнине пĕлсенех çапла каларĕ:

— Чимĕр-ха! Пĕрултă сехетре эпĕ сирĕн ачасене ав· çавăнта куртăм пулас! — Вăл вăрман çумĕнчи са· райсем еннелле сулса кăтартрĕ.— Иккĕнччĕ вĕсем, пĕр пек улăм карттус тăхăннăскерсем. Пĕри улăмранах явнă карçинкке пекки тытнăччĕ. Çӳллĕ курăка сиресире кукленеççĕ, унтан тăрса малалла каяççĕ. «Мĕн çухатрăр, мĕн шыратăр эсир, ачасем?»—тесе ыйтрăм та, пысăкраххи мана хирĕç: «Кăмпа татмалла вылятпăр»,— терĕ. «Кăмпана кунта мар, вăрманта татаççĕ»,— терĕм ăна...

— Эппин, эс хушнă вĕсене аяккалла кайма! — тӳрех хаяррăн кăшкăрчĕ ун çине ачасен ашшĕ.— Эс пăтратнă вĕсен пуçне!

— Манра... манра айăп çук,— пуçне пăркаларĕ старик,— эп ахаль анчах каларăм, ним те хушман...

— Хушман! Пĕлместĕн-им, пĕчĕк ачасем вĕсем мăн çыннăн кашни сăмахне ĕненеççĕ, вăл хушнине тăваççĕ! Пĕтертĕн ман ачасене!

Пирĕн вĕсене тавлашма чармалла пулчĕ.

— Вăхăта сая ярас мар, атьăр-ха часрах вăл вырăна, тен, йытă ачасен йĕрĕ çине ӳкĕ,— терĕм эпĕ.

Старик пире аякри сарай хыçне илсе кайрĕ.

— След, Мотор! След! Ищи! — хушрăм йытта. Вăл вăрăм курăк хушшинче ун-кун чупкалама тытăнчĕ. Унччен те пулмарĕ, ачасене хăйăрпа выляма илсе паракан пĕчĕк кĕреçе тупрĕ. Ку питĕ аван пулчĕ-ха: ăна леш ачасем тыткаланă-çке, ун çумĕнче ача шăрши пур!

— След, Мотор! Ищи! Ищи!

Йытă тата темиçе самант кунти курăка шăршлакаларĕ те вăрман енчи решетке хӳме патнелле туртăнчĕ, çав хӳмери шăтăк витĕр хĕсĕнсе тухрĕ. Эпир, паллах, ун хыççăн. Пирĕнпе пĕрле ачасен ашшĕпе амăшĕ те, леш старик те пычĕç.

Чылай аякка илсе кайрĕ пире Мотор. Малтан проççек хĕррипе ертсе пычĕ, унтан вăрманалла, тĕмсем хушшинелле кĕртрĕ. Шăршлать те утать, шăршлать те малалла туртăнать. Хăш чух пĕр тĕм таврах икшер хут çаврăнса илет.

— Тĕрĕсех илсе каять-ши ку, йăнăшмасть-ши? — пăшăрханса иккĕленчĕ ачасен ашшĕ темиçе хут та.

— Йăнăшмасть,— терĕм ăна,— йĕрпех пырать, йĕрне çухатсан, урăхла тыткалать вăл хăйне.

Мотор чăнах та йăнăшман. Тата самаях кайсан, пĕр ачин улăм карттусĕ тупăнчĕ.

— Наташăн ку! Наташăн!..— карттуса кăкри çумне тытса макăрса ячĕ амăшĕ.— Мĕншĕн пăрахса хăварнă-ши?!

— Туратран çакланса ӳксе юлнă пуль,— терĕ ашшĕ.

— Ах, хăйсем ăçта-ши? Хăйсем! Сывă-ши?..

Татах малалла кайрăмăр. Халь ĕнтĕ эпĕ ачасем ту-

пăнасса шансах пытăм. Мотор йĕре çухатас çук. Чăнах та, тепĕр вунă-вунпилĕк минутран эпир хамăртан инçех те мар ача макăрнине илтрĕмĕр. Мотор ялт! сикрĕ малалла, чутах хама туртса ӳкеретчĕ.

— Наташа! Ун сасси! — кăшкăрса ячĕ те амăшĕ, никамран малта чупрĕ.

Эпир те юлмарăмăр ĕнтĕ. Тупрăмăр çухалнă ачасене. Вăрмана кăшт шаларах кĕнĕ-кĕмен аташса кайнă та вĕсем, канмалли çурта таврăнас вырăнне пачах урăх еннелле утнă. Макăрнă та пуль, анчах никам та илтмен. Кайсан-кайсан, ывăннипе утайми пулса çитнĕ те ларнă ĕнтĕ, ларнă та — çывăрса кайнă. Эпир пырса çитнĕ чух кĕçĕнни, хĕрачи, вăранса макăрма тытăннăччĕ, асли, ывăлĕ, çаплах çывăратчĕ-ха. Халран кайса çитнĕ те ĕнтĕ, мăнтарăн...

— Ну, ашшĕпе амăшĕ хĕпĕртерĕç пуль! — терĕ Ваççили Михалч.

— Хĕпĕртемесĕр! Ниçта кайса кĕреймеççĕ...

— Тав турĕç ĕнтĕ сире...

— Хамăртан ытла, йытта тав турĕç. Ылтăн медаль парас пулать ку йытта, теççĕ. Ашшĕ кайран пире Моторпа иксĕмĕре мухтаса хаçатра çырса кăларнăччĕ...

— Вуланă эп ăна! Вуланă! — терĕ çав самантрах Микиш.— Сирĕн çинчен пулнă эппин вăл! Тĕрĕссипе каласан, çав статьяна вуланă хыççăн овчарка çури туянса ӳстерес шухăш пуçа пычĕ манăн. Питĕ кăмăла каймалла çырнăччĕ те...

* * *

Микишпа шкул ачисем çине тăрсах ыйтнипе, тепĕр ирхине — шăпах вырсарникун пулчĕ ку, ачасен шкула каяс çукчĕ — Егор Малов вĕсене хăйĕн йытти мĕнле «ĕçлеме» пултарнине кăтартрĕ.

Çапла турĕç: Мотора килтен илсе пыриччен малтан, пĕр сакăр сехетре, Микиш садри хуралçă пӳртĕнчен

Ваççили Михалчăн хĕлĕпех кунта выртнă кивĕ алсатулĕсене илсе садри йывăççем хушшипе ун-кун çаврăнкаларĕ, çырма хĕрринче пĕр алсатульне пĕлтĕрхи хăрнă çулçăсем айне пытарчĕ, унтан çырма урлă каçса уя тухрĕ, уй тӳпинче ларакан çил арманĕ патне çитсе тепĕр алсатульне пытарчĕ, вара яла таврăнчĕ те хăйсен пахчинчи мунча маччи çине пытанса ларчĕ. Вăл хăш вырăнсенче пуласси, мĕн тăвасси, ăçта пытанасси çинчен йытă хуçипе ĕнерех калаçса татăлнăччĕ-ха.

Тăхăр сехетре йытă çаватнă Маловпа Ваççили Михалч, вĕсемпе пĕрле ĕнерхи ачасем — Павăл, Вихтăр тата Аркади — хуралçă пӳртне çитрĕç.

Пӳрте кĕрсен, Мотор тӳрех кунта темле ют шăршă пуррине сисрĕ. Хăлхисене чăнк тăратрĕ. Хуллен хăрлатса илчĕ, урай тавра çаврăнчĕ, унта-кунта пырса шăршларĕ.

— Ищи, Мотор! След! След, Мотор! — хушрĕ ăна Малов.

Тӳсĕмсĕр ачасем тултан, чӳрече витĕр, пăхса тăчĕç. Анчах нумай тăмалла пулмарĕ вĕсен — Мотор пӳртрен сиксе тухрĕ те, пĕрмай çĕрти йĕрсене шăршласа, пӳрт умĕнчен аяккалла кайрĕ. Пурте — йытта мăйĕнчен çаклатнă чĕнрен тытнă Малов та. Ваççили Михалч та, ачасем те — ун хыççăн утрĕç. Малтан Мотор ерипен пычĕ, унтан, йывăççем хушшине кĕрсе кайсан, хытăран хытă кайма тытăнчĕ. Хыççăн пыракансен вăхăчĕ-вăхăчĕпе чупма та тиврĕ.

Акă, Мотор çырма хĕррине çитрĕ те, пат! чарăнса, малти урисемпе кивĕ çулçă купине чавса аркатрĕ. Ун айĕнчен Микиш пытарнă алсатуль тухса выртрĕ...

— Хорошо, Мотор, хорошо! Молодец! — мухтаса илчĕ те Малов, татах хушрĕ: — Ищи, Мотор! След! След!

Йытă малалла кайрĕ. Çырма урлă каçрĕ. Уя тухрĕ. Çынсене çил арманĕ патне илсе çитерчĕ. Турпассем айне пытарнă тепĕр алсатульне тупрĕ.

— Хорошо, Мотор, молодец! — хавхалантарчĕ ăна Малов.— Ищи ещё!

Мотор ун-кун чупкалама тытăнчĕ. Пĕр хушă Микиш йĕрне çухатрĕ пулмалла. Пăлханса, йынăшкаласа илчĕ. Унтан ял еннелле ыткăнчĕ...

Микишсен пахчине тĕп-тĕрĕс илсе пычĕ вăл çынсене. Тайăла пуçланă çатан карта урлă сиксе каçрĕ те, Малов аллинчен вĕçерĕнсе, кив мунча патнелле чупрĕ, мунча çенĕхне вăркăнса кĕрсен, урса кайнă пек çӳлелле сике-сике вĕрме тапратрĕ...

— Ансанах çурса тăкать пуль ку мана? Анма та хăратăп ĕнтĕ! — терĕ Микиш, мунча маччи çинчен аялалла пăхса.

Ана курсан, Мотор тата хытăрах хăрлатма, вĕрме тапратрĕ.

— Ан хăра, лăпланать,— терĕ те Малов Микиша, йытта ошейникĕнчен тытса тулалла кăларчĕ. Çавăнтах ачасенчен ыйтрĕ: — Ну, куртăр пуль ман Мотор еплерех йĕр йĕрлеме пĕлнине?

— Куртăмăр çав!

— Тĕлĕнсе хытсах каймалла!

— Ытла шутсăр пултарать иккен вăл!—терĕç ачасем.

Микиш мунча маччи çинчен анса тухсан, Мотор ун çинелле сикме тăчĕ, анчах Малов ăна хыттăн: «Нельзя! Лежать!» терĕ те, йытă лăпланнă пек пулчĕ, выртрĕ, çапах та Микиш çине çилĕпе пăха-пăха, хуллен хăрлаткаласа илчĕ.

— Чăн та маттур иккен ку Мотор! — терĕ Микиш.— Епле пулсан та, хам валли çакăн пек йытă ӳстеретĕпех эпĕ! Шанчăклă тус пулать вăл манăн...

...Мотор мĕн туса кăтартни çинчен тепĕр кунне шкул ачисем çеç мар, ял çыннисем те пурте пĕлчĕç. Нумай калаçрĕç ун çинчен. Тĕлĕнчĕç, мухтарĕç.

— Пит лайăх помошник пулать эппин пирĕн сад хуралçин, Ваççили Михалчăн! Кун пек йытă пур çĕре

никам та пырса кĕреймĕ. Улма-çырла вăрлакансене патĕнчех тытаймасан та, йĕрпе пырса тупма пултарать-иç!

Ваççили Михалч арăмĕн, Фетис инкен кăмăлĕ те çаврăнчĕ, тет.

— Усрас эппин вăл йытта, ун пекех ăслă пулсан, пурăнтăр! — ал сулчĕ, тет, вăл.

Ачасем йытă çинчен нумай калаçнине илтсе, зоологи учителĕ Макар Захарович урокрах питĕ тĕлĕнтерекен япала каласа пачĕ: пирĕн çĕршывра та, урăх çĕршывсенче те йытăсене ырăпа асăнса ятарласа лартнă памятниксем пур иккен! Çынсен чи шанчăклă тусĕ пулнăшăн, çынсене чи йывăр самантсенче çăлнăшăн хисеплесе лартнă çав памятниксене. Пĕрисем юр айне пулнă çынсене тупса çăлнă, теприсем шыва путакансене туртса кăларнă, çунакан çуртсенчен пĕчĕк ачасене йăтса тухнă...

Колхоз садĕнче ватă Ваççили Михалчпа пĕр уйăх пек пурăнсан, Мотор та сад варринчи кӳлĕре путма тапратнă пĕчĕк хĕрачана çăлчĕ.

Анчах кун çинчен çĕнĕ калав çырас пулать...

ТУПМАЛЛИ

Санăн çитмĕл çичĕ тус 5
Тĕрĕс ят 16
Хисеп 27
Савăнăç 40
Чĕре ăшши 45
Ӳкерчĕк 51
Кашни кунах куратăп 57
Çул çинче 66
Кĕсле янăрать 75
Çĕнĕ çул умĕн 98
Улăхра 105
Çĕнĕ çурт 113
Унăн сукмакĕ 122
Урок пуçланчĕ 139
Шанчăклă тус 156

Для детей среднего школьного возраста

ЛАЗАРЕВА АЛЕКСАНДРА НАЗАРОВНА

У ТЕБЯ МНОГО ДРУЗЕЙ

Рассказы

На чувашском языке

Редактор **О. В. Таллерова**
Художник **В. Л. Агаков**
Художественный редактор **А. А. Афиногенов**
Технический редактор **В. И. Павлова**
Корректор **О. Ф. Волкова**

НТ 33325. Сдано в набор 15-X-74 г. Подписано к печати 8-IV-75 г. Изд. № 91/75. Формат 84×108/32. Бумага типографская № 3. Физ. печ. л. 6. Усл. печ. л. 10,08. Учетно-изд. л. 8,12. Заказ № 2962. Тираж 8000 экз. Цена 46 коп.

Чувашское книжное издательство
Чебоксары, пр. Ленина, 4.
Типография № 1 Управления по делам издательств, полиграфии и книжной торговли Совета Министров Чувашской АССР
Чебоксары, Канашское шоссе, 13.

ХАКЛĂ АЧАСЕМ!

Çак кĕнекене вуласа тухнă хыççăн, вăл сире кăмăла кайрĕ-и е кăмăла каймарĕ-и, хăш калав ытларах килĕшрĕ, малашне сирĕн мĕнле кĕнекесем ытларах вулас килет — пурин çинчен те çырса пĕлтерĕр.

Пирĕн адрес:

428000, г. Чебоксары, проспект Ленина, 4, Чувашское книжное издательство, редакция детской литературы.

Цена 46 коп.